80-317



ВАЛЕНТИНА ЭЛЬБИ

# çĕршывăн пулас хуралçисем

ВАЛЕНТИНА ЭЛЬБИ

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Çӗршывӑн пулас хуралçисем

ПОВЕСТЬ

Чӑваш кӗнеке издательстви
Шупашкар — 1980

84. 3 Чув.
Э 53

22 октября 80 г.

Э $\frac{0763-123}{М\ 136(03)-80}$ 94—80

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1980 ç.



Чарӑнса тӑр та кӑнтӑралла тинкерсе пӑх-ха. Куратӑн-и? Ав, лере, вӑрман ҫумӗнче, симӗс чӑрӑшсем хушшинче ларать вӑл ҫурт. Стенисем — шултра хыр пӗренинчен. Илемлӗскер. Тӑрринче хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет.

Темиҫе ҫул хушши ҫак ҫуртӑн урам енчи икӗ чӳречи кун ҫути кураймарӗ. Алӑкӗсене те хӑмапа урлӑ-пирлӗ ҫапнӑччӗ. Сукмакӗ ҫине те симӗс курӑк шӑтнӑччӗ.

Юратмаҫҫӗ ялта хупӑнса тӑракан пӳрте: чуна тунсӑх пусарать. Ҫӗрле иртсе ҫӳренӗ чухне тем шиклентерет, ҫурӑм та сӑрр! сӑрлатать вара.

Ҫак пӳрте ял ҫынни Семен Пилешев, таврӑнма вӑхӑт ҫитсен те ҫарта юлнӑ пограничник, канма килсен туса лартнӑ. Ҫартан таврӑнсан, хӑйӗн ҫемйипе пурӑнма ӗмӗтленнӗ вӑл. Икӗ ачана ҫитнӗ-ҫке, йӑва кирлех.

Ик-виҫ ҫул хушши хупӑнса тӑнӑ ҫурт сасартӑк куҫне уҫрӗ, тинех чун кӗчӗ тейӗн. Хӗвелӗ те ҫулне тупрӗ, йӑлтӑртатаҫҫӗ кӑна кантӑкӗсем унӑн шевлипе. Ял ачисем пырса кӗчӗҫ те, ҫак ҫурт пыл хурчӗн вӗлли евӗр пулса тӑчӗ.

Ҫурта ушкӑнпа та, пӗччен те кӗре-кӗре тухаҫҫӗ. Стройпа колхоз уй-хирне утаҫҫӗ, стройпа ял тӑрӑх пыраҫҫӗ, вӑрмана утса кӗреҫҫӗ. Тумӗсем пӗр пек. Пуҫӗсенче симӗс пилотка, хулпуҫҫийӗсем ҫинче симӗс погонсем, мӑйӗсенче—хӗрлӗ галстук.

Пырса пӑхсан хапха умӗнчи юпа ҫумне ҫапса хунӑ хӑмана асӑрхатӑн. Унта питӗ тӑрӑшса, тӗрлӗ сӑрӑсемпе капӑрлатса ҫапла ҫырнӑ:

«ЯЛТА ӲСЕКЕН ЧИКӖ ХУРАЛҪИСЕН ЗАСТАВИ».

Мӗне пӗлтерет ку? Чӑваш ҫыршывӗ чикӗрен аякра-ҫке.

Акӑ ҫурт умне машина ҫитсе чарӑнчӗ. Хапхаран ача-пӑча кӗшӗлтетсе тухрӗ. Вӗсен хушшинче икӗ ҫитӗннӗ ҫын.

— Хӑпарӑр,— хушрӗ ачасене пысӑккисенчен пӗри.

— Борис Аххов, эсир кабинӑна ларӑр,— сӗнет ӑна типшӗмрех ҫӳллӗ ҫын.

— Михаил Михайлович, вӑл вырӑн сирӗн,— тет лешӗ.

— Йӑнӑшатӑр эсир, Борис. Ачасемпе ҫӳресси —учитель ӗҫӗ.

Пурпĕрех учителе кабинăна лартрĕç.

Борис Аххов çар тумĕпе. Пуçĕнче симĕс тăрăллă, çутă сăмсаллă карттус. Хулпуççийĕсем çинче çеç погонсем çук.

Машина тавра халăх йышлă пухăнчĕ.

— Сывă пул, ялйыш! Санюк, ан тунсăхла! Вера Ксенофонтовна, нимшĕн те ан пăшăрханăр, пурте йĕркеллĕ пулĕ,— тет Борис Аххов.

— Нил, Субайылда, чечек çыххине аçун вилтăпри çине хуриччен шывпа пĕрĕхĕр, вара вăл нумайччен илемне çухатмĕ,— ачисене астутарать амăшĕ Вера Ксенофонтовна.

Тем кăшкăрашаççĕ машина çинчисем. Шав тăрать. Уйрăм сăмахсене уйăрса илме те хĕн.

Машина тапранчĕ. Асатакансем тăрса юлчĕç.

Акă тата, машинăна хирĕç çулпа пĕр ача чупать. Ун аллинче мăшăр шурă кăвакарчăн.

— Пăрăн! Таптать!— кăшкăрчĕç пĕр харăс машина çинчисем.

— Ара, ку Йăкăнат-иç!— палларĕç хайхискере.

Ирĕксĕрех шоферăн машинине чарма лекрĕ.

— Илĕр,— тăсать Йăкăнат хăйĕн аллинчи пилеш куçлă шурă çунатлă кайăкĕсене.— Манран парне пултăр.

— Йăкăнат, сана ăнланатăп. Килес çулччен тăхта. Ĕрчет вĕсене ытларах, вĕрент. Халлĕхе хăвăн та çаксем çеç,— лăплантарать ачана Борис Аххов.

Ерипен хускалчĕ машина.

Шăреке Йăкăначĕ пĕр кăренчĕ, пĕр савăнчĕ. Унччен те пулмарĕ кайăксене аллинчен вĕçертрĕ те ши-и! шăхăрчĕ. Çăлтен çăле çĕкленсе, кăвак тăпере вĕсем мăшăр шурă лĕпĕш евĕр вĕлтĕртетрĕç. Машина çинчисем те курчĕç кăвакарчăнсене.

Урам кĕтесĕнче хĕрлĕ çăçлĕ, чăпар питлĕ ача тăрать. Ахăлтатать, варне тытсах кулать хăй.

— Трапхин, кам пит кăтăклать сана?— ыйтрĕ Йăкăнат.

— Санран кулатăп. Тем чул тăрăшсан та юраймарăн вĕсене.

Йăкăнат унпа тавлашса çăвар тутине яма шутламарĕ, иртсе кайрĕ мăнаçлăн, пуçне каçăртса.

Шутсăр тĕлĕнсе пăхса юлчĕ Трапхин. Унччен те пулмарĕ, ун каллех, пĕркун ачасем чĕкĕнтĕре çумкурăкĕнчен тасатма чĕннĕ чухнехи пек, чун чĕпĕтсе ыратрĕ. Вăл хăйне çынсăр утрав çинчи пек туять. Шартах сикрĕ ача. Темле вăй ăна Йăкăнат хыççăн чупма тĕкет. Ыткăнчĕ вара. Хуса çитсен, сăмах та тупăнчĕ мĕн каламалли:

— Мĕншĕн-ха вĕсем сана хăйсемпе илсе каймарĕç, э?

— Мана çитес çул илсе каяççĕ чикĕ хĕррине, пограничниксем патне.

— Илсе кайĕç-ши мана?

— Сан пирки калама пултараймастăп. Тепĕр тесен, йăлтах хăвăнтан килет.

Аçта кайрĕç машина çине тиеннисем? Юлашкинчен тĕл пулнă икĕ ачи мĕнлескерсем? Тупсăмне пĕлме иртнĕ кунсен алăкне уçса кĕрер-ха.

# I

Аслăрах классенче вĕренекенсен ĕç урокĕ пырать. Вĕсем шкул пахчинче çĕрулми кăлараççĕ.

Шкулта кăçал интернат уçăлать. Хĕлле унта урăх ялтан вĕренме çӳрекен ачасем пурăнĕç. Вĕсем валли ятарласа вĕри апат пĕçермелле. Çавна май çĕрулми, купăста, хăяр, кишĕр, сухан ӳстернĕ.

Пахчари ĕç шавĕ таçта çити янраса тăрать. Ĕçлеççĕ, анчах пурте мар. Хуратутлă, мăнтăркка Трапхинпе вăрăм майлă Шӳреке Йăкăначĕ пилĕкĕсене пачах авмаççĕ. Вĕсемшĕн ытларах алхасса пултăр. Йăпшăнса пырса, çĕрулми пухакан пĕр-пĕр ачана сасартăк малалла тĕртсе чикелентерсе яраççĕ те — çитрĕ вара ахăлтатма. Е шӳтлĕ сăмахсемпе култараççĕ ачасене.

Трапхинпе Йăкăнат хĕрачасем патне пырса тăчĕç. Пурте ĕç пăрахсах сăнама тытăнчĕç хайхискерсене. Ахальтен çулăхмаççĕ вĕсем. Мĕнле те пулин мыскара пулатех. Чăнах та, нумай та кĕтме тивмерĕ, тытăнчĕ Трапхин камитленме: тутине чалăштарса пăркалать, куçне е чарса пăрахать, е чеен хĕскелет. Пурне те илтĕнмелле кăшкăрса калать:

— Кӳлнари, чарăн-ха хусăклама!

— Мĕншĕн?

— Сан сăнӳкерчĕк пур-и? Пар-ха мана йăпăртлăха.

— Мăн тума?

— Çынсене хăратма!

— Ха-ха-ха!— кулса ячĕ Йăкăнат. Хăй çавăнтах шĕвĕр пӳрнисене пуç çийĕн кăнтарса кăтартрĕ. Ку ĕнтĕ Кӳлнари ытла та хăрушă, вăл майракаллă тенине пĕлтерчĕ.

Кӳлнари, ним тума пĕлмен енне, тутине юн тухасла çыртса лартрĕ. Ачасем шăплансан, хăю çитерсе, çапла тавăрчĕ ĕнерсĕр Трапхине:

— Эй, сĕмсĕркке, итле-ха: эсĕ тăр-ухмах, анчах сывалма тухтăра çӳреместĕн.

Ушкăнта тахăшĕ пĕрĕхтерсе кулса ячĕ Кӳлнари сăмахĕнчен, анчах çавăнтах çăварне хупрĕ, Трапхинтен хăрарĕ пулас.

Йăкăнатпа Трапхин — ачасен пуçлăхĕсем. Кун пирки такам та пĕлет. Шкулта вĕренме пуçличченех тантăшĕсене пăхăнтарнă çакă икĕ ача. Халĕ те тăсăлать-ха çав йĕрке. Виçĕмçул та, пĕлтĕр те вĕсен танатинчен хăтăлма пиреннĕ паттăрсем тупăннă, анчах ĕç ăнăçлă вĕçленеймен.

Иртнĕ çуркунне кăна акă мĕн пулса иртнĕччĕ.

Ял урамĕсем, çырма-çатрасем юртан тасалсан, кил хушшисем типсен, ачасене тимĕр-тăмăр пухма хушрĕç. Хыткан Хветĕрпе йăмăкĕ хăйсен урамĕнчи кашни килех кĕрсе тухрĕç, мĕн тупнине çырма хĕрринчи мăн йăмра айне тултрĕç. Пысăк купа çĕкленчĕ. Трапхинпе Йăкăнат пĕр катăк çатма тупинччĕç. Шырамарĕç те. Тăкăрлăкра çаплах футбол мечĕкне тапрĕç. Анчах вĕсен куçĕ Хветĕрпе йăмăкĕ мĕн çĕкленине, тимĕр-тăмăр купи епле ӳссе пынине асăрхамасăр тăман. Кăçалапа

купа патне чупса пычĕç. Шăп çак вăхăтра Хветĕр те шăтнă питлĕх йăтса çитрĕ.

— Чим!— чарчĕ ăна Трапхин.— Эсĕ тимĕр-тăмăр пирĕнпе пĕрле пухнă тесшĕн мар-и таçта?! Кай кунтан!

Хветĕр шалт тĕлĕнчĕ.

— Мĕн эсĕ? Ку эпир йăмăкпа пухнă тимĕр-тăмăр купи!— ĕнентересшĕн вăл.

— Ха, мĕн калать, шĕпĕн!— аллине чăмăртаса, кăкăрне каçăртса пычĕ Йăкăнат.

— Намăссăрсем!— çиллессĕн ларĕ Хветĕр.— Тасалăр кунтан, услапсем!

— Ах, шĕпĕн, эсĕ пире хăратма-и!— туртса антарчĕç Хветĕре иккĕн. Кӳпкерĕç ăна.

Тепĕр кунне Хветĕр класс руководительне кун çинчен ним шикленмесĕр каласа пачĕ. Учитель чĕнтерсен, иккĕшĕ те Хветĕре хĕненине пăч тунчĕç. Çапла хăратса тăраççĕ ачасене икĕ куштан.

Дружина совечĕн председателĕ Илюк та çĕнтереймест çав куштансене. Суйлав хыççăн ним не тăваймарĕ-ха Илюк, вăхăт усăсăр шăвать. Ыр ĕç тума ĕмĕтленсе, ыранхи, виçминехи, аякри куна чунне вĕчĕрхентерсе кĕтет вăл. Кунсем иртнине сиссе те юлаймасть. Шелленипе, тарăхнипе пуçне ярса тытать кăна. Кӳлнĕ лашана кăкарнăн, мĕншĕн иртсе каякан вăхăта та юпа çумне вĕренпе çыхса лартмалла мар-ши? Пурне те кăсăклантаракан ĕç тупăнинччĕ, вара пĕр вырăнта хытса тăнă дружина ĕçĕ тапранса кайĕччĕ, пурте ыйхăран вăранĕччĕç. Кам тĕллесе кăтартĕ çав ĕçе? Никам та канаш, ăс памасть. Пионерсен аслă тусĕ вожатăй çук. Дружина ĕçне хускатассишĕн Илюк тăрăшман мар. Тем те шухăшласа тупнă. Анчах кирек хăçан та ĕç ăнăçман. Ялан Трапхинпе Шӳреке ура хурса пыраççĕ. Шутсăр усал, йĕркесĕр ачасем, алхасма юратаççĕ, никамран хăраманççĕ. Ку çеç-и, усал хыпар сараççĕ.

Илюк суккăр Левенти мучине пахчинчи çĕрулмине йышпа кăларса пуçтарса парасшăнччĕ. Ачасем килĕшрĕç. Пĕр тĕле пухăннăччĕ çеç, Трапхин сăхан евĕр кранклатрĕ:

— Ачасем, эпĕ тĕлĕнмелле япала пĕлетĕп!

— Мĕнле япала?— карах сырса илчĕç ăна пурте.— Кала хăвăртрах!

— Курăс кӳллине акăшсем кĕтĕвĕпех канма анса ларнă. Кам курма пырасшăн — атьăр пирĕнпе!— аллине сулса, малалла чупрĕ Трапхин.

Курăс кӳлли вăрманта, шкултан чылай аякра. Мĕн тейĕн, Йăкăнатпа Трапхин хыççăн кĕшĕлтетрĕç ачасем. Илюк тытса чараймарĕ. Пăхать, ун çумĕнче пĕртен-пĕр хĕрача — Кӳлнари юлнă.

— Акраппи ăçта?— тĕлĕнчĕ Илюк.

Кӳлнарипе Акраппи ялан пĕрле çӳретчĕç.

— Акăш курма кайрĕ,— пулчĕ ун сăмахĕ.

— Эпĕ сире ăмсанаттăм.

— Мĕншĕн?

— Манăн çывăх тус çук,— кулянчĕ Илюк.— Пулнă пулсан, эпĕ унран нихçан та уйрăлмăттăм.

— Вăл хăй пăрахса кайсан?
— Вара вăл — юлташ мар.
Кӳлнарипе Илюк иккĕшех мучи пахчинче кĕрмешрĕç.
Трапхинпе Йăкăнат Кӳлнарие хăйсемпе пыманшăн тарăхрĕç, тавăрма шутларĕç ăна.
— Сана вăрттăнлăх пĕлтерес-и? Асту, никама та ан шарла,— хăлхинчен пăшăлтатрĕ Трапхин, пĕр арçын ачана тытса чарса.— Çĕркаç Кӳлнари вăрманта çитĕннĕ арçынпа алла-аллăн тытăнса çӳрерĕ, тет.
— Ай-ай!
Йăкăнат тепĕр ачана тытса чарчĕ те ăна та хăлхинчен пăшăлтатрĕ:
— Илтрĕн-и эсĕ тĕлĕнтермĕш! Кӳлнари хĕр пуçăн пирус туртать, эрех ĕçет.
Чараксăр чĕлхесенчен вĕçерĕннĕ, шухăшласа кăларнă усал хыпар пĕр хăлхаран тепĕр хăлхана кĕре-кĕре тухрĕ. Каярахпа яла куçрĕ, пысăккисен çăварĕнче шĕкĕлченчĕ. Кӳлнари амăшĕ вăрманта каткапичке тăвакан заводра ĕçлет. Вăл ирĕке янă имĕш хĕрне.
Хăшпĕр çынсен лайăх мар йăла пур çав: усал хыпара хăвăрт ĕненеççĕ. Кӳлнарин кĕпи ытла кĕске, çӳçне вăрăм ӳстернĕ. Куç харшисем ытла тĕксĕм,— сăрлать. Тути мăкăнь евĕр хĕрлĕ,— писев сĕрнĕ. Пирус туртма, эрех ĕçме вĕреннĕ хĕрачан ăраскалĕ çапла.
Кӳлнарин ят пăсăлчĕ. Хĕрачасен амăшĕсем ун çине йĕрĕнсе пăхаççĕ.
— Сан хĕрӳпе юлташлă, теççĕ. Мĕншĕн чармастăн унпа çӳреме? Пăсăлса кайсан, чавсу çывăх та çыртаймăн,— ăс парать Акраппи амăшне пĕри те тепри.
Хытарчĕ вара хайхискер хĕрне, шаккасах каларĕ:
— Сан пирки те усал сăмах илтсен, киле кĕртместĕп!
Туслăх пĕтрĕ. Акраппи тепĕр хĕрача патне куçса ларчĕ. Кӳлнари пĕчченех юлчĕ малти парта хушшинче. Перемена вăхăтĕнче Акраппи ытти хĕрачасемпе коридор тăрăх çавтăнса утать, савăнăçлăн ахăлтатса кулать. Мĕн култарать ăна? Кӳлнари пĕлмест. Чунне наркăмăш тумлатрĕç унăнне. Вăл — пĕр-пĕччен.
Илюк хĕрхенет хăйĕн хĕр-тантăшне. Ун амăшĕ те ывăлĕ майлă. Çăл хĕррине пуçтарăннă хĕрарăмсенчен пĕри Кӳлнарине тиркесе сăмах тапратсан, каçса кайсах ятлать ăна.
— Çав çамрăк хĕрача çинчен путсĕр элек-телек саракана, тупата, куçĕнчен сурма хатĕр эпĕ,— тарăхать вăл. Ывăлне çапла калать:— Пуç тăрринче вĕçекен хура çăхана хăвала. Хаяр сăмах çын пуçне çиет, тенĕ ĕлĕк.
Хĕрача чысне сыхлама ахаль те тăрăшать-ха Илюк. Урамра-мĕнре Кӳлнарие йĕкĕлтекен ачана тĕл пулсан, тӳпелешес вĕçнех çитет вара вăл.
— Ху курнă-и эсĕ Кӳлнари пĕр-пĕр тетепе утса кайнине?
— Курман,— тет лешĕ.— Йăкăнатпа Трапхин калаççĕ.
— Вĕсен çăварĕнчен ырри тухманнине пĕлетĕн-çке. Ан ĕнен. Элек сарма пăрах.
Çавăн пек ачапа Хветĕр те чĕрре кĕрет.
Ĕçсĕр супса çӳренипе çапла ашкăнаççĕ ачасем. Кăсăк вăйă кирлĕ

вёсене. Нумай шухӑшларӗ дружина совечӗн председателӗ. Вара, меллӗ самант ҫитсен, ҫапла сӗнӳ пачӗ:

— Ҫам ҫӗр чӑмӑрӗ тавра ҫул ҫӳреме тухасшӑн?

Анланмарӗҫ пулас. Е малтан пуҫа пырса чикме тӑхтаҫҫӗ. Трапхинпе Йӑкӑнат куҫӗнчен чӑрласа пӑхаҫҫӗ хӑйсем.

— Илюк, эсӗ пире тӑм писмен вырӑнне хуратӑн-и?— хуҫкаланать Трапхин.— Хӗлле кам ҫул ҫӳретӗр?

— Тытса шкул пахчине тухса ямалла ӑна, хӗл мыскарине туйтӑр, — эхӗлтетет Йӑкӑнат. Пурте кулаҫҫӗ ун сӑмахӗнчен.

— Эх, эсир те ҫав! Вӑйӑ ку! Вӑйӑ выляма сӗнетӗп сире,— ӳкӗте кӗртесшӗн каларӗ Илюк.— Ҫӗр тавра карапра ҫул ҫӳреме тухни мӗн тери илӗртӳллӗ. Таҫти-таҫти ҫыршыва ҫитӗпӗр. Портсенче чарӑнсан, карапран тухӑпӑр. Ҫыршывпа, унӑн ҫыннисемпе, вӗсен пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе, сӑвви-юррипе паллашӑпӑр.

— Ҫам паллаштарӗ?— хӑй айванне кӑтартрӗ Йӑкӑнат. Тӗрӗссипе илсен, ним те тӗшмӗртмест вӑл.

— Мӗнле кам?— тӗлӗнчӗ Илюк.— Библиотекӑра мӗн чухлӗ кӗнеке, журнал, хаҫат! Вула, тӗпче. Мӗн пӗлнине тӗлпулусенче каласа пар.

— Э-э, тупнӑ! Ҫама кирлӗ кун пек кичем вӑйӑ!— тутине тӑсрӗ Трапхин.

— Самантлӑха та пулин хуп-ха ҫӑварна,— тарӑхрӗ Илюк.— Ыттисене калама ирӗк пар.

— Тархасшӑн!

— Ачасем, кам сирӗнтен карап капитанӗ пуласшӑн?

— Йӑкӑнат!— лаплаттарса хучӗ Трапхин. Ытти ачасем шӑпӑрт тӑраҫҫӗ.

— Илюк!

— Илюк — капитан! Ха-ха-ха!— ахӑрса ячӗ Трапхин.— Вӑл сире лачакара шапа пӑтти ҫиме илӗртет!

— Ҫук, вылямастпӑр!— кӑшкӑрать Йӑкӑнат.

— Ҫам ҫӑпаталла вылясшӑн — атьӑр манпа!— чӗнет Трапхин.

Ачисем ун хыҫҫӑн кӗшӗлтетсе тухса кайрӗҫ. Хӑшпӗрисем Илюк пуҫаракан вӑййа хутшӑнасшӑнччӗ, сас пама хӑрарӗҫ.

Ахальтен ертсе тухмарӗ вӑл ачасене, тӳрех хӑйсен хапхи умне пуҫтарчӗ. Ҫӑпаталла вылярӗҫ, кайран хапха уҫӑлчӗ.

— Ҫам улӑм ҫинче вылясшӑн? Ман хыҫҫӑн!— чӗнчӗ вӑл.

Ҫартишне ыраш улӑмӗ сарса пӑрахнӑ. Трапхин чупса пычӗ те сарӑм ҫинче мекӗлчек хуҫрӗ. Ун хыҫҫӑн ыттисем. Мӗн ҫӗрле пуличченех вылярӗҫ. Вӗсенчен нихӑшӗ те Трапхинсен ӗни валли улӑм ҫемҫетнине чухламарӗ.

Илюк килте сӗтел хушшине ларнӑ та задача шутлать. Ӑстӑн темшӗн кӳлӗнесшӗн мар. Пуҫра шав ачасем явӑнаҫҫӗ. Ҫуҫ умне такам та тухать. Хӑйсем айӑплӑн куҫне тартаҫҫӗ. Трапхин яланхиллех — камит. Йӑкӑнатӑн та тути хӑлхи патне ҫитнӗ.

— Лайӑх юлташ кирлӗ мана, вара...

Сасӑпа шухӑшланине Илюк хӑй те сисмерӗ.

— Вара мӗн?— вӑлтрӗ кӑмака ҫумӗнче ҫурӑмне ӑшӑтса тӑнӑ май, пански йӗппипе нуски ҫыхакан амӑшӗ.

Илюк именчĕ. Вăл Трапхинпе Йăкăнат тӳсме çук тарăхтарни çинчен шарламарĕ.

— Ан кулян,— ывăлĕн халлĕхе чăн-чăн юлташ çуккине пĕлет, çавăнпа ăна лăплантарма тăрăшать амăшĕ.— Сан чи çывăх тус пур.

— Кам?— тĕлĕнчĕ Илюк.

— Мĕнле кам? Семен Пилешев пограничник ывăлĕ — Нил.

— Вăл хамăр ялта мар-çке,— кулянса каларĕ вăл.

— Килеççĕ, çемйипех.

Илюк хĕпĕртенипе, сĕтел хушшинчен тухса, ташша яра пачĕ. Амăшĕ иккĕленет: те чармалла ĕнтĕ ывăлне, те ташлатăр. Çапах та асăрхаттарчĕ:

— Чим-ха эсĕ, ывăлăм, ытлаши ан тĕпĕртет.

— Килмеççĕ-и?— тăпах чарăнчĕ Илюк.

— Килессе килеççĕ те-ха... Вĕсен пысăк инкек пулнă: ашшĕсĕр тăрса юлнă. Хайсем çеç таврăнаççĕ. Правление телеграмма янă.

Чунра çĕкленнĕ савăнăçа хăрушă хыпар тĕксĕмлетрĕ.

Нил — вайлă, кĕрнеклĕ ача. Никамран та хăрамасть, апла пулин те, сăлтавсăр çапăçу пуçламасть. Малашне ĕнтĕ Илюкăн çывăх тус пулать. Çуллахи каникулсенче Нил яла час-часах килсе тăратчĕ. Илюка вăл никампа та улăштарман, иккĕшĕ ялан пĕрле вылятчĕç.

Чĕлхе вĕçне хыпар хурса чупрĕ Илюк шкула. Кая юлнă. Çĕнĕ хыпар илтмен ача çук та. Ку ăнланмалла, ара, Нила палламан ача сахал, пограничник ывăлĕ-çке. Яла килсен, ашшĕне те курнă. Унăн пуçĕнчи симĕс тăраллă, йăлтăркка сăмсаллă карттусне ăмсанса пăхнă. Калаçаççĕ, тавлашаççĕ ачасем. Кашнин хайне май шухăш.

Класа Илюк кĕрсен, Трапхинпе Йăкăнат кăмăлĕсем сасартăк улшăнчĕç. Хайсен сăнĕ-пичĕсем йуçсе хăпарман чуста тĕслĕ. Кăна пурте асăрхарĕç. Мĕне пĕлтерет? Ыттисем чухлаймасан та, Трапхинпе Йăкăнат хайсене мĕн кĕтнине витĕр кураççĕ: пурăнăç вĕсемшĕн текех пыл юхтармĕ.

Кӳлнари яланхи пекех ним те чĕнмест, калаçăва хутшăнмасть. Килин, ара! Пурнăçĕ улшăнмасть. Умĕнче «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» кĕнеке. Пуç çĕклемесĕр вулать. Ун тусĕ — Павка Корчагин. Татах йывăр самант килсе тухсан, Кӳлнарипе юнашар Павка утĕ. Шанчăклă тус. Емĕчĕ çӳле çĕклет ăна.

Акраппие пачах урăх туйăм çунатлантарать. Чунĕ чечек çурчĕ. Юрлас килет. Сенкер куçра ахах йăлтăртатать хĕм сапса. Хăй тавра урăх ял хĕрачисене пуçтарчĕ вăл.

— Мĕн тери хитрескер!— мухтать Нила.— Пĕлсех тăратăп, курсан, пурте юратса пăрахатăр ăна. Çӳçĕ сап-сар, куçĕ чап-чакăр, Йăкăнат пек хур майлă мар ĕнтĕ.

Сăмах хушма хăяйман хĕрачасем, Акраппие итлесе, чĕлхине çăтнăн, шăп тăраççĕ.

— Мĕн тери йĕркеллĕ!— хăлаçланать татах Акраппи.— Усал сăмахпа хăратмасть. Çуллахи каникула килсен, ялан пĕрле выляттăмăр. Вăрмана çырла татма та пайтах çӳрерĕмĕр.

Хаш-ш! хашлатрĕ Акраппи, ăна темĕскер кулянтарнăн. Хĕрачасенчен паттăрри тупăнчĕ те каласа хучĕ:

— И-и, эсӗ ăна, Акраппи, хăв юратса пăрахнă-ҫке!

Акраппи мăкăнь пек хӗрлӗ тутине ҫуллакаларӗ те хăй тавра тăраkансене хурлăхлăн пӗлтерчӗ:

— Ун пӗр ҫитменлӗх пур ҫав.

— Ай-уй! Чăнах-и?

— Мӗнле ҫитменлӗх?

— Вăл яштака мар, манран пӗчӗкрех.

Ăна ăмсанса итлекен тантăшӗсен тӗлӗннипе куҫӗсем чарăлчӗҫ, ҫăварӗсем карăлчӗҫ. Вӗсен умне чипер ача вырăнне чике сухал тухса тăчӗ тейӗн.

— Эпӗ хуйхăрмастăп,— хушса хучӗ Акраппи.— Шкултан вӗренсе тухнă ҫӗрелле тăсланкă та пулӗ ак. Эпир, хӗрачасем, маларах ӳсе пыратпăр вӗсенчен.

Шăнкăрав калаҫăва татрӗ. Ачасем партăсем хушшине ларма васкарӗҫ.

Ҫак самантран пуҫласа пурте пурнăҫра темле улшăну пуласса кӗтрӗҫ, анчах кӗтсе илеймесӗрех хӗллехи каникула тухса кайрӗҫ, шкул пушанса юлчӗ.

## II

Ҫӗршыв чиккин пӗр заставинче калама ҫук пысăк хуйхă.

Тупăк умӗнче симӗс карттус тăхăннă пограничниксем хушшинче тăракан хӗрлӗ галстуклă пӗр ҫамрăк ача татăлса макăрать. Нил вăл, командир ывăлӗ. Унăн ашшӗ Семен Пилешев, пограничниксен командирӗ, Тăван ҫӗршыв чиккине хӳтӗлесе, хаяр тăшмансемпе ҫапăҫса пуҫне хунă. Пуҫне хунă, анчах вӗсене чикӗ урлă каҫарман.

— Пăхăр юлашки хут, асра тытса юлăр аҫăр сăнне,— тет Вера Ксенофонтовна ачисене, Нилпа Субайылдана, йӗре-йӗре.

Хурлăхлă музыка янăрарӗ. Командира пытарчӗҫ. Унăн икӗ ачи, арăмӗ тăлăха юлчӗҫ.

Темӗн чул куҫҫулӗ юхтарсан та, ҫын чӗрӗлмест. Йăпатрӗҫ Вера Ксенофонтовнăна. Ывăлне, Нила, суворовецсен шкулне вырнаҫтарасшăн: ашшӗ пек командир пултăр, теҫҫӗ. Анчах та Вера Ксенофонтовна килӗшмест, ывăлне хăй ҫумӗнчен уйăрасшăн мар.

— Пӗрле киле, яла каятпăр,— ӗнентерчӗ вăл застава начальникне.— Эпӗ колхозница, унта кăна юп курăп.

Татăклă сăмах, ăна хирӗҫлеймӗн. Застава начальникӗ ăнланчӗ ҫакна.

— Мӗнех,— терӗ вăл шухăшлăн,— чикӗ хуралҫисем ялта та ӳсеҫҫӗ.

Акă, палăртса хунă вăхăт ҫитрӗ. Юлашки хут вилтăпри ҫинче пуҫ тайса тăчӗҫ.

— Сывă пул, атте, йывăр тăпру ҫăмăл пултăр!

— Тепре киличчен!

Ҫакăн хыҫҫăн Семен Пилешев ҫемйи ҫула тухрӗ. Вӗсене мӗн киле ҫитиччен ăсатма пӗрле Борис Аххов пырать.

Самолетпа вӗҫнӗ чух та, пуйăс ҫинче те Вера Ксенофонтовна ни

салтакпа, ни ачисемпе калаçмарĕ, шав шухăша путса пычĕ. Иртнĕ пурнăç асран тухмасть.

Семен Пилешевпа вĕсем пĕр ялта çуралса ӳснĕ. Иккĕшĕн те ашшĕсем вăрçăран таврăнайман. Çавăнпа та вăтам шкул пĕтереймерĕç: килтисене пулăшмалла. Комсомола иккĕш те шкулта юлашки класра, саккăрмĕшĕнче, вĕреннĕ чух кĕнĕччĕ. Колхоз ĕçĕнче питĕ хастарччĕ.

Мăшăрланнă хыççăн Семен Пилешевăн çара кайма тиврĕ. Çирĕп ăстăнлă, кĕрнеклĕ вăл, комсомолец. Шăп та шай Тăван çĕршыв чиккине сыхлама юрăхлă çамрăк. Çавăнта ăсатрĕç те ăна. Çамрăк арăм упăшкинчен çыру илсе тăма тытăнчĕ. Хăй те çырать. Савăнать вăл Çеменĕшĕн. Чикке хуралллама шанса пани — пысăк чыс. Çав вăхăтрах пăшăрханать те: службi ытла йывăр.

Куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ чикке пограничниксем. Вĕсен хушшинче чăваш çамрăкĕ Семен Пилешев çивĕччĕн тăрать хуралта. Ирсĕр тăшман совет çĕршывне каçма нихăçан çул тупаймĕ.

Килте пурте йĕркеллĕ. Ун пек чух салтакăн та чунĕ лăпкă.

Çулталăк иртсен, Семен Пилешев пограничник киле яракан çырăвĕсенче икĕ ят асăнма тытăнчĕ: «Вера, Нил ывăлăмăра чипер пăх».

Самана ырă чух çулсем ытла хăвăрт иртеççĕ. Служба та часах пĕтмелле. Семен Пилешевăн заставăран уйрăлас килмест. Çакăн çинчен арăмĕпе çыру урлă килĕшсе таталсан, начальник патне хăйне çар ретне хăварма ыйтса хут çырчĕ.

«Мĕншĕн килĕшрĕм-ши çавăн чух»,— тесе кулянать халĕ Вера Ксенофонтовна. Çавăнтах хăйне хирĕçлесе питлет те: «Комсомолецсем пулнă-çке эпир, урăхла шухăшлама пултарайман».

Хастар салтаксемпе застава та уйрăласшăн мар. Семен Пилешева вĕренме ячĕç. Командир пулса таврăнчĕ вăл тăван заставăна. Вара часах арăмĕпе ывăлĕ те ун патне пурăнма куçрĕç. Вера Ксенофонтовна çывăх ялти колхозра ĕçлеме тытăнчĕ.

Çумра упăшка, ывăл, хĕрача пур ĕнтĕ. Çакă вăл пысăк телей хĕрарăмшăн. Анчах вăхăчĕ-вăхăчĕпе шартах сиксе чĕтремелли самантсем те сиксе тухатчĕç. Сахал пикеннĕ-и хĕçпăшаллă тăшман чикĕ урлă каçма?! Хăйне май хăрушла вăрçă пуçланатчĕ. Кам кама çĕнтерет? Тамăк хуранĕ юнашарах. Пурпĕрех ялан çĕнтернĕ, тăшмана чикĕ урлă каçма ирĕк паман. Юлашкинчен, ав, командирăн пуç хума тиврĕ. Пурнăç тени çапла çав, кирек хăçан та пĕр урапа йĕррипе чупаймасть. Кĕтмен инкек пуласлăха татрĕ.

Мĕн кĕтĕ малашне? Чунтан пăшăрханать Вера Ксенофонтовна. Упăшки тăван тавралăха чунтан юратнăшăнах яла таврăнма шутларĕ вăл.

Семен Пилешев амăшĕ те пĕччене́х тăрса юлнă. Пĕрле хуйхă-суйха тӳссе ирттерме те, ачасене çитĕнтерме те çăмăлтарах пулассӑн туйăнчĕ Вера Ксенофонтовнăна.

Çуралса ӳснĕ тавралăха çывхарнăçемĕн чĕре кăкăртан сиксе тухасла шаккать. Киле упăшкасăр, ачасемпе çеç таврăнать. Мĕнле йывăр чуна! Акă, хăнăхнă станци ячĕ мĕлтлетсе иртрĕ. Пуйăс хăвăртлăхне чакарчĕ, часах чарăнчĕ.

— Çитрĕмĕр,— хыпаланса ӳкрĕ Вера Ксенофонтовна.

— Ӗлкӗретпӗр,— läпкăн каларӗ Борис Аххов,— эсир ачасемпе тухăр.

Чи малтан вакунтан Вера Ксенофонтовна анчӗ те хăвăртрах хӗрачине тытма аллине тăсрӗ. Нил хăех сикрӗ.

Салтакăн вара кирек ăçта та тус нумай. Ырă кăмăллă çынсем ăна, хура тутăр çыхнă хуйхăллă хӗрарăма, япалисене кăлармa пулăшрӗç.

— Телей сунатăп сире,— тав турӗ вӗсене погранични к.

— Çитес çӗре ăнăçлă çитмелле пултăр!— çапла пулчӗ уйрăлу сăмахӗсем тăрса юлнисен те, малалла каякансен те.

— Ых-х сивӗ,— тет Нил, урисене пӗр-пӗрин çумне шаклаттарса илкеленӗ май. Çанталăкӗ, чăнах та, урнă. Урăм-сурăм тăман тӗрлетет, кассăн-кассăн вӗрекен çилӗ вара кăкăра çурмаранах касать. Паллăнă çын шыраса, ун-кун тӗмсӗлсе пăхать Вера Ксенофонтовна. Çук çав, савăннипе, хӗрхеннипе ытама хупма аллисене сарса ыткăнакан çын курăнмасть. Мӗн тăвăн? Ассăн сывларӗ, каллех куçсем шывланчӗç...

Чугун çул çаралса юлчӗ. Перрон вӗçӗнче кăна, япаласен купи çывăхӗнче, тăватă çын тăрать.

— Çитме ӗлкӗреймерӗç пулӗ-ха, килеççех,— айăплисене тӳрре кăларнăн пуплерӗ пограничник.— Колхоз председателӗ патне застава начальникӗ телеграмма янине хам куртăм.

Вера Ксенофонтовна, чӗлхине çăтнăн, каллех ним те чӗнмерӗ. Уншăн пулсан, пурпӗрех тейӗн.

Нил амăшӗ çине ыйтуллăн пăхса илчӗ.

Борис Аххов Пилешев командирăн çемйишӗн чунне пама хатӗр, лара-тăра пӗлмест.

— Кaç пуласси инçе-ха,— тет вăл, тачка пӗлӗт витӗр çутă хӗвеле курасла пуçне çӳлелле каçăртса. Вара, аллипе хăлаçланса, çапла каларӗ:

— Э-э, ара, мӗн туса кунта тăратпăр? Атьăр станцине. Тен, пире кирлӗ çын тахçанах унта ларать.

Вера Ксенофонтовна каллех ним чӗнмесӗр ывăлне йывăрах мар кутамккине çактарчӗ. Субайылда валли те тупăнчӗ çыхă. Хăй те темскер хӗстерчӗ хул айне.

Пуш-пушах станци. Çакăн тек кутсăр-пуççăр тăман ахăрнă вăхăтра çынна килтен нуша çеç хăваласа тухать пулӗ çав.

Пилешев командир çемйи пӗр кӗтес тупса вырнаçрӗ. Салтакпа виçӗ йӗкӗт чăматансем çӗклесе кӗчӗç.

— Вера Ксенофонтовна, колхозран никам та килмерӗ-и?

— Халь текех кама кирлӗ эпир,— хурлăхлăн явапларӗ Вера Ксенофонтовна, Борис çине пăхмасăр.

— Юрӗ, вӗрентӗпӗр сӗмсӗрккесене!— пӳрнипе юнаса илчӗ пограничник.

— Нил, атя манпа.

Нил, ларса ывăннăскер, савăнсах килӗшрӗ.

— Аçталла çул тытăпăр, Аххов юлташ?— ыйтрӗ вăл урама тухсан.

— Парти райкомне. Санăн аçу, Нил, ахаль çын пулман. Вăл коммунист, пограничниксен командирӗ.

Йĕркипе ăнлантарчĕ райкомра пограничник. Тавлашса тăма тивмерĕ, килĕшрĕç часах.

— Пулăшатпăр,— çапла пулчĕ юлашки сăмах.

Пилешев командир çемйи каймалли ял вăрман варринче ларать. Çывăх çул мар, сахалтан та çирĕм пилĕк — вăтăр çухрăм. Хĕлле мар, çу кунĕнче те йĕпе-сапара машина чупаймасть. Çавăнпа та лашасем кӳлчĕç. Çунисем çине типĕ утă сарнă. Пĕчĕккисене шăнасран чĕркеме тăлăпсем пачĕç, пысăккисем валли — аçам. Лашасене станци хыçне тăратрĕç. Япаласене тиемелле.

— «Кăпшăмсене» çуна тĕпне,— тет лавçă, тăлăп аркисене сарса хурса,— унсăрăн сулăнчăкра тухса ӳксе юлăр.

Нилпа Субайылда тепĕр чух пулсан лавçăпа питĕ калаçмалла, халĕ темшĕн чĕлхе-çăвар çаврăнмасть. Пĕчĕк этемсене те хуйхă пусать иккен.

Пурте хатĕр. Лавсем тапранчĕç, станцирен тухса, вăрмана кĕрсе кайрĕç.

— Аташмăпăр-и?— пăшăрханнăн ыйтрĕ Аххов лавçăран.— Хĕл кунĕ кĕске, тĕттĕмленет, çитменнине тата тăман вĕçтерет.

— Аташма май çук, вăрман çулĕ пĕрре çеç,— ăнлантарчĕ лавçă.

Вăрман ăшĕнче тăвăл чарусăр алхасаймасть-мĕн, вăрăм чăрăшсем çил ачисене чăрмантараççĕ. Юр та тӳрремĕн ӳкет, пите-куçа вĕтсе пымасть.

Субайылда ку таранччен те лав çине ларса курман. Ытларах ăна машинăпа чупма, самолетпа вĕçме, пуйăспа кайма тĕл килнĕ. Килĕшрĕ ăна çуна çинче. Вăл тăлăп çухавине вырттарчĕ. Çулăн икĕ енĕпе, хӳме тытнăн, симĕс чăрăшсем. Вĕсене пăхса ытармалла мар.

Нил пуçĕнче пачах урăх шухăш: кĕрт хыçĕнчен мулкач сиксе тухасса кĕтет вăл. Шурă юр çийĕн хура пăнчă асăрхасан, мĕн курăнми пуличченех тинкерет. Тен, лаша умĕнчи çул çинче пĕр-пĕр сехĕрленнĕ куян сиккипе пырать? Малалла çаврăнса ларасшăн пулчĕ вăл, ирĕк памарĕç, чарчĕç. Ăнланмаççĕ çав пысăккисем.

— Мулкач курасшăнччĕ,— кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ Нил.

— Эк-кей, калаçан та вара эсĕ, çамрăк çыннăм. Çакăн пек çил-тăвăлта мулкач çывăрать,— тет лавçă сатурланса.

— Ăçта çывăрать?— пĕлесшĕн хĕрача.

— Епле ăçта? Хăйĕн чăрăш айĕнчи юр пӳртĕнче. Ытла курассу килсен, ыран йĕлтĕр сырса, çурăм хыçне пăшал çакса ухутана тухăр. Хĕвеллĕ кун вĕсем çĕнĕ юр çийĕн илемлĕ тĕрĕ тĕрлеççĕ, унталла-кунталла сиккелесе.

— Тĕрĕ тĕрлеççĕ?— ăнланмарĕ Субайылда.— Кама валли?

— Айван сунарçăсене парнелеме кирлĕ. Вăл тупсăмне тупса йĕр çине ӳкиччен мулкач, вăрманăн тепĕр хĕррине çитсе, ăвăс хуппи кăшласа тăранать.

Тарăн вар тăвайккинчен хăпарнă чух лашасене çултан сылтăм енне кăшт пăрчĕç: хирĕç килен лава ирттермелле. Унăн хуçи, çамрăк йĕкĕт, тилхепине кăрт-карт турткалать. Урхамахĕ кĕртне пăхмасăр чавтарать кăна, вăшт çеç иртсе кайма хатĕр. Анчах лавсем тĕлме-тĕл пулсан, йĕкĕт хăйĕн урхамахне чарчĕ:

— Тпру!— хирĕç пулнă лав çинчи этемсене тинкерсе пăхнă май çĕлĕкне çĕклесе сывлăх сунчĕ:— Çулçÿревçĕсене салам! Калăр-ха, ăçта çул тытатăр эсир!

— Чăрăшлăха,— терĕç ăна.

— Чимĕр-ха, сирĕн лав çинче мана кирлĕ çынсем çук-и?

— Кам кирлĕ сана?

— Мана яла таврăнакан Вера Ксенофонтовнăна станцине илме ячĕç те, вăш-ваш тухаймарăм, пуйăс иртсе кайрĕ пулĕ тесе, лашана хăваласа чăм шыва ÿкертĕм.

— Эсĕ чăнах та кая юлтăн. Вера Ксенофонтовна пирĕн лав çинче.

Вера Ксенофонтовна, хăй ятне асăннине илтсен, пуçне çĕклесе пăхрĕ. Хирĕç пулнă лав çинчи çынна сăнаса пăхрĕ — паллаймарĕ.

— Кам ачи пултăн эсĕ?

— Кÿлĕ хĕрринчи Шуртак Микулайăн ывăлĕ Венюк эпĕ.

— Лашуна каялла çавăр,— хушрĕ Аххов ял çамрăкне.— Мала ÿк, çул кăтартса пыр.

Венюк лашине çавăрса мала пырса тăратрĕ.

— Ман лав çине кам куçса ларать?— ыйтуллăн пăхкаласа илчĕ вăл.

— Эпĕ,— килĕшрĕ Борис. Вăл, юлашки лав çинчен анса, Венюк патне иртрĕ.

Лавсем тапранчĕç.

Вера Ксенофонтовна хăйне темле канлĕ туйрĕ. Тахçанах кун пек туйăм пулман. Çын хисеплени чуна ăшăтать çав. Колхозра манман-ха, эппин, ăна, илме лав янă, ав. Çыннисем те хăйсене ырă тунине асра тытаççĕ.

Тĕттĕмленчĕ. Умра хуп-хура чаршав, куçран пăшатанпа тĕксен те ним курăнмасть. Лашасем маттур, çултан пăрăнмаççĕ, ура айĕнче юр хыттине туйса, тĕп-тĕрĕс чупаççĕ малалла. Колхоз лаши, çул кăтартса ыттисене хăй хыçĕнчен ертсе пынине пĕлнĕн, пуçне мăнаçлăн сулкаласа кăна юртать. Çуни çинчи икĕ йĕкĕт пĕр-пĕринпе паллашрĕç те туслăн калаçма тытăнчĕç. Венюк вĕссе кайманни кăна: чăн-чăн пограничникпа тĕл пулнă-çке. Венюкăн хăйĕн те вăтам шкул пĕтерсен çара каймалла. Халĕ тăххăрмĕш класра вĕренет, пограничник пулма ĕмĕтленет.

— Аххов юлташ, калăр-ха, мĕнле майпа сирĕн пата службăна лекмелле?

— Чи кирли — çирĕп вăй-халлă, таса та тÿрĕ кăмăллă пулмалла. Тĕнчери лару-тăрăва витĕр пĕлсе тăмалла. Апла пулсан, хаçат-журнал вуламалла. Эсĕ комсомолец-и?

— Комсомолец!— çирĕплетрĕ Венюк мăнаçлăн, ку чи кирлине туйса.

Аххов татах нумай сĕнÿсем, канашсем пачĕ:

— Сирĕн ял çамрăкĕсен тĕслĕх илмелли çын пур: вăл — Семен Пилешев.

Пограничник хăйсен командирĕ пирки юратса калаçрĕ, унăн Тăван çĕршыв умĕнче тунă манми ĕçĕпе мухтанчĕ. Юлашкинчен çапла хушса хучĕ:

— Астăвăр, комсомолецсем, Семен Пилешев командир çемйине

никама та кӳрентерме ирĕк ан парăр: ун ачисене чипер ӳсме пулăшăр. Эпир, пограничниксем, паллах, вĕсене пăрахмăпăр, пулăшсах тăрăпăр.

— Вера Ксенофонтовна пултарулла хĕрарăм, ăна ялта хисеплеççĕ,— пĕлтерчĕ Венюк.— Анчах ăна курайманнисем те пур теççĕ. Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнăшăн тиркеççĕ имĕш. Манăн асатте, сăмахран, Вера Ксенофонтовнăна питĕ хисеплет. Утарта ĕçленĕ чух, учет йĕркине мĕнле туса пыма вĕрентнĕшĕн ялан тав тăвать.

Пограничник шухăша кайрĕ, каллех хăйĕн командирне аса илчĕ.

— Яла çитрĕмĕр!— кăшкăрчĕ Венюк.

Самант та иртмерĕ, лавсем уй хапхинчен кĕчĕç те. Пӳртсен кантăкĕсем сӳрĕккĕн йăлтăртатаççĕ.

Пĕчченех пурăнакан Семен Пилешев амăшĕ хаклă хăнасене ăшшăн кĕтсе илчĕ. Хăй пĕр савăнать, пĕр хурланать. Юратнă ывăлĕ çукшăн ăшĕнче татăлса макăрать.

## III

Килнĕ касах райком лашисемпе каялла ларса каясшăнччĕ Аххов пограничник. Венюкпа Нил ăна юлма çав тери тилмĕрчĕç те, ӳкĕте кĕчĕ салтак. Тата хăй те колхозпа паллашма шутларĕ. Тавăрăнсан сасартăк застава начальникĕ ыйтĕ: «Кала-ха, Аххов юлташ, колхоз мĕнле ĕçлет? Мĕн лайăххи, мĕн начарри пур? Пулăшмалла мар-и? Пилешев командир ачисене шкула вырнаçтартăн-и?» Мĕн калĕ Аххов ăна хирĕç? Курман, илтмен, тăрăшман тени лайăх япала мар. Пограничникăн пурне те пĕлмелле. Çапла шухăшларĕ те пĕр кунлăха юлма килĕшрĕ.

Каласса ларнă май чылайăшне пĕлчĕ Аххов. Ялта сакăр çул вĕренмелли шкул çеç. Венюк, ав, вĕренме вунпилĕк çухрăма çӳрет. Халĕ шкул ачисен хĕллехи каникул. Апла пулсан та, шкулта учительсем пурах.

Нилпа Аххов кутник çинче пĕрле ыталансах çывăрчĕç. Ирхине, вăрансан, тем пăшăлтатрĕç вĕсем.

— Салтак, тăма вăхăт!— команда пачĕ Аххов.

Нил та Аххов çумĕнче хăйне чăн-чăн салтак пек тыткалать. Иккĕш те картишне тухса пилĕк таран юрпа çăвăнчĕç.

Апат çикеленĕ çĕре Венюк та пырса çитрĕ.

— Салам!— сывлăх сунчĕ вăл пурне те.

— Вера Ксенофонтовна, эпир шкула каятпăр, ачасен документчĕсене парăр, эппин.

— Ан чăрман, кайран хамах кайса вырнаçтараттăм,— сӳрĕккĕн калать хĕрарăм.— Тепĕр тесен, никамсăрах, хăйсем кайса парсан та юрать.

— Касарăр та, Вера Ксенофонтовна, манăн шкула çитсе курмаллах, урăхла юрамасть,— парăнмарĕ Аххов.

Хĕрарăм, сумкине уçса, ачасен документчĕсене кăларчĕ.

Бориспа Нил хăвăрт пуçтарăнчĕç. Субайылда, пурне те сăнаса тăраканскер, хăйне шкула чĕнменшĕн хурланнипе лĕр! макăрса ячĕ. Хыпăнса ӳкнĕ асламăшĕ мăнукне ыталаса илчĕ.

— Ма йěрен, вар ыратмасть пулě те?

— Манăн та шкула каяс килет!

— Пěчěк хěрача пысăк тетесемпе çÿремест,— йăпатма пуçларě хěрачана асламăшě.— Акă эпě сана кÿршěри Маюкпа паллаштарăп. Иксěр тăвайккине çунашкапа ярăнма кайăр.

Виçě йěкěт урама тухрěç те шкул еннелле утрěç.

Шкул аякра та мар, сăртра ларать.

Директор вырăнтах. Аван йышăнчě вăл йěкěтсене. Аххов пограничник каласа панисене тěплěн, чěрене хурса итлерě.

—Ан пăшăрханăр, Пилешев ачисене лăйăх пěлÿ парса вěрентсе кăларăпăр,— Пилешев командир умěнче сăмах панăн илтěнчě унăн сасси.

Ачасен документчěсене тимлěн пăхрě директор, ещěкрен папка кăларса, ун ăшне тирпейлěн хучě. Сěтел хушшинчен тухса хайсен пулас вěренекенě патне утса пычě те, аллине ун хулпуççи çине хурса, çапла каларě:

— Ну, Нил Пилешев, лайăх вěренессе, дисциплинăллă пуласса, аçу ятне ялан ах çÿлте тытса пырасса шанатăп. Каникул хыççăн йăмăкупа иксěр те шкула вěренме килессе кěтетпěр.

Ахховпа сывпуллашнă май директор ал тытса сěнÿ пачě:

— Çыру çырса тăрăпăр пěр-пěрин патне.

Пограничник çăмăллăн сывласа ячě.

— Лайăх директор сан, Нил,— терě вăл, урама тухсан.— Тупата, ырăскер. Кун пек çын аллине командир ачисене шанса пама пулать.

— Халě колхоз председателě патне ертсе кай,— хушрě Аххов Венюка.

— Вăл килте çук,— пěлтерчě çамрăк.— Шупашкара канашлăва кайнă. Анчах эсир хыпăнса ан ÿкěр, майлаштарăпăр,— ăнлантарма тытăнчě вăл.— Атте лаша кÿлсе парě те вăштах колхоз тавра çаврăнăпăр.

Çамрăксем лаша витине çул тытрěç.

— Ача-пăча мěн колхоз ěç-хěлне пěлтěр, хам кăтартса çÿрěп,— килěшрě конюх.

Çуна çине виççěн тиенчěç: Аххов, Нил тата Микулай конюх. Ывăлне вăл, ěç хушса, лаша витине хăварчě.

— Ут нумай сирěн. Мěншěн çавăн чухлě тытатăр?— ыйту пачě Аххов.

Сăлтавě пур-мěн. Колхоз чăнахах та лаша ытларах тытать ытти хуçалăхсенчен. Чи пысăк асап вăл — вăрман ăшěнчи çул-йěр япăххи. Çул урлă выртакан йывăççен мăн тымарěсем урлă кисренсе чупнипе машинăсем нумая çитмеççě, кěске вăхăтрах пăсăлса пăрахăça тухаççě. Хěл тавраш ěнче вăрман çулě çине машина пырса кěреймест. Районтан лавкка таварěсене лавпа турттармалла. Ку çеç-и...

Микулай конюх, чăпăрккине çěклесе, сывлăшра чăваш! тутарса, лашине юнарě:

— Эй-эй, чуман, хастар пулса кăтарт-ха!

Лаши, ăнланнăн, малалла туртăнчě, картишěнчен чавтарса тухрě.

— Малтан хамăр Чăрăшкаса кăтартăпăр. Килěшетне, Нил? Чăрăшкас — тěп йăва,— пуплерě конюх.

Нил нимех те калама пĕлмерĕ, кулкаларĕ кăна. Аххов ăнланмарĕ ав, ыйтрĕ:

— Мĕншĕн тĕп йăва?

— Хуçалăха пилĕк вак ял пĕрлешнĕ. Кунта колхоз правленийĕ вырнаçнă.

Чăрăшкас — тăвата урамлă ял. Вăрман ăшĕнчи ытти ялсемпе танлаштарсан, вăл хăй пĕчĕк хула. Пӳрчĕсем, чăнах та ĕнтĕ, лутра, тăррисене пĕлĕтелле кăçăртайман. Ку вăл кĕрт хӳнĕрен çапла çĕр çумне лапчăннăн курăнать.

Лаша урам вĕçне яртлатса тухрĕ те çырма еннелле çаврăнчĕ. Пĕве пусĕнче уйрăммăн пĕр вăрăм çурт ларать.

— Колхоз правленийĕ,— ăнлантарчĕ конюх.

Кӳлĕ тепĕр енче, юр çинчех, ялхуçалăх машинисем хĕл каçаççĕ.

Нила ашшĕ аса килчĕ. Унăн машина пурччĕ, ачана пăхнă пек пăхатчĕ ăна. Пайĕсене кăларса сĕретчĕ, винтисене пăрса пушататчĕ, хытаратчĕ, шыв сирпĕтсе çăватчĕ. Ниçта та кайман чух машина ятарласа тунă сарайĕнче канатчĕ. Нила юр айĕнче вырткан машинăсем йынăшнăн, Микулай тетерен, пограничникран макăрса тилмĕрнĕн туйăнчĕ: «Шăнса хытатпăр, тутăхса патракланатпăр. Тархасшăн, илсе кĕрсе лартăр пире лупас айне.Васкăр, çуркунне ака-суха иртерме вăй юлмасть...»

Аххов колхоз конюхĕпе тем калаçать. Нил, тăна кĕрсе, унăн юлашки сăмахне çеç илтсе юлчĕ: «...упрамалла. Капла эсир нихăçан та тырпул тухăçне ӳстерейместĕр».

Чăрăшкас хыçа юлчĕ. Çуна çинче ларса пыракан Борис чĕнмест. Пуçне темле шухăш та пыра-пыра кĕрет: «Тен, çак колхоза ĕçлеме килмелле. Хăнăхсан кунта та тăван кил пулса тăрĕ. Ытла та юхăнса кайнă-çке хуçалăх. Вера Ксенофонтовнăпа ачисене йывăр килмĕ-ши кун пек çĕрте пурăнма?..»

Ик-виç çухрăм кайсан, тепĕр яла пырса кĕчĕç.

— Çеçпĕллĕх,— пĕлтерчĕ Микулай.

Ял ялах, пĕчĕкскер, ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăмасть.

— Ĕне фермине кĕрĕпĕр те, ĕçĕ пĕтĕ,— терĕ конюх.

Кивĕ йывăç вите. Çывăхрах вăрăм пĕрене купи курăнать.

— Кăçал çĕнĕ вите тăваççĕ.

Микулай конюх, фермăна кĕрсен, кунти çынсене Аххов пограничникпа паллаштарчĕ. Ĕçлекенсем çавăрса илчĕç вĕсене. Шăкăр хĕрарăм. Вĕсен хушшинче пĕртен-пĕр çамрăк хĕр.

Аххов пурне те пĕлесшĕн. Тĕрлĕрен ыйтусем парать: фермăра миçе ĕне, миçе килограмм сĕт параççĕ, ĕçлекенсем миçен? Илтнисене блокнот çине çырса пырать.

Пупленĕçемĕн, унăн сăн-пичĕ çуталса çăлтăр евĕр йăлтăртатма тытăнчĕ, темшĕн çамрăк хĕр çинчен куç илмест. Акă, юмахлама пуçларĕ унпа:

— Мĕн ятлă эсĕ?

— Санюк,— терĕ хĕр, пуçне чиксе.

— Хăçантанпа ĕçлен?

23693-ччв

Чувашская республиканская библиотека им. М. Горького

— Кăçал çеç-ха. Çуллаччен муталанам, терĕм. Кĕркунне хулана каятăп.

— Вĕренме-и?

— Курăнĕ унта.

— Служба пĕтсен, эпĕ сирĕн колхоза ĕçлеме килес тесе шутларăм.

— Ĕненместĕп,— кулчĕ Санюк.— Ют çын мар, хамăр ял ачисем колхоза ĕçлеме юлмаççĕ.

— Эпĕ килетĕпех,— çирĕплетрĕ Аххов,—чăн сăмах. Эпĕ сан пата çыру çырăп. Явап парса тăрăн-и?

— Кайсанах манатăр-иç,— вăтаннипе куçран пăхаймарĕ Санюк. Хăй пачах урăххине каласшăнччĕ: «Паллах, çырса тăрăп».

Ытти виçĕ ялĕнче те пулчĕ Аххов. Каялла тавăрăнсан, апат вăхăтĕнче те, кайран та колхоз хуçалăхĕ çинчен сăмах вакларĕ:

— Начар колхоз сирĕн, Вера Ксенофонтовна, лайăххăн тырри-пуллине те туса илеймеççĕ, çĕрĕ те япăх, выльăх-чĕрлĕхĕ те тупăш параймасть.

— Хуçалăха çĕклемелле,— килĕшрĕ Вера Ксенофонтовна.— Эпир çамрăк чух самайланса çитнĕччĕ колхоз, халĕ каллех япăхланнă.

— Чимĕр-ха, Вера Ксенофонтовна,— чарчĕ ăна пограничник,— мĕнле ĕç патне тăрасшăн эсир кунта?

— Калаймастăп-ха, шăллăм.

— Эсир заставăна çырсах тăрăр. Начальник сирĕн пирки пăшăрханать, кун çинчен хăвăр та чухлатăр.

Пĕр хушă нихăш те чĕнмерĕ. Вара Аххов ӳсĕркелесе пыр тĕпне тасатрĕ те сăмах хушрĕ:

— Мĕнле шухăшлатăр, Вера Ксенофонтовна, служба пĕтсен, сирĕн колхоза ĕçлеме килес пулсан? Хăвăрах пĕлетĕр: килте мана никам та кĕтмест, эпĕ тăлăх.

— Кил, Аххов юлташ, сана лайăх кăна хĕр тупса парăпăр.

Салтак паян фермăра ĕне сăвакан хура куçлă чипер пикепе паллашни, ăна килĕштерсе пăрахни çинчен каласа пачĕ. Вера Ксенофонтовна Санюка астумасть. Юлашки темиçе çул колхозран татăлса пурăннă вăхăтра çамрăксем ӳснĕ, çавăнпа паллаймасть. Санюк пирки пăянамăшĕнчен ыйтса тĕпчерĕ.

— Э-э, тимĕрçĕн. Ашшĕ-амăшне хывнă пулсан, сăпайлă хĕр вăл.

— Вера Ксенофонтовна, астукалăр-ха çав Санюка. Тĕл пулсан, ман пирки каласа парăр. Упрасчĕ ăна. Тархаслатăп.

— Ан пăшăрхан. Чăнах юратрăн пулсан, Санюк санăнах пулĕ,— йăвашшăн каларĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

Аххова станцие лашапа Венюк ăсатать.

Уйрăлма çав тери йывăр. Нилпа Субайылда çатăрласа тытрĕç те Бориса, унран нимпе те хăпмаççĕ. Юличчĕ тепĕр куна. Вăл çар çынни çав. Йĕрке çирĕп, ăна пăсма юрамасть, палăртнă вăхăтра, вутлă çумăр çусан та, çитмелле.

Ачасем пуринчен малтан çуна çине хăпарса ларчĕç, укăлчаран тухсан, анса юлма каласса татăлчĕç.

— Сывă пул!

— Тепре куриччен!

— Çитсен, пурне те салам кала!

Кайрĕç.

Хапха умне пĕччен тăрса юлнă Вера Ксенофонтовна, çунакан вутта сикнĕн, хăйне валли вырăн тупаймасть. Çулăм хыпрĕ ăшне, чун ыратать. Унăн мăшăрне пĕлекен çак салтакпа пĕрле иртни юхса кайнăн, пурнăç пушанса юлнăн туйăнчĕ ăна. Тĕрек мĕн пурĕ те хăйĕнче кăна. Пуласлăх — ачасенче.

## IV

Чикĕре пурăннă чух Нил вĕренме çывăхри ял шкулне çӳренĕ. Учителĕсем мĕн тери лайăхчĕ, вĕсем халĕ те асра. Юлташсем тата! Пĕри тепринчен ырă, нихăçан та манăçа тухмĕç.

Тупăнĕç-ши кунта çавнашкал юлташсем? Чăрăшкасра та пур-ха маттур ачасем. Çулла, каникул вăхăтĕнче, тăван яла килсен, Нил ялан Илюкпа вылятчĕ. Кӳлĕре пĕрле шыва кĕретчĕç, вăрмана çырла татма çӳретчĕç. Нил Илюк патне кĕрсе тухма шутларĕ.

Илюкăн амăшĕ уçă кăмăллă хĕрарăм.

— И-их, Нил килчĕ,— савăнса ӳкрĕ вăл.— Ирт тĕпелелле, хаклă хăна пул.

Илюк килте çук. Вăл Шупашкарта аппăшĕ патĕнче хăналанать. Паян-ыран персе çитĕ: виçмине шкула каймалла.

Калаçнă май кил хуçи хĕрарăмĕ чăлантан тирĕкпе панулми илсе тухрĕ те ирĕксĕрлесех Нила кĕсйине чиктерчĕ.

— Йăмăкна та кучченеç пултăр,— терĕ вăл. Унтан, ассăн сывласа илсе, татах сăмах хушрĕ хурлăхлăн:

— Эппин, тавăрăнмаллипех тавăрăнтăр пулать. Тĕрĕс, ял çыннин ялтах пурăнмалла. Аçу пирки илтсен, шутсăрах кулянтăмăр. Мĕн тăвăн, инкек куça курăнса килмест.

Нил тĕпелти сак çине иртсе ларма хăяймарĕ, шăпăр кĕтессинчех тăпăртаткаласа тăчĕ те тухса кайма алăк хăлăпне тытрĕ.

— Ма пит васкан?— чарасшăн пулчĕ ывăлĕн тусне кил хуçи.— Юрĕ, эппин, Илюка калăп, таврăннă-таврăнман чупса пырĕ, кĕтсе тăр.

Пĕччен ларас-тăрас килмест, кичем. Нил вара, коньки сырса, кӳлĕ хĕррине анчĕ. Пăрĕ яп-яка, юр пĕрчи нихăçан лармасть тейĕн, тĕкĕр евĕр йăлтăртатать.

Каток çинче мĕнпурĕ те икĕ ача. Тинкеререх пăхрĕ те Нил вĕсене тӳрех палласа илчĕ — Йăкăнатпа Трапхин. Тем, пĕртте ӳсмен пек курăнчĕç вĕсем. Иккĕшĕ те Нил тăшманĕсем. Сахал мар тӳпелешнĕ вĕсем. Уйрăмах Трапхин кураймасăр шăл хăйраса çӳрерĕ. Тĕрĕссипе илсен, вĕсен хушшинче хирĕçӳ пуçланнăшăн Трапхинĕн ашшĕ Кавĕрле айăплă, вăл ывăлне йытă пек вĕслетнĕ. Тӳрĕ кăмăллăскер мар ашшĕ, киревсĕр çын. Пĕррехинче (ку ĕç темиçе çул каялла пулса иртнĕ, ун чух Нилпа Трапхин пĕчĕк ачасем çеç пулнă) Кавĕрлене колхоз лаша сутма шаннă. Лешĕ хаваспах килĕшнĕ. Сутнă. Анчах юлашкинчен çакă палăрнă: вăл лашан чĕрĕ виçине нумай чакарса кăтартнă. Укçине хăй кĕсйине персе чикнĕ.

Кам пулнă-ха Кавĕрлен ирсĕр ĕçне тăрă шыв çине кăларакан?

Нил амăшĕ Вера Ксенофонтовна, ун чух шăпах колхозăн ревизи комиссийĕн председателĕнче ĕçленĕскер. Акă хăçантанпа Каверле Пилешев çемйине кураймасăр вĕчĕхсе пурăнать.

Çапăçăва кирек хăçан та Трапхин пуçлатчĕ. Халĕ, тен, ăс кĕнĕ, тӳпелешмĕç? Нил иртнине çĕнĕрен хускатасшăн мар. Вĕсен умĕнчех ярăнса иртсе, сывлăх сунчĕ.

— Эй-эй, кам ку?— тĕлĕнчĕ Йăкăнат.

— Э-эхе!— сассине тăсрĕ Трапхин.— Паллană çын, тем? Каллех килтĕн-и?

Трапхин йĕкĕлтесе калание Нил тӳрех чухларĕ. Мĕн тумалла? Çыхланса, алла варалас килмест, çитменнине тата вĕсем иккĕн. Пăрахса каяс, урăхла ăнланĕç, хăравçă выранне хурĕç. Пĕрре çеç ал усса кăтарт, вара пуçĕсене çĕклĕç, такăнтарсах тăрĕç.

Нил кӳлĕ тепĕр вĕçнелле ухă йĕппи евĕр вăшлатрĕ. Ун хыççăн Трапхинпе Йăкăнат та вĕçтерчĕç.

Коньки çулĕ вĕçĕ-хĕррисĕр ярт тăсăлса выртинччĕ. Нила никам та хăваласа çитеес çук. Ирĕксĕрех каялла çаврăнма тиврĕ ун.

Хирĕç пулчĕç, Нила хупăрларĕç.

— Туянтармалла-и сана?— шăл хăйрарĕ Йăкăнат.

— Хăлха чикки тыттармалла-и?— хивреленет Трапхин.— Кăтарт, хăш шăлне ӳкермелле?

— Манăн шăлсем çирĕп, имшеркке аллусем вăй çитерейместĕ,— кăкăрне каçăртрĕ Нил. Унтан икĕ чăмăрне кăтартса каларĕ: «Сирĕн пеккисене, пĕлетĕр-и, чикĕре хăрăк турата ватнăн хуçкалаттăмăр».

— Кăтарт-ха, эппин, авса-хуçса!— куçне чармакласа сывхарчĕ те Йăкăнат Нила тӳрех кăкăрĕнчен ярса тытрĕ.

Кĕрешӳре тăшмана ăçтан лектермеллине пĕлет Нил. Йăкăната вăл вирлĕн кăна тивертрĕ.

— Ӳлĕм ăслă пулăр, ним сăлтавсăр çапла ан тапăнăр!— асăрхаттарчĕ Нил.

— Ах, эсĕ пире чĕркуççи çине лартсах куçăнтан пăхтарасшăн-и?

— талпăнса сывхарчĕ Трапхин.

Чăн-чăн урнă йытах ĕнтĕ.

Хал-халь тытăçса ӳкес самантра сасă илтĕнчĕ: «Трапхин! Трапхин!»

Алăсем усăнчĕç лăштах. Вĕсем патне Кӳлнари ярăнса килет-мĕн.

— Трапхин, сана аçу халех киле таврăнма хушать, лашапа таçта лартса каясшăн.

Ĕненет те, ĕненмест те Кӳлнари сăмахне Трапхин. Чăнах та, ашшĕ каланă пулсан, çиçĕм евĕр хăвăрт киле çитмелле. Трапхин ашшĕн кăра кăмăлне пĕлет, унсăрăн пуç тăрринче е патак, е чăпăркка вылянӗ. Ӳркенсе тăмасть ашшĕ.

— Тав ту аттене. Имреттĕм пĕрре,— мăкăртатрĕ сăмса айĕн, хулăнланма пуçланă сассипе.

— Паллă мар-ха, кам кама ая хуратчĕ?!

Трапхин юлташне хул айĕнчен тытса çĕклесе тăратрĕ те, иккĕшĕ те пăр çийĕн шурĕç.

Каток ăпăр-тапăрсенчен тасалчĕ.

— Сывлăх сунатăп!— саламларĕ хĕрача Нила.— Килнĕ ятпа!

Нил чăрр! пăхса илчĕ. Херача çийĕнче свитер, пуçĕнче калпак. Лента янă икĕ çивĕчĕ кăкри çинче ука евĕр авкаланать. Йăл кулса тăнăран шап-шур шăлĕсем ахаххăн йăлтăртатаççĕ.

— Эх, эсĕ-çке ку, Кӳлнари! Ăçтан шăтса тухрăн?— сасартăк палларĕ ăна арçын ача.

Кӳлнари тĕлĕнмелле хĕрача. Ăна урăх хĕрачасемпе танлаштарма çук. Хăюллăскер: арçын ачасене тĕл пулсан, хăраса ӳкмест; вăтаннипе чĕлхине çухатмасть, хĕрелсе те куçне пытармасть. Кирлĕ пулсан, калаçать, чĕнмесĕр те мăнаçлăн иртме пултарать. Çын нушана кĕрсе ӳкнĕ — ун пек чух аллине тăсма те пĕлет.

— Атя пĕрле ярăнар, кӳр аллуна,— чĕнчĕ Нил хĕрачана.

— Эпĕ ăста ярăнаймастăп çав,— именчĕ Кӳлнари, каток çине сайра хутра çеç çӳренĕшĕн хăйне ăшĕнче питлесе илсе.

— Эсĕ конькине кăшт чалăшраххăн шутар,— вĕрентрĕ Нил.— Хăюллăрах тыткала хăвна, ан хăра. Ку — чи кирли.

Йăр-ярр шуçрĕç конькисем, кĕленче пăр чĕркеленсе юлать ура айĕнче. Аван та-çке тусăн ăшă аллине тытса пыма!

Кайсан-кайсан, Кӳлнари ихик! кулчĕ.

— Ма кулан?— ыйтрĕ Нил, кулăш пайăрки ăна та çавăрса илнине туйса.

— Трапхине чике тăршшĕ лартрăм. Ĕненчĕ, айван,— кулма чарăнаймасăр калать Кӳлнари.

Ашшĕне куç хӳрипе те курман иккен вăл. Йăкăнатпа Трапхин ытлашши чăрсăрланнине асăрханă та тытăçăва çапла майпа сирнĕ.

## V

Илюк ӳссен кам пулĕ-ши? Ун пирки çынсем мар, хăй те пĕлместха. Анчах çакă паллă: вăл вăрмансăр пачах пурăнаймасть. Тĕлĕкĕнче те час-часах вăрманта тилĕ хыççăн хăвалать е, упапа та тĕл пулса, пĕр каварлăн хăвăлтан пыл кăларать. Хĕлле-и, çулла-и — вăрман Илюкшăн — тăван кил.

Шупашкарта пурăнса, ялшăн тунсăхласа çитрĕ. Хула сывлăшĕ кăкăрне хĕснĕ пек туять вăл. Киле таврăнса, хăвăртрах йĕлтĕр сырса, вăрмана чăмасшăн. Мĕн тери ырă çамрăк чăрăш лăссисене патак тивертсе эрешлĕ юр пĕрчисене тăкма!

Аппăшĕ ĕçе кайсан, Илюк та хулапа сывпуллашрĕ.

Киле çитсен, алăк урати урлă каçнă-каçман ăна амăшĕ ырă хыпар пĕлтерчĕ:

— Нил тусу килнĕ!

— Тĕрĕс калатăн-и эсĕ, анне?— ĕненесшĕн те мар Илюк мĕн илтнине. Хăй çав тери хĕпĕртерĕ.

— Суйсан, тем усă пулĕ ĕнтĕ,— кулкаларĕ амăшĕ,— килсе кайрĕ.

— Анне, эсĕ чăматантан аппа парса янă парне-кучченеçсене кăларкала, эпĕ Нил патне чуптарам!

— Апат çимесĕрех-и?— чарасшăн пулчĕ амăшĕ ывăлне.

Ăçта унта! Апат çиес шухăш мар. Çывăх тус илĕртет.

Нил килтех. Ыталаса илчĕç пĕр-пĕрне юлташсем.

Ăпăлансан, Илюк сĕнӳ пачĕ:

— Атя вăрмана йĕлтĕрпе кайса килер.

— Ман йĕлтĕр çук,— таварчĕ Нил.

— Ан хуйхăр, эпĕ илсе килтĕм.

— Иксĕмĕрех-и? Атя Кӳлнарие чĕнер.

Нил тусне Кӳлнарипе пĕрле ярăнни çинчен, Йăкăнатпа Трапхине курни, вĕсемпе чутах çапăçса кайманни çинчен пĕтĕмпех каласа пачĕ.

— Çаплах ĕлĕкхине тăсаççĕ пулать. Ним йĕрки çук вĕсен,— çиллене Илюк.— Шел, эпĕ санпа пулман, тип мунча кĕртеттĕмĕр. Ытти ачасене те тапăнаççĕ, сăлтавсăрах чышкисене çĕклеме хатĕр. Ăнтан каятăп.

— Çыхăпăр-ха хӳрисене,— хастарланчĕ Нил.

Чарăнайми калаçаççĕ икĕ тус. Чăнах, каласа кăтартмалли нумай пухăннă. Иккĕмĕш çул çине кайнă ĕнтĕ пĕр-пĕрне курманни. Нил иртнĕ çуллахи каникулта ялта пулаймарĕ. Ашшĕн отпуск илмеллеччĕ, çемйипе пурте пĕрле киле пуçтарăнатчĕç. Анчах пурăнăç урăххине кăларса тăратрĕ. Малалла шкулта пĕрле вĕренĕç, çакă ачасене савăнтарать.

Илюкпа Нил кӳрше каçрĕç. Хăнасем килнĕшĕн Кӳлнари питĕ хĕпĕртерĕ. Ун патĕнче тепĕр класра вĕренекен Уках ларать.

Тăваттăн вăшлаттарчĕç вăрмана. Урари йĕлме йĕлтĕр чаштăртчаштăрт! тăвать кăпăшка юр çийĕн. Йышпа хавасл҃ă çав. Шӳтле, кул. Пурте килĕшет.

Ялтан тухса чылай аякка кайсан, Кӳлнарисен йытти хăваласа çитрĕ. Йăпăлтискер, хӳрине пăтрататать. Мала иртсе, кĕрт çийĕн ĕрĕхтерет. Унтан ачасем патне чупса пырать; унне е кунне алсишне çыртса, харлатса хывса илет, тулашанçи тăвать. Хăйĕн вăййипе ачасене савăнтарать.

— Малтан Хурăнту çулĕ çине çитсе килесшĕн эпĕ. Хирĕçлеместĕр-и?— ыйтрĕ Илюк, вăрмана кĕрсен.

— Мĕншĕн унта? Тăвайккинчен ярăнар!— килĕшесшĕн мар Нил.

— Кирек мĕн тăвăр, эппин,— кăмăлсăрланчĕ Илюк.— Ман унта çитмеллех.

Туса ăçтан пĕччен ярăн? Тепĕр тесен, йĕлтĕрпе чупма кирек ăçта та селĕм. Карталанчĕç вара малти хыççăн.

Илюк лăпсăркка хурăн айĕнче чарăнчĕ. Кӳлнарипе Уках вĕсен юлташĕ ăçта туртăннине чухларĕç. Кунта Илюк кукашшĕн вилтăпри упранать.

Палăка асăрхасан, юлташĕ мĕншĕн кунта килесшĕн пулнине Нил та ăнланчĕ, çырса хунине çурма сасăпа вуларĕ:

«Коммунист, колхоз председателĕ пулнă В. Р. Шаляев юлташа тăшмансем вĕлернĕ...» Вилтăпри умĕнче темшĕн тута хупăнать, сас тухмасть.

Илюк, пиншак тӳмисене вĕçертсе, хĕвĕнчен икĕ хĕрлĕ чечек кăларчĕ. Вăл çак чечексене Шупашкартанах илсе килнĕ. Амăшĕн йăмăкĕ, тепĕр майлă каласан, кукашшĕн хĕрĕ — Лисук аппăшĕ парса янă.

Чечексене Илюк палăк çумне хучĕ. Нил сылтăм аллине çамки тĕлне çĕклерĕ. Ăна кура, Укахпа Кӳлнари те салют пачĕç.

## VI

Илюкăн урлă урамалла пăрăнмалла. Уйрăлас умĕн Нил пурне те чарса хăй тавра пухрĕ.

— Халĕ пирĕн пата кайăпăр,— терĕ вăл.— Асанне кăмакаран кукăль кăларчĕ пулĕ. Кĕлетрен пилеш çупкăмĕсем илсе кĕрет. Мĕнле тутлă, кĕрпеклĕ! Асăрханмасан, пĕрле чĕлхӳне те çăтса ярăн.

— Эпĕ, тем, именетĕп,— пĕлтерчĕ Илюк.

— Тупăннă хĕрача. Сана вăтанни килĕшмест,— лăплантарать ăна Нил.

Кӳлнари те турткалашать.

— Вată çыннăн кăмăлне хуçни аван мар,— кӳренчĕ Нил.— Вăл сире кĕтет.

Астăвать-ха Кӳлнари, ун патне каçсан, Нил асламăшĕ питĕ савăнатчĕ. Çавăнпа та вăл шухăшне часах улăштарчĕ.

Уках — ларма хĕрĕ, Кӳлнарин хăни. Вăл каникул вăхăтне тустантăшĕпе ирттерме килнĕ.

— Мана сирĕнпе пыни килĕшмест пулĕ ача,— терĕ вăл.— Эпĕ ку ялсем мар, Çеçпĕллĕхсем. Мана Нилăн асламăшĕ те, амăшĕ те палламаççĕ.

— Ҫирлĕ мара ан пупле.

— Ун пек ан шухăшла, Уках.

— Эпир шкулта пĕрле вĕренетпĕр. Ҫолхоз та пĕрле пирĕн. Апла пулсан, эсĕ ют ял хĕрачи мар!

Виççĕн çине тăрсах ĕнентерчĕç Укаха.

Пурте килĕшрĕç, пĕр шухăшлăн пырса кĕчĕç Нилсем патне.

Ватă хĕрарăм мăнукĕпе унăн тусĕсене кĕтнĕ: асăнни йăлтах сĕтел çинче. Панулми те упранса юлнă-мĕн-ха кинемейĕн. Питĕ тарават йышăнчĕ, сĕтел хушшине лартрĕ. Пĕтĕм кăмăлтан сăйлать ачасене.

Субайылда вара пуринчен ытла хавас. Чи-чи кăсăях: чĕвĕлтетет кăна, таçтан сăмахĕ тупăнса пырать унăн. Ачасем пĕр-пĕринпе юмахланă чух пĕчĕк çеç хĕрача шăпланать те куçран чăрр пăхса тăнлать.

— Нил, чикĕ хĕрринче пурăнма хăрушă марччĕ-и? — ыйтрĕ Уках.

— Ним хăрушши те çук. Çапах та ытла канлех те мар. Ҫĕтмен çĕртен пĕчĕк вăрçă тухать.

Нумай каласа кăтартрĕ Нил чикĕ хĕрринче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен.

Ачасен пурнăçĕ те урăхла. Вĕсем — пограничниксен чи çывăх тусĕсем. Умран ют çынна ирттерсе ямаççĕ, тыттараççех чикке хураллакансене.

Нил шкула çӳренĕ ялта акă тахçантанпах пионер-пограничниксен пĕчĕк застави пур. Нумай тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ унта. Ачасен юрăпа ташă ансамблĕ чапа тухнă, хăйĕн концерчĕпе таврана çавăрăннă.

Заставăна çӳрекен пионерсен тĕп тĕллевĕ — чикке хуралласси, чикке пăсакансене тытасси. Чее, вăйлă, ăслă пулма ачасене пограничниксем вĕрентеççĕ.

Чикĕ урлă каçнă шпионсен çулне пӳлнĕ çĕрте паттăрлăх кăтартнă ачасене правительство медалĕсемпе наградăланă.

— Манпа парта хушшинче пӗрле ларнӑ хӗрача та медаль ҫакса ҫӳретчӗ,— мухтаннӑн пӗлтерчӗ Нил.

— Уля-и?— ыйтать Субайылда.

— Ахӑ.

Кӳлнарипе Уках ӑмсанаҫҫӗ ҫав чикӗ хӗрринче пурӑнакан хӗрачана.

— Мӗнле телейлӗ вӑл,— тӗлӗнет Уках.

— Медаль илнӗ ачасем чикӗ хӗрринче ҫеҫ мар, хамӑр чӑвашра та пур,—тет Кӳлнари.— Эх, эпир те ҫав, ӑмсанма пӗлетпӗр, ӗҫре хамӑра кӑтартаймастпӑр.

Илюк хаш! хашлатать. Чӑнахах та кулянмалла. Вӑл дружина совечӗн председателӗ, ачасене нимле ӗҫе те явӑҫтараймасть.

Шӑкӑлтатса ларнӑ май пӳрте Нил амӑшӗ кӗрсе тӑнине те сисмерӗҫ ачасем. Вера Ксенофонтовна ывӑлӗн юлташӗсене сывлӑх сунчӗ.

— Анне!

— Анне!— сырса илчӗҫ ӑна ывӑлӗпе хӗрӗ.

— Чимӗр-ха,— чарчӗ вӑл ачисене,—сире ҫӗнӗ хыпар пӗлтерем. Эпӗ тин ҫеҫ шкул директорӗ патӗнче пултӑм. Сире, ял ачисене, чикӗ хӗрринчи пек пионер-пограничниксен пӗчӗк заставине уҫма, Семен Пилешев мӑшӑрӑм лартнӑ ҫурта парнелетӗп. Хуҫаланӑр.

— Чӑнах калатӑн-и, анне?— хавассӑн ыталарӗ Нил амӑшне.

— Пире икӗ ҫурт кирлӗ мар. Асаннӳн те ҫителӗклӗ. Калана пек, пӳрчӗ ун киве те-ха, ҫапах та эсир ӳсиччен тӳсет.

— Застава начальникӗ кам пулӗ?

— Малтанлӑха хамах.

Чун сисрӗнех, Нилпа Субайылда юр хырса сукмак уҫнӑччӗ ашшӗ ҫурчӗ патне. Вера Ксенофонтовна тавӑрӑннӑранпа та мӑшӑрӗ лартнӑ ҫурта, юнашарах пулин те, ура ярса пусман-ха. Хӑй те ӑнланмасть, тем чарса тӑрать ӑна. Халӗ акӑ сасартӑк кӑмӑл хускалчӗ, ачасемпе пӗрле унта пырса кӗни шӑпах вырнаҫуллӑ. Ҫавӑнпа та ачасене тумтир тӑхӑнма хушрӗ.

— Атьӑр, каҫса курар,— чӗнчӗ вӑл.

Лешсем хӑпӑл-хапӑл сиксе тӑчӗҫ те кӗрӗкӗсене тӑхӑннӑ-тӑхӑнман пӳртрен кӗперленсе тухрӗҫ.

Вера Ксенофонтовна, упӑшкипе курнӑҫма кайнӑн, пуҫне чечеклӗ шурӑ пурҫӑн тутӑр ҫыхрӗ, хулпуҫҫи ҫине ҫӗнӗ кӑпӑшка ҫухаллӑ пальто уртса ячӗ.

Асламӑшӗпе Субайылда та пуҫтарӑнаҫҫӗ иккен.

Урама тухрӗҫ. Ачасем ҫӗн пӳрт умӗнче чарӑнса тӑнӑ, кӗтеҫҫӗ.

— Нил, чӳрече хупӑлчисене уҫӑр,— кӑшкӑрчӗ амӑшӗ. Хӑйӗн чӗри сиксе тухасла тапать, ҫапах та хӑйне хавасла тытма тӑрӑшать, систерсе, ачасен кӑмӑлне хуҫасшӑн мар вӑл.

Кӗшӗлтетсе кӗчӗҫ йышпа. Пӳрт ӑшчикки, хуҫисем килнӗшӗн хӗпӗртенӗнех, ҫап-ҫутӑ. Стена ҫумӗнче — Ленин портречӗ.

Кӗтмен ҫӗртен алӑк уҫӑлчӗ те, Венюк кӗчӗ, унпа пӗрле — Илюксен класӗнче вӗренекен хыткан Хветӗр.

Ачасем ҫеҫ мар, Вера Ксенофонтовна та савӑнчӗ.

— Венюк, эсӗ ачасен тусӗ пуласса шанатӑп кунта. Тархасшӑн, пулӑш вӗсене.

— Мĕнле пĕлнĕ эсĕ?— тет Нил.

— Ырă хыпар халĕ вертолетпа çÿрет,— кулкалать Венюк.

— Эпир кунта ял ачисен погранзаставине уçатпăр,— мухтанать Кÿлнари,— Нилпа амăшĕ вĕрентĕç.

— Пĕлетĕп.

Шкул директорĕ кĕчĕ. Вăл тÿрех хаваслă калаçса, шÿтлеме пуçларĕ. Вĕренекенсем куçĕсене чарса пăхаççĕ ун çине, тĕлĕнеççĕ. Ара, директор вуçех шкулти пек çиллес мар, хăйне ачалла тыткалать.

Пÿрте ăшăтма кăмакара хурăн вутти чĕртрĕç. Ял ачисен паянтан вара кăсăклă пурнăç пуçланнине пĕлтернĕн, çат-çат шаплаттарса ала çупать хурăн вутти, йăлт-йăлт сиксе, хĕлхем ташлать.

Мăрьерен шурă тĕтĕм палкаса тухрĕ, хĕллехи сенкер тÿпене тÿптÿррĕн çĕкленчĕ.

Тулли уйăх иккĕмĕш кантăкран пăхать. Вăхăт чылая кайнă, эппин. Субайылда та анаслать, ав.

— Çитĕ,— асăрхаттарать ватти.— Каяр.

Килне каçсан, асламăшĕ хыпалансах кăмакаран шаркку кăларчĕ. Çемье ĕнтĕ апатра. Шăкăл-шăкăл калаçаççĕ.

Сĕтел хушшинчен тухсан, пĕчĕк мăнукĕпе асламăшĕ выртрĕç. Нил кĕнеке тытрĕ. Амăшĕ çутă çывăхĕнче ал ĕç тытса ларчĕ. Вăл хĕрачи валли çĕнĕ кĕпе çĕленĕ те аркине пÿклесшĕн.

Кăшт тăхтасан, Нил амăшне пырса ыталарĕ:

— Анне,— чĕнчĕ вăл.

Яла таврăннăранпа Вера Ксенофонтовна хăй вичине кĕрсе çитейменрĕ-ха. Ачисемпе йĕркеллĕн пĕр хут та юмахламан. Чикĕре пурăннă чух, упăшкипе иккĕшĕ ачисене ума лартатчĕç те пуплеттеретчĕç. Вĕсен шухăш-кăмăлĕсене, ĕçĕ-хĕлĕсене, кун каçа ăçта-ăçта çитнине, кампа мĕнле вăйă вылянине, шкулта учительсем мĕн каланине — йăлтах витĕр пĕлсе тăнă.

— Итлетĕп сана, ăмăрткайăкăм,— çурăмĕнчен ăшшăн çупăрласа, питĕнчен чуптурĕ ачана амăшĕ.

Нил шухăшлăн çапла каларĕ:

— Кам вăл Шаляев ятлă çын? Эсĕ ăна пĕлнĕ-и? Мĕншĕн ун вилтăпри расна, вăрманта упранать? Илюк ун палăкĕ умне чечек çыххи хучĕ.

Вера Ксенофонтовна тÿрех ним те чĕнмерĕ. Ывăлĕ çапла кăсăкланнăшăн ăшра ăна мухтарĕ. Ырă чунлă ача-пăчан пĕлесшĕн тăрăшмаллах.

— Виктор Родионович Шаляев юлташа эпĕ питĕ лайăх пĕлетĕп,— терĕ амăшĕ.— Вăл хамăр ялти колхоз председателĕччĕ. Тĕлĕнмелле лайăх çын, чăн-чăн коммунист пулнă. Колхоз ачисем пĕрле пухăнсан, пĕрпĕр каласа парăп-ха ун çинчен. Халĕ çывăрма вăхăт.

## VII

Вера Ксенофонтовна ирех района тухса кайрĕ. Районта тумалли ĕçсем чылай ун. Вăл коммунист, учета тăмалла. Райком секретарĕ патне кĕрсе калаçасшăн. Упăшки патне пурăнма кайиччен районта ĕçле-

кенсем ăна пурте пĕлетчĕç. Темиçе çул хушши комсомол райкомĕн членĕ пулнă. Партие те кунтах илнĕ ăна.

Районти собес пайне кĕрсе пуплемелле: ашшĕшĕн ачасене тухакан пенси укçине хăçан параççĕ? Лавккасем тăрăх та çӳремелле. Ывăлĕпе хĕрачине тăхăнма тумтир, кĕпе-йĕм кирлĕ, кĕрпе-лапша таврашĕ те туянмалла.

Малашне пур ĕçе те çапла хăйĕн тума тивет ĕнтĕ.

Лав çинче ларса пынă май иртнисем аса килчĕç. Мĕн чухлĕ çӳремен-ши вăл çакă çулпа? Çу шăрăхне уямасăр, хĕл сиввине парăнмасăр 'шав чупнă. Пурпĕрех çамрăклăх сар çу пек вăл, чуна вăй парса тăрать.

Ăна ялти комсомол организацийĕн секретарьне суйланăччĕ. Вунçиччĕ çултаччĕ вăл ун чух. Вăрçă хыççăнхи йывăр çулсем. Мĕншĕн уйрăмах ăна суйланă-ха? Ялта пултаруллă çамрăксем пулман-и? Сăмахран, хăйĕн пулас упăшкине Семен Пилешевах илес. Мĕнрен кая Ăмăрткайăк! Çук çав, никама та мар, Верăнах суйларĕç. Хăшпĕрисем тиркешетчĕç: эпир шăпăрлансем мар, хĕр пĕрчи хыççăн суллама.

Хĕр-секретарь. Чылайăшне килĕшмерĕ çак. Пухура Вера хăйне хирĕç тухса калакансене тимлĕн итлерĕ, хăшпĕрисен сăмахĕ питĕ тĕлĕнтерчĕ ăна. Çанçурăм сăрлатрĕ, юн вĕреме кĕнĕн пит-куçа пĕçертрĕ. Чуччу ярăнтаракан сăпкаран илсе карта çумĕнче ашкăракан вĕлтрен çине пăрахнăн туйрĕ хăйне хăй ун чух Вера.

Ырăпа калаçакансем те тупăннăччĕ. Уйрăмах тин çеç ĕçлеме пуçланă колхоз председателĕ, коммунист — Шаляев юлташ хӳтĕлерĕ ăна. Хăй вăрçăран аманса таврăннă пулин те, суранне пăхмасăр тăрăшса ĕçлетчĕ.

— Вера — пултаруллă, вĕри чĕреллĕ, тӳрĕ кăмăллă комсомолка,— терĕ хайхискер пухура,— вăл комсомол огранизацине тĕрĕс çулпа ертсе пыраса шанса тăратăп.

Пуху пĕтсен, Шаляев юлташ алă тытсах саламларĕ. Унăн хĕрӳ сăмахĕсем çамрăк чуна çунатлантарчĕç.

— Пирĕн, Вера, вăрçăпа юхăнса юлнă колхоза ура çине тăратмалла пулать. Пĕрле ĕçлер халăх ырлăхĕшĕн.

— Мĕнрен тытăнмалла?— председатель куçĕнчен пăхса ыйтрĕ Вера.

— Ĕçĕ нумай. Часах юр ирĕлĕ, çĕр хуралса юлĕ. Çавăнпа та паянхи кунсен тĕллевĕ çамрăксемпе комсомолецсене çуракине тĕплĕн хатĕрленес ĕçе явăçтарасси пулса тăрать. Тата пирĕн темиçе çамрăка ФЗОна вĕренме ямалла. Çĕршыва рабочисем кирлĕ. Шухăшлăр, план тăвăр. Эсĕ ертсе пыма пĕл, Вера, — сăмахне вĕçлерĕ председатель юлташ.

Пĕр кана комсомол комитечĕ ФЗОна яма çамрăксем суйласа илес тĕлĕшпе ĕçлерĕ. «Рабочи пулма хастар чунлисем çеç тивĕçлĕ»,— çапла калама лекрĕ. Тин çеç комсомола кĕнĕ çамрăксем хушшинчен тупрĕç вĕсене. Уйрăмах пĕр çыру пулăшрĕ темелле. Çав çырăва ФЗО пĕтернĕ хыççăн шахтăна тимĕр тăпри кăларма аннă Ванюк янăччĕ амăшĕ патне. Тимĕр тăпри Тăван çĕршыва мĕн тери кирлине çамрăк рабочи лайăх ăнланнă. Вăл хăйĕн ĕçĕпе чăннипех мухтанать. Укçи-тенкине те

аван илет имĕш. Малтанхи ĕç укçин пĕр пайне амăшне куçарса панă. Ванюк çырăвне Вера пухура вуланăччĕ. ФЗО усси пирки сахал калаçман ун чух. Çавăнпа та ĕçĕ теăннă. ФЗОна вĕренме каякансене вечер тусах ăсатнăччĕ.

Часах акă çуркунне çитрĕ, юр ирĕлчĕ, уй-хир улаланчĕ. Халăх акана хатĕрленет. Комсомол организацине каллех ĕç хушрĕç. Секретарь чупкаласа çеç çӳрет. Çамрăксен — субботник, вĕсен вăрлăх сортламалла.

Каланă вăхăтра пурте кĕлет умне анчĕç. Субботника хутшăнман комсомолецсем юлмарĕç. Ĕç вĕресе кăна тăрать. Пăрçа аллаççĕ. Пĕрлешӳллĕ ĕç савăнтарать çав. Шӳтлеççĕ, кулаççĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе юрă шăранать.

Тепĕр кунне тулă сортламалла. Чăрăшкасси уйне ăнланма йывăр: тем чухлĕ тăрăшсан та, кĕрхи тулă çитĕнмест. Çавăнпа та çурхи тулă кăна акаççĕ.

Акă ĕнтĕ çĕр типрĕ. Уй-хир хăй хуçине кĕтет. Çамрăксем, пĕрле ĕçлеме килĕшсе татăлнăскерсем, акана ушкăнпа тухрĕç.

Пĕррехинче тĕлĕнтермĕш пулса иртрĕ.

Акмалли тулă вăрлăхне лавçă ир-ирех палăртнă вырăна турттарчĕ. Вăл тулли михĕсене пĕр-пĕрин çумне сĕвентерсе ларта-ларта хăварчĕ. Кăнтăрлаччен темиçе михĕ пушанчĕ, тулă пĕрчисем çĕрпе варăнчĕç.

— Апата киле кĕрсен, мĕнле-ши, э? — сĕнӳ пачĕ Лекçей.

— Питĕ аван!

Пурте яла кĕме килĕшрĕç. Лашасене те шăварса сĕлĕ çитермелле.

Апатланнă хыççăн çамрăксем, пĕрле пуçтарăнса, ялтан тухрĕç кĕшĕлтетсе, лашисене çавăтса. Шакăлтатса пынипе хăйсем ĕç вырăнне çитсе тăнине те сисмерĕç. Анчах сасартăк Семен Пилешев урмăшнă сасăпа кăшкăрса ячĕ:

— Аçта пирĕн тулă миххисем?

Сывлама пăрахнăн, тăпах чарăнчĕç. Куçĕсене чарчĕç. Тĕрĕсех, михĕсем çук. Кам та пулин, хăратас шутпа, урăх вырăна куçарман-ши тесе, йĕри-тавра пăхса илчĕç. Çук, михĕсем ниçта та курăнмарĕç. Эппин, вăрлăхлăх тулă çухалнă. Самант шăв-шав çĕкленчĕ. Кашниех хăй шухăшне калать:

— Вăрланă.

— Эх, эпир те çав, айвансем, пăрахрăмăр та хăвартăмăр. Тулла сыхлама пĕрне хăвармаллаччĕ,— кулянать Вера.

— Кам шухăшланă çапла пулса тухасса,— тет Лекçей.

— Тулă миххисене тупмалла,— сăмах хушрĕ Семен Пилешев.— Кĕлетре тек вăрлăх çук.

— Тупаймасан, ку лаптăк хурипех выртса юлать,— пуплет Вера.— Куншăн пире колхоз каçармĕ.

— Вăррисем аякках тарайман-тăр.

— Хурах мăшкăлĕ пулас мар. Шырас!

Пĕрне яла кĕреçе-сенĕксем илме чуптарчĕç. Унчен Вера йыша икĕ пая уйăрчĕ. Пĕр ушкăнне хăй, тепĕрне — Семен Пилешев ертсе пырать.

Çамрăксем, йĕр шыранăн, михĕсем выртнă тавралла çĕре тишкерсе

тухрĕç. Хурахсем тирпейлĕ ĕçленĕ. Тулла тăккаламан. Юхтарса пынă пулсан, çул кăтартса паратчĕ.

Усал хыпар илтсе ялтан татах ик-виç çын тухрĕ. Çапла вара кĕреçе-сенĕкпе авăрланнă йĕрлевçĕсем çула тухрĕç.

Семен Пилешевăн уй-хир тărăх çÿремелле, яла та кĕмелле. Вера ертсе пыракан ушкăн çыран хĕррипе каять.

Ялта ырă мар сас-хура илтнĕ-ха Вера. Вăрманта хурахсем пур имĕш. «Таркăнсем» тетчĕç вĕсене. Вăрçă вăхăтĕнче фронта каймасăр пытанса юлнă пулать те халĕ, килĕсене таврăнма хăраса, сĕм вăрманта пурăнаççĕ. Çав йĕксĕксем иртсе çÿрен çынсене çаратаççĕ. Мĕн аякка каймалли пур: пĕррехинче Вера амăшне те тапăннă. Утнă хайхискер чиперех çулпа. Тепĕр яла аппăшне ĕне ыррипе сăйлама кайнă. Ним кĕтмен çĕртен, чăтлăхран пуп евĕр вăрăм сăхман тăхăннă çын тухрĕ, тет. Куçлăх тăхăннăн, куçне хура пусма татăкĕпе карнă. «Вăрă-таркăн!» — мĕлтлетсе илет Вера амăшĕн пуçĕнче.

Хурах ним сас памасăр хĕрарăм аллинчен сĕт тултарнă чĕресе, тутăрпа çыхнă хуплăва тытса илет. Кунпа кăна çырлахмасть, хĕве чикнĕ укçа енчĕкне те хыпашласа тупать.

«Хурах!» — çухăрать хĕрарăм, куншăн тапкă туянать. Хăйĕн ирсĕр ĕçне тусан, ăçтан тухнă çавăнталлах, чăтлăха, кĕрсе çухалать хăямат этемĕ.

Сехрине хăпартнă амăшĕ вырăнпах выртнăччĕ темиçе кун.

Çак ĕç Вера асĕнчех тăрать. «Ку та çав йĕксĕк ĕçĕ мар-ши? Пĕччен мар тăр-ха вăл? Иккĕн е виççĕн. Вĕсемех йăкăртнă тулла. Аякках çĕклеймен-ха,—шухăшларĕ Вера. Вăл вара ана пуçĕнчи вăрмана ертсе кĕчĕ йышне.

Утрĕç- утрĕç вĕсем карталанса. Унталла-кунталла пăрăнкаларĕç. Вăхăт иртет, ним палли-йĕрки курăнмасть. Акă прачака пырса тухрĕç. Вăл вăрмана икĕ енне уйăрса тÿп-тÿрĕ çул пек таçта çитиех тăсăлса каять. Мише юпи ларать ав. Унта делянка номерĕсене кăтартнă паллăсем.

Çын тавраш курăнмасть. Прачак урлă каçса шалалла кĕрсен тарăн вар патне пырса тухан.

— Ăçталла кайăпăр?— тавлашкаласа тăнă чух сасартăк кашкăр уласа ячĕ.

— Эй, çырлах!— Марье хăй çине урлă-пирлĕ хĕрес хурса илчĕ.

— Килĕр-ха,— чĕнчĕ Вера юлташĕсене. Çамрăксем ун тавра пуçтарăнса тăрсан, шăппăн çапла каларĕ:— Эпĕ тавçăрма пуçларăм.

— Мĕн?

— Хурахсем пирĕн тырра тарăн вара çĕкленĕ,— ăнлантарчĕ Вера, кашкăр уланă еннелле аллипе кăтартса.— Атьăр унталла!

— Чимĕр-ха,— пĕвĕпе картласа тăчĕ Марье.— Каяс мар! Кашкăрсем хамăра туртса çураççĕ.

— Улаканни кашкăр мар вăл,— çирĕппĕн каларĕ Вера.

— Мĕнле апла?— йĕрсе яманни кăна Марьен.

— Мĕншĕн унашкал шухăшлан, Вера?— ыйтрĕ Лексей те.

— Вăрăсем пире кашкăрла уласа хăратаççĕ. Тулă пытарнă вырăна ярасшăн мар. Çавă çеç.

— Тӗрӗс,— хавассӑн йӑл кулчӗ Лекҫей,— пирӗн енче кашкӑрсем пур тенине илтмен. Қаяр!

— Чимӗр-ха,— чарчӗ юлташӗсене Вера.— Тӗлли-паллисӗр Тарӑн вара чупар мар.

Вера ура йӗрӗсем шырама хушрӗ. Прачакӑн икӗ айккипе те канав. Унти ҫӗр хӑйӑрлӑ. Михӗ ҫӗклесе мекеҫленсе утакан ҫын канав урлӑ сиксе каҫайманах. Вера виҫӗ ҫынна сылтӑмалла ячӗ, ыттисемпе хӑй сулахаялла васкарӗ. Нумаях та каймарӗҫ, Лекҫей хӑйӑр ҫине путса кӗнӗ атӑ йӗррисем курчӗ.

— Ҫавсем!— куҫӗ йӑлтӑртатрӗ унӑн.

Сылтӑмалла кайнисене те чӗнсе илчӗҫ. Сиксе каҫрӗҫ канав урлӑ. Тарӑн ҫырманалла ҫул тытрӗҫ.

— Халӗ ӗнтӗ питӗ тимлӗ пулӑр,— астутарчӗ Лекҫей, йӗп шыранӑн пуҫне ҫӗрелле пӗкнӗскер.

Прачакран хӑпнӑ-хӑпман Вера икӗ лутра чӑрӑш хушшинче тӗмеске курчӗ. Вӑл вилтӑпри евӗр мӑкӑрӑлса тӑрать. Хӗрӗн чунӗ сӳлетрӗ.

— Мӗн япала ку?— иккӗленчӗ хайхискер. Ҫавӑнтах юлташӗсене чӗнсе пухрӗ.— Куратӑр-и, атьсемӗрсем?— кӑтартрӗ вӑл хӑйӑр тӗмескине,— мул мар-ши кунта?

— Ҫиелти хӑйӑрӗ те кушӑхса ҫитмен,— куҫне чарса пӑрахрӗ хура ҫӳҫлӗ йӗкӗт.

— Чавар! Мӗн пӑхса тӑратӑр ара?

— Тен, кунта чӑнах та пирӗн тулӑ вӑрлӑхӗ?!

Тытӑнчӗҫ. Қӑпӑшка хӑйӑр тимӗр кӗреҫе хырнипе ҫӑмӑллӑн сирӗлет. Вера сенӗк лартса пӑхрӗ. Унӑн тимӗр йӳпписем теме нӑч! пырса тирӗнчӗҫ.

— Васкӑр!— хушрӗ вӑл.

Кӗреҫесем ҫамрӑксен аллинче хӑвӑрт-хӑвӑрт вӗлтлетеҫҫӗ. Ав тулли михӗ те курӑнать. «Урра!» кӑшкӑрса ячӗҫ савӑннипе. Шӑтӑкран туртса кӑларчӗҫ. Миххе салтса пӑхмасӑр Верӑн чунӗ канмарӗ. Ывӑҫласа илчӗ вӑл.

— Тулӑ,— хӗпӗртерӗ хӗр, ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пӗрчӗсене сиркелесе. Вара темиҫе хут чӑп-чӑп чуптурӗ.

Унччен те пулмарӗ, ҫывӑхрах пӑшал кӗрслетрӗ.

— Ай-ай!— йынӑшса илчӗ Вера.— Пӗтрӗм!

Вӑл пӗҫҫе хӗртнӗ пӑшатанпа пырса тирнӗн туйрӗ. Йӑпӑр-япӑр кӗпе аркине ҫӗклерӗ хайхискер. Чӗркуҫҫинчен ҫӳлерех юн пӗрӗхет.

— Амантнӑ!— хыпӑнса ӳкрӗҫ ҫамрӑксем.

— Вера, сана печӗҫ-и? — ик пӗҫҫине шап ҫапрӗ Марье.

Темиҫе йӗкӗт пӑшал перекене шырама чӑл-пар саланчӗҫ.

Вера ним тума пӗлмест. Юнӗ ҫаплах юхать.

— Ҫыхмалла! Пуҫӑрти шурӑ тутӑрсене салтӑр!— хушать Лекҫей.

Марье пуҫӗнчи тутӑрне сӳрӗ те аллипе тытса тӑрать.

— Эх, хӗр те вара сана. Пулӑшма та пӗлместӗн тантӑшна,— ятласа тӑкрӗ Марьене Лекҫей. Вара вӑл хӑй Вера пӗҫҫине, суранран ҫӳлерех, тутӑрпа пӑвса ҫыхрӗ. Юн пӗрӗхме чарӑнчӗ. Юрать-ха пули шалалла кӗмен, ҫиелтен кӑна ӳте сӗвсе иртнӗ.

— Ах-туру, Вера, мӗнле тӳсен?— йӗрет Марье.— Қаларӑм-ҫке, кун-

талла каяс мар, тесе. Итлемерĕр. Халĕ чиперех уксах хĕр пулса юланиç. Ейпух, качча та каяймăн акă.

Марьене ăссăр палканăшăн самантрах ятласа тăкрĕç. Чĕлхине çыртрĕ вара.

Вера тăрасшăнчĕ, анчах ăна ура çине пусма чарчĕç, пĕр кана выртма хушрĕç. Хăйсем ниме уямасăр ĕçлерĕç.

Шел, шăтăкра виçĕ михĕ çеç. Ăçта-ши тата иккĕшĕ? Мĕн пурĕ пилĕк михĕ пулнă. Шухăша кайрĕç. Пăшал перекен те тупăнмарĕ. Çĕр çăтнăн таçта çухалчĕ.

— Икĕ миххе тупмасăр каймастпăр,— çĕкленчĕ Вера.— Шырамалла. Аякка каяйман, вĕсене те çак таврарах пытарнă.

Пите йĕплĕ чăрăш тураттисем вĕтнине уямасăр, каллĕ-маллĕ тытăнчĕç çÿреме.

Темиçе йĕкĕте таврана сăнама хушрĕç. Шан-ха, лешĕ, сĕмсĕрĕ, каллех çывхарĕ те кама та пулин пăшалпа персе ÿкерĕ.

Хĕвел анас умĕн мĕн шыранине тупрĕç маттурсем. Чавса хума ĕлкĕреймен. Çырма хĕрринчи чăрăш вулли çумне йăвантарнă, çиеле туратсем пăрахнă.

Вăрлăхлăх тулă миххисене çамрăксем йывăçран наçилкка туса çĕклесе тухрĕç вăрмантан. Вĕсене колхоз председателĕ Шаляев юлташ алă тытсах тав турĕ.

Ĕçлес çур кун пĕтрĕ. Анчах кайран тулла акса пĕтермесĕр те çын татăлмарĕ ана çинчен.

Ялйыш чылайччен пуплерĕ çак пăтăрмах пирки. Милици вăрманта темле таркăна тытни çинчен те юмахларĕç.

Верăн суранĕ чиперех юсанчĕ. Пĕçĕри çĕвек çеç мĕн паян кунччен çав пăтăрмаха манма памасть.

## VIII

Иртрĕ хĕллехи каникул, шкула каймалла. Нил хыпаланать, йăмăкне те кĕтесшĕн мар. Субайылда нимĕн чухлĕ те кÿренмест. Унăн туслантăш пур, урам урлă пурăнакан Маюк. Юлташĕ каçĕ те вĕсем шкула пĕрле кайĕç.

Çĕркаçах кĕнекисене чиксе хатĕрленĕ сумкине хул айне хĕстерчĕ те урама виркĕнчĕ Нил. Шкул ачисем курăнмаççĕ-ха, пĕчченех утрĕ.
Шкула вĕренме пилĕк ялтан пуçтарăнаççĕ. Вĕсем, паллах, çитеймен, ку ял ачисем васкамаççĕ, тен, ыйхăран та вăранман.

Хĕвел тин çеç мăнаçлăн шуса тухать. Унăн хăмач çуначĕ таçта çити карăннă.

Утать Нил. Ирхи сывлăш уçă. Сивĕ. Хĕл мучи сăмсана чĕпĕтет. Пĕве урлă каçрĕ. Пăр çинче пĕр пĕчĕк этем лĕчченех ярăнать. Ăнланать вăл: часах акă çуркунне çитĕ, пăр ирĕлĕ, нумаях шăваймăн конькипе. Ярăнакан ачана темĕн чухлĕ тĕмсĕлсе пăхсан та, Нил паллаймарĕ. Тăкăрлăка кĕчĕ вăл. Сукмак — тăвайккинелле. Сывлăш пÿлĕнет. Каннă чух куçсем тавраналла сăнаççĕ. Аякрах та мар, сылтăмра, айлăм вырăнта, пăлтăрлă икĕ хутлă çĕнĕ çурт курăнать. Мăрйинчен тĕтĕм тухать. Ка-

лăн: пĕлĕтри курăнман алăсем мăрьерен тачка пăяв туртса кăлараççĕ тесе. Пÿрт тавра хуралтă çук, карта-хÿме çавăрман, çап-çара ларать.

Нил ăмсанса пăхса тăрать çав çĕнĕ çурт çине. Ашшĕпе амăшĕ тахçан калаçни аса килчĕ ăна. Ашшĕ, яла таврăнсан, хыр пĕренисенчен çĕнĕ çурт çавăрма ĕмĕтленнĕччĕ. Ун пек пÿртре тутлă шăршă тăрать тетчĕ. Амăшĕ темиçе пÿлĕмлĕ чул çурт купалама хушатчĕ. Чул çурта таса тытма меллĕрех имĕш. Çапах та ашшĕ калană пек пулчĕ.

Сасартăк пăлтăр чÿречи уçăлчĕ. Тупата, юмахри пекех. Анчах чипер пике мар, усăк хăлхаллă çĕлĕк тăхăннă арçын ача пуçне кăларса усăнчĕ пилĕк таран. Çакна çеç кĕтнĕн, таçтан муртан, кăвакарчăнсем вĕçсе килчĕç, эх, явăнаççĕ! Кантăк умне лартнă тăрăхла сак çине апат сапса парать иккен ача.

«Аслă ача»,— шухăшларĕ Нил. Чим, мĕн мыскари? Ача кăвакарчăнсене тытасшăн мекеçленет. Лешсем шуйланаççĕ. Чеескер, аллине хускатмасăр усăнса выртать. Кулюккасем ăнланмаççĕ, вĕсен апат сăхса юлас килет. Каллех тĕр-тĕр тĕрлетрĕç, çуначĕсемпе сывлăша авăсрĕç. Ие чăмласшĕ, ярса тытрĕ пĕрне.

Ача çухалчĕ, кантăк хупăнчĕ. Темĕн чухлĕ пăхсан та, чÿрече тек уçăлмарĕ. Часах сывлăша ĕнĕк шăршă сарăлчĕ.

Нил пуçне усса утрĕ. Илюк хуса çитнине те сисмерĕ.

— Ирхи салам!

— Телейлĕ кун пултăр!— сывлăх сунчĕç вĕсем пĕр-пĕрне.

Айлăмри вырăнта ларакан пăлтăрлă икĕ хутлă çĕнĕ çурт çине пÿрнипе тĕллесе кăтартса ыйтрĕ Нил юлташĕнчен:

— Çак çĕнĕ пÿртре кам пурăнать?

— Шÿреке,— терĕ Илюк.— Ашшĕ колхозра ĕçлемест, ялсем тăрăх кăмака туса укçа çапса çÿрет. «Пуйрĕ те икĕ хутлă пысăк çурт лартрĕ»,— теççĕ ялта.

Илюкпа Нил тек Шÿреке Йăкăначĕ пирки асăнмарĕç. Ун-кун калаçкаласа, малалла хаваслăн утрĕç. Юлташпа чух сукмак ансăрри те сисĕнмест.

Класра никам та çук, партăсем пуш-пушах. Кăшт тăхтасан, Кÿлнари курăнчĕ.

— Эсĕ кампа ларан?— ыйтрĕ унтан Нил.

— Никампа та.

— Пĕччене-и?

Хĕрача пуçне сĕлтрĕ.

— Мана йышăнăн-и?

— Тархасшăн.

Нил малти парта хушшине Кÿлнарипе юнашар ларчĕ.

Акă Акрапи хăйĕн çĕнĕ юлташĕсемпе çитрĕ. Вăл Нила Кÿлнарипе юнашар ларнине асăрхарĕ те питĕ тарăхса кайрĕ. Аран-аран лăпланкаларĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Трапхин кĕчĕ класа, ун хыççăнах — Йăкăнат. Вăл тусĕ хыççăн кайри парта патнелле утнă чух каллех темле ĕнĕк, усал шăршă сарăлса юлчĕ, сăмсана пырса çапрĕ.

Ĕнтĕ класс ачасемпе тулчĕ, шăв-шав тăрать.

Йакăнат парта ҫине кĕнекине кăларса хучĕ та алăк патнелле утрĕ. Тухса каяс умĕн каялла ҫаврăнса кăшкăрчĕ:

— Трапхин, атя шыв ĕҫме!

Нил пуҫне ырă мар шухăш ҫаврчĕ: «Паҫăр, пăлтăр чӳречинчен усăнса, сисĕнчĕксĕр ярса тытнă кăвакарчăна шаритлесе ҫимерĕ-и ку хăямат?» Илюка каласшăнччĕ ҫакăн пирки, анчах ҫăвар уҫма ĕлкĕреймерĕ, класа Михаил Михайлович учитель кĕчĕ.

Михаил Михайлович — географи вĕрентет. Музыкант, кăмăллă ҫын. Ăна ачасем хисеплеҫҫĕ, хăй ҫук чух юратса «Мих-мих» тесе чĕнеҫҫĕ.

Пурте вырăна ларсан, Михаил Михайлович куҫлăхĕ витĕр пĕтĕм ачасене пĕр харăс курасла тишкерсе пăхрĕ те:

— Ăҫта-ха пирĕн ҫĕнĕ ача, Нил Пилешев?— терĕ.

Нил учительсемшĕн чăнах та ҫĕнĕ ача, вĕренекенсем кăна лайăх паллаҫҫĕ ăна.

— Кунта эпĕ,— ура ҫине тăчĕ Нил.

— Вырăн тупса панă, эппин, сана, питĕ аван,— терĕ учитель, класс журналне уҫса хăй умне хунă май.— Халĕ урок пуҫлăпăр. Иртнисене аса илер. Трофим, тух-ха, кăтарт пире Бискай ятлă тинĕс кукри ăҫтине. Мĕнлескер вăл?

Трапхин, карттă умне тухса, вăрăм патак тытрĕ. Унталла-кунталла шутаркалать ăна. Ăҫта-ши? Тупаймасть. Тен, Япони таврашĕнче?

— Пулмарĕ-и? Кам пĕлет?— тет учитель.

Пăт-пат алăсем ҫĕкленчĕҫ.

— Сахалтарах,— кăмăлсăрланчĕ Михаил Михайлович,— Нил Пилешев, тен, эсĕ пулăшăн Трофим Гаврилова?

Учитель ҫĕнĕ ачан пĕлĕвне тĕрĕслеме шутларĕ.

Нил хăюллăн утса пычĕ географи картти умне. Трапхинтен вăрăм патакне илчĕ те Бискай тинĕс кукрине кăтартрĕ.

— Ҫакă тинĕс кукрин шывĕ Испани, Франци ҫĕршывĕсен ҫыранĕсене чӳхет.

— Тата мĕн пĕлен ун ҫинчен?— ыйтрĕ вĕрентекен.

— Бискай тинĕс кукринче час-часах тăвăл асать. Тĕпĕ яка мар. Карапсене ҫӳреме мелсĕр. Вĕсем ванаҫҫĕ, путаҫҫĕ. Анчах та ҫакă хăрушла шыв ҫулĕ ҫинче этем пĕччен мар, инкекрен ҫăлакан туссем пур.

— Камсем-ха вĕсем?— пулăшнăн сăмах хушрĕ вĕрентекен.

— Дельфинсем. Вĕсем, карап умĕн ишсе, капитансене ҫул кăтартса пыраҫҫĕ. Пĕр вăхăтра капитансем уйрăмах ăслă дельфина асăрханă. Вăл кит пекех пысăк пулнă, дельфинсен пуҫлăхĕ ĕнтĕ. Моряксем ăна юратса «Тихон» тесе чĕннĕ. Тихон, шыв ҫийĕн юпа евĕр ҫĕкленсе, хӳри ҫине тайăнса, карап умĕн ишнĕ, вăл капитана ҫул кăтартнă. Анчах ҫынсем хушшинче пур ҫав тискер чунлисем. Ним айăпсăр кайăксене тытса пĕтереҫҫĕ.

Нил ҫапла аларĕ те хыҫалти парта хушшинче ларакан Йакăната тĕллесе пăхрĕ. Лешĕ, теме сиснĕн, куҫне тартрĕ.

— Ҫавăн пек ҫынсенчен пĕри,— малалла каларĕ Нил,— Тихона пăшалпа пенĕ. Шыв самант, сăрă янăн, хĕп-хĕрлĕ хĕрелнĕ. Ҫакăн хыҫҫăн кӳреннĕ дельфинсем чылай хушă карап патне ҫывхарман.

— Маттур, Нил Пилешев. Учебникра ҫырманнисене те пĕлетĕн,—

мухтарĕ ĕна учитель. Вăл татах ытти тинĕс кукрисене те кăтартма хушрĕ. Йăнăшмарĕ çĕнĕ ача.

— «Пиллĕк» паллă илтĕн,— пĕлтерчĕ Михаил Михайлович.

Нил дневникне тыттарчĕ. Учитель страницисене уçать. Куçлăхне хывса тутăрпа шăлнă май, куçĕсене мăч-мăч хупкаласа илет. Куçлăхне каллех сăмси çине лартсан, ача дневникне пĕтĕм класа çĕклесе кăтартать.

— Ачасем, курăр-ха, Нил Пилешевăн «пиллĕксем» кăна. Акă мĕнле вĕренмелле, танлашăр унпа.

Шăпăрт ларaççĕ ачасем. Хăшпĕрисем айăплăн пуçĕсене пĕкеççĕ.

Трапхине ятламарĕ учитель.

— Сана паянлăха каçаратăп,— терĕ çеç.— Тепрехинче те чĕнмесĕр тăрсан, «иккĕ» лартса пама тивет. Çакна ан ман.

Михаил Михайлович карттă умне чĕнсе кăларнă икĕ ачана та хăйсен вырăнне ларма хушрĕ.

Нил хăйĕн парти патне çăмăллăн яра-яра пусрĕ. Пичĕ-куçĕ çапçутă. Учитель мухтани, «пиллĕк» лартса пани çав тери çунатлантарчĕ ăна.

Трапхин пуçне усса, куçне хĕссе, уринчен урине аран ирттерсе, йăпшăннă евĕр утрĕ хыçалти парта патнелле.

— Сик леш вĕçне,— чавсипе тĕкрĕ Трапхин юлташне. Пичĕ çине хĕрлĕ пăнчăсем тухнă тĕмпĕл-тĕмпĕл. Шутсăр тарăхрĕ Нил умĕнче тӳрех намăс курма тивнишĕн. Каток çинче хăйĕн паттăрлăхне кăтартасшăнччĕ: ӳлĕмрен çын хăраса, пăрăнса тăтăр! Пулмарĕ. Халĕ ак каллех... Анчах йывăр шухăшсем нумайччен хыпкăчлаймарĕç, часах çĕнĕ ĕмĕтсем амаланчĕç пуçра.

— У-уй, явăл! Çӳç пĕрчисĕр тăрса юласскер!— чышкисене чăмăртарĕ Трапхин.

— Кама вăрçан эсĕ?— пăшăлтатрĕ Йăкăнат.

— Кама пултăр, йӳçĕ пилеше.

Учитель шывсикки пирки калаçрĕ, карттă çинче кăтартрĕ.

Сасартăк коридорта шăнкăрав сасси янăрарĕ. Урок вĕçленчĕ.

Михаил Михайлович та класс журналне хупрĕ. Мĕн чухлĕ çĕннине пуçа хывреç ачасем! Пĕртен-пĕр Трапхинăн кăна пĕлӳ хутаçĕ пуш-пушах юлчĕ. Вăл учителĕн пĕр сăмахне те хăлхана чикмерĕ. Пуçне урăххи çĕмĕрчĕ унне: Нила питĕ хытă тавăрасси. Çитĕ вăхăт, вăйне кăтартех.

## IX

Уроксем пĕтсен, Илюк Кӳлнарине кăшт тытăнса тăма хушрĕ.

Ачасем тавлашса, пĕр-пĕринпе кăшкăрашса, шкул алăкне кĕрслеттерсе хупа-хупа тухса чупрĕç килнелле.

Виççĕнех тăрса юлсан, Илюк хăйĕн чунне ыраттаракан шухăшсем пирки сăмах тапратрĕ:

— Нил, эсĕ пĕлместĕн пулĕ-ха, эпĕ — дружина совечĕн председателĕ-çке.

— Саламлатăп.

— Тавтапуç. Анчах ку чи кирли мар-ха. Дружина çывăрать, ниепле те вăратаймастăп. Акă мĕн, ку таранччен ырă ĕçсем тума Трапхинпе Йăкăнат чарса пычĕç. Вĕсем пионерсене хĕнессипе юнаса хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Мĕнле майпа ачасене хамăр майлă çавăрмалла-ши? Паянччен эпĕ пĕччен тăрмашнă. Халĕ эпир иккĕн. Кĕлнарие шутласан — виççĕн.

— Ялти пограничниксен заставине йĕркелесе çитерсен, дружина ĕçĕ лайăхланать,— тет Нил.

Нумайччен пуплерĕç вĕсем, сĕтсе яврĕç. Ачасене кăсăклантаракан ĕç тупрĕç-тупрĕçех. Спортпа вăрçă вăййи ирттермелле. Хĕлле юртан крепоçсем тума мĕн тери селĕм. Кун пек вăйăран пĕр ача та айккинче тăрса юлмĕ.

— Эпĕ ачасене алă вĕççĕн кĕрешме вĕрентĕп,— сăмах пачĕ Нил.— Чикĕ хĕрринчи пограничниксем пек. Тренер хамах пулăп.

— Тĕрĕс!— хавасланчĕ Илюк.— Аста кĕрешме вĕренсе çитсен, Трапхинпе Шĕрекерен нихăшĕ те хăрамĕ.

Вăрçă вăййине хĕрачасене те хутшăнтарма килĕшсе татăлчĕç. Вĕсем разведчиксем, медсестрасем пулччăр. Ку ĕçе йĕркелеме Кĕлнарие хушрĕç. Ăна Уках пулăшма пултарать. Вăйă ирттерме Венюк комсомолеца чĕнме шутларĕç. Вăл хирĕç пулас çук. Шĕреке пирки те уйрăм калаçса илчĕç. Унăн ирсĕр ĕçне тĕрĕслесе, пĕтĕм пионерсене каласа памалла. Кăвакарчăнсене упрамалла. Вĕсене тискеррĕн пĕтерекен ача — путсĕр çын. Ăна намăслантармалла.

Ачасем шкул директорĕпе те кĕрсе калаçрĕç. Вăл татах ăслă сĕнÿсем пачĕ. Юлашкинчен, пысăк хут листи илсе, пĕлтерÿ çырчĕç:

«1. Çак кунсенчех Семен Пилешев çуртĕнче ялта ÿсекен чикĕ хуралçисен застави уçăлать. Унта пограничник пулма ĕмĕтленекен ачасем çÿреме пултараççĕ.

Кун пирки каярахпа уйрăм калаçу пулать.

2. Пограничник пулма ĕмĕтленекен ачан тÿрĕ кăмăллă, çирĕп вăйхаллă, сывлăхлă пулса çитĕнмелле. Ун пек пулма мĕн пулăшать? Спорт. Çакна шута илсе, дружина хĕллехи спортпа вăрçă вăййи ирттерет.

Вăййа хутшăнма икĕ отряд йĕркеленет: «Хĕвел» тата «Çич çăлтăр». Пĕрремĕш отрядăн командирĕ — Венюк Шуртаков комсомолец, иккĕмĕш отрядăн командирĕ — шкулти физкультура учителĕ Петр Васильевич Скворцов.

Кам хăш отряда çырăнасшăн? Васкасах пĕлтерĕр. Отряд ятне, хăвăр хушамата çырнă хута ещĕке ярăр.

3. Пурин те йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хутшăнмалла, ГТО значок нормине памалла.

4. Вăйă ирттерме хатĕрленнĕ май çĕнĕрен икĕ кружок ĕçлеме тытăнать:

а) арçын ачасем валли — ирĕклĕ майпа кĕрешсе çĕнтересси;

(Тренер — Нил Пилешев.)

ă) хĕрачасем валли — малтанхи пулăшу пама вĕренесси.

(Пуçаракан̆ĕ — Кĕлнари Иптешева.)

5. Вăййа П. В. Скворцовпа Венюк Шуртаков вĕрентеççĕ.
Пурте вăйă картине!

Дружина совечĕ».

Пĕлтерĕве коридор стени çумне çыпăçтарчĕç.

Акраппи пачах канăça çухатрĕ: Нил ăна асăрхаманшăн тарăхрĕ. Перемена вăхăтĕнче хăйне кăтартасшăн урăм-сурăм явкаланчĕ, хыттăн кулчĕ, хĕрачасене сасăпа ятран чĕнчĕ — пайти çук. Нил Кўлнарипе тата Илюкпа калаçать.

— Вăтанать,— тет Акраппи хĕрачасене шăппăн Нил пирки.

Акраппи шăнкăрав хыççăн класран тухрĕ те коридорти кантăк умне кайса тăчĕ. Ним хускалмасăр кĕтет. Сăнать. Нил киле унпа пĕрле каясса шанать. Мĕн мур тăвать Нил класра? Тўсеймен енне алăка уçса пăхрĕ те парта хушшинче Нил, Илюк тата Кўлнари ларнине курчĕ. Темле кайса ўкмерĕ вĕчĕхнипе.

— Хуп алăка!— терĕ Илюк.

— Туй тăватăр-и-мĕн?! — витлерĕ Акраппи, шăлне йĕрсе.— Тупăннă, май çук!

Тарăхнипе Акраппи урипе тапса лач! хупрĕ алăка.

— Қам йыттине вăрçтаран?— йĕкĕлтерĕ иртсе каякан хĕрачасенчен пĕри.

— Чимĕр-ха, кулăш пĕлтерем сире!— хавасланançи пулчĕ çиллине ниепле те шăнăçтарайман Акраппи. Вăл хĕрачасене кантăк умне пухрĕ.

— Итлĕр-ха. Тĕлĕнтермĕш!— куçне чарса пăрахрĕ Акраппи.— Кўлнари икĕ ачапа класа хупăнса ларнă. Эх, ухмах! Хăй ятне хăй ярать.

— Мĕнле ачасемпе?

— Қампа?

— Қампа пултăр: пĕри — Нил, тепри — Илюк.

— Тен, вĕсен темле лару пырать пулĕ,— ĕненмест кăвак тутăр çыхнă хĕрачи.— Илюк дружина совечĕн председателĕ. Кўлнари — совет членĕ. Ĕç пурах.

— Пит нумай чухлан эсĕ,— тутине саркаласа пĕрчĕ Акраппи.— Вĕсем вăрманта та пĕрле ярăнса çўренĕ. Намăса çухатнă ĕнтĕ Кўлнари.

Хĕрачасем, Акраппи майлă пулса, кăшлакаларĕç пăртак Кўлнарие. Пурте пĕрле пырса алăка яриех уçасшăнччĕ, анчах ĕлкĕреймерĕç, шăп çак вăхăтра класран Кўлнарипе икĕ ача тухрĕç те тем калаçса иртрĕç вĕсен умĕн.

Шкулта тек ним те илĕртмест. Хĕрачасем саланчĕç.

Акраппи пĕчченех утать килелле. Ăна хирĕç Нил амăшĕ килет. Çывхарса çитиччен саламларĕ:

— Сывлăх сунатăп, Вера аппа.

— Мĕнле пурăнан, Акраппи?

— Аван-ха. Вера аппа, сирĕн Нил питĕ путсĕр хĕрачапа туслашрĕ.

— Қампа?— тĕлĕнчĕ Нил амăшĕ.

— Кўлнарипе.

— Вăл путсĕр хĕрача-и?

— Путсĕр çав. Илтмен-и вара эсир: Кўлнари арçынсемпе эрех ĕçет, пирус туртать.

Вера Ксенофонтовна хăйне вĕри шывпа сапнăн туйрĕ. Ĕненме мар

ăна, çăварĕнчен шăршлă тикĕт сирпĕтсе тăнăшăн çупса яма хатĕр. Кама-кама, Кӳлнарие лайăх пĕлет. Вăл çеçке çине пухăнă сывлăм тумламĕ пек таса. Ашшĕ калама çук ырă кăмăллă çынччĕ, вăрçă суранĕ пĕтерчĕ, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Амăшĕ заводран тухмасăр ĕçлет. Çакнашкал çемьере хăрăк чунлă этем çитĕнмест. Пăянамăшĕ те Нил тус-йышĕнче Кӳлнари пурришĕн савăнать.

«Ытла ырă кăмăллă, ĕçчен хĕрача. Телей куртăрах вăл,— кĕлтăвать.— Кун сиктермесĕр килсе тăчĕ ман пата — тăлăх карчăк патне. Қаçать те вара, мĕн те пулин тума тытăнать. Урай çăвать, шыв ăсса килет. Мунча хутсан, çăванма чĕнеççĕ. Кĕпе-йĕм те йăлтах ухса-чӳхесе панă...»

Çаксене аса илчĕ те тарăхса ыйтрĕ Вера Ксенофонтовна:

— Эсĕ ху куçупа куртăн-и Кӳлнари эрех ĕçсе тапак туртнине?

— Курман,— терĕ Акраппи.— Çынсем калаççĕ. Мана анне ун патне ура яртарса пустармасть. Эсир те Нила Кӳлнарипе çӳреме чарăр.

«Тур çырлах!»— терĕ ăшĕнче Вера Ксенофонтовна. Вăл хăй умĕнче хĕрача мар, çĕлен çури чашкăрнăн туйрĕ. Пĕчĕккĕ, апла пулин те сăннине кăларать. Тем персе ярасран хăйне хăй аран-аран тытса чарчĕ.

— Чунсăр хĕрача эсĕ, Акраппи. Мĕн кĕтĕ сана, ӳссен? Шутсăр шел.

Иртсе кайрĕ Вера Ксенофонтовна, Акраппи çăварне карса тăрса юлчĕ.

## X

Укăлча хапхи витĕр йĕлтĕр сырнă, пушă çуна туртнă, йытă ертнĕ икĕ ача тухрĕç. Кусем — Нилпа Илюк.

Кăшт тăхтасан, ялтан татах икĕ ача тухрĕç. Вĕсен те урисенче йĕлтĕрсем.

Ытахальтен тенĕн Илюк каялла çаврăнса пăхрĕ те тĕлĕнчĕ:

— Пăх-ха çаврăнса, Нил! Кама курăн!

Нил чарăнчĕ, çаврăнса пăхрĕ те хăйсенчен аякрах та мар Йăкăнатпа Трапхин ярăнса пынине курчĕ.

— Ых-х упăтесем! Ăçта сĕнккеççĕ пулĕ?— кăмăлсăрланчĕ Илюк.

— Пирĕн йĕрпе шăваççĕ.

Чăнах, ăçта çул тытнă Шӳрекепе Трапхин? Нилпа Илюк акă вутта каяççĕ вăрмана. Вĕсен застава çуртне ăшăтмалла, ăна хăвăртрах уçма хатĕрлемелле. Амăшĕ правление кайса вăрмантан вутă тиесе килме темиçе хут та лаша ыйтрĕ, памаççĕ. Лашасем ерçмеççĕ имĕш. Паян вырсарникун. Вера Ксенофонтовна ирех правление тухса кайрĕ çав шухăшпах. Темле ĕнтĕ.

— Эй, тилмĕрттерме юратаççĕ,— кӳренчĕ асламăшĕ.— Аслисем мар-и, ара?

Виçĕмкун çил-тăвăл алхасрĕ, хырсем хăрăк тураттисене тăкнах. Çавăнпа Нила асламăшĕ хĕтĕртрĕ. Шăпах алçемми, ача-пăча ĕçĕ, хăрăк турат пуçтарма йывăр-и?

Нил асламăшне итлерĕ. Пилĕкри пиçиххи хушшине пуртă хĕстерчĕ, Илюка хăйпе пыма чĕнчĕ. Илюк вăрмана каяс тесен — çăкăр çимест. Кӳлнари йытти таçтан сисрĕ, ермешрĕ те лĕпĕстетрĕ вĕсем хыççăн.

Хыр вăрманĕ самай аякра, анчах çамрăк урасенче вăй пур чух ним те мар, ывăнни сисĕнмест.

Вата çын чухлать çав: хырсем айĕнче мăн туратсем лăках.

— Вайлă çилĕн усси пур, ав мĕнле тураса тасатнă йывăçĕсене,— тет Илюк.

Нихăшĕн те алă усса тăма тивмест, иккĕшĕн валли те ĕç çителĕклех. Илюк хăрăк туратсене купана тултать. Нил çунашка çине меллĕн вырнаçтарса туратсене пĕр вiçен касса ваклать. Кампур йытă та тусĕсене пулăшма сĕмленет, сĕтĕрет кăна туратсене çăвара хыпса.

— Ăслăскер эсĕ, Кампур,— йытта çурăмĕнчен аллипе шăлса якатать Илюк.

Çунашка тулчĕ. Вутă-шанкă ўксе юласран çинçе пăявпа тапса çыхрĕç ăна ачасем. Пĕрле туртма çунашка ўречинчен икĕ вĕçлĕ вăрăм сўс кантрасем çыхрĕç. Урисене йĕлтĕр сырсан, çунашка кантрисене хулпуççи урлă хурса, малалла ўпĕнчĕç. Тапранасшăн мар, çунашка тупанĕ юр çумне шăнса çыпăçнă.

— Пĕрре, иккĕ!

Пĕр харăс талпăнчĕç. Çунашка ачасем хыççăн юлхавлăн, аран-аран шурĕ. Кампурăн выляс шухăш. Умра ĕрĕхет. Ăнланмасть, мĕншĕн хăваламаççĕ тусĕсем ăна ярса тытасшăн? Аптранă енне ачасен пиншак аркисене çыртса туланă пек тăвать.

Такăр сукмак çине тухрĕç. Тинех çул хыттипе йăкăртатрĕ çунашка. Сĕрме купăс сасси евĕр хăлхана лăпкаса юхать темле кĕвĕ.

Умра тăвайкки. Йĕлтĕрсене хывса çунашка çине хучĕç, хăйсем çиеле утланса ларчĕç.

Çунашка аяла хăй тĕллĕн шуçать. Унччен те пулмарĕ, çултан пăрăннă çунашка пат! пырса тăрăнчĕ теме.

— Ах, эсир çапла-и? Ну лекет тинех!— кăшкăрса ячĕ тахăшĕ. Нилпа Илюкăн юрпа хупланнă куçĕсем чарăлчĕç. Трапхине курах кайрĕç. Кăшт айккинерех — Шўреке Йăкăначĕ тăрать. Йĕлтĕрсене хывса юр çине тăрăнтарнă та чылайранпа кĕтеççĕ вĕсем кунта Нилпа Илюка.

— Иртнĕ хутĕнче, кўлĕ çинче, Кўлнари чăрмантарчĕ пире,— кăкăрне каçăртса пычĕ Трапхин Нил патне.— Атту нимĕр тăваттăм.

— Кама?— чышкине чăмăртарĕ Нил та.

— Сана!

Трапхин Нила кăкăртан çатăрласа ярса тытрĕ. Тытăçса ўкрĕç. Йăваланаççĕ юр çинче. Трапхин ăçтан кирлĕ унтан чышать, аяа тунă Нила.

Илюк тўсеймерĕ, Трапхине уринчен сĕтĕрме пуçларĕ. Йăкăнат Илюка çулăхрĕ. Кĕрешеççĕ кăна. Унтан Илюк пĕррех çавăрса çапрĕ Йăкăната. Утланса ларчĕ те:

— Тем чул кăвакарчăн çисен те, вăю лĕпĕшĕн чухлĕ çук,— терĕ.

Йăкăнат, ним тăвайманнипе, йĕрсе ячĕ.

— Курнă-и эсĕ эпĕ кăвакарчăн пуснине?

— Вăхăт çитĕ, курăпăр!— касса татрĕ ăна Илюк.

— Тыт, ара.

— Тытатпăр тенĕ сана!— кăшкăрчĕ Илюк. Вăл çиелте ларса вăй пухрĕ, çавăнпа çирĕппĕн каларĕ:

— Паран! Унсăран юр айне варса хăваратăп!
— Паранатăп!— сăмах пачĕ Йăкăнат илтĕни-илтĕнми.
— Тек тихçан та çыпçăнма ан хăй!— ура çине тăчĕ Илюк.
Сехри хăпнă Йăкăнат, упаран хăтăлнăн, тăват уран упаленсе йĕлтĕрĕ патне кайрĕ. Хăравçăскер, юлташне те кĕтмерĕ, вĕçтерчĕ çырма тăрăх.
Халĕ ĕнтĕ Трапхине иккĕн авкалама вăй çитет.
— Ан тыт, Илюк, эпĕ пĕчченех,— сирет Нил Илюка.
Нил чее. Вăл малтан Трапхине кĕрештерсе ывăнтарчĕ. Вара, чикĕ хĕрринче пурăнакан ачасенчен вĕреннĕ меслетсемпе усă курса, унтан-кунтан вирлĕн тыттаркаларĕ те ĕç вĕçленчĕ. Юлашкинчен, асăнмалăх, çухави ăшне юр чышрĕ.
Трапхин вĕçерĕнчĕ. Тип мунча лекрĕ пулин те «паранатăп!» сăмах кăлармарĕ. Эппин, вăл малашне те айван йăлине сĕтĕресшĕн. Йĕлтĕрĕ çине тăрсан, качака путекки евĕр чĕтревлĕ сассипе:
— Вăрман вăрланăшăн пурпĕрех лектеретпĕр!— тесе, чышкипе юнарĕ. Нил ун патнелле пырам пек хускалчĕ. Татах чышкă-çупкă çиессинчен сехĕрленнĕ Трапхин пуçран çапнăн тарчĕ.
Çырма тĕпĕнче пулса иртнĕ пăтăрмах хыççăн Нилпа Илюк киле чиперех çитрĕç. Асламăшĕ савăнчĕ. Ăмсаннăн пăхкаларĕ те:
— Шăпах хуран айĕнче çунмалли вут-шанкă,— тесе мухтарĕ.
Нумай та вăхăт иртмерĕ, вăрман хуралçи пырса кĕчĕ.
— Сирĕн ачасем вăрман вăрласа килнĕ сас-хыпар çитерчĕç ман пата,— терĕ çиллессĕн, куçĕсене хĕскелесе.
— Мĕнле вăрман?— шалт тĕлĕнчĕ Нил асламăшĕ.— Хыр тăрринчен ÿкнĕ хăрăк туратсем пуçтарса килчĕç. Ку тĕрĕс. Çунашкине пушатман, çĕн лупас айĕнчех ларать.
Хуралçă тухрĕ. Нил асламăшĕ те юлмарĕ пÿрте.
— Вăрмана тасатнăшăн тав тăвасчĕ сан ачасене. Ӳсĕрÿ-мухмăру тытса хупланă пулас сана,— ятлаçма чарăнаймарĕ карчăк.
— Апла калаçатăн-и? Вут-шанкине хам пата пырса тăкнă пултăр.
— Кĕтсех тăр,— туйипе таклаттарчĕ Нил асламăшĕ, тата ытларах тарăхса.— Пĕлетĕн-и эсĕ, айван, çаксем кам ачисем иккенне?! Вĕсен ашшĕ — ман ывăл! Вăл чикĕри командир пулнă.
Вăрман хуралçин куккăш ачине, Трапхине, питĕ çиеле кăларас килет. Чакаланать, хирĕç перкелешет, анчах мехелĕ çук, ытлашши чăркăшланма хăрать. Ирĕксĕрех йăвашланам пек тăвать:
— Вăрмана сыхлас пулать ман, патшалăх шанăçĕнчен тухасшăн мар эпĕ, кинемей. Пĕрреллĕхе шарламăпăр, ÿлĕм апла ан çÿреччĕр. Ача-пăчаран шар çеç кĕтмелле, вăрмана вут тĕртсе çунтарса ярĕç.
— Вăрмана çÿренĕ, çÿретпĕр те,— сăмахран ÿксе юлмасть кинемей.— Вĕсем пограничник ачисем, йĕркене пĕлеççĕ. Эсĕ вĕсем патне усăсăр çулăхиччен чĕрĕ йывăçсене упра, вĕрлĕхлĕх касса ан кайччăр.

## XI

Колхоз пухăвĕ ирех пуçланчĕ. Вера Ксенофонтовна яла таврăннăранпа халăх умне иккĕмĕш хут тухать ĕнтĕ. Малтан парти пухăвĕ ирт-

рĕ. Ăна коммунистсем парти организацин секретарьне суйларĕç. Халĕ, ку пухура, вăл — президиумра.

— Юлташсем, куратăр, ăраскалăмăр каллех пĕрле ĕçлеме хистерĕ пире,— терĕ вăл, пухăва ертсе пыма тытăнса.— Ķаçарăр, ку сăмах майăн калани çеç. Васкасах ĕçе пуçăнăпăр.

Çынсем кăшт хускалса, шавласа илчĕç. Ķун йĕркинче икĕ ыйту: çуракине кирлĕ пек кĕтсе илесси тата колхоз председателĕн заместительне çирĕплетесси.

Трибуна умне колхоз председателĕ Сусметов юлташ тухрĕ. Вăл пĕрремĕш ыйтупа доклад тăвать.

Нил амăшĕ шухăшлă. Ял çыннисене палламасла, кашнинех тĕмсĕлсе пăхать, куçпа хыпашлать. Вăхăт хĕрхенӳсĕр шуни палăрать куçкĕретĕнех.

Малти ретрех Ķавĕрле, Трапхин ашшĕ, ларать. Лĕпки çаралнă этемĕн. Вăл — бригадир. Ķу Вера Ķсенофонтовнăна питĕ тĕлĕнтерчĕ. Мĕнле-ха ăна уй-хир шанса панă? Ара, вăл колхозра нихçан та тӳрĕ кăмăлпа ĕçлемен, ялан улталас шухăшпа пурăннă; тата ăçтан та пулин, мĕн те пулин хăй ырлăхĕшĕн хăйпăтма тăрăшнă. Ял çыннисем манманха: патшалăха лаша парса колхоза суйнă хыççăн вăрман сыхлавçине кĕнине. Ķуштанланнăччĕ майсăр. Никама та вăрмана кĕртмест. Патак çĕклесе тухнине курсан, хуса çитсе тытса илет. Хăй пур, пачах таса чунлă мар. Вăрттăн вăрман сутать, енчĕкне укçа тултарать.

Ун чухне Вера комсомол организацийĕн секретарĕччĕ. Ăна хушрĕç Ķавĕрлен ирсĕр ĕçне тăрă шыв çине кăларма. Апла пулсан, айăпне куç умĕнче тытмалла. Ķомсомолецсемпе калаçрĕç те вăрмана тухса утрĕç. Икĕ кун та икĕ çĕр иртрĕ. Çаплах йĕрлеççĕ. Усси пулчех. Акă вăрмана вăрăм урапа кӳлнĕ лав кĕчĕ. Виççĕн ларнă. Пĕри — хăй Ķавĕрле. Çултан пăрăнса, йывăççем хушшипе уттараççĕ лашине. Ķăкарчĕç çӳренне. Ķавĕрле çыннисене лутра та кĕрнеклĕ çамрăк юман патне ертсе пычĕ.

— Çакна тӳнтерĕр. Урай кашти валли чухах,— витерет таварне хайхискер. Хакне калаçса татăлчĕç. Лешсем шанмаççĕ, укçине вăшваш кăларса тыттармарĕç, урапа çине тиесен, тархасшăн, ил. Сăмакун та ĕç, чару çук.

Ķавĕрле çăка айĕнче эрех ĕçет; пăчкă хăй ĕçне тăвать: касать.

Шăп укçа тыттарнă вăхăтра пырса тухрĕç те комсомолецсем. Темĕн чул тунсан та, ĕç тухмарĕ. Кăларчĕç Ķавĕрлене ĕçрен. Виççĕшин те суд умне тăма тиврĕ.

Вера Ķсенофонтовна темиçе çул пулса иртнĕ шухăшран уйрăлчĕ. Пуху ĕçне хутшăнать вăл, докладра илтнĕ хăшпĕр самантсене хут çине çырса хурать.

Акă колхоз председателĕ хăйĕн сăмахне вĕçлерĕ. Ķанса илнĕ хыççăн доклада сӳтсе явма тытăнмалла. Алă çĕклекенсем пур. Эппин, чăннипех ĕçшĕн çунаççĕ. Пуплеççĕ, анчах пĕри те кирлине каламасть. Кĕреçе сухалли, ав, пахчи пĕчĕккишĕн тарăхса паврать. Тепри кӳршипе ятлаçать, ăна питлет. Хирĕçсе кайрĕç. Çапăçса кайманни кăна. Тавлашăва чарма та хĕн.

Ķалаçаççĕ. Пуху нумая тăсăласси паллă.

Вера Ксенофонтовнăн ăш вăркать. Йăпăрт та йăпăрт кантăк енне пуçне пăрса илет: Нил е пăянамăшĕ чупса килмест-ши? Çĕркаç Субайылдана вĕрилентерсе пăрахрĕ, кăвар пек çунтарать. Шăннă пулас. Тухса каять те çунашка туртса, тĕттĕмлениччен те кил тĕлне пĕлмест.

Асламăшĕ çав тери пăшăрханать мăнукĕшĕн. Ятне тĕрĕс калайманшăн та кăмăлсăрланать карчăк.

— Суйка тесе чĕнес,— сĕнет вăл.

— Хăнăхăн-ха майĕпен,— лăплантарать кинĕ пăянамăшне.— Ятне улăштарсан, хреснамăшĕ килес-тăвас пулсан, вăл мĕн калĕ?

Чикĕ хуралçисен чаçĕнче питĕ ырă кăмăллă, хура та хĕсĕкрех куçлă кăркăс хĕрарăмĕ Субайылда Абдыкарова ĕçлетчĕ. Пилешевсен хĕрачи, малтанхи хут çутă тĕнчене килни çинчен пĕлтерсе, ун аллинче сасă панă. Тухтăра хисеплесе Субайылда ят хунă та.

Пуху çаплах пырать-ха.

Вера Ксенофонтовна сăмах илчĕ:

— Юлташсем, чи кирлĕ ыйтуран пăрăнатăр,— асăрхаттарчĕ. Вăра вăл çуракине чăннипех хатĕрленме тытăнманни, ялхуçалăх машинисене юсаманни, ут хатĕрĕсем çителĕксĕрри çинчен каларĕ. Фермăсенче те йĕрке сахал. Сĕт мĕн чухлĕ суса илме пăхни пурнăçланмасть.— Çакă паллă: пурин те çанна тавăрса ĕçлемелле.

Çакăн хыççăн пуху тин кирлĕ çул çине тухрĕ.

Кун йĕркин иккĕмĕш ыйтăвĕ пирки сăмах тапранчĕ. Колхоз председателĕн заместителĕ пулма Вера Пилешевăна çирĕплетмелле. Пуху каллех хĕрсе кайрĕ.

— Миçе çул ялтан татăлса пурăнчĕ вăл? Паянхи колхоз ĕлĕкхи мар. Тӳрех калатăп: халь тин ĕçлеме йывăр ăна.

Кăна колхозăн аслă механикĕ каларĕ. Кавĕрле бригадир та хирĕç. Хурлаççĕ хĕрарăма. Унăн ырă енне палăртакансем те тупăнчĕç. Вăл колхозра ĕçленине, халăхшăн тăрăшнине çынсем манман-мĕн. Ăна тӳрĕ кăмăллă пулнишĕн, çитменлĕхсем çинчен куçкĕретĕн каланăшăн, колхоз пурлăхне салатакансемпе хăюллăн кĕрешнĕшĕн хаклаççĕ. Ямăта хапсăнакансем халĕ те пур. Колхоз пурлăхне нихăçанхинчен çирĕп сыхламалла.

Тахăшĕ ĕне вити тунă самантра аса илчĕ. Миçе çул каялла пулнă ĕç! Хăшпĕри, чееленсе, туман ĕçшĕн колхоз укçи-тенкине кĕсйине чикме хăйнă.

— Пилешева юлташ çĕршыв ĕçĕнчен нихçан та татăлса пурăнман,— тет ял Совет председателĕ, сăмах илсе калаçнă май.— Хамăр ялта ӳссе çитĕннĕ. Ăна иртнĕ пухура колхоз коммунисчĕсем парти организацин секретарьне суйларĕç. Тĕрĕс турĕç. Шăп та шай секретарь колхоз председателĕн заместителĕ пулмалли çын. Вăл колхоз ĕçне чăннипех парти хушнă пек ертсе пыма пултарать.

Вера Пилешевăна колхоз председателĕн заместителĕ пулма çирĕплетрĕç.

— Шаннăшăн тав,— теме çеç тиврĕ ăна.

Пуху пĕтрĕ. Çынсем саланчĕç.

Майĕпен кун çути сӳнет. Вера Ксенофонтовна киле васкарĕ. Хĕр-

ачи пирки пăшăрханать. Алăк урати урлă каçнă-каçман ыйтрĕ пăянамăшĕнчен:

— Субайылда мĕнле?

— Анне, ман ним те ыратмасть,— пĕлтерчĕ тĕпелти вырăн çинче выртакан хĕрĕ. Вăл тăма хăтланчĕ, анчах ăна амăшĕ чарчĕ.

— Юрамасть, хĕрĕм,— терĕ, пырса чуптунă май.

Нил та килтех. Вăл та амăшĕ çумĕнче кушак çури евĕр çуллан-калать.

— Кунĕпех тытрĕç. Мĕнле пуху пулчĕ, ара, çав териех?— тет пăянамăшĕ, сĕтел çине апат лартса.

— Çураки пирки калаçрăмăр. Мана, ав, парторганизацин секретарьне суйланă май колхоз председателĕн заместителĕ турĕç,— пĕлтерчĕ кинĕ.

— Ай-ай! Ак тамаша!— хĕрхенет ватти кинне.

— Эппин, пурнăç каять пирĕн!— хавасланчĕ Нил.

— Ăнланаймарăм-ха, тем, сана,— пăхрĕ амăшĕ ывăлĕ çине.

— Эсĕ — пуçлăх! Пурте сана хисеплĕç. Вара пире те, сан ачусене, аван пулать.

— Чим, чим, ывăлăм,— чарчĕ ăна амăшĕ.— Эсĕ йăнăшатăн кăшт. Ĕçлеме пултараймасан секретаре никам та хисеплемест.

— Эсĕ тăрăш,— тавлашать Нил амăшĕпе.

— Секретарь тата заместителĕн ĕçĕ питĕ йывăр. Ун ĕçне колхоз мала тухсан кăна кирлĕ пек хакласçĕ. Вара пĕтĕм колхозниксем, коммунистсем, пионерсем чапа тухĕççĕ.

— Пионерсем те тетĕн- и?

— Мĕн тĕлĕнен? Вĕсем — колхозăн пулас хуçисем. Паллах, «Эпир пĕчĕккĕ-ха, атте-анне çăкăр çитерет»,— тесе, паян айккинче сĕмленсе çӳрекен ачасем ӳлĕм колхоза кирлĕ пек ертсе пыраймĕç.

— Тавçăратăп!— савăнать Нил.— Шкулти пионер дружинин айккинче пăхса тăма юрамасть.

— Тĕрĕс. Пионер дружини вăл — парти организацин кĕçĕн ывăлĕ. Ывăлтан пурте сиплĕх кĕтеççĕ.

## XII

Трапхин шкултан тухнă ачасен пĕр ушкăнне хуса çитрĕ. Пĕр кана хыçалта утрĕ. Ăна никам та асăрхамасть. Ăçта Йăкăнат? Вăл ку ушкăнра çук иккен. Юлташĕсĕр Трапхин хăйне тарăн кӳлĕри хӳресĕр пулă пек çеç туять. Тунсăх пусрĕ ăна. Тантăшĕсене хăй куçĕнчен пăхтарасшăн. Мĕнле майпа? Пĕр-пĕр мыскара кăтартсан юрĕччĕ. Анчах темшĕн чĕлхе-çăвар çавăрăнмасть, ал-ура хуçкаланмасть. Тилпĕрен вăрри çинĕн, куçĕ ялтăртатать хăйĕн. Акă вăл Кӳлнарие асăрхарĕ. Тем аса илнĕн, çамкине çат! çапрĕ аллипе.

Унтан ахăрса чупса пычĕ те хĕрача çивĕтне карт! туртрĕ.

— Ачасем, пăхăр-ха, çивĕчĕсем унăн хăйĕн мар. Вăл парик тăхăннă!— тесе ахăлтатса кулса ячĕ.

— Ан авăр кирлĕ мара! Ăссăр этем эсĕ!— сивлерĕ ăна Кӳлнари. Тантăшсем çине пăхса çаврăнчĕ Трапхин: никам та кулмасть вăл елпĕрнинчен.

— Мĕншĕн эсĕ, Трапхин, хĕрачана кӳрентерен?— асăрхаттарма хăйрĕ Пĕри.

— Тапкă парнелеме ыйтатăп, тетĕн-и?— йĕкĕлтенçи турĕ Трапхин.— Параттăмччĕ ним шелсĕр. Анчах умри çул юпленет. Ман сулахаялла пăрăнмалла. Васкатăп.

Ни апла, ни капла сăмах хушакан тупăнмарĕ. Пурте ăна хирĕçши? Ачасен кăмăлне тĕрĕслес шутпа вăл алне сулса чĕнчĕ:

— Кам пырасшăн Шӳреке патне?! Атьăр манпа!

Пĕри те ун хыççăн утмарĕ. Тепĕр тесен, куншăн вăл савăнчĕ: кам та пулин пынă пулсан, чăрмантаратчĕ çеç ăна.

Шӳреке Йăкăначĕ килте пĕчченех, сĕтел хушшинче апат çисе ларать-мĕн.

— Мĕншĕн мана пăрахса килтĕн?— çиллес сасăпа ыйтрĕ Трапхин, пӳрте кĕнĕ-кĕменех.

— Çухатрăм эпĕ сана шкултан тухиччен,— терĕ Йăкăнат тӳрре тухма тăрăшса.

— Суян! — хаярланать Трапхин. Унтан вăл сĕтел хушшине тусĕпе юнашар кĕрсе ларчĕ те ăна пĕççинчен питĕ вирлĕ чĕпĕтрĕ.

— Ап-ап!— çухăрса ячĕ Йăкăнат.— Ыратмасть тетĕн-и-мĕн?

Çакăн хыççăн Трапхинăн кăмăлĕ кăшт çемçелчĕ.

— Юрĕ-çке, ан кӳрен. Кӳр кăвакарчăна, киле каятăп.

— Тытмарăм паян,— терĕ Йăкăнат.

— Мĕнле апла? Паян йытта мĕн çитерес? Капла çуна кӳлсе чуптараймастпăр.

— Мĕн усси ăна чыхтарни! Вăл çав-çавах имшер, аяк пĕрчисем паларса тăраççĕ.

— Эппин, ăна кунне икĕ-виçĕ кăвакарчăн пĕçерсе çитермелле, часрах вăй кĕтĕр те лаша пек чуптăр.

— Ай-ай, ăçтан тупăн ун чухлĕ кăвакарчăн?!— хирĕçлет юлташне Йăкăнат.

— Шалккă? Акă мĕн. Санăнни пек картиш тулли кăвакарчăн пулсан-и? Катаччи чупассишĕн пĕр кайăкне шеллесе тăрассăм çук.

Йăкăнатăн хĕрхенес туйăм çук-ха. Анчах хăй тăрантаракан кăвакарчăнсене пурне те тенĕ пекех паллать. Вĕсене ĕрчетесшĕн те тăрăшать. Пăлтăр витти çуначĕ айне йăвасем те çавăрса панă. Пĕр йăвинче хăмăр çунатлă шурă кулюкка виçĕ çăмарта туса виçĕ чĕпĕ кăларчĕ. Чиперех ӳссе çирĕпленчĕç. Пĕрне уйăрма та хĕн: каснă-лартнă амăшĕ. Утти çеç урăхларах. Кăвакалтан вĕреннĕн, шурă хăмăр пĕсехине касăртса, тайкаланса утать. Çунаттисем сарлака, вăрăм. Чăнах, пăхса ытармалла мар кайăк.

Пĕррехинче Йăкăнат аллине шăпах çав шурă хăмăр пĕсехелли лекрĕ. Тапăлтатрĕ вара вĕçерĕнессишĕн, çатăлтатрĕ çунаттипе. Кăлăхах.

Ватă кăвакарчăн хăйне пăхнă, илемлĕ, юратнă чĕппи çăхан пырне леккине ăнланчĕ пулас. Темĕн чул ясмăк сапса парсан та, тек пăлтăр чӳречи умĕнче тăрăхла сак çине вĕçсе анмарĕ. Вăл картиш варринчи вăрăм такана хĕррине ларать те пуçне чалăштара-чалăштара сăнать, куçĕсем мĕлтĕрт-мĕлтĕрт çавăрăнаççĕ. Пурне те курать: акă кантăк уçăлать, вăрăм майлă ачан алли чеен тăсăлса тухать, пăрр, пăрр! вĕç-

се таракан кулюккасенчен пĕрне ярса тытать. Шуйланаççĕ... Тарăхать ватă кăвакарчăн. Анчах ним тума та хăват çитмест çав ун. Пĕлет-ха вăл, пур çутă тĕнчере унран вăйлисем. Этемĕн çакă тискер чĕппине ăмăрткайăк хайĕн вичкĕн чĕрнипе тăрмакласа кайинччĕ.

Йăкăнатăн, теме сиснĕн, çакă ватă кăвакарчăна курсан, чунĕ сӳ-ӳ! сӳлетет. Кун пек чух хăрамаллипех хăрать вăл. Йалтах Трапхине пула тивет вĕсене. Ун сăмахĕнчен пачах тухаймасть вăл. Лешĕн пăхăнтарас йăла вăйлă.

Ку таранччен çапах та ял ачисен пуçлăхĕ Трапхин пулнă. Ун юррине юрлаканĕ — Йăкăнат.

— Кăвакарчăн çын мар, ăссăр кайăк кăна. Пăхин ара çилленсе,— лăплантарать вара Йăкăнат хайне хай.— Путек ылханĕ кашкăра нихçан та çитмест.

Каллех пеккине хăйрать айван.

Çапла, Йăкăнат чăннипех айван, кун çинчен хай çеç пĕлмест. Трапхин суйса, ăна чике тăршшĕ лартса пурăнать. «Йытта кăвакарчăн какайĕ çитерсе самăртатпăр та çунашка кӳлсе çӳреме тытăнатпăр. Пĕтĕм ача ăмсанĕ. Пирĕн хыççăн «мана та катаччи чуптар-ха» тесе йăлăнса ыткăнĕç. Акă епле пăхăнтарăпăр вĕсене, ухмахсене»,— илĕртет шав. Тĕрĕссипе Трапхин юлташĕ тытса панă кăвакарчăнсене вăрттăн хайсен сыснине кӳптерет. «Хăвăртрах самăрт,— хушать ăна ашшĕ.— Пусăпăр та какайне пасара кайса сутăпăр. Укçипе сана велосипед туянса паратăп». Çакăншăн тăрăшать Трапхин. Йытă кӳлсе ăçтах кайăн? Велосипедпа çулла хуть тĕнче хĕррине çит.

Çаплаччĕ-ха, ку таранччен Трапхинăн пурнăç ăнса пыратчĕ. Нил Пилешев яла таврăнчĕ те, явнă пăяв сӳтĕлесшĕн. «Маххă памăпăр»,— шухăшлать Трапхин. Юлташĕ патĕнчен вăл пушă алăпа тухса каясшăн мар.

— Сана пулăшатăп. Пĕр-иккĕшне тытар,— сĕнӳ пачĕ вăл.

— Илюк мĕн каларĕ? «Сыхлăпăр»,— терĕ-иç. Мантăн-и?— хирĕçлерĕ Йăкăнат юлташне.

— Хăравçă-çке эсĕ,— питлет ăна Трапхин.— Алкум алăкне питĕр, килсен, ан кĕрт. Тата кăвакарчăнсен хуçи ху. Вĕсемпе тем тума та ирĕк пур сан.

— Ан каскăнлан-ха,— тутине мăкăртрĕ Йăкăнат.

Вăл Нилпа Илюкран чăнах та шикленет. Тата Трапхине те кăшт хайĕн куçĕнчен пăхтарас кăмăлĕ пур. Пуçĕ ытла çӳлте, пăртак ăна та хăратсан чармасть.

— Тытсан, мана çеç мар, иксĕмĕре те пĕр касмăка чикеççĕ.

— Мана хăвпа танлаштарасшăн-и? Кам ĕненет?— харкашма тытăнчĕ Трапхин.— Эпĕ — бригадир ывăлĕ. Сан аçу кам? Мĕн ĕç тăвать? Аслаçу ăçта?

— Асатте вăрманта аташса вилнĕ, теççĕ. Атте мĕн-ха...

— «Мĕн-ха» текелен. Сан аçу колхозра ĕçлемест. Çавна пĕл. Çӳрет ялтан яла кăмака туса, укçа çапса. Колхозран кăлараççĕ сире, «элемент» тесе. Нил амăшĕ кăларттарать.

— Пустуй ан сӳпĕлтет. Санпа манăн ĕç мар вăл, пысăккисен ĕçĕ. Пирĕн хамăра пĕлмелле,— ăс паранçи пулчĕ Йăкăнат.— Нил, ав,

кĕрешме вĕренекенсен кружокне йĕркеленĕ. Ачасем пĕтĕмпех ун патне туртăнаççĕ.

Трапхин ĕнсине чĕрне вĕçĕпе кăтăртаттаркаларĕ.

— Çапла, хыçтарать,— çиеле тухнине систернĕн хастарланать Йăкăнат.— Типпе юлатпăр. Ял ачисене пăхăнтараймастпăр пулсан, виле сурăхсем кăна эпир.

— Ан кулян,— тет Трапхин.— Вăйлă магнит ман алăра, çыпçăнĕç те хăтăлаймĕç.

— Курăс кўлли, акăшсем илĕртмĕç тек ачасене, çакна ан ман.

Нилпа Илюк, шкултан таврăннăскерсем, пĕве урлă каçсан, хăйсене чĕннине илтрĕç.

— Эй, çилçунатсем, тăхтăр-ха!

Вĕсене Марине почтальон чарать-мĕн.

— Хаçат-журналсăр пуçне çыру тавраш килекен марччĕ. Паян акă кур та тăр — çыру!— мухтанать почтальон, хăй çыру илнĕн.— Кăнтăрла иртсен, шкула хаçатсемпе пыраттăм, чун чăтмасть. Çыру-çке вăл.

Марине — ялти çамрăк хĕр. Почтальонта чылайранпа çўрет. Пуринчен ытла вăл çынсене çыру парса савăнтарма юратать. Хаçат-журнала ещĕке хурать, çырăва — алла.

— Акă вăл, тупрăм,— хаваслăн калать Марине, сумкинчен çыру кăларса.— Пионер дружинин председательне, тесе çырнă конверчĕ çине. Ячĕ çук. Кам вăл?

— Эпĕ! — терĕ Илюк сасартăк.

— Эсĕ?— иккĕленерех пăхрĕ Марине Илюк куçĕнчен.— Суймастăн пулĕ?

— Ĕненмесен, Нилран ыйт, эппин,— кăмăлсăрланчĕ Илюк.

— Юрĕ-çке. Ан кўрен. Ĕненетĕп,— лăплантарать Марине.— Эсĕ ачи ырă çемьерен-ха. Ара, çырăвĕ ахаль йышши мар-çке.

Илюк та халиччен дружина ячĕпе çыру илсе курман. Тĕлĕнет.

— «...Погранзастава» тесе çырнă,— ăнлантарать татах почтальон.

Нил хыпăнса ўкрĕ.

— Илюк, ку çыру чикĕри заставăран, кўр хăвăртрах!

— Сана мар-иç.

Марине ачасене çыру тыттарма васкамасть. Аптрарĕ. Нил чикĕ хĕрринче пурăннине пĕлет-ха вăл. Шутпа, ун патне килмелле пек çырăвĕ, çапах та Илюках тыттарчĕ.

Ачасем тав турĕç те чупа пачĕç.

— Ара, тăхтăр-ха, тен...— калаçа пĕтерейменрĕ сăмахне Марине. «Тен, пĕрле вуламаллаччĕ...»— тесшĕнчĕ вăл. Кулкаласа, аллине сулчĕ кăна:— И-и, ара иккĕшĕ те каснă-лартнă çилçунат, этем хуса çитеймĕ. Апăрша ачисем.

Марине хăй панă çырăва хуçи куç умĕнче вуланине килĕштерет. Вăтă çын пулсан, вуласа пама сатур. Каялла çыру çырма та ўркенмест. Хыпар-хăнар хуçи вăл. Анчах мĕн илтнине, пĕлнине кил тăрăх алласа çўремест. Çавăнпа ăна хаклаççĕ, кашниех унпа канашлама хатĕр.

Нилпа Илюк тӑкӑрлӑка пӑрӑнчӗҫ. Вӗсен тӳсӗм ҫук, ҫырура мӗн ҫырнине пӗлесшӗн. Юлташсем пӗр хӑрӑс тӑпах чарӑнчӗҫ. Илюк конверта хӗрринчен чӗрет те ҫурмаран хуҫлатнӑ хут листи туртса кӑларать. Саспа вуласа тӑма вӑхӑт сахал: иккӗшӗ те хыпаланаҫҫӗ, куҫӗсем ҫеҫ йӗркесем тӑрӑх вӗлтлетеҫҫӗ:

«Хаклӑ ачасем!

Пирӗн заставӑри пур пограничниксенчен те хӗрӳллӗ салам!

Сирӗн ял ҫыннине, Семен Пилешева, пограничниксен ҫывӑх тусне, командирне, эпир ӗмӗр асра тытса пурӑнатпӑр. Ҫав ятпа сирӗнпе ӗҫлӗ ҫыхӑну пуҫарасшӑн.

Вӗренӳ ҫулне вӗҫленӗ тата халӑха усӑллӑ ӗҫе хутшӑннӑ пионерсене ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче хамӑр пата, заставӑна, хӑнана чӗнетпӗр. Хӑш уйӑхра, хӑш кун килес пирки каярахпа пӗлтерӗпӗр.

Сирӗнтен ҫыру кӗтсе юлатпӑр».

Ҫыру вӗҫӗнче алӑ пуснисем.

Ҫырӑва вуласа тухсан, Нилӑн чунӗ хурланчӗ, ашшӗ аса килчӗ ӑна. Ҫапах та юлташне систермерӗ. Пырне капланнӑ чӑмаккана ҫӑта-ҫӑта илчӗ те сӑмах хушрӗ:

— Маттур пограничниксем!

— Ачасене вуласа памалла ку ҫырӑва,— тет Илюк.

— Унсӑр мӗнле, паллах,— ҫирӗплетсе калать Нил.— Сборта вуласа парӑн.

— Эх,— терӗ унтан Нил,— хӑвӑртрах заставӑна йӗркелесе ҫитерсе уҫасчӗ, вара ун ҫинчен пограничниксем патне ҫыру ҫырӑттӑмӑр. Тӗлӗнӗччӗҫ.

Пӗрремӗш перемена вӑхӑтӗнче Нилпа Илюк директор пӳлӗмӗн алӑкне именсерех, аран-аран илтӗнмелле шаккарӗҫ.

— Тархасшӑн!

Кӗрсе тӑчӗҫ. Хӑйсем вӑтанни уҫҫӑнах сисӗнет.

— Хӑюллӑрах пулӑр. Мӗн сӑлтавпа килтӗр?— йӑвашшӑн чӗнчӗ директор.

— Чикӗри заставӑран ҫыру ҫитрӗ,— пӗлтерчӗ Нил.

— Ман ятпа. Э-э ҫук...— такӑнчӗ Илюк.— Мӗн-н, ҫыру дружина совечӗн председателӗ ячӗпе килнӗ. Акӑ вӑл,— тӑсрӗ ҫырӑвне.

Директор ҫырӑва Илюк аллинчен илсе вуласа тухрӗ.

— Аван, малалла тата тӑрӑшарах вӗренме тивет. Тепӗр класа куҫмасӑр юлакансем тупӑнсан, ӗҫ тухмасть.

Дружина сборне канмалли кун ирттерме калаҫса татӑлчӗҫ.

## XIII

— Трапхин, вӗр-ҫӗнӗ хыпар хӑлхуна пырса кӗчӗ-и?

— Мӗнле вӗр-ҫӗнӗ хыпар тата?— юлхавлӑн ҫӑварне уҫрӗ Трапхин.— Дружина пӗлтерӗвне санпа вуларӑмӑр-ҫке.

Йӑкӑнатпа Трапхин, чӑнах та, дружина пӗлтерӗвне пӗрле вуларӗҫ.

Хĕллехи вăййа хутшăнма та шутларĕç. «Çич çăлтăр» отряда кĕме ун пирки ещĕке хут çырса ячĕç.

— Пурнăçран кая юлатăн эсĕ, тăванăм,— йĕплесе илчĕ Йăкăнат хăйĕн юлташне.

— Қала, мĕн усăсăр чăмлан?

Иртнĕ переменăра Нил класран класа кĕрсе çӳрерĕ, ачасемпе калаçрĕ. Қĕрешме пурте вĕренесшĕн иккен. Паян, уроксем хыççăн, тренировка пуçланать. Акă мĕнле çĕнĕ хыпар пĕлтерчĕ Йăкăнат Трапхине.

— Никам та юлмасть Нилпа,— мăнаçлăн пуçне каçăртса каларĕ Трапхин.— Ачасене пурне те илĕртсе илсе тухса каятăп.

— Мĕнле майпа?

— Қурăн хăвăн юлташун пултарулăхне.

Пысăк перемена вăхăтĕнче Трапхин ачасене хăй тавра пухрĕ.

— Қирлĕ-и сире пакша тирĕ?— куçне вылятрĕ вăл.

— Мĕн тума?— персе ячĕ хыткан Хветĕр.

— Тĕпсакайĕнчи çĕрулми калчи, тăнла эсĕ ăслă çынсем калаçнине,— çиЙĕнчех пӳлчĕ ăна Йăкăнат.— Чухлама ăсу кĕскерех-ха сан, Хветĕр.

Трапхин, Хветĕрпе Йăкăнат тавлашнине илтмĕше хывса, сăмахне малалла тăсрĕ:

— Пакша тирĕнчен çĕлĕк çĕлеççĕ.

Ыттисем чăннипех кăсăкланчĕç, шавлаççĕ кăна.

— Эх, чĕрĕ пакша курасчĕ!

— Қурни мĕн вăл, тытасчĕ!

Трапхин чеен куçне вылятать.

— Эпĕ пакшасем пурăнма куçнă пĕр вырăна пĕлетĕп.

— Ăçта?

— Илсе кай-ха!— тилмĕренçи тăвать Йăкăнат.

— Паян уроксем хыççăн илсе кайма пултаратăп. Пакшасен кĕтĕвĕ лутра чăрăшлăха пурăнма куçнă. Шучĕ те çук нумай! Алă туйипе пĕрре сулласа çат! çапатăн та ура пуçне анса та выртать.

Тĕлĕнеççĕ Трапхине итлекенсем.

Хыткан Хветĕр чĕнмесĕр тăма пултараймарĕ тек:

— Эсĕ миçе çĕлĕк ярса тытрăн, пĕрне пар-ха!

Ачасем кулса ячĕç.

— Вунă çĕлĕк ун. Сана пĕри те лекмест. Эсĕ ытлашши хыткан, çĕлĕк тăхăнсан, пуçу авăнĕ,— хӳтĕлерĕ Йăкăнат Трапхине.

— Пыратăр-и манпа? — тилмĕрсе пăхрĕ Трапхин ачасен куçĕнчен.

— Қам юлтăр!— çапла каларĕ те Хветĕр ихик! кулчĕ.

— Алкум вĕçĕнче кĕтетĕп,— терĕ Трапхин, вĕсене ĕненсе.— Хăвăрт пуçтарăнăр!

— Юрать!

— Қаятпăр!

— Пыратпăр!— сăмах пачĕç ачасем.

Юлашки шăнкăрава аранах кĕтсе илчĕ Трапхин. Қласран васкаса тухрĕ, коридорта тĕрткелешсе тумтирсем çакăнса тăракан çĕре чи малтан персе çитрĕ. Хăй пиншакне ăçтарах çакнине астумасть. Ширанă

май, халичченхиллех, ыттисен тумтирĕсене йăрхахран вĕçерте-вĕçерте пăрахса пычĕ. Урайĕнче тĕрлĕрен тумтир сарăмри кĕлтесем пек йăваланса выртать. Тупрĕ аранах хăйĕн пиншакне. Вара, улăм çиййĕн ашнăн, ним уямасăр, тумтирсем тăрăх таптаса утрĕ. Çавраçил пĕтĕрĕннĕн тусан мăкăрланса юлчĕ хыçра. Урамра никам та курăнмасть. Пахча кĕтессинчи вăрăм хурăн тăрринче кăна чакак ларать. Трапхин ăна курчĕ те юр муклашкипе вăркăнтарчĕ. Юрать-ха лектерейменрĕ, лешĕ вăрăм хурине вылянтарчĕ те вĕçрĕ айккинелле.

— Мĕшĕлтисем!— ятлаçса илчĕ Трапхин, шкул алăкĕ еннелле çиллессĕн пăхса.— Пурте пыма килĕшрĕç.

Пĕри те тухмасть ун патне. Кăмăлĕ кўтсех çитрĕ. Пўрнисем, шăнăр туртнăн, авăнса чăмăртанчĕç. Акă тинех шкул алăкĕ уçăлчĕ. Ушкăн хĕрача тухрĕ. Акраппи те пур, чанккать, юлташĕсене тем каласа ĕнентересшĕн, аллине суллаcа пуплет.

Кăшт тăхтасан, Кўлнарипе Уках курăнчĕç. Вĕсем алкум вĕçĕнче кĕрĕкĕсене хывса силлесе тăхăнчĕç.

— Кўлнари, эсĕ Йăкăната курмарăн-и?— ыйтать Трапхин.

— Ăна директор хăй пўлĕмне чĕнсе кĕртрĕ, сан пирки ятлама,— тет Кўлнари.

— Ман пирки?— тĕлĕненçи пулчĕ Трапхин.

— Сăлтавĕ пур.

— Пĕлесчĕ-çке.

— Эсĕ мар-и вара, тумтирсене ўкерсе хăвăн лапăрчăк урупа таптаса çўрекенĕ?

— Хуп çăварна! Ытлашши какăлтатан. Хĕрачасене ун пек килĕшмест,—хурласа тăкрĕ Кўлнарие Трапхин.

Акраппи хĕрачасенчен уйрăлчĕ те Трапхин çумне йăкăртатса пырса тăчĕ.

— Ан ĕнен ăна, Трапхин,— тутисене пăркаларĕ вăл.— Йăкăнат улттăмĕш класс алăкĕ патĕнче йăпшăнса çўренине хам куçпа куртăм.

— Мĕн кирлĕ ăна унта?

— Эсĕ пĕлместĕн-и вара? Нил ачасене тем питĕ тĕлĕнтермĕш япала тума хăнăхтарать. Эсĕ сисмесĕрех юлнă-и? Хăйсен çĕнĕ пўртĕнче темле застава уçаççĕ. Пур ачасем те унта çўреме пуçласшăн.

— Кирлĕ мара ан палка!— хăтăрса пăрахрĕ Трапхин Акраппие.

— Тĕрĕс, тĕрĕс!— тет Кўлнари.— Нил ачасене кĕрешме вĕрентет. Вара сана ним мар, ав, çав хурăн тăрне вăркăнтарĕç.

— Мана-и?!— чĕрре кĕрет Трапхин.

Кўлнари çывăхнех пырса тăчĕ те тытăнчĕ вăл вĕçкĕнлеме:

— Курăпăр хурăн турачĕсем çиййĕн камăн пакартисем каркаланса тăнине.

Трапхин Кўлнарие тем туса тăкма хатĕр. Аллине чăмăрласа çывхарчĕ ун патне, анчах çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те ăна Йăкăнат чĕнчĕ. Тепĕр самантран иккĕшĕ те шкула кĕрсе кайрĕç.

— Ачасене тем те каласа илĕртрĕм, пурпĕрех пакша тытма пыракан тупăнмарĕ,— пăшăлтатать Йăкăнат.— Эсĕ суйнине тавçăрчĕç пулĕ.

— Пыраççĕ,— тет Трапхин, тусне хăй вăйлине систернĕн.— Ăçта вĕсем халь?

Йăкăнат ăнлантарчĕ. Кўлнари калани чăнахах-мĕн. 6-мĕш класс патне çывхарчĕç. Алăкĕ хупă. Хăлăпран тытса туртрĕ Трапхин, уçăлмасть.

— Питĕрĕнсех ларнă шĕпĕнсем,— тарăхать вăл.— Тен, унта никам та çук, мĕншĕн шарламаççĕ.

Унччен те пулмарĕ, шалта кĕрлесе кулса яни илтĕнчĕ.

— Мĕн хăтланаççĕ?— кăсăкланать Трапхин.

— Тахăшĕ такама çĕклесе çапрĕ-тĕр,— шухăшлăн калать Йăкăнат.— Нил ачасене пограничниксем пек кĕрешсе çĕнме хăнăхтарать.

Вĕсен те питĕ курас килет кĕрешнине, тен, алла мĕнле ярса тыткаламаллисене ўкерсе юлма пулать. Халĕ, чĕнессе кĕтмесĕр, класа кĕмелле те тăмалла, сăнамалла. Анчах та çакнашкал кахатлă самантра чĕрере ăс-хакăл юпленет-çке. Икĕ тĕрлĕ шухăш пуçа минретет. Кĕни — Нилпа Илюка парăнни, ачасен умĕнче çĕрти çўппе тăрса юлни пулать. Çапах та унта ачасем мĕн тунине пĕлес килни чуна вĕчĕрхентерет.

Йăкăнат тавçăрчĕ, çăраççи шăтăкĕнчен пăхма тытăнчĕ. Тўсĕмсĕр Трапхин çывăрса тăрĕ-и? Тăрс! тĕкрĕ юлташне хулпуççинчен, вырăна хăй йышăнчĕ.

Çăраççи шăтăкĕ ытла ансăр çав, мĕн курайăн? Инкекĕ те çумрах. Тахăшĕ тапса уçрĕ шал енчен, Трапхин куçĕнчен вут-хĕм сирпĕнчĕ.

— Ыратать-и?— шеллерĕ Йăкăнат тусне.

— Кўр çамкуна, чукмарпа янлаттарам. Тĕрĕсле: ыратать-и е çук.

Йăкăнат юлташне кўренмест. Кĕсйинче тем хыпашланă май ăс парать:

— Мăкăлў ўссе ўт ан кăвакартăр тесен, ăна пилĕк пуспа тытмалла. Манăн шăпах пăхăр укçа пур.

Трапхин тек хирĕçмерĕ. Айккинерех пăрăнчĕç те сиплеме тытăнчĕç. Хăйсем пурпĕрех 6-мĕш класс алăкĕ çинчен куç илмеççĕ. Унтан ачасем тухиччен икĕ сехет те иртрĕ пулĕ. Шавлаççĕ, пурте хаваслă. Пичĕсем нар пек хĕрлĕ. Пуринчен ытла хулă пек çинçешке те хыткан Хветĕрĕн сасси хуплать:

— Нил, Нил! Манăн вăй пур! Çапла-и? Пурăна киле эпĕ пурне те ним мар çурăм çине выртараттăп.

Нил ăна темле сăмахсем калать, вĕрентет.

Шкул пушанчĕ.

— Мĕншĕн чармарăн, мĕншĕн никама та тытса юлмарăн?— тарăхать Йăкăнат.— Пакша тытма каймастпăр-и?

— Чăрманас килмест,— тет тусĕ юлхавлăн.

Ирĕксĕрех вĕсем те ачасем хыççăн шкултан тухрĕç, пĕр-пĕринпе ним калаçмасăр пычĕç.

## XIV

Вера Ксенофонтовнăн шкула çитсе килмелле, çавăнпа килтен ачисенчен те иртерех тухрĕ. Парти организаци секретарĕн, колхоз председателĕн заместителĕн ĕç мăй таран. Иртнĕ кунсенче колхоз фермисен-

че пулчĕ. Колхоза кĕрекен вак ялсем пиллĕк. Вĕсем йăлтах вăрман ăшĕнче, хушшисем икĕ, виç-тăватă çухрăм. Кашни ялта тенĕ пекех мĕнле те пулин ферма. Нихăш ферминче те ĕçсем чаплах мар. Мĕншĕн-ши? Сăлтавне пĕлмеллех секретарĕн. Ку — чи кирли.

Сысна ферминче те йĕрке начар. Заведующийĕ ĕçке ярăннă. Ана кура ыттисем те сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Партбюрора ферма ĕçĕ пирки сӳтсе явма лекет.

Çеçпĕллĕх ялĕнче ĕне фермин пуçлăхĕ калаçура темиçе хут та пĕр хĕр ятне ырăпа асăнчĕ.

— Тăрăшса ĕçлет, анчах пăрахса каясшăн,— кулянать пуçлăх.— Эх, тытса чарасчĕ. Пулăшăр, тархасшăн, секретарь юлташ.

— Паллаштарăр-ха унпа мана.

— Атьăр, ĕнесене халĕ шăпах суса пĕтернĕ вăл,— чĕнет ферма пуçлăхĕ.

Вера Ксенофонтовна хĕре тĕл пулчĕ те тӳрех палласа илчĕ: ара, ку леш Санюк-иç, Аххов пограничник юратса пăрахни! Тĕрĕсех, сăнĕ-пичĕ чипер, куçĕ йăваш, питçăмартисем çавраках, пĕвĕ-сийĕ тăпăл-тăпăл. Мĕн калассипур — пиçсе çитнĕ çырла.

— Санюк, пурнăçсем мĕнле?— ыйтрĕ Вера Ксенофонтовна.

— Темле,— пуçне чикрĕ хĕр вăтаннипе. Хăй хăмач пек хĕрелчĕ.

— Аххов çыру çырать-и?

— Çырать. Ытла та айван этем вăл,— терĕ хĕр, йăл кулса.

— Мĕншĕн апла шухăшлан?

— Ара, кунта килетĕп тесе çырать. Суять, ĕненместĕп. Пĕрре курнипе ăçтан...

— Пурнăçра тем те пулать, Санюк,— тет лăпкăн Вера Ксенофонтовна.

— Ан та килтĕр, эпĕ пурпĕрех кунтан каятăп.

— Ăçта?

Санюкăн ытарайми ĕмĕт пур-мĕн: вĕренме каясшăн. Хулара шăпах института кĕме хатĕрлекен курс уçăлать. Ĕçрен хăтарма ыйтса çырнă хучĕ те кĕсъерех, кăларса кăтартрĕ. Халĕ те хăй вырăнне ĕçлеме çын тупма хĕтĕртет.

— Лайăх, ырă çын тупăр,— тет вăл.— Унсăрăн эпĕ шеллетĕп выльăха.

Нумайччен хĕрпе калаçма тиврĕ секретарĕн.

— Ан васка, Санюк, кăçаллăха тăхта,— ӳкĕтлерĕ вăл.— Вĕренме килес çул кайăн. Ялхуçалăх институтне кĕме колхозран хут та туса парăпăр. Тата колхозран кайни хăвăн телейӳнтен тарни пулмĕ-ши? Борис Аххов часах таврăнать. Ниçта та мар, пирĕн колхоза çул тытать вăл. Ана ниçта та никам та кĕтмест: вăл тăлăх.

— Ман патăма та çапла çырать,— хушса хучĕ Санюк, лăпланнăн.

— Пограничникăн сăмахĕ çирĕп, вĕсем суймаççĕ.

Вера Ксенофонтовна сăмах-юмаха ĕç çине куçарчĕ. Санюк пăхакан ĕнесем сĕт аван антараççĕ, виççĕшĕ пăрулана.

Ăшă витене кĕчĕç. Пăрусем, сăпкари евĕр, пĕчĕк пӳлĕмсенче, улăм çинче выртаççĕ.

Санюк ăнсăртран ура пуçĕпе пӳлĕм çумĕнчи пушă витрене перĕн-

терчĕ. Сас-хура илтсе, шурă хураллă чăпар пăру пуçне çĕклерĕ, куçне уçрĕ, тăма пикенет.

— Сĕт кĕтетĕн те-и, пепкем?— ачашшăн калаçрĕ хĕр пăрупа. Ун патне кĕрсе çурăмĕнчен çупăрласа, лăпкама тытăнчĕ. Унтан, хăлхисенчен тытса, çапла каларĕ:

— Вера Ксенофонтовна, пăхăр-ха, вĕсен куçĕсенче эпĕ курăнатăп, ман пирки кăна шухăшлаççĕ пулас.

Хĕр сăмахĕсем секретаре йăл! култарчĕç.

— Сĕт аван ĕçеççĕ-и?— ыйтать Вера Ксенофонтовна.

— Чăпăртаттараççĕ кăна. Ăшă сĕт шăршине таçтан туяççĕ,— ăнлантарать Санюк.— Çăварне пӳрне чикетĕп те, тутине сĕте перĕнтеретĕп. Амăш чĕччи теççĕ пулĕ айвансем, нăçлаттараççĕ вара.

Вера Ксенофонтовна Санюк муталаннине чунтан килĕштерсе пăхса тăчĕ. Хĕр ĕçе юратни пуринчен те паллă. Тĕрĕс калать ферма пуçлăхĕ, кун пек çырлана тем тусан та вĕçертме юрамасть.

— Пирĕн пата пырса лар-ха,— чĕнет хĕре секретарь.

— Тахçанах пырас шухăш пур та, аван мар пек туйăнать,— тет Санюк, каллех хĕрелсе.

— Часах Аххова кĕтсе илĕпĕр.

— Вăл çырать-и сирĕн пата?

— Унсăрăн мĕнле? Мана тăван аппăшĕ вырăнне хурать вăл. Таврăнсан, шеп те кăна туй тăвăпăр.

Хĕр хĕпĕртени таçтан курăнать. Юратать вăл та Бориса.

Секретарь хĕрпе алă парса ăшшăн уйрăлчĕ.

«Телейлĕ мăшăр пулĕç»,— шухăшларĕ вăл, йĕлтĕр çине тăнă май.

Унăн Саруй ялĕнчи ĕне фермине çитмелле. Колхоз, икĕ ферма тытса, шар çеç курать. Пĕрлештермелле — вите çукки касать. Часрах çĕннине туса лартмалла, анчах халлĕхе кассăра укçа çук.

— Вера Ксенофонтовна, ĕне сăвакан тепĕр çын кирлĕ пулать пире,— пăшăрханса пĕлтерчĕ ферма пуçлăхĕ,— Анна Хурнова каннă хыççăн ĕçе тек тухмасть.

— Мĕншĕн?

— Кам мур пĕлет хĕрарăмсене?

Анна темиçе çул хушши ĕнтĕ сĕт суса илессипе колхозра чи малта пырать.

Витене кĕрсе тухнă хыççăн секретарь тӳрех ун патне кайрĕ.

— Хăна килчĕ, ирт-ирт,— хыпăнса ӳкрĕ лешĕ. Сĕтел çине апат-çимĕç çĕклеме тытăнчĕ. Чĕреспе сăра лартрĕ.

— Анна Петровна, ан чăрман-ха, тархасшăн. Эпĕ санпа пуплеме килсеттĕм.

— Апла мар ĕнтĕ,— тет кил хуçи хăнана,— сĕтел хушшине сĕтĕрсе.— Ĕмĕрте пĕрре килнĕ çынна курка тыттармасăр, сăра ĕçтермесĕр ярăп-и?

Вера Ксенофонтовна апатран аслă пулма шутламарĕ. Сĕтел хушшинче сăмах-юмахĕ те сыпăнса пырасса шанчĕ.

— Мĕнле кантăн, Анна Петровна?— тет секретарь.

— Канни-качки, килти ĕçпеле аппаланса ирттертĕм.

— Виçмине ĕçе тухмалла,— каласа хучĕ Вера Ксенофонтовна.

— Тухаймастăп,— пат татса каларĕ Анна Хурнова.—Май çук, çемье хавшаса пырать.

Ĕçе пăрахма хĕрарăмăн, чăнах та, сăлтавĕ пур. Фермăна ирхине тăват-пилĕк сехетрех пымалла. Упăшки, катка-пичке тăвакан заводра ĕçлекенскер, ĕçе арăмĕнчен те малтан тухса утать. Ачисем — хăйсем тĕллĕн. Асли, Çимун, тăваттăмĕш класра çеç вĕренет-ха, вăталăххи, Сухви, иккĕмĕшне чупать. Кĕçĕнни, Микулай, килте пĕчченех хуçаланать. Амăшĕ пĕрне те вут чĕрттермест, пушар кăларасран хăрать. Çавăнпа та ачи-пăчи выçăллă-тутăллă пурăнать, шкулта та япăх вĕренеççĕ. Пĕррехинче аслин учителĕ киле пырсах ятланă.

— Ачусене пăхмалла. Унсăрăн çын пулаймаççĕ,— терĕ.

Шкулта интернат пур. Çĕр выртма юлакансене апат та çитереççĕ. Çавăнпа та Вера Ксенофонтовна хăюллăнах каларĕ:

— Анна, ачусем интернатра йĕркеллĕ пурăнма тытăнсан, фермăра ĕçлеме пăрахмăн-и?

— Питĕ ĕçлĕттĕм: ара, мĕн,— текелерĕ Хурнова.

— Калаçса татăлнă тесе шутлатăп.

Анна Хурнова фермăрах ĕçлеме юласси халĕ Вера Ксенофонтовнăран килет ĕнтĕ.

Шкула вăл шăнкăрав пуличчен чылай малтан çитрĕ. Директор вырăнта.

— Итлетĕп сире, Вера Ксенофонтовна,—терĕ вăл, пукан шутарса.— Мĕн хыпарпа çĕмĕрттеретĕр?

Килни хуйхи-суйхине йăлтах каласа пачĕ:

—...Эсир Анна Хурнова ачисене хăвăр куçран калăр, эрнипех интернатра пурăнатпăр, тейĕр.

— Ан пăшăрханăр, Вера Ксенофонтовна. Эсир сĕннĕ пек пулĕ.

Секретарь шкул директорне алă тытсах тав турĕ.

Çимун, турткаланса тăмасăрах, интернатра пурăнма килĕшрĕ. Директор хытах каларĕ-çке: «...Киле çÿреме аякра. Çул çинче вăхăт нумай ирттеретĕр. Çавăнпа начар вĕренме пуçларăр. Кунта, интернатра, апачĕ пиçнĕ-хуçнă — лар та çи, вара урок ту».

Сухви те пиччĕшĕпе пĕр шухăшлă пулчĕ.

Интернатра вĕсене кроватьсем уйăрса пачĕç. Вырăн çине чăлт-шурă простынь сарнă. Пÿлĕмре урока хатĕрленме сĕтел те пур. Кун каçа тăватă хутчен çитерчĕç. Сухви пуринчен ытла çырла кĕселне кăмăлларĕ. Уроксем хыççăн шкул картишĕнче ачасемпе пĕрле хаваслă вăйă вылярĕç.

Çĕр каçрĕç çапла лăпкăнах. Татах тепĕр çĕр выртрĕç. Виççĕмĕш кунĕнче тем амакĕ пырса çапăнчĕ, Çимунăн сасартăк ăш вăркама тытăнчĕ. Çунать ăш, çулăмпах! Кичем, тÿсме çук. Пĕчĕк шăллĕ Микулай аса килет. Темшĕн вăл чÿрече янаххи çинче кантăк витĕр урамалла пăхса татăлса макăрать пек туйăнать. Вĕçсе çитĕччĕ Çимун киле. Аранаран апата кĕтсе илчĕ вăл. Сĕтел хушшинчен тухсан, кăшт тăхтарĕ. Сăнакаларĕ ун-кун. Директор та, учительсем те курăнмаççĕ. Вĕсене никам та хуралламасть. «Тарас!» — шухăш пырса кĕчĕ Çимун пуçне.

Вара вăл хăпăл-хапăл пиншакне тăхăнчĕ те хĕрачасен пӳлĕмне кĕчĕ.

— Сухви!— шăппăн чĕнчĕ, кăчăк туртса.— Тумлан, киле каятпăр.

Вăрттăн, никам сисиччен тухса шурĕç интернатран пиччĕшĕпе йăмăкĕ. Çул тăршшĕпех лĕпĕстетрĕç, çил-тăман вĕçтерни те чăрмантараймĕ. Кĕллĕн-каллĕн утнипе çул ӳсĕнмест, çавăнпа чупрĕç. Чăнахах та, киле çитнĕ çĕре таврана каç тĕттĕмĕ хупларĕ.

Пӳрт пуш-пушах, унта кушакĕ те çук.

— Микулай! Ăçта эсĕ? Эпир килтĕмĕр,— пĕлтерчĕ Çимун. Ăна хирĕç сас паракан пулмарĕ.

— Çухалман-ши вăл?— пăшăрханчĕ Сухви.

Йăмăкĕн шухăшĕ пиччĕшне те шартах сиктерчĕ.

— Тен, вăл вăрманта пĕччен аташса çӳрет?!

Çимун хăраса ӳкрĕ. Самант та тăхтаса тăмарĕç, фермăна тухса вăркăнчĕç: инкек çинчен амăшне систермелле хăвăртрах.

Вĕсем амăшĕ ферма алăкĕ умĕнче пĕр хĕрарăмпа калаçса тănине курчĕç. Тӳсеймесĕр, кăшкăрса ячĕç:

— Анне!

— Анне, килте Микулай çук!

— Анна Петровна, ку сан шăпăрлансем пулас,— пуç сĕлтрĕ ачасем çине амăшĕпе юмахлаканни. Ку хĕрарăм — Вера Ксенофонтовна.

— Мĕн тăвăн вĕсемпе, çĕмĕрттерсе килнĕ ав,— тет Хурнова.— Каларăм, пайти пулас çук. Ĕçлейрĕп-и путлĕн. Пăрахмах тивет.

— Ан хыпăнса ӳк-ха,— лăплантарать ăна Вера Ксенофонтовна.— Мĕн те пулин шухăшласа тупăпăр.

Çимун вĕтеленет, тĕк тăраймасть.

— Микулай ăçта вара?— ыйтать.

— Ниçтах та мар. Хĕреснашшĕ салтакран таврăннă та, хăй патне хăнана илсе кайрĕ.

Анна Хурнова, секретарьпе сывпуллашнă хыççăн, ачисене пуçтарса, килелле утрĕ.

Тăваттăмĕш класа, унтан учительница тухсанах, Нил кĕрсе тăчĕ. Темиçе мăшăр куç хĕмне лекрĕ вăл, çунса кайманни кăна. Çийĕнчех чĕлхе те хускалаймарĕ.

— Эсĕ пирĕн вожатăй пуласшăн мар пулĕ те?— персе ячĕ пĕри. Çавăнтах шавлама тытăнчĕç.

Нил аллине çĕклерĕ. Аран-аран шăпланчĕç.

— Кам сирĕнтен Çимун?— ыйтрĕ вăл.

Лешне «эпĕ!» теме те тивмерĕ. Ăна ушкăн ача самант, парта хушшинчен кăларса, Нил умне илсе пычĕç.

— Эсĕ-и Анна Хурнова ывăлĕ?

— Эпĕ,— хăйăлтатса тухрĕ Çимунăн сасси.

— Сана эпĕ, Çимун, ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен заставине пыма чĕнесшĕн. Хирĕçлеместĕн-и?

Семен Пилешев пограничник çуртĕнче застава пулмалли çинчен

шкулта илтмен ача çук. Унта кайма пурте ĕмĕтленеççĕ. Çимун та темиçе хут та çав çурт умĕнчен ятарласа иртнĕ, чарăнса тăнă, анчах кĕме хăяйман.

Телей хăй тĕллĕнех ума тухса илĕртнĕшĕн савăннипе Çимун çапла каларĕ:

— Унта пыма юрать-и?

— Чĕнетĕп пулсан, юрать ĕнтĕ.

Ытти ачасем сырăнчĕç. «Мана, мана та ил»,— тесе тилмĕреççĕ.

— Застава уçăлсан, пурте пыратăр акă,— ăнлантарать Нил. Çимуна çапла хушрĕ:— Эсĕ интерната юл. Уроксене хăвăртрах хатĕрлен, илме килетпĕр.

Çимун киле каймарĕ. Сухви, унăн хӳрешки, пиччĕшĕсĕр ниçта утăм тумасть.

Каласса татăлни харам пулмарĕ. Чăн сăмах — Нилпа Илюк Çимуна килсе илчĕç.

Пулас заставăра ĕç сахал мар. Çимуна çӳлĕк çине кĕнекесем майласа хума хушрĕç. Вера Ксенофонтовна ачисен тата упăшкипе иккĕшин кĕнекисене заставăран пысăк ещĕкпех илсе килнĕ.

— Эх, вуласчĕ,— мăкăртатрĕ вăл хăйпе хăй.

Çак кунтанпа Çимун застава тусĕсен йышне тăчĕ. Тек вăл хăйне чĕнессе кĕтмест. Уроксем тăвать те хăвăртрах тухса чупать. Çав тери хăтлă пек туйăнать ăна пулас заставăра. Пĕррехинче вăл йăмăкне те ертсе пычĕ. Сухвипе Субайылдана паллаштарчĕç. Питĕ килĕштерсе вылярĕç вĕсем.

— Ыран килетне?— тĕпчет кашнинчех Субайылда çĕнĕ тус-тантăшне.

«Ыран» çитет.

— Акă эпĕ!— кăшкăрса ярать Сухви савăнăçлăн, пӳрте кĕнĕ-кĕмен.

Вера Ксенофонтовна, колхоз правленийĕнчен çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăннăскер, заставăна кĕчĕ. Кунта яланхиллех Нилпа Илюк тăрмашаççĕ. Вĕсене вăл пуçĕсенчен юратса ачашларĕ, колхоза пулăшнăшăн тав турĕ.

— Ара,— терĕ вăл,— сĕт сăвасси палăртнă шайра пырать. Хурнова халĕ йĕркеллех ĕçлет. Ачисемшĕн пĕртте пăшăрханмасть. Унăн Çимунне хăвăр çума явăçтарма ăçтан ăс çитертĕр?

Ывăлне тĕпĕпех чухлаймасть-ха вăл. Иртнинче пăянамăшĕпе фермăра ĕçлекенсем пирки кулянса калаçнине маннă, ахăртнех. Килте пулнăччĕ ун чух Нил. Итленĕ те хăйне май ĕçе тытăннă. Усăллă пулчĕ ав. Вăл йывăр самантсенче амăшне вăй çитнĕ таран пулăшма тахçанах тупа тунă.

## XV

Кăвак çутăпах Нилсем патне Венюк пырса çитрĕ.

— Телейлĕ ир пултăр!— саламларĕ вăл пӳрте кĕрсе тăрсан.

Нил амăшĕ чăлантан тухрĕ.

— Э-э, Венюк килнĕ-çке. Сывлăх сунатăп. Тĕпелелле ирт,— чĕнчĕ йĕкĕте Вера Ксенофонтовна. Вăл çак çамрăка ытла та евĕклĕ пулнăшăн хисеплет.

— Вăйăирттеретĕр, эппин?— ыйтрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.— Ăнăçлăх сунатăп.

Венюк чĕмсĕртерех çын. Нил вара, урине тăла чĕркесе çăмата тăхăнаканскер, мухтанса илчĕ:

— «Çич çăлтăрсене» çĕнтеретпĕр пурпĕрех. Юр крепость пирĕн мĕнлерех! Пырса кур вararахпа.

Субайылда та минтер çинчен пуçне çĕклерĕ. Вăл та вăрманта ирттерекен спортпа вăрçă вăййине пырса курасшăн.

— Кĕрт ăшне путан!— хăратать Нил йăмăкне.

— Анне путмасть-и?

— Анне йĕлтĕрпе.

— Эпĕ те йĕлтĕр сыратăп!

— Ан тавлаш,— чарчĕ амăшĕ хĕрачине. Унтан вăл, тем аса илчĕ пулас та, хушса хучĕ:— Ман паян Çеçпĕллĕхри ĕне фермине çитмелле. Ĕçе хăвăрт вĕçлесен, çитетĕпех.

Илюк та, ав, кăштăрт кĕрсе тăчĕ. Хавассăн кĕтсе илчĕç ăна.

Асламăшĕ сĕтел çине вутуççинче пĕçернĕ çĕрулмипе тăпăрч пӳремечĕсене хучĕ.

— Салтаксем, сикĕр сĕтел хушшине,— йыхăрчĕ Вера Ксенофонтовна арçын ачасене.

Ачасем пĕри те турткаланса тăмарĕç. Пӳремечĕсем хĕрлĕ питлĕ, пăхсан, сĕлеке юхать, пӳртре тутлă шăршă сарăлнă. Ăçтан тӳсĕн? Çирĕç те тухса вĕçтерчĕç.

Чылай хушă хатĕрленчĕç шкул ачисем хĕллехи вăййа ирттерме. Нилпа Илюк «Хĕвел» отряда тăма килĕшсе ещĕке хут чикнĕччĕ. Ещĕк самант тулчĕ. Ăна уçсан, икĕ тус савăнчĕç вара.

— Маттур,— тет физрук вĕсене, вăйă пуçаракансене.

«Салтаксем» икĕ отрядпа та çителĕклĕ.

«Хĕвел» те, «Çич çăлтăр» та вăрмана юр крепость купаларĕ.

Венюк хăйĕн отрядне йĕтем хыçне пуçтарăнма хушнă. Шухăшлăн утрĕ вăл Нилпа Илюк умĕнче.

— Никам та пыман пулсан?— пăшăрханчĕ вăл.

— Пирĕн отрядра йынша хур чĕпписем çук,— терĕ Нил.

— Чăн-чăн салтаксем!— мухтарĕ Илюк та.

Тĕрĕсех: отряд вырăнта, командира кĕтет. Пурте «хĕçпăшаланнă», йĕлтĕр сырнă. Шкул мастерскойĕ ачасемпе киленсе тăчĕ, нихăçан та кун чухлĕ йыш курман. Сава çитмест. Пурте чутлаççĕ. «Салтака» пăшал та, автомат та, хĕç те кирлĕ. Тархасшăн. Хăма татăкĕсем лăках, катка-пичке тăвакан заводран виçĕ лав кӳрсе килнĕ.

— Асталăр, ăсталăр!— хавхалантарать ĕç учителĕ ачасене,— йывăç каскалама пĕлекен çыннăн алли — ылтăн. Вăл пурнăçа илем кӳрет.

Физрукăн та ытларах ĕçлеме тиврĕ. Пурне те йĕлтĕрпе лайăх чупма хăнăхтармалла.

Ял çыннисем уй тăрăх йĕлтĕрçĕсем карталаннине пĕрре мар курчĕç.

— Чи кирли — тăрăшни,— тет физрук.

Йĕлтĕрпе тăтăшах чупни усă пачĕ. Темиçе ача ГТО значок нормисене тултарчĕç. Вĕсем, çу кунĕсенче те спортран уйăрăлмасан, çитес вĕренӳ çулĕнче ума значок çакĕç. Ку пурне те илĕртет.

Венюк арçын ачасенчен кăшт айккинерех тăракан хĕрачасен ушкăнне те асăрхарĕ. Кӳлнари, Уках тата темиçе хĕрача шурă халат тăхăннă, хулпуççи урлă хĕрлĕ хĕреслĕ сумка çакнă.

Иртнĕ кунсенче хĕрачасем пуринчен те ытларах ăшталанчĕç. Мастерскойне те çӳрерĕç, хăйсем валли «хĕç» ăсталарĕç. Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнчен те юлмарĕç, ГТО значок нормине те тултарчĕç. Çав вăхăтрах тĕп вырăнта — сусăрлансан-тусан, малтанхи пулăшу пама вĕренесси пулчĕ.

Кӳлнарипе Уках кĕнеке тупрĕç. Тĕрĕссипе каласан, завод амбулаторийĕнче ĕçлекен фельдшер парнелерĕ.

— Паллашса тăна хывсан, пĕлĕвĕре тĕрĕслеме хам пыратăп,— сăмах пачĕ вăл.

Хĕрачасем чăннипех кăсăкланчĕç медицинăпа. Мĕн чухлĕ çĕнни! Малтанхи пулăшу пама пĕлни вăйăра çеç мар, куллен пурăнан пурнăçра та усăллă.

Кӳлнарин çĕнĕ шухăш çуралчĕ: сакăр çул вĕренмелли шкула пĕтерсен, медицина училищине каймалла мар-ши? Кун пирки Укахпа та калаçрĕ, хăйпе вĕренме пыма чĕнчĕ. Анчах лешĕ, ку тарана çитсе те, мĕнле те пулин ĕç патне тӳсейми чун туртнине сисмест.

Хĕрачасем кĕнекере мĕн çырнине тĕплĕн вĕренчĕç.

— Хатĕр! Пурне те пĕлетпĕр пулас!— терĕç вара вĕсем пĕр-пĕрне.

Фельдшер амбулаторине пыма чĕнчĕ вĕсене. Директорпа та калаçса татăлнă вăл.

Шурă халат тăхăннă хĕрлĕ питлĕ çамрăк хĕрачасене курсан, чирлĕ çынсем хăйсене çăмăл пекех туйрĕç.

Çынсем тухтăр патне ытларах ăш чирĕпе пынине асăрхарĕç хĕрачасем. Мĕн ыратнине врачсем çеç пĕлеççĕ çав.

Акă, пĕри шĕвĕр пӳрнине çĕмĕрнĕ, мазь сĕрсе, бинтпа çыхмалла.

— Кӳлнари, тытăн,— терĕ фельдшер.

Чĕтремерĕ хĕрача. Хăюллăн та çепĕççĕн тыткалать. Сăнаса, вĕрентсе тăракан фельдшер Кӳлнари ĕçĕпе кăмăллă.

— Аллу çыпăçуллă,— мухтарĕ вăл ăна.— Медсестра пулмалли çын эсĕ.

Мухтани кама савăнтармĕ? Тăра киле пурин те хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслеме май тупăнса пычĕ.

Фельдшер чăн-чăн экзамен тыттарчĕ хĕрачасене. Амбулаторинчен тухса каяс умĕн тав турĕç вĕсем ырă çынна.

Малтанхи пулăшу пама вĕренес çĕре Акраппи тата ун сăмахĕнчен тухман икĕ хĕрача çӳремерĕç.

— Ытлашши алхасатăр,— ятларĕ Акраппи пĕррехинче Кӳлнарипе унăн тусĕсене.— Ырра мар хăтланатăр, вăрçа йыхăратăр. Уяр çанталăкра çумăра чӳк туса, пĕр-пĕрне шыв сапса выляса илĕртеççĕ. Эсир те çапла вăрçа-харçа илĕртетĕр.

— Ҫамран илтрĕн эсĕ ку ухмахла япалана?— кӳренсе каларĕ Кӳлнари.

— Сана мĕн ĕҫ. Хĕрарӑмсем калаҫҫĕ: чармалла, вӑрҫӑлла выляттармалла мар, инкек-синкеке йыхӑраҫҫĕ, теҫҫĕ.

— Сӳпĕлти!— кӑшкӑрса пӑрахрĕҫ ӑна хĕрачасем.— Ҫав ҫынна суда памалла. Сана пионертан кӑлармалла.

— Санӑн шӑмӑсӑр чĕлхӳ, Акраппи, тем те пакӑлтатĕ.

— Усал хыпар саракансене чармалла!— терĕ Кӳлнари те.— Кун ҫинчен Вера Ксенофонтовна пĕлмест, ахӑртнех. Систермелле ӑна, ҫав йĕрĕнчĕксене ахалех каҫармĕ.

Акраппи тек павраса тӑмарĕ, утрĕ хӑй ҫулĕпе.

— Таси паха,— терĕҫ хĕрачасем, хӑйсем тĕллĕн юлсан.

«Салтаксем» пĕр рете тӑчĕҫ. Венюк кам килнипе килменнине тĕрĕслет. Виҫĕ ача тухман. Сӑлтавĕ паллӑ мар. Тен, ĕлкĕреймерĕҫ? Кĕтме май ҫук. Команда пачĕ. Вара йĕлтĕрсем чӑкӑртаттарма тытӑнчĕҫ. Отряд пуҫĕнче — Нил. Илюкӑн ҫурӑмĕ хыҫӑнче — чĕркесе ҫыхнӑ ялав.

Ялӑн тепĕр вĕҫĕнчен «Ҫич ҫӑлтӑр» отряд тухрĕ. Хӳринче — Трапхин. Ҫӑмӑллӑн ярӑнса пыраймасть. Хӑй апат-ҫимĕҫ чикнĕ пысӑк кутамкка йӑтнӑ. Пиркесĕр мар, ашшĕне итленипе ку. Унсӑрӑн, пуссан та, ним ҫĕклеттерейместчĕҫ.

Ачасем вӑйӑ ирттерме хатĕрленнине илтсен, ашшĕ Трапхине акӑ мĕнле ӑс пачĕ:

— Эсĕ, ывӑлӑм, интендант пулма тӑрӑш.

— Мĕн япала вӑл?— ӑнланмарĕ Трапхин.

— Айван. Ну, эппин, повар, повар пулма тӑрӑш. Апат-ҫимĕҫ хӑвӑн аллунта, хырӑм выҫҫи мĕн иккенне пĕлмĕн.

Ашшĕ вĕрентнине хӑлхана чикнĕ Трапхин отряд командирĕ патне чупрĕ, тилмĕрчĕ, ĕнентерчĕ:

— Эпĕ повар пулатӑп. Юрĕ-и? Отряда тутлӑ пӑтӑ пĕҫерсе ҫитерĕп.

Петр Васильевич Скворцов хаваспах килĕшрĕ.

Кутамкка кантри хулпуҫҫине касать. Йӑкӑната пĕр самант ҫĕклеттересчĕ, иҫмасса. Лешĕ килĕшĕ-ши? Вӑл хӑй ҫывӑхне ямастех. Шутсӑр мӑнаҫланчĕ: командир ӑна адъютант турĕ-ҫке.

— Вĕҫкĕн!— сасӑпах ятлаҫса илчĕ Трапхин командир ҫумĕнче йĕлтĕрпе мӑнаҫлӑн пыракан Йӑкӑната.

Хыткан Хветĕр умрах. Кутамккине ӑна парас вĕҫнех ҫитрĕ, анчах хӑрать Трапхин. «Шанма хĕн. Тен, вӑл, кĕреше-кĕреше, вӑйне ӳстернĕ? Кутамккана илсен, каялла памĕ те. Ҫамӑн апат хутаҫҫиллĕ пулас килмĕ?»— шухӑшларĕ вӑл.

Трапхинпе юнашар йытти лĕпĕстетет. Хуҫи ывӑннине чухлать Улаҫка.

— Эх, тавҫӑраймарӑм,— кулянать Трапхин, анчӑкне пӑхса.— Кӳлмеллеччĕ сана. Ним мар кутамкка хунӑ ҫунашкана туртаттӑн.

— Ыттисенчен ан юл!— кӑшкӑрать командир мекеҫленекен Трапхине.

Ачан пичĕ тӑрӑх тар юхать.

Вăрмана пырса кĕчĕç. Ентĕ юр крепость çывăхра, тӳсмелли нумай юлмарĕ, пĕрре сывлăш çавăрмалăх кăна.

Çитрĕç. Ачасем йĕлтĕрĕсене хыврĕç те кускалама тытăнчĕç. Анчăк та юлмасть, сиккелесе вылять.

Крепость тунă чух Трапхин кăшт айккинерех ятарласа вучах чĕртме юр кирпĕчрен лаç ăсталанăччĕ. Кутамккине çавăнта хывса пăрахрĕ.

Улаçкана мĕн пулчĕ? Крепость айĕнчи шăтăк анинче каçса кайсах вĕрет. Кайри урипе юра сирпĕтет, хăрлатать.

Пурте карах пухăнчĕç йытă патне.

— Мĕн амакĕ?

— Шăтăкра «тăшман» ларать!

— Кĕрсе пăхас!

— Ай-ай, тен, унта упа!— шавлаççĕ ачасем.

Хыткан Хветĕр, тĕрткелешсе, мала иртрĕ.

— Сирĕлĕр!— кăшкăрчĕ вăл.— Шăтăка эпĕ кĕретĕп.

Трапхинĕн куçĕ чарăлсах кайрĕ.

— Хветĕр, тупата, вăйланнă,— пăшăлтатрĕ вăл Йăкăнат хăлхинчен. Юлташĕ, ним калама аптраса, тутине çеç пăркаларĕ. Иккĕшĕ те айккинерех кайса тăчĕç.

Мăштах пулчĕç. Сас кăларма хăраççĕ, тейĕн.

Шăтăкран тухрĕ те Хветĕр.

— Ну, мĕн куртăн?

— Йăлтăркка куçлă хĕрлĕ çăмха!— терĕ вăл.

— Ай-ай!— тĕлĕнчĕç ачасем.

Петр Васильевич Скворцов тавçăрса илчĕ:

— Тилĕ! Тилĕ!

Шăтăка хăй хырăмпа шуса кĕчĕ.

— Те тилĕ-ха,—тет Трапхин.

Улаçка çаплах вĕрет.

— Чарăн хамлатма,— хăтăрчĕ ăна Хветĕр.— Хăлхана йӳçĕтен.

— Çын йыттине ятлама ан хăй!— хирĕçет Трапхин.

Учитель каялла тухрĕ.

— Тилĕ çури! Вăрманта çӳресе шăннă пулас та ăшăнма кĕрсе выртнă. Иртнĕ хутĕнче эпĕ унта çĕтĕк пиншак хăварнăччĕ. Йытă вĕрнипе сехĕрленнĕскер, кĕтесе тĕршĕннĕ, шеремет.

— Тытмалла ăна!— кăшкăрашаççĕ хăшĕсем.

— Ман йытă сисрĕ,— пӳлет Трапхин.— Тилли мана пулать!

— Кĕрсе тыт, эппин, ху!— хушрĕ ăна тахăшĕ.

— Мĕн, тытаймастăп-и?— хастарланать йытă хуçи.— Чăнах, шăтăка кĕрсе кайрĕ. Анчах тилли чеескер, Трапхине шуç чуман тыттарса хăварнă. Чалт! сиксе тухрĕ те вăрманалла вăшлаттарчĕ. Кăна кĕтмен ачасем ахлатса, пĕççисене шарт çапса юлчĕç. Хăйсем çухăрашаççĕ:

— Ан тартăр!

— Тытăр! Тытăр!

Трапхин хăш вăхăтра тухнă-тăр? Никам та кăсăкланман унпа.

— Тилĕ камра? Халех мана панă пултăр. Унсăрăн лектеретĕп!— хăратать хăй ачасене.

— Хăвала, хăвала!— вĕскĕртеççĕ Трапхине пурте.— Авă, хыр хыçĕнче!

Тиллин хӳри те курăнмасть. Вăл паçăрах чăтлăха кĕрсе çухалнă.

Чылайччен лăпланаймарĕç «Çич çăлтăр» отрячĕн «салтакĕсем».

— Чей вĕретсе, апат çырткалар та разведчиксене çула кăларса ярар,— сĕнчĕ Петр Васильевич.— Пухăр хăрăк турат.

Трапхин лаççи патне чупса пычĕ. Чейникне кăларасшăнччĕ, анчах кутамкки ниçта та çук. Вара пĕтĕм вăрмана çурса кăшкăрса ячĕ:

— Кутамккана никам та мар, Хветĕр пытарнă!

— Мĕнле кутамкка?— тĕлĕнет Хветĕр.— Эпĕ тытман, мĕн пирки мана айăплан?

— Эсĕ ăмсаннă, хăв повар пуласшăн!— чăмăрне хытарса талпăнчĕ Трапхин Хветĕр патне. Лешĕн самантра вăй кĕчĕ. Хăйĕнчен чылай çӳллине, мăнтăррине пăхмасăр ярса тытрĕ вăл Трапхине.

Ачасене кулă пултăр, ахăлтатаççĕ. Чăнахах та Хветĕр мăнтăрккана çĕклесе çапрĕ.

— Ай-ай! Пултаратăн!

— Мах ан пар!

— Çапла кирлĕ ăна!

— Вирлĕрех!— хавхалантараççĕ Хветĕре.

Трапхин майли никам та çук.

Хĕрсе кайнă Хветĕр аякран чăмăрпа тăрăнтарать. Хăй çаплах туллă сăмахсем калать:

— Акă сана унчченхишĕн те, ӳлĕмхишĕн те. Эсĕ — вăйсăр така, майраку сан хуçăк, çакна ан ман.

Çиллине шăнăçтарайман Трапхин ӳлесе ячĕ.

— Аттене калатăп!— юнать куççулĕ юхтарса.— Вăл бригадир, асту, аннӳ пĕр ĕçкунĕсĕр юлĕ.

Нихăш те ун хутне кĕрекен тупăнмарĕ. Хыткан Хветĕр вара куç умĕнчех улăпа çити ӳсрĕ. Ун тăшманĕ ӳкнĕн, чĕркуçленнĕн туйрĕ кашни.

Апат-çимĕç кутамкки çав-çавах тупăнмарĕ.

— Пĕлетĕп кутамкка ăçтине. Ăна тилĕ йăтса кайнă!— тĕлĕнтерме хăтланчĕ Йăкăнат хăйĕн ăсĕпе. Ачасем ыйтуллăн пăхнине асăрхарĕ те суйма та вăтанмарĕ.— Чăнах, чăнах, хам куртăм, тараканскерĕн çăварĕнче япала пурччĕ.

Хăшĕ-пĕри ĕненчĕ. Тилĕрен кĕтме пулать: вăл çынсене улталама ăста, мăшкăллать те, хăйне хăратнăшăн, чăрмантарнăшăн тавăрать те. Пĕр учитель кăна темскере сиснĕн куçне чеен вылятрĕ.

«Хĕвел» отряд вырăна йĕркеллĕ çитрĕ. Ним тăхтаса тăмасăрах ĕçе тытăнмалла. Командир кĕске пуху уçрĕ.

— Васкасах тăшманăн ĕçне-хĕлне пĕлмелле,— терĕ вăл,— хăй килсе тапăнма шутлать-и е пире кĕтет?

Разведкăна кайса килмелле. Виçĕ çын яма йышăнчĕç: Нил, Илюк тата Уках каять.

«Çич çăлтăр» крепоçĕ аякра мар, çывăхрах.

Çула тухрĕç. Пĕр-пĕринпе калаçмасăр пыраççĕ. Чупасса та пĕр йĕрпе мар, пĕр-пĕринчен аяккарах тытрĕç хăйсене.

Чарăнчĕç разведчиксем. Шăп. Тăшман крепоçĕ пуш-пушах. Лайăх-хăн пăхса çавăрăнасшăнччĕ вĕсем, анчах ĕлкĕреймерĕç, шăв-шав илтĕнчĕ те. Эппин, «Çич çăлтăр» отрячĕ çывхарать.

Разведчиксем, кĕрт айккинерех пăрăнса, юр чавса кукленсе ларчĕç. Крепость кунтан ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнать.

Хуçисем çитрĕç, тӳрех йĕлтĕрĕсене хыврĕç. Трапхин те йывăр кутамккине хывса пăрахрĕ, ыттисем хыççăн юр крепость патне чупрĕ. Хăйсем хăлхана çурасла йăслаççĕ, тепле вăрман тӳсет. Тата вĕсене айван тесен те çылăх мар. Çывăхрах «юттисем» сăнаса ларма пултарни çинчен нихăшĕн те асра çук, чарăнусăр аташаççĕ. Таçтан муртан тилĕ мыскари сиксе тухрĕ. Разведчиксемшĕн ку шăп меллĕ пулчĕ. Вĕсем анраса тăмарĕç, мĕн тумаллине самант тавçăрчĕç.

Нил ытла йӳрĕк: куç хупса иличчен Трапхин хывса хăварнă апатçимĕç кутамккине хырăмпа шуса кайса илчĕ. Ăна вара, Укаха çурăм хыçне çактарса, хăйсеннисем патне ăсатрĕç.

— Йĕлтĕрĕсене йăкăртсан,— пыратчĕ тет Илюк, чеен пăххаласа.

— Тĕрĕс шухăш!— хулпуççинчен çапса илет ăна Нил.— Тăшманăн темиçе салтакĕ урасăр юлать.

Вăрманта, чăнах та, пилĕк таран юр. Йĕлтĕрсĕр виç утăм тăваймăн, лакса ларан. Икĕ çын йĕлтĕрсĕр юлсан та, ку «Çич çăлтăр» отрячĕшĕн — шырлăх.

Ним хăрамасăр, Илюк йĕлтĕрсем патне вĕçтерчĕ. Мĕн шикленес: никам та сыхламасть. Пурне те пĕчĕк тилĕ тыткăнланă. Илюк пĕр çĕклем йĕлтĕр йăтса вăшлатрĕ.

Калаçса татăлнă пекех, Нил юлчĕ-ха. Сăнать вăл. Унччен те пулмарĕ, ачасенчен çăлăннă тилĕ çури Нил урлах ярт! тапса сикрĕ вăрманалла. Кăна кĕтменччĕ разведчик. Тепле тӳсрĕ кăшкăрса ямасăр. Юрать-ха, тилĕ хыççăн хăвалакансем тупăнмарĕç, тыткăна лекетчĕ çăмăллăнах.

Малалла сăнать.

«Çич çăлтăр» çарĕ пăлханать: кутамккасăр тăрса юлнă-çке. Пĕтĕмпех курать разведчик. Ав, Трапхинпе Хветĕр тытăçса илчĕç. Мĕн усси? Кутамккана чее тилĕ йăтса кайнă, тинех тупаймăн.

Çĕнĕ инкек! Хăшпĕрисен йĕлтĕрĕсене çĕр çăтнă. Ку — чуна ыраттаракан тамаша.

— Эх, эпир те çав!— çĕлĕкне çĕклесе, пуçне хыçса илчĕ отряд командирĕ.— Пире «Хĕвел» отрячĕн разведчикĕсем шар кăтартрĕç. Эпир сисмен.

Тăвăл çĕкленчĕ. Çуйăхаççĕ. Кам мĕн каламасть-ши!

Нил тăнлать. Ав, Трапхин, çăвăр автанла çухăрать.

— Атьăр тапăнатпăр! Çитетпĕр те нимĕр юратпăр вĕсенчен.

— Вĕçкĕн!— хирĕçет хыткан Хветĕр.— Хăвăнтан пашалу сараççĕ. Кутамккуна упраймарăн, пуçна çĕклен.

— Пĕлетĕп, эсĕ вĕсем майлă. Хăваласа ямалла сана,— тулашма чарăнаймасть Трапхин.

— Аллу кĕске,— йĕкĕлтешсе илчĕ Хветĕр.

Отряд командирĕ хăйĕн адъютантне «Хĕвел» отрячĕн крепоçĕ патне çитсе шăршласа килме хушрĕ.

Йăкăнат çак шăпа хăйне тивнĕшĕн хавасне кăтартмарĕ.

— Тен, урăххи каясшăн?—тилмĕрнĕн пăхкаларĕ вăл юлташĕсен куçĕсенчен.

Ыттисем сăмах чĕниччен командир ăна хыттăнах хăтăрса илчĕ. Йăкăнатăн ирĕксĕрех итлеме тиврĕ.

Нилăн та текех пытанса ларнинчен усси пулас çук. Тăшман шухăшне пĕлчĕ. Вара вăшлаттарчĕ «Çич çăлтăр» разведчикĕ хыççăн курăни-курăнми. «Хĕвелĕн» юр крепоçĕ çывăхĕнче вăл Йăкăната хуса çитрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Стой!

Лешĕ çаврăнса пăхрĕ. Çурăм хыçĕнче — Нил. Кăна кĕтменччĕ, умра пулсан, татахчĕ хуть. Тарасшăн унталла-кунталла пăрăнкаларĕ. Хăтăлаймарĕ, тыткăна лекрĕ-лекрех. Йăкăнат вăйăран тухса ӳкрĕ. Йĕрке çапла.

«Çич çăлтăр» командирĕ тăшман тылне янă çынна кĕтсе илеймерĕ. Ĕç-пуç япăх. Йăкăнат каялла таврăнаймарĕ, виçĕ салтак йĕлтĕрсĕр. Вĕсем вăйăа хутшăнма пултараймаççĕ. Мĕн тумалла? Шалт ăнтан кайрĕ Петр Васильевич.

— Тапăнас!— Трапхинăн урăх юрă çук.

Командир килĕшрĕ.

«Хĕвел» отряд та хăйĕн крепоçĕнчен çĕкленсе тухнă. Вăрман варринче тĕл пулчĕç. «Çапăçу» пуçланчĕ. «Урра!» янăрать. «Автоматсем» шатăртатаççĕ. Ӳкнисем те пур авă. Ку хăрушах мар. Кӳлнари çакна кĕтнĕ, унăн та хăйĕн ĕçне кăтартас килет-çке. Чупса пырать «аманни» патне. Хĕрлĕ хĕреслĕ сумкинче бинт хатĕр, пĕринне — пуçне, тепринне аллине çыхать.

Уках хăйĕн трофейне хăварман. «Çич çăлтăр» отрядĕнчен вăрттăн илсе тухнă кутамкка ун çурăмĕ хыçĕнче.

Çапăçаççĕ. «Çич çăлтăр» каялла чакать. Крепоçа çăлса хăварасшăн — вăй çитмерĕ. Ирĕксĕрех парăнмалла.

Çĕнтерчĕ «Хĕвел» отряд. Пĕр-пĕрне саламлаççĕ. Кĕвве, сăвва лараймаи Трапхинпе Йăкăнат çеç мирлешеймерĕç, пăрахса кайрĕç.

— Тасални паха,— ал сулчĕ Хветĕр.

Вăйă вĕçленнĕ ятпа икĕ отряд вăрманта туслăх апачĕ ирттерме килĕшрĕ.

Трапхинĕн кутамкки Укахра. Çĕнтернисем те пушă алăпа килмен. Вĕсен те пур апат-çимĕç.

Тытăнчĕç поварсем ĕçе. Хуран айĕнче çатлатса вутă çунать. Часах мĕн пиçмелли пиçрĕ, чей те вĕрерĕ.

«Салтакăн» савăт-сапи хăй çумĕнче. Халлĕхе котелок ан пултăр, ун вырăнне — тимĕр чашăк. Қашнине çăпалапа хуратул пăтти хурса параççĕ. Типĕлле мар, кашăкпа çу кусĕ хываççĕ, сар хĕвелле йăлтăртатать вăл пăтă лакăмĕнче.

Ытла тутлă-çке уçă сывлăшра апат тени.

Вăйă пирки те калаçу нумая пычĕ. Лайăххрах хатĕрленме, чеерех пулма шутларĕç ӳлĕм.

— Ачасем, атьăр кăвайт чĕртер!— терĕ Кĕлнари.

Ун сĕнĕвĕпе пурте килĕшрĕç. Вăрманта хăрăк турат сахал мар, пуçтарма ан ӳркен кăна. Ĕçе самант кӳлĕнчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, пуçтарса тухрĕç те. Çӳллĕ купа купаланчĕ çапă. Чĕртсе ячĕç. Мĕншĕн çамрăк чуна çĕклентерет-ши çав кăвайт?

Уках тӳсеймерĕ, юрласа ячĕ. Пуçлакан çеç пултăр, юрлама кашни сатур.

Пит аван çав усăлмашкăн,
Шавлăн выляса кулмашкăн,
Вĕçнĕ евĕр ярăнмашкăн
Сивĕ, сивĕ çил çинче.

Çав хаваслăха хĕл кунĕ
Шăп пире валли пуль кӳнĕ,
Пирĕншĕн кĕртне те хӳнĕ,
Ан ларсамăр килсенче!

## XVI

Семен Пилешев çуртне чăннипех чун кĕчĕ. Кашни каç чӳречесенчен урама çутă ӳкет. Пӳрт умĕнчи юр сукмак такăрланнăçемĕн такăрланать. Нил тусĕсен йышĕ те ӳсрĕ. Халлĕхе ушкăнта чи шанчăклисем, пĕр шухăшлисем çеç-ха.

Ĕç нумай. Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен заставине хăвăртрах хута ярасшăн вĕсем.

— Заставăн мĕнле тĕллев пулмалла? Çакăн çинчен тĕплĕн шухăшлăр,— терĕ пĕррехинче Вера Ксенофонтовна.— Унта çӳрекен ачашăн застава чи чыслă вырăн пулмалла.

Ачасем застава тĕллевĕ пирки шухăшлама тытăнчĕç. Пуçа минĕретмелĕх пур.

— Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен заставин хăйĕн устав пулмалла,— сăмах хушрĕ Венюк.

Тĕрĕс, ку шухăшпа пурте килĕшрĕç. Анчах заставăн мĕнле çулйĕрпе каймалла?

Венюк йышра чи асли. Вăл комсомолец. Апла пулсан, ун пĕлмеллех. Кĕçĕн тусĕсем ăна тапăнчĕç.

— Нил, тен, эсĕ чухлан?— Венюк ун куçĕнчен тинкерсе пăхрĕ. Ыттисем те пуçĕсене ун еннелле пăрчĕç.— Эсĕ, çапах та, чикĕре пурăннă. Нумай курнă, илтнĕ.

— Пулмалла-ши пирĕн чикĕ хĕрринчи пек? Пулмалла та, çук та!— татăклăн каларĕ Нил.— Эпир чикĕрен аякри ялта ӳсетпĕр. Апла пулсан, чикке пăсакансене тытма пулăшас тĕллев тухса ӳкет. Ун вырăнне пачах урăххи кирлĕ.

Мĕн вăл — урăххи?

Шавлаççĕ ачасем.

— Эпĕ тавçăртăм!— пĕлтерчĕ Кĕлнари, пăлханса.

— Кала, кала,— хавхалантарчĕç ăна ыттисем.

—Акă мĕн. Совет халăхĕ коммунизм тăвать. Çапла-и?

— Çапла, тейĕпĕр!— илтĕнчĕç сасăсем.

— Çын чуна парса вĕренсен, ĕçлесен çеç коммунизма çитет. Юлхавсем, путсĕр чунлисем пур-и пирĕн хушăра?

Татах кĕрлерĕç. Пур-мĕн-ха ырă мар çынсем, пачах пĕтмен. Кĕрешмелле çавăн йышши этемсемпе.

— Тĕп пултăр çынри чунсăрлăх!

— Сывă пултăр çынри тӳрĕ кăмăл!

Ваттисем каларăшле, тавлашура чăнлăх тупăнать.

Заставăн уставĕ пĕчĕккĕн çапла çуралчĕ. Акă мĕн çырчĕç унта:

1. Яланах ырришĕн кĕрешмелле.
2. Лайăххине çул памалла.
3. Пĕр-пĕрне — вĕренӳре, пысăккисене ĕçре пулăшмалла.
4. Туслă, тӳрĕ кăмăллă пулмалла.
5. Кашниех чăн-чăн пограничник пулма хатĕрленет.
6. Çӳлте асăннисене пурнăçлама тупа тусан, çамрăк ачана кĕçĕн пограничник ятне парас.

Асăрхаттарни: пурăна киле, застава вăй илсен, кĕçĕн пограничниксем пĕр пек тум тăхăнмалла, уйрăмах — çу кунĕсенче.

Устава Вера Ксенофонтовна ырласа çирĕплетрĕ.

## XVII

Пулаççĕ çав пурнăçра савăнăçлă кунсем. Ун пек чух çыннăн вĕçме çунат хушăнать тейĕн.

Пĕр савăнăçĕ: Семен Пилешев службăра тăнă заставăран Вера Ксенофонтовна ячĕпе темиçе посылка, хаклă бандерольсем килчĕç.

Вера Ксенофонтовна застава начальникĕ патне çыру çырнăччĕ. Вăл хăйĕн упăшки лартнă çурта ял ачисене парнелени çинчен те асăнмасăр хăварман. Çавăнпа та ялти вăйăлла заставăна мĕнле йĕркелес тĕлĕшпе канашсем кĕтетчĕ-ха. Акă çыру: «Лайăх ĕç пуçарнă эсир, Вера Ксенофонтовна,— тесе çырать застава начальникĕ.— Ăс, канаш пама ыйтатăр. Кусем сирĕн хăвăрăнах çителĕклĕ.

Ачасене хăйсене ирĕк парăр. Хăйсем шухăшласа тупсан, вăййикулли, ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ хаваслăрах, усăллăрах пулĕ. Анăçлăх сунатăп.

Нилпа Субайылдана тата вĕсен юлташĕсене пирĕнтен пурсăмăртан та пысăк салам...»

Тепĕр савăнăçĕ: Борис Аххов персе çитрĕ çартан. Ăна Пилешев арăмĕ упăшкин шăллĕне кĕтсе илнĕ пек ăшшăн йышăнчĕ. Нилпа Субайылда лара-тăра пĕлмерĕç, пĕри те тепри пырса хулпуççинчен уртăнчĕç. Илюк та часах хăнăхса çитрĕ пограничника.

Тăраниччен юмахласан, Вера Ксенофонтовна, Борис енне пуç сĕлтсе, çапла пĕлтерчĕ:

— Ăмăрткайăксем, акă сирĕн застава начальникĕ тупăнчĕ.

Ниçта кайса кĕме пĕлми хĕпĕртерĕç ачасем. Тупата, шухăшласа пăх кăна! Ялти застава начальникĕ — чăн-чăн пограничник! Тĕлĕнтермĕш мар-и ĕнтĕ ку?!

Тӳсеймерĕ Аххов, тавăрăннă кунах Семен Пилешев çуртне каçрĕ. Пĕчĕккисем те пĕрле, утăм юлмаççĕ унтан. Посылкăсемпе бандерольсене те илчĕç хăйсемпе.

— Селĕм çурт,— пуплет Аххов, пӳрт ăшчиккине сăнаса.— Эпир

кунта, тусӑмсем, ял ачисен ытарайми штабне тӑвӑпӑр. Устав нумай пӗлтерӗшлӗ, ырлатӑп.

Пулас застава майӗпен хӑйӗн тусӗсене йышӑнать. Ав, Кӳлнарипе Укак кӗрсе сывлӑх сунма ҫеҫ ӗлкӗрчӗҫ, алӑк татах уҫӑлса хупӑнчӗ. Венюк иккен. Вӑл, Бориса курсан, питӗ савӑнчӗ, иккӗшӗ пӗр-пӗрне ҫурӑмран кӳпкесех саламларӗҫ.

— Эпир посылкӑсене салтма тытӑнатпӑр,— пӗлтерчӗ Нил.

Мӗн-мӗн кӑна ярса паман-ши пограничниксем! Кӗнекесем ҫав тери нумай. Вӗсене ҫӳлӗк ҫине майласа хучӗҫ. Вӑрӑм михӗрен пысӑк капашлӑ япала йӑтӑнса тухрӗ. Каркаласах пӑхрӗҫ.

— Палатка!—кӑшкӑрса ячӗ Нил.—Иккӗ! Ҫулла, ҫулҫӳреве кайсан, юханшыв хӗррине е вӑрман уҫланкине кар та ларт. Ҫумӑр та витмест, ҫӗр касма та канлӗ.

— Пӑхӑр-ха! Кӗске авӑрлӑ кӗреҫесем!— тӗлӗнет Илюк.

— Мӗн тума ярса панӑ ара кусене?— пачах ӑнланаймасть Кӳлнари.

— Эх, эсир те ҫав, нимле тавҫӑрулӑх та ҫук сирӗн, хӗрачасен,— питлесе илчӗ Хветӗр.— Салтак кӗреҫисем вӗсем. Ҫар ӗҫне вӗренес пулсан кирлӗ.

Акӑ татах тепӗр ещӗк. Пӑтисене кӑларчӗҫ те хуппине уҫрӗҫ: хут татӑкӗсемпе чӗркенӗ япаласем выртаҫҫӗ. Компас, бинокль, топографи карттисем, ручкӑ-кӑранташсем, блокнотсем, икӗ симӗс тӑрӑллӑ карттус. Ҫырнӑ хут листи тухрӗ: ҫак япаласем йӑлтах Семен Пилешев командирӑн.

Нилӑн куҫӗ шывланчӗ, ыттисем шӑп тӑчӗҫ.

Ярса панӑ япаласем пурте ялта ӳсекен чикӗ хуралҫисем валли иккен. Ҫитрӗ савӑнӑҫ: аларан алла куҫрӗҫ компаспа бинокль.

— Калама ҫук паха япаласем.

— Парне темелӗх пур

— Компасне вӑрмана кайнӑ чух илетпӗр. Компас алра пулсан, сӗм вӑрман пахча пек ҫеҫ, аташмастӑн.

— Бинокль та питӗ кирлӗ япала, унсӑрӑн ҫулҫӳрев кичем. Кантӑкӗ витӗр пӑхсан, таҫти аякри курӑнать.

Шакӑлтатаҫҫӗ ачасем, сӳтсе яваҫҫӗ. Борис вӗсен калаҫӑвне хутшӑнмасть. Пӗр шухӑш канӑҫ памасть ӑна: заставӑна кӗрекенӗн куҫне мӗн курӑнмалла-ха тӳрех? Вӑл тусӗсене хӑй тавра пухрӗ.

— Тимлӗ итлӗр. Застава начальникӗ пулнӑ май, сире пӗрремӗш задани паратӑп. Халӗ пурте киле каятӑр, уроксене тӑватӑр. Илюк, правленине кӗрсе, колхоз ударникӗсен списокне илет. Ҫав ҫынсен сӑнӳкерчӗкӗсем кирлӗ пире. Ку ӗҫе пурте хутшӑнаҫҫӗ. Хӑшӗн кам патне каймаллине Хветӗрпе Илюк пӗлтерӗҫ. Вӑхӑт виҫӗ кун паратӑп. Ӑнланмалла-и?

— Ӑнланмалла!

— Апла пулсан, халех тытӑнӑр.

Нихӑшӗн те тухса каяс килмест, анчах начальник хушнине итлемен ача пограничник ретне тӑраймасть. Ҫакна чухлаҫҫӗ вӗсем.

Борис, пӗччен юлсан, чылайччен ӗмӗтленсе ларчӗ. Заставӑна питӗ илӗртӳллӗн йӗркелесшӗн вӑл. Кунта ачасен канмалла, ӑс пухмалла.

Ял ачисенчен хамăрăн Тăван çĕршыва юратакан паттăрсем, чăн-чăн пограничниксем ÿстерессине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хурать. Вăй ситермеллех. Ахальтен коммунист-и вăл? Парти ретне ăна чикĕри службăра илнĕ-çке.

## XVIII

Пĕлĕт катрамĕсем, майлă вырăн тупнăн, пуç тăрринчен шуса иртеççĕ те çухалаççĕ. Тÿпере хĕвел пĕчченех хуçаланать. Çынсен çурăмĕсене ăшăтать, тумтир тĕсне вăрттăн шупкалатать. Кунĕ вăрăм. Уроксем хыççăн хĕллехи пек час каç пулмасть. Ура айĕнчи юр нÿрлĕ. Хĕрлĕ киккириклĕ автанĕ алкум вĕçне тухнă кÿлленчĕкрен шыв ĕçет.

Çакăн пек кунсенчен пĕринче шкул ачисен пысăк ушкăнĕ Семен Пилешев çурчĕ умĕнче чарăнчĕ. Пулас заставăпа паллашма вĕсене шкул директорĕпе учительсем ертсе килчĕç.

Хапха умне чавса лартнă юпа çумне хăма çапнă. Ун çине илемлетсе «Ырă сунса кĕтетпĕр» тесе çырнă.

Нил ушкăнтан уйрăлчĕ те, картлашка тăрăх хăпарса, пÿрт алăкне уçрĕ. Шалта — амăшĕ, Санюкпа Борис Аххов. Виççĕшĕ те хыпăнса ÿкрĕç. Килнĕ хăнасене кĕтсе илме хăпăл-хапăл алкум вĕçне сиксе тухрĕç.

— Кĕрĕр, кĕрĕр!— чĕнеççĕ вĕсем хăнасене.

Килнисене кĕтсе илекенсем сывлăх сунаççĕ пĕр-пĕрне.

Пионерсем урисене шăлса тасатаççĕ, кашниех темле чыслă çĕре кĕнине туять.

Застава... Мĕнле-ши унта? Кам чунне вĕчĕрхентермĕ ĕнтĕ ялта халиччен курман-илтмен япала.

Пÿртре халиччен хилле шăв-шав çĕкленмерĕ. Пĕчĕк чĕресене застава хăтлăхĕ ыталарĕ.

— Кунта мĕн пурри, çурчĕ-мĕнĕпех, йăлтах сирĕн,— терĕ Вера Ксенофонтовна.— Килти пек пулăр.

Килнисем чăрр пăхрĕç, куçĕсем йăлтăртатрĕç, хытса тăчĕç пĕр хушă. Борис Аххов шăпах çакна кĕтнĕ те ĕнтĕ. Унтан ачасем икĕ пайран тăракан «Вĕсем пек пулар» стенд умне кĕпĕрленчĕç.

«Ĕçлени сая каймарĕ, тĕллев тĕрĕс»,— шухăшларĕ Борис Аххов, çамрăк йыша сăнаса пăхнă май.

— Эх, ача! Мĕн тери чаплă!— тĕлĕнеççĕ хăшĕсем.

«Пирĕн янташ — Семен Пилешев пограничник-командир» пăшăлтатса вуларĕ кашниех.

— Ав, хăй!— терĕ Илюк мăнаçлăн, пысăк портрета пÿрнипе тĕллесе.

Семен Пилешев ку ÿкерчĕкре çар тумĕпе. Хăй ăшшăн пăхать.

Ачасене вăрăм тенкелсем çине лартрĕç. Вĕсен умне çартан тин çеç таврăннă Борис Аххов тухса тăчĕ.

— Паян эсир,— сăмах пуçларĕ вăл,— ялта ÿсекен чикĕ хуралçисен пулас заставипе паллашма килтĕр. Сире Семен Пилешев мăшăрĕ, Вера Ксенофонтовна, хăйсен çуртне парнелет. Калăр-ха, кам вăл Семен Пилешев?

— Пограничник!— пĕр харăс кăшкăрчĕç ачасем.

— Тĕрĕс,— çирĕплетрĕ вĕсемпе калаçакан.— Семен Пилешев — пограничник-командир. Вăл çак ялта ӳснĕ. Мĕн тери ырă кăмăллă çынччĕ. Салтаксене нихçан та хăр-хар кăшкăрса пăрахман. Ҫашнинпех аслă пиччĕшĕ пек лăпкăн калаçатчĕ. Унпа юмахлакан хăй те сисместчĕ чунне мĕнле уçса панине. Чикĕре Семен Пилешев командирпа пĕрле службăра пулма тӳр килнишĕн хама телейлĕ тесе шутлатăп.

— Шпионсене тытнă-и вăл?!

Трапхин çапла персе янăшăн Илюк питĕ пăшăрханса ӳкрĕ. Пограничник умĕнче вăл татах тем паврасран шикленсе чарма пикенчĕ ăна:

— Эсĕ, мĕн, ан шавла-ха.

Борис Аххов ним те кӳренмерĕ, çирĕппĕн çапла пĕлтерчĕ:

— Ҫапла, шпионсене тытнă вăл.

— Ай-ай!

— Мĕнле майпа?— кăсăкланчĕç ачасем.

— Чикке пăсакансем шалалла кĕме çул тупайман. Анчах та пĕлĕр: тăшмана тытса чарма çăмăл мар. Питĕ йывăр, синкерлĕ ĕç вăл, тусăмсем. Паян эпĕ пĕр саманта аса илесшĕн. Семен Пилешев командир ертсе пынипе диверсантсен ушкăнне мĕнле йĕрлесе тупни çинчен ку.

Аçтан пуçлам-ши тенĕн, пограничник кăшт чарăнса тăчĕ, хулпуççийĕсем хусканкаларĕç.

«...Тревога. Ыйхăран дежурнăй вăратрĕ. Эпĕ çиçĕмле хăвăртлăхпа Пилешев командир патне çитсе тăтăм.

— Чикĕ урлă шпионсем каçнă. Вĕсем пирĕн нарядри салтаксене автоматран пенĕ, иккĕшне амантнă. Аххов, санпа иксĕмĕр йĕр тăрăх каятпăр.

— Эх, мĕнле шел, Мишшапа йытти çук,—кулянтăм эпĕ.

Йытăпа çӳрекен Мишша пирĕн сасартăк чирлесе ӳкрĕ те, эпир ăна пульницăна хутăмăр. Мишша службăна та хăй пăхса ӳстернĕ йыттипе пынăччĕ».

— Хăй пăхса ӳстернĕ йытăпа?— тĕлĕнмесĕр чăтаймарĕ хыткан Хветĕр.— Эх, манăн та...

Сăмахне вĕçлеме памарĕç ăна, хăтăрса тăкрĕç. Шăп. Борис Аххов калаçăвне малалла тăсать.

«Семен Пилешев тӳрех вольерта тăракан Мишша йытти патне чупрĕ. Нивушлĕ йытта хăй илсе тухать?

Мишшана пульницăна хурсан, ун йытти, Янкор, патне апатпа командир çӳретчĕ. «Мĕншĕн йытта пăхма ыттисене хушмасть?— теттĕмĕр эпир. Овчаркки, чăнах, усалччĕ, никама та хăй çывăхне ямастчĕ, шурă асав шăлне кăтартса харлататчĕ. Пилешева, те вăл командир пулнине чухланă, йышăнатчĕ, ачашлама та чармастчĕ.

Акă, командир йытта илсе тухрĕ. Чупрăмăр вара пограничниксене амантнă çĕре.

Пуçра Пилешев аслă лейтенант вĕрентнисем янăраççĕ. Йĕр йĕрлекен пограничник калама çук маттур пулма тивĕç. Вăл пăлан пек çăмăллăн малалла ыткăнмалла, пĕр вăхăтра асăрхама та, илтме те пултармалла. Йĕрлевçĕ тăшманран ăслăрах, чеерех, йăрăрах, çивĕчрех.

Çакна манма юрамасть. Паллах, диверсант мăй таран хĕçпăшалланнă. Тен, вăл аякка кайма ĕлкĕрнĕ. Апла пулсан та, сан ăна хуса çитмелле, тытăçмалла, вăйсăрлатмалла е пачах пĕтермелле».

Тĕттĕм, куçран тĕксен те, ним те курăнмасть. Вăрман уçланкипе иртсе, шурлăхлă вырăна, сарлака юханшыв хĕррине, çитсе тăтăмăр. Эпĕ хунар çутрăм. Юшкăн çийĕн йĕрсем!

— Ох-хо-хо, ачамкка, вĕсем пиллĕкĕн,— терĕ аслă лейтенант Пилешев юлташ.— Автомат, гранатăсем çакнă. Пулемет та пурах.

— Ăçтан пĕлетĕр?— кăсăкланатăп эпĕ.

— Пушă алăпа утаканăн ату кĕллиç çапла тарăн йĕр хăвармасть. Йытă сăмсине çĕре тĕкĕнтерсех шăршлать.

Эпир чарăнса тăнă вырăнтан леш енчи çыран хĕрринче йĕрсем курăнмаççĕ. Ăçта çухалнă? Вĕçме çуначĕсем çук. «Вĕсем шыв тăрăх утнă»,— тавçăратпăр эпир. Анчах шыв юххипе е хирĕçле утнă?

— Путех, вĕсем çӳлелле кайнă, унта вырăнĕ улах,— сăмах хушать аслă лейтенант.

Чăнах, вăл йăнăшман: диверсантсем тарăн çырма тĕлĕнче шывран тухнă. Унтанпа вăхăт та нумай иртмен, мĕншен тесен йĕрсем юшкăн çинче çĕтме ĕлкĕреймен.

Заставăран тухнă пограничниксен ушкăнне, хамăр ăçтине пĕлтерсе, сывлăша ракета ярса сигнал патăм. Çав ушкăна застава начальникĕн заместителĕ ертсе пырать.

Йытă пире йывăç тĕммисемлĕ тарăн вар тăрăх ертсе кайрĕ. Йытă темерĕн, хуса çитме çук, хăвăрт чупать. Чăм шыва ӳкрĕмĕр. Сывлăм ӳкни чăрмантарать çитменнине. Тĕм тураттисем чĕркуççисене йĕпе шăпăрпа вĕтнĕн çапăна-çапăна юлаççĕ.

Вăйран кайрăм-ши, юлнăçем юлатăп. Командир мана куçран вĕçертмест.

— Хастарлăрах эсĕ, Аххов!— кăшкăрать вăл, йыттине çавăтса пыракан чĕлпĕр вĕçне мана парса.— Тыт!

Хăваласа çитсе кантрана ярса илтĕм. Янкор сĕтĕрнĕ пирки чупма самай çăмăл. Иккĕн те тĕпĕртетсе çеç пыратпăр.

Хăпарса çитрĕмĕр тарăн вартан, умра — тулă пусси. Ана тăрăх, йăран евĕр, хуп-хура сукмак тăсăлать. Тăватă ураллă тус тӳрех унта чăмрĕ: эпин, диверсантсем çак сукмакпа кайнă. Унччен те пулмасть, Янкор тăпах тăчĕ, каллĕ-маллĕ çавăрăнкалать. Мĕн амакĕ? Йĕр çухатрĕ-и?

— Хăяматсем,— шăл витĕр чăрт! сурса илчĕ аслă лейтенант,— тапăртатса тăнă вĕсем кунта. Тавлашнă. Тахăшĕ сулахаялла туртăннă, теприсем — сылтăмалла. Пĕрлĕх çук вĕсен хушшинче, тăванăм. Путех вĕсем «хăтăлтăмăр» тесе хĕпĕртеççĕ.

Йĕр йĕрлекен йытă çине çеç шанни сахал, тăшман шухăшне тавçăрмалла.

Эпĕ каллех, сывлăша ракета ярса, сигнал патăм.

Ĕнтĕ пусă хĕррипе вĕçтеретпĕр. Миçе çухрăм виçрĕмĕр-ши? Сахалтан та вунпилĕк —çирĕм пулать пулĕ.

Вăрмана илсе кĕрет пире Янкор. Ку пирĕншĕн лайăхах мар, мĕншĕн тесен йытă тăшман атти хăварнă йĕре курса чупмасть, ăна çул кăтартса пыраканĕ — пуçламăшĕнчех сиссе илнĕ тăшман шăрши. Вăр-

манта тем тĕрлĕ йывăç-курăк, чечек-çеçке ӳснĕ пирки кирлĕ шăрша туйса пыма йывăр, аташма çăмăл.

Командир йытта ăшă сăмахсем каласа хавхалантарать. Лешĕ, ăслăскер, тăрăшать. Маттур, хире чиперех тухрăмăр. Ниçта та çын мĕлки курăнмасть. Йытă чарăнусăр малалла туртать пире.

Хĕвелтухăç çутала пуçларĕ. Вăййа тухнă çăлтăрсем, килĕсене кĕрсе, кантăкĕсене хупаççĕ. Шурăмпуç çăлтăрĕ çеç куçне ялкăштарать: эпир тăшмансене мĕнле тытнине курасшăн-тăр.

Лапамра, шăналăк сарнăн, тăваткăл-тăваткалăн тем шуррăн шуралать. Тинкерсе пăхрăм — йывăçсем хушшинче хăма витнĕ çурт тăррисем-мĕн.

— Диверсантсем яла кĕчĕç-ши? Ки пирĕн ĕçе кăткăслатать,— тет Семен Пилешев.

Пахча картисем çумне çитсе те перĕнтĕмĕр. Пирĕн телее, урама илсе кĕмерĕ йытă».

— Э-э, пĕлетĕп! Вĕсем мунчана кĕрсе пытаннă. Халь-халь ярса тытаççĕ,— çат-çат алă çупрĕ Хветĕр, пограничник каласа панине пĕтĕм чунтан тăнласа лараканскер. Вăл, паллах, шухăшĕпе йĕр тăрăх ыткăнакан йытă вĕренне ярса илнĕ, Семен Пилешев командир хыççăн талпăнать.

— Тарма памалла мар!— кăшкăрса ячĕ Уртем те.

— Янкор пурпĕрех хуса çитсе пусса антарать,— хушса хурать Панти.

— Анчах та вĕсем пиллĕкĕн-çке, йытти пĕрре,— тет Трапхин,— епле тытĕç-ши?

— Питĕ пĕлес килет, тытайраççĕ-ши?

— Ан чăрмантарăр, малалла итлер!

— Тытатпăр!— тавлашаççĕ ачасем.

Кунтан аякра, Тăван çĕршыв чикки хĕрринче, тахçан пулса иртнине ачасем çапла туйни, вĕсем пăлханни Борис Аххова килĕшрĕ. Вăл асилĕвне Хветĕр шухăшĕнчен пуçăнчĕ.

«Эпир ун чух мунча таврашĕ асăрхамарăмăр. Май та пулмарĕ куçпуçа чаркаласа тăма. Йытă пире сĕтĕрет, чармасан, вĕçерĕнсе кайĕччĕ. Ăçта туртать пулĕ тетĕр? Ял вĕçĕнче — йĕтем. Асăрхарăмăр-ха, унта арпалăх ларать. Пирĕн Янкор шăпах çавăнталла ĕрĕхтерет.

Тул янках çутăлчĕ, ĕнтĕ тавралăх аванах курăнать.

Йĕтеме самант çитрĕмĕр. Арпалăх алăкĕ кăшт уçă. Аслă лейтенант тусне ăпплантарчĕ те алăка пырса яриех уçрĕ. Пăхатпăр: шалта никам та курăнмасть, урайĕнче — апат юлашкисем. Диверсантсем апатланнă пулас та канма выртнă-тăр. Кĕтесре арпа купи пур. Ăна пырса пăтраштарас шухăшпа утăм турăм çеç, сасартăк, шăкăрт! туни илтĕнчĕ. Ним те мар, граната авăрланă сасă ку.

— Борис, каялла!— приказ пачĕ мана Семен Пилешев командир.

Чĕрĕ юлас тесен, сĕнксе ан тăр, юс пулса йăпăртат, тĕк пек вĕç. Инçе каяймастăн: арпалăх çывăхнех пуçа чиксе ӳпне выртрăмăр. Унччен те пулмарĕ, тăшман ывăтнă граната кĕрĕслетрĕ, вут-хĕм хăрушла сирпĕнчĕ.

Анчах пире тивейменĕ, эпир сывах, виççĕмĕртен пĕри те аманман.

— Парăнăр!— кăшкăрать аслă лейтенант арпалăхри этемсене.— Аллăрсене çĕклесе, пĕрерĕн-пĕрерĕн тухăр!

Лешсем шăпăрт, сас-чӳ памаççĕ. Кăшт тăхтарĕç те арпалăхран пеме тытăнчĕç. Эх, тăхлан çумăр çутараççĕ...

Пограничниксен ушкăнĕ çитрĕ. Хăвăртрах кирлĕ пек тăратса тухрĕ вĕсене застава начальникĕн заместителĕ.

— Сире пограничниксем çавăрса илнĕ. Пенинчен ним усси те çук. Парăнăр!— хушать диверсантсене татах Семен Пилешев командир.

Итлемеççĕ. Апла пулсан, йышăнăр кучченеç! Пограничниксем, командир хушнине итлесе, харăс-харăссăн ĕнтме тытăнчĕç. Акă арпалăх тăрринчен тĕтĕм йăсăрланать. Çунать. Шалта çар хатĕрĕсем шăт-шат туса çуралаççĕ.

— Çунса вилес килмесен, тухăр!— приказ парать диверсантсене каллех аслă лейтенант».

— Çунĕçин ара. Тĕсси!— сиксе тăчĕ Хветĕр.

— Тен, вĕсем çĕр айĕнчен çул тунă?— иккĕленет Трапхин.

— Асту. Çунса пĕтнĕ вĕсем,— çирĕппĕн калать Хветĕр.

«Эпĕ те, Хветĕр, сан пек шухăшланăччĕ. Çав кирлĕ, терĕм, автомата хывса, айккине хутăм. Анчах эпĕ йăнăшнă. Çавна пула пурнăçăма чутах тататтăм. Диверсантсенчен пĕри арпалăх шăтăкĕнчен тухнă-мĕн те çĕр çумĕпе çĕлен евĕр шăвать. Вăл эпĕ ăçта выртнине асăрханă. Ман еннелле маузерĕнчен пульăсем ăсатать. Тăшмана ытти пограничниксем те курчĕç. Чĕрĕлле парăнма хушрĕç. Лешĕн пулисем те пĕтсе çитрĕç пулас, аллисене çĕклерĕ вăл.

Чупса пытăмăр ун патне. Хăй телогрейка тăхăннă. Сухалĕ вăрăм. Шĕвĕр пӳрнинче ылтăн çĕрĕ йăлтăртатать. Уринче офицерсем тăхăнакан хӳхĕм атă».

— Ых-х, выçă кашкăр, мĕнле сĕкĕнме хăйнă, путсĕр,— ятлаçат Хветĕр.— Чимĕр-ха, ыттисем ăçта?

«Кутемĕн арпалăх çунса кĕлленчĕ те. Пĕтĕм пограничниксем пухăнтамăр. Тăратпăр калаçкаласа, курах кайрăмăр кăмрăкланнă тăвата çынна. Чĕрĕлле парăннине кĕçех штаба ăсатрăмăр. Совет çĕршывĕнче сăтăрла ĕçсем туса çӳреме шутланă иккен, ирсĕрсем».

— Çапла,— калавне малалла тăсрĕ Борис Аххов.— Тăшмансем чикке пăсса пĕр хут çеç мар пирĕн Совет çĕршывне каçма пикенчĕç. Анчах совет пограничникĕсем хуралта яланах тимлĕ. Вĕсем, кирлĕ пулсан, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçаççĕ. Семен Пилешев юлташ та, тин çеç каласа панă пек, пĕр тытăçура пуçне хучĕ, анчах шпиона çул памарĕ.

Ачасем шăпăртах пулчĕç. Кашниех хăйне май шухăша кайрĕ. Тен, хăвăрт ӳссе, Тăван çĕршыв чиккине сыхлама тăрасшăн.

— Туссем, кунта паттăр пограничникăн портречĕ пур. Тата эсир унăн чикĕ хĕрринчи пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашма пултаратăр. Килĕр,— чĕнчĕ шкул ачисене Борис Аххов.

Лешсем, вырăнтан тăрса, стенд умне пухăнчĕç. Мĕн каласа параççĕ-ха кунта вырнаçтарнă ӳкерчĕксем?

«Çывăраççĕ-ха пограничниксем. Автоматсем, хуçисене кĕтнĕн, пĕр ретре тăраççĕ. Акă, командир пограничниксене Тăван çĕршыв чиккине

хураллама ăсатать. Пограничниксем нарядра. Вĕсем, лăпсăркка йывăççен ешĕл турачĕсем хушшинчен пăхса, таврана сăнаççĕ. Йытăпа чупаççĕ, тăшман йĕрĕ çине ӳкнĕ. Овчарка тăшмана туллать. Хайхискер, чикке пăсаканĕ, икĕ аллине те çĕкленĕ. Путсĕр, кун çук сан валли Совет çĕршывĕнче!

Хĕрлĕ галстуклă арçын ачана ют çын чарнă. Тĕпчет:

— Автобус çулĕ çине тӳртен ăçтан тухмалла?

— Ав!— тĕллесе кăтартать пӳрнипе ача. Вăл çынна пачах урăх сукмакпа ярать, хăй заставăна чупать. Пионер командир умĕнче. Вăл ăна ют çынна курни çинчен пĕлтерет. Тытаççĕ шпиона, пысăк заводсем ăçта ӳссе ларнине пĕлме килнĕскере.

Çывăхри ял шкулĕнче вĕренекенсем пограничниксемпе туслăн пурăнаççĕ. Пĕр ӳкерчĕкре: пионерсем застава тавра йăрансем чавса чечексем лартнине кăтартнă».

Сĕтел çине Семен Пилешев усă курнă компас, бинокль хунă. Пăхса тăранаймаççĕ ачасем.

## XIX

«Колхоз паттăрĕсем» стенд умне куçрĕ вĕт халăх.

— Ай-уй, ку кам ара?— чурăссăн персе ячĕ мăн сассипе Трапхин, чи пирвайхи сăнӳкерчĕк çине куç хӳрипе пăхкаласа.— Паттăр çын мар ĕнтĕ çак этем! Ни сăнĕ-пичĕ, ни тумĕ пăхмалăх çук.

Сăнӳкерчĕкри çыннăн, тĕрĕсех, Семен Пилешевăннипек, тумĕ яка курăнмасть: пиншакĕ кивĕ, çухави те, ав, чалăшрах. Кĕпи те кăшт лутăрканнă. Мĕнех, ĕç тумĕ.

Куракансенчен нихăшĕ те Трапхине ятласа намăслантармарĕ: «Эх, эсĕ те çав, ялти хисеплĕ çынна тĕшмĕртместĕн!»

Вера Ксенофонтовна чĕри хĕсĕнсе килчĕ. «Тахçан пурăннă çын та мар-çке, манăça тухнă-та-и?»— ӳпкелешрĕ вăл. Çавăнтах тепĕр майлă шухăш та пырса лăпкарĕ чуна: «Ку ачасем ăна палламаншăн, тен, тĕлĕнме кирлех те мар. Пĕчĕккисем кама курнă, çавна палласçĕ. Тата кам пит асăнса тăрать вĕсемччен пурăннисем çинчен? Малашне пĕлĕç, застава пулăшĕ».

Хура пĕлĕтсем сирĕлчĕç.

— Паллаштарам-и сире Трапхин уйăрса илеймен çынпа?— ыйтуллăн пăхрĕ Вера Ксенофонтовна, виçĕмкун кăна хăйĕн альбомĕнчен кăларса ывăлне панă сăнӳкерчĕке пӳрнипе тĕллесе.

— Каласа пар!

— Итлетпĕр!

— Кам вăл?

— Пĕлес килет!— шавласа илчĕç ачасем.

Вĕсене саксем çине вырнаçма хушрĕç. Шăплансан, Нил амăшĕ сăмах пуçларĕ:

— Сăнӳкерчĕкрен пирĕн çине пăхакан çын — хамăр ялсемех. Вăл — Виктор Родионович Шаляев, пурнăçа ытарайми юратакан, Ленин кăтартнă çулпа тӳррĕн утакан, халăхшăн чунне паракан коммунист.

Колхоз председателӗнче ӗҫлетчӗ. Ирсӗр чунлӑ этемсем вӑрманта сыхласа тӑрса вӗлерчӗҫ ӑна.

Ачасем хушшинче пӗри: «Ай!»— терӗ.

Вера Ксенофонтовнӑна каллех хӑйӗн ҫамрӑклӑхӗ аса килчӗ. Калаҫма ҫавӑнтан тытӑнчӗ те вӑл. Ялти комсомол комитечӗн секретарӗнче ӗҫленӗ кунсем йӑлтах колхоз председателӗ Шаляев коммунистпа ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

«...Ҫапла, айкатнӑ тулӑ вӑрлӑхне комсомолецсен ушкӑнӗ тупрӗ. Ӗнтӗ колхоз ҫӗрӗ ҫинче сарӑ тулӑ ҫитӗнӗ, ҫӗр ӗҫченӗн чунне савӑнтарса, парка пӗрчӗллӗ пучах ӳсӗ.

— Вӑй патӑрах ҫав ҫамрӑксене,— калаҫатчӗҫ ваттисем. Вӗсене ҫак хыпар чунтанах савӑнтарнӑ. Тепри вара, хура юнли, калама ҫук тарӑхнӑ ӗнтӗ. Кам-ши вӑл, питне хура маскӑпа хуплакан? Хӗвӗнче ҫӗҫӗ ун, аллинче — пӑшал. Аҫтан пӗлӗн? Ҫын ӑшчикӗ кӗрӗк ҫанни мар, таврӑнса пӑхаймӑн. Санпа тӗл пулсан, йӑл кулса шӑлне кӑтартать, сывлӑх сунса ҫӗлӗкне аршӑн ҫӳллӗш ҫӗклет. Вӑрман аслӑ. Вӑрттӑн пускаласа, лутра чӑрӑш лӑсси айӗнчен пуҫне кӑларса, ҫӳлевӗҫ евӗр сикме мелле самант кӗтет.

Питне маска ҫыхнӑ ҫын — вӑрӑ ҫеҫ мар, вӑл — чӑн-чӑн халӑх тӑшманӗ. Эртел вӑй илсе пынине, ҫӗр ӗҫченӗсен пурнӑҫӗ лайӑхланнине тӳсме пултараймасть».

Тимлӗн тӑнлаҫҫӗ пулас пограничниксем. Шухӑшпа вӗсем темиҫе ҫул каяллахи кунсенче. Тӗлӗнмелле, ун чухне вӗсем пӗри те ҫуралманха. Апла пулин те, ҫынсем пурӑннӑ, колхозра ӗҫленӗ. Председателӗ, Шаляев юлташ, ҫынсемшӗн тӑрӑшнӑ.

«...Колхозниксен пухӑвӗ хыҫҫӑн Виктор Родионович комсомолецсене хӑй патне чӗнтернӗ:

— Ҫамрӑк туссем, вӑрах калаҫма ерҫӳ ҫук,— асӑрхаттарчӗ вӑл, хыпаланнине палӑртса,— тӳрех калам: сире ҫав тери кирлӗ ӗҫ хушасшӑн. Пирӗн ҫӗр тӑприне лабораторинче тӗрӗслерӗҫ. Ҫӗрулми лартсан, ӑнӑҫлӑрах пек туйӑнать. Хӑвӑрах пӗлетӗр, ку таранччен колхоз ҫак ӗҫпе аппаланман, вӑрлӑх ҫук. Михӗ, витре ҫӗклесе кайӑр-ха кил тӑрӑх. Кам мӗн чухлӗ ҫӗрулми панине список туса пырӑр, кӗркунне пӗтӗмпех тавӑрса паратпӑр. Ҫак ӗҫе комсомолецсене парти хушнӑ ӗҫ вырӑнне хурса йышӑнма ыйтатӑп.

Вера ҫийӗнчех комсомолецсен пухӑвне ирттерчӗ. Комсомолта тӑман ҫамрӑксене те чармарӗ пухӑва кӗме. Кун йӗркинче пӗртен-пӗр ыйту: колхозниксенчен вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми пухасси.

— Парти хушнӑ ӗҫе тӑватпӑрах,— сӑмах пуҫарса пачӗ Семен Пилешев.

Тавлашрӗҫ вара пӗр кана.

— Колхозниксем пире ҫӗрулми парасса шанмастӑп,— тет Марье.— Никамӑн та ҫӗрулми ытлашши мар.

Унпа юнашар ларакан комсомолец Марьене хирӗҫлерӗ:

— Сан аҫу-аннӳ, Марье, хытӑ ҫынсем, вӗсенчен раштавра та пӗр кӗреҫе юр илеймӗн. Ытти ҫынсем пулӑшма тарават. Ку тӗп-тӗрӗс.

— Ҫынна питличчен хӑвӑн аҫупа аннӳне пӗл,— мӑртлатса тутине тӑсрӗ Марье.

— Комсомолецсен яланах хăйсен мăнаçлăхне упрамалла,— каçăрăлса тăчĕ Лекçей.

Ун шухăшне малтанхи сăмахĕнченех ăнланайман пирки чăрласа пăхрĕç куçĕнчен пурте.

— Витре, михĕ çĕклесе çӳренипе ят каять. Эпир кĕлĕмçĕсем мар. Тӳрех лаша кӳлсе тухас, пăтавкки-пăтавккипе паччăр.

Тĕрĕс калать, Лекçей сĕнĕвĕ пурин кăмăлне те тивĕçтерчĕ. Çапла йышăнчĕç те.

Вырсарникун çитрĕ. Пурте килте. Аслă ĕç пуçарма шăпах юрăхлă.

Кашни хапха умĕнче чарăнать урапа кӳлсе тухнă лаша. Комсомолецсем кил хуçине чĕнеççĕ, калаçу пуçланать.

— И-и, ара, кирлĕ пулсан, парас,— туххăмрах ăнланать хăшĕ. Тиеттерсе ярать лавĕпех.

Юриех анкă-минкĕленекен те пур. Чĕлхе ывăнать ун пеккипе калаçса. Çĕрулмине памĕччĕ, анчах хăрать.

— Пĕр алăран вĕçертсен, урапа такăрлатсан та каялла илеймĕн,— ятлаçать тепри, калинккерен те кĕртмесĕр.

Халăх ырлăхĕшĕн кĕрешӳ пырать. Акă хăçан витĕр курăнать иккен çын, хăй те сисмест, пĕтĕм ăшчиккине тавăрса кăтартать.

Çапах та ялйыш ырă çынпа пуянтарах. Пухăнчĕ çĕрулми.

Шаляев юлташ кĕрен йышши çĕрулмисене суйлама хушрĕ, куçĕсене касса лартма хатĕрлерĕç. Вăрлăх шăпах палăртса хунă лаптăка лартма çитрĕ.

Çĕрулмине лайăх çитĕнтерессине комсомолецсем хăйсем çине илчĕç. Карах шăтрĕ, çумкурăкĕ те пĕрлех тапса тухрĕ. Çамрăксем пĕр çумкурăк хăварми çумларĕç, купаларĕç. Халĕ ĕнтĕ ӳстĕр кăна.

Майĕпен тырă ĕлкĕрчĕ, колхозниксем уй-хире тухрĕç.

Комсомолецсем ашшĕ-амăшĕсемпе кăнтăрла ĕçленипе çеç çырлахасшăн мар, çĕрле те тырă вырма ушкăнпа тухассине пуçарса ячĕç.

Çутçанталăкăн хăйĕн ăсĕ, ниме те уямасть вăл. Çынсене систермесĕр, вăрттăн çу кунĕсене ăсатрĕ — кĕркунне илĕртет. Çиллĕ, çумăрлă кунсем хуçаланаççĕ. Юр та сапса кайма хатĕр. Тахăш каç çеçкесемпе курăксем шурчĕç. Тара кĕрĕшнĕ çил ачисем чарусăр алхасаççĕ, йывăç тăррисене аваççĕ, тураттисене лăскаççĕ. Ăçтан тӳсĕн? Çĕре тăкăнаççĕ сарăхнă çулçăсем.

— Тухар çĕрулми уйне!— карр! çĕкленчĕç çамрăксем.

Машина тавраш çук, хусăкпа чакалаççĕ. Вăрлăхлăх çитĕнтернĕ хăяр пек шултра паранкă йăтăнать. Чăрăшкас уй-хирĕ çакнашкал тухăçлă çĕрулми нихăçан курман.

Малтанхи кун Марье киле таврăннă чух пĕр витре çĕрулми йăтса таврăнчĕ. Кăн-кан пăхкаларĕç ăна, чарма ăс çитереймерĕç. Тепĕр кунне сĕмсĕркке çурăмĕ çине çур михех çавăрса хучĕ.

— Эсĕ, Марье, кăнтăр кунĕнчех колхоза çаратма тытăнтăн-и?— ун умне кап тухса тăчĕ комсомолецсен пуçлăхĕ Вера.

Ыттисем те хăтăрчĕç хĕре:

— Кашниех витрепе те михĕпе çĕклеме тытăнсан, мĕн пулать? Намăслан кăшт.

— Ах, çырлах, çĕрулмине хĕрхенчĕç,— хирĕçет Марье.— Уйра, ав, мĕн чухлĕ!

Миххине пушаттарчĕç Марьене. Тек вара ĕç вĕçне çити те хĕр ун пек хăтланмарĕ.

Çĕрулми туса илни пысăк савăнăç кўчĕ. Колхоз ĕмĕрĕнче пуçласа районта малти вырăна тухрĕ, премии илме тивĕçлĕ пулчĕ.

— Сирĕн çитĕнĕвĕр ку,— тав тăвать комсомолецсене колхоз председателĕ Шаляев юлташ.

— Пирĕн çĕнтерў çеç мар,— йышăнмаççĕ комсомолецсем,— ку — эсир пуçарнипе, эсир ертсе, ăс парса пынипе ăннă ĕç.

Колхозăн машина тавращĕ çук. Алăпа нумай ĕç тăвайăн-и? Хуçалăха тĕпрен çĕнетмелле. Анчах мĕнле? Тĕрлĕ майсем шырать председатель. Çынсемпе калаçать, анчах никам та тамăк хуранĕнчен çăлăнса тухма çул тĕллесе кăтартмасть.

Председателĕн сĕтел хушшинче те ĕç нумай, анчах алă пымасть. Килнисемпе калаçса тăмарĕ, кĕсйине хутпа кăранташ чикрĕ те урама тухрĕ. Пур çĕре те хăй çитсе курасшăн вăл паян.

Пĕр хĕрарăм пĕвери вак кусĕнчен витрисене шыв ăсса кĕвентипе çаклатрĕ те ĕне фермм еннелле, сăрталла мекеçленсе утрĕ. Председатель палларĕ ăна: Матĕрне, тăлăх, ача-пăчаллă хĕрарăм. Упăшки фронтран таврăнаймарĕ.

Колхоз ĕнисене кĕвентепе шыв йăтса ĕçтерет-и? Ăçта Сахрун? Фермăна пичкепе шыв турттарма ăна хушнă, лаша та уйăрса панă. Ытлашши иртĕхнĕ вăл.

Калана пек, пĕви çумрах-ха. Çу кунĕнче ĕнисем хăйсемех анса ĕçеççĕ, хĕлле вара сăрталла йăт-ха, ай-ай, хулпуççисем хăпарса тухаççĕ. Мĕншĕн пăрăх тăрăх шыва уçласа хăпартас мар? Питĕ хакла ларать-ши? Шаляев юлташ хутпа кăранташ кăларса çырса хучĕ те Матĕрне хыççăн утрĕ.

Колхозăн çакнашкал татăк-кĕсĕк ферма темиçе: сурăх, сысна, чăхчĕп... Ытти витесем пекех, ку та пĕчĕккĕ, тăйлăк-тайлăк. Вите тавра ĕнесене çўреме карта тытса çавăрнă.

Матĕрне куритене шыв ячĕ. Ĕнисем, пĕр-пĕрне măйракисемпе хăмсарса, курите патне пухăнчĕç. Шывсăр антăхакан ĕнесем ăçтан сĕт антарччăр? Мĕнле ырханкка, хĕç пек.

Матĕрне паçăрах витене кĕрсе кайрĕ. Урай тислĕкпе çăрăнса тăрать. Кĕреçепе тасатса, картишне илсе тухмалла, лупас тăрринчен улăм антарса, витери куритесем çине хумалла.

— Вăй патăр, Матĕрне,— сывлăх сунчĕ председатель, вите алăкне яриех уçса.— Пурнăçсем мĕнле? Мĕншĕн пĕчченех ĕçлен?

— Ара, Шўреке Сахрунĕпе арăмĕ, Евдок, кăмăлĕ пур чух килеççĕ, кăмăлĕ çук чух килмеççĕ. Пĕччен тапаçланса хăшкăлатăп çапла.

Председатель тарăхнине кăтартасшăн пулмарĕ, Матĕрнепе часах сывпуллашрĕ те тўрех Сахрун патне утрĕ.

Алкум вĕçĕнче — лаххан. Унта ĕне валли çăнăх шывĕ хатĕрленĕ.

— Му-ук!— мĕкĕрет ĕни.

— Хас! Хас!— кăшкăрать Евдок.

Унччен те пулмарĕ, ĕни пашлатса тухрĕ витинчен. Ĕне мар — чăн-чăн пăлан. Яп-яка, çап-çутă.

— Сывлăх пултăр, Евдок! — саламларĕ председатель.

— Ай турух! Виктор Родионович-çке! — хăлаçланса лупас айĕнчен тухакан хĕрарăм, аллине кĕрĕк çиййĕн çыхнă саппун аркипе шăлкаласа. Алă тытрĕ те тытăнчĕ пўрте йыхăрма: — Атя-ха, сăра туни пурччĕ.

Председателĕн сăра ĕçес шухăш мар-ха.

— Сахрун ăçта? — ыйтрĕ вăл.

— Ывăлпа иккĕшĕ юнашар яла кăмака тума кайрĕç-ха.

— Лаша ăçта?

— Ара, уксах çын çуран çўреймĕ ĕнтĕ.

— Ферма ĕнисем шывсăр антăхнă.

— Ай турух ĕнтĕ, — çилленчĕ Евдок, — Матĕрне пур-çке унта. Пĕве çумрах, пĕр-иккĕ хутланăшăн хуçăлса анас çук.

Председатель чун-чĕререн тарăхса кайрĕ.

— Сахрун колхоз ĕçĕнчен пăрăнать, эппин. Астăвăр, ку ахалех иртмест.

— Колхозра хам ĕçлетĕп-иç.

— Мĕнле апла? Эсĕ килте ĕçлен, фермăна пыман акă.

— Кун вăрăм, ĕлкĕрĕп, — çиеле тухасшăн чанккать Евдок, — ара, килти выльăха кам пăхĕ? Ĕçе кайиччен çитерсе, шăварса хăварас терĕм. Сыснисем вилесле çухăраççĕ, вĕсем те çăвара апат хыпасшăн.

— Колхоз ĕнисем выçă та тăма пултараççĕ-и?

— Кирлĕ мара ан калаç-ха, тупата. Фермăра ĕçленипе хырăм тăранмасть, кил-çурт пуçтарăнмасть.

Шаляев юлташ ăнланчĕ: Шўреке Сахрунĕпе арăмĕ ферма ĕçĕшĕн хыпмаççĕ, ячĕшĕн кăна ĕçленçи тăваççĕ. Вĕсем чунĕпе йăлтах колхоз тулашĕнче. Колхоз лашине хăйсемшĕн çўретеççĕ. Колхоза каялла турттнине пĕлтерет ку. Председатель, кĕсйинчен хутне кăларса, тем çырса хучĕ.

Çав кун председатель çитсе курман вырăн хăварман.

Тепĕр ик-виç кунтан правлени членĕсем канашлăва пухăнчĕç. Сўтсе явмалли ыйту нумай. Мĕн-мĕн тума йышăннă правлени, колхозниксем тĕпĕпех пĕлеймерĕç. Анчах çакă паллă: тепĕр куннех ĕне фермине шыв турттаракан лаша колхоз витине тавăрăнчĕ, унпа пачах урăх çын ĕçлет.

Шаляев коммунист тата пĕрешкел шухăшлакан çывăх юлташсем колхоз хуçалăхне тĕпрен çĕнетессишĕн кĕрешў пуçарса ячĕç», — тарланă çамкине алă тутрипе шăлчĕ Вера Пилешева.

«...Чăрăшкас таврашĕнче, вăрман ăшĕнче, татах тăватă пĕчĕк колхоз пур, вĕсем те ни вилĕ, ни чĕрĕ. Пĕтĕм ĕçне алăпа тăваççĕ. Машинăсем туянма укçа-тенкĕ çитмест, тăкакăн шучĕ те çук, пулăхĕ пуçтарăнмасть, ўсмест. Пилĕк колхозне те пĕрлештермелле. Акă мĕнле пысăк ĕç. Фермăсем пĕр тĕле чăмăртанĕç. Тата мĕн чухлĕ çын пушанать. Пилĕк председатель, ферма пуçлăхĕсем...

Колхозсенче пухусем тăвăллă иртеççĕ. Пĕрисем килĕшеççĕ, теприсем хирĕç. Çĕр тĕрлĕ ыйту хускалать кашнин чĕринче.

— Пĕрлешсен, колхозник юлташсем, вăй пысăкланать пирĕн. Чи

кирли çакă,— çине тăрса хӳтĕлет Шаляев коммунист хăйсем пуçланă ĕçе.— Мĕн кирлине туянăпăр. Уй-хире тракторпа сухалăпăр: тыррине комбайнпа вырса çапăпăр, машинăпа вăрманне кăклăпăр, уй-хире аслăлатăпăр. Хăраххăн, алăпа ĕçлесе юп кураймăн.

Тавлашу час лăпланмасть. Ку колхоз çыннисем тепĕр ял этеммисене юратмаççĕ, вĕсем юлхав, усал имĕш.

Тем те кăсăклантарать çынсене. Акă пĕри вăрттăн чĕпĕтет.

— Пысăк укçана хапсăнан, çавăнпа хĕтĕртен, пĕрлешместпĕр.

Шаляев коммунист сасă илтĕннĕ хыçалти рете тинкерсе пăхрĕ, анчах кам çапла хивре кăшкăрнине кураймарĕ пулин те, çын мĕнле шухăш каланине питĕ лайăх тĕшмĕртрĕ. Вара çийĕнчех тавăрчĕ:

— Кăлăхах пăшăрханан, хисеплĕ юлташăм. Тĕрĕс. Пĕрлешсе пысăкланнă колхоз председателĕн ĕç укçи ӳсет. Мĕншĕн уйрăмах эпĕ председатель пуласса шанан? Çĕнĕ колхозăн председательне халăх кама суйласа лартать, çав ĕçлет.

Вак колхозсен хуçалăхĕсене пĕр çĕре чăмăртасан усă панине ĕненекенсен йышĕ кирек ăçта та ытларах пулни палăрчĕ. Юлашкинчен колхозсен пухăвĕсем пĕр шухăшлăн пĕрлешме йышăнчĕç.

Кайран колхозниксен аслă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пĕрлешнĕ колхозăн председательне Шаляев коммуниста суйларĕç.

Пин тĕрлĕ ĕç капланса килчĕ хуçалăхра. Бригадăсем йĕркелемелле, фермăсене майлаштармалла, çынсене ĕç вырăнĕсене лартмалла, тата темтепĕр. Чи кирли —çуракине ирттересси. Виктор Родионович ку хутĕнче те çĕрулми ытларах лартасшăн. Ку ĕç çамрăксенчех юлчĕ.

Çуркунне çитрĕ, акрĕç, лартрĕç. Çу иртрĕ. Колхозниксем тырпула чиперех пухса кĕртрĕç. Çĕрулми иртнĕ çулхи пекех шултра, ăна патшалăх хаклă хак парса йышăнчĕ. Ку енĕпе колхоз районти ăмăртура мала тухрĕ, преми илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Шаляев коммунист çакă хаваслă çĕнĕ хыпарпа колхоз председателĕсен районти пухăвĕнчен юланутпа тавăрăннă.

Кĕр каçĕ тĕттĕм. Хыр тăррисем, теме сиснĕн, каш-каш кашлаççĕ. Вăрман çулĕ пылчăклă, аран ашать мĕскĕн лаши. Виктор Родионович утне васкатать, ăна чараран ура кĕлипе тиверткелет. Киле хăвăртрах çитес килет çыннăн. Хĕрĕсене лавккара туяннă тупрасем парнелĕ, мăшăрне çемçе премĕкпе сăйлĕ, колхоз çамрăкĕсене ирхине савăнăçлă хыпарпа хĕпĕртеттерĕ. Анчах ĕмĕтленни пурнăçланман. Лаша пĕчченех тавăрăннă, ун çурăмĕ çинчи йĕнер пуш-пушах.

Ирхине вăрманта, Хурăнту çулĕ айккинче, çынсем колхоз председателĕн виллине тупнă. Тепĕр темиçе кунтан районтан килнĕ милиционерсем вăрманта виçĕ таркăн тытнă. Вĕсем хушшинче хура маска тăхăнса çӳрекенни те пулнă. Çав ирсĕр этемсем вĕлернĕ иккен председателе.

Ял çыннисем Шаляев коммуниста çавăнтах пытарчĕç, хисеплениине палăртса, вилтăпри çине палăк лартрĕç».

— Çавăн пек çын пулнă халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнă вĕри чĕреллĕ коммунист. Сире те ун пек тӳрĕ кăмăллă пулма, пурнăçра тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме чĕнетĕп!— татах тĕмсĕлсе пăхса илчĕ Вера

Ксенофонтовна хӑй тин ҫех каласа кӑтартнӑ сыннӑн сӑнӳкерчӗкӗ ҫине.— Сирӗн Илюк юлташӑр чӑннипех хӑйӗн кукашшӗпе мӑнаҫланма пултарать.

Ачасем хускалса, пӗр-пӗринпе юмахлакаласа илчӗҫ.

— Тӗрӗс тӑвать Илюк ун вилтӑпри ҫине хӗлле те хӗрлӗ чечек хурса,— тет Вера Ксенофонтовна,— малашне, ҫу кунӗсенче, тен, унта ялти пионер-пограничниксем ӗрчетнӗ чечексем чӗлтӗртетӗҫ. Пӗрер ушкӑнпа кайса килӗпӗр-ха, пуҫ тайса тӑрӑпӑр Виктор Родионович вилтӑпри умӗнче.

Ачасем шухӑша путрӗҫ. Мӗн илтнине ӑнланма йывӑр. Ҫамрӑк чӗре чӑнласа йышӑнасшӑн мар, чун ыратать.

Кӑшт тӑхтасан, Илюк сӑмах хушрӗ:

— Мана пограничниксем аса килчӗҫ-ха. Вӗсем чикӗре сыхӑ тӑраҫҫӗ.

Хветӗр чикен чикнӗн канӑҫсӑрланса илчӗ. Вӑл siксе тӑчӗ те юлташне пӳлсех:

— Ăт,— терӗ.— Часрах ӳсесчӗ. Пӗлсех тӑратӑп, мана Тӑван ҫӗршыв чиккине хураллама яраҫҫӗ. Эпӗ хатӗрленме тытӑннӑ ӗнтӗ. Йыттӑма та хӑвармастӑп. Ăна вӗрентме тытӑнтӑм.

Ачасем хускалкаласа йӑпӑштик кулкаларӗҫ. Ăнланаҫҫӗ мар-и ара? Вӑл кӗрешсе ҫӗнтерме хӑнӑхрӗ. Ҫавӑнпа хӑпартланать. Мӗнех, пултарсан, мӑнаҫланма та намӑс мар.

Хветӗр вырӑнне ларса лӑплансан, Илюк каласа пӗтереймен сӑмахне малалла сӗвемлерӗ.

— Капитализм тӗнчи Совет ҫӗршывне сӑтӑр тума шпионсем, диверсантсем ярать. Чикӗ хуралҫисем ҫав йӑх-яхсене е ҫийӗнчех, е йӗр тӑрӑх хӑваласа тытаҫҫӗ. Пограничниксем, Нил ашшӗ пек, пуҫне хураҫҫӗ те тӑшмана ҫул памаҫҫӗ. Вырӑнти халӑх та ютран килекене часах уйӑрса илет. Чикӗре йӑлтах ӑнланмалла. Кунта, тӑван кӗтесре, сын ҫине вӑрттӑн алӑ ҫӗклекен ирсӗр чун кам вӑл? Тепӗр чух, тен, ҫавскер ҫумранах сӗртӗнсе иртет. Тытса чарма мӗнле палламалла ӑна?

Вера Ксенофонтовна Илюка, унтан пӗтӗм ачасене тӗсесе пӑхрӗ. Ăшшӑн йӑл кулчӗ те куҫӗсем тавра йышлӑ пӗрӗм пухӑнчӗ. Тутине хускатрӗ:

— Ҫут тӗнче сана чӗре, куҫ, хӑлха, туйӑм, кӑмӑл, ӑс-хакӑл парнеленӗ. Мӗн ыррине, мӗн усаллине уйӑрса илсе хак пама вӗрен. Вара чухлӑн.

Хӗрсе кайрӗҫ пӗчӗк этемсем. Пӗри те тепри сике-сике тӑрать. Кӳлнари, ав, ҫав тери хуйханса ыйтрӗ:

— Ăҫтан шӑтса тухаҫҫӗ ҫав ирсӗр чунлисем?

— Кун пирки кам мӗн шухӑшлать?— куҫӗпе ухтарчӗ шавлӑ ушкӑна Вера Ксенофонтовна.— Хветӗр, эсӗ мӗн калӑн?

— Ман шутпа, ҫав йӗксӗк хӑй юлхавне пула чыссӑра тухать. Паллах, вӑл ямӑттине хапсӑнать.

— Хветӗрпе эпӗ те килӗшетӗп,— пӗлтерчӗ хӑй шухӑшне Уках.

— Вӗсем — преступниксем. Вӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑлармалла,— кӑшкӑрчӗ Пурхиле.

— Мӗнле майпа?— кӑсӑкланать Панти.

— «Тăрă шыв çине» текелен!— чĕнмесĕр тӳсеймерĕ Трапхин.— Вăл ачасен ĕçĕ мар. Преступниксене милици тытать.

— Мĕнле ачасен ĕçĕ мар?— хыпăнса ӳкрĕ Илюк.— Ирсĕр этем ырă мар ĕç тунине курсан, пионер шăл çыртса тăмасть.

— Питĕ тĕрĕс калать Илюк,— терĕ Нил амăшĕ.— Совет ачи тӳрĕ кăмăллă. Ырă мара сиссен е курсан, тĕм хыçне пытанни юрăхсăр.

Урамкка ним кĕтмен çĕртен каларĕ хучĕ:

— Йăкăнатпа Трапхин, ӳссен, мĕнле çынсем пулĕç-ши?

— Путсĕр çынсем пулаççĕ, паллах!— татса пачĕ Хветĕр.— Улми йывăççинчен аякка ӳкмест.

— Эсĕ ху пит лайăххи-и?— ӳпкелешет Йăкăнат.

— Аттене каласа паратăп. Ҫăтартĕ вăл сире «путсĕр çын»,— йĕрсе яманни кăна Трапхин.

Шкул директорĕ икĕ ача пирки çакнашкал сăмахсем илтессе шутламан.

— Хăвăр юлташăрсем пирки пат татса ырă мар калани килĕшӳсĕр,— хушса хучĕ вăл.

— Эсир вĕсем мĕн хăтланнине пĕлместĕр, эппин,— тет Урамкка.— Ытла иртĕхеççĕ вĕсем. Чăмăрĕсемпе хăратаççĕ.

Директор çапла каларĕ вара:

— Вĕсене лайăх ачасем пулма пулăшăр эсир.

Ачасем ыран каллех кунта килес шухăшпа саланчĕç. Ҫашнин чĕринче темле ăнланмлла мар туйăм вырнаçрĕ. Ҫав чуна çĕклентерет, таçта туртать, çумри юлташпа туслăрах пулма хистет.

## XX

Парти организацийĕн бюро ларăвĕ пулса иртрĕ. Ҫураки irttерме ялхуçалăх машинисене мĕнле юсани çинчен колхозăн аслă механикĕ Савва Хунаров каласа панине итлерĕç. Ĕç-пуç шутсăрах япăх вара. Ҫуркунне алкум вĕçне çитнĕ, юсав ĕçĕ пуçланман. Машинăсем те ăçта килчĕ унта лараççĕ.

Пĕве хĕрринче тахçанах машина паркĕ тунăччĕ. Паянхи кун паркăн хапхи мар, карти те çук. Унта мĕнпурĕ те юрăхсăра тухнă машинăсем кăна лараççĕ, темле пайсем выртаççĕ. Кирли пĕртен-пĕр комбайн çеç тăрать. Хуралçă пур, шалу йĕркеллĕ илет. Грузовиксемпе тракторсем пĕтĕмпех шоферсемпе трактористсен килĕнче.

Вера Ксенофонтовна хăй ĕçлеме пуçланăранпа Савва Хунарова темиçе хутчен те правление чĕнтерчĕ. Анчах вăл нихăçан та калана вăхăта пыман.

— Сана миçе сехетре килме хушнă?— ыйтатчĕ Вера Ксенофонтовна.— Халĕ пăх-ха, сехет йĕппи ăçтарах?

— Эсĕ тесе, апат çимесĕр тухмастăп ĕнтĕ, тупăннă хуçа,— тавлашать Хунаров.— Пушар тухман, çунмастпăр, ĕлкĕрен.

Пĕр-икĕ хутчен те ăна колхозăн пĕтĕм машинисене парка пухма эрнелĕх вăхăт панă. Хушнине пурнăçламарĕ çын.

Ҫолхоз председателĕ çак ĕçре йăвашлăхне кăтартни Вера Ксено-

фонтовнăна тарăхтарчĕ. Мĕншĕн татăклă сăмах çук ун? Сăлтавĕ ăçта? Ăнланма хĕн. Юлашкинчен хăй председательсен çулталăклăх курсне вĕренме тухса кайрĕ.

Секретарь пуçне темиçе хут та Хунарова ĕçрен хăтарас шухăш пырса кĕнĕ. Ыйтăва халăх умĕнче те хускатма юрать, анчах кирек хăçан та ун вырăнне çын тупăнманни чарса тăнă.

Юлашки правлени ларăвĕнче Вера Ксенофонтовна Хунарова ĕçрен хăтарас ыйтăва каллех хускатрĕ. Мĕншĕн тесен яла çак ĕçе тума пултаракан çын килчĕ. Вăл — Борис Аххов.

Бориса çартан таврăнсан эрнеренех тунсăх пусрĕ. Унăн савнă хĕрĕ Санюк çийĕнчех сисрĕ çакна. «Мана кӳренчĕ»,— пăшăрханса шухăшларĕ вăл. Вăрттăн йĕрсе те илчĕ.

Борисăн кăмăлне Вера Ксенофонтовна тӳрех чухларĕ: пограничник вăрах алă усса пурăнаймасть, ăна чăн-чăн ĕç кирлĕ.

— Ан васка, шăллăм,— терĕ секретарь йĕкĕте,— кăшт кан.

— Кан?— тĕлĕнчĕ Аххов.— Пултараймастăп!

Ăнланмалла. Ялта çуралса ӳснĕскер, усăсăр янкăлтатма хăнăхман. Мĕн ачаранах вăл машина енне туртăннă. Çитĕнсе çитсен, комбайнпа тырă вырнă. Чикĕре те шофер-механикчĕ вăл.

— Сана эпĕ бюрора колхозăн аслă механикĕ пулма сĕнтĕм,— пĕлтерчĕ Вера Ксенофонтовна.

— Сирĕн унта çын пур-çке.

— Мĕн усси унтан! Ĕçлемест, хушнине тумасть. Вăл колхоза улталаса пурăнма хăнăхнă. Кăларас тесе йышăнтăмăр.

— Чĕрĕ çын çине пырса кĕни ырă мар.

— Эсĕ коммунист, апла шухăшлани килĕшмест сана.

Колхозниксен пухăвĕ паян каçалапа, ултă сехетре, пуçланать. Унта Борис Ахховăн та пулмалла.

Алăк уçăлчĕ те, пӳрте ачасем кĕчĕç.

— Эсир ман пата-и?— ыйтрĕ Аххов.

— Анне кирлĕ-ха пире,— терĕ Нил.

— Апла пулсан, эпĕ кайрăм.

Борис Аххов тухса кайсан, Нил амăшне акă мĕн каларĕ:

— Анне, сана Хветĕр, Урамкка, Пурхиле, Варсун çĕнĕ хыпар пĕлтересшĕн.

— Айтурах, хăратсах пăрахрăн,— йăл кулчĕ амăшĕ.

— Итле эсĕ малтан,— асăрхаттарчĕ амăшне. Вара Хветĕре пуç сĕлтрĕ. Ку ĕнтĕ: «Тытăн калама», тенине пĕлтерчĕ.

— Вера Ксенофонтовна,— Хветĕрĕн куçĕсем чарăлчĕç. Ăна пăхсан, вăл çав тери кирлĕ япала çинчен сăмах тапратнине чухлан. Нил амăшĕ тимлесе итлеме пуçтарăнса тăчĕ.— Пирĕн пата çĕркаç Христофор шоферпа Трапхин ашшĕ Кавĕрле пичче пычĕç. Пĕлесчĕ сан вĕсем мĕн пакăлтатнине! Эпĕ çывăрса кайман, йăлтах илтрĕм, ача. «Савва Хунарова ĕçрен кăларма ирĕк памалла мар. Колхоз пухăвĕнче ăна кăларассине хирĕç пулăр»,— теççĕ.

Пурхиле куçне мăч-мăч хупкаларĕ, типнĕ тутине чĕлхипе çулакаларĕ те калаçма пуçларĕ:

— Вĕсем пирĕн патăмăрта та пулчĕç. Саввăна ĕçрен кăларсан, машинăпа унта-кунта кайма тивмест имĕш. Ку таранччен пасара та, хăнана та машинăпа вĕçтернĕ. Машинăсене картишне хупса питĕрсе лартсан, ирĕк пĕтет. Анчах манăн аттепе анне килĕшмерĕç. Атте чăмăрĕпех юнарĕ: «Кĕтсех тăр,— терĕ,— колхоз машинипе сахал укçа çапрăр-им? Тĕрĕс тăваççĕ машинсене парка пухса».

— Чăн-чăн колхозник сан аçу, Пурхиле,— мухтать Урамкка.— Пĕлтĕр çулла эпĕ Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан куккасем патĕнче хăналантăм. Лараттăмччĕ хапха айĕнчи сак çинче. Сасартăк вутă тиенĕ машина пырса чарăнчĕ. Пăхатăп хайхискер, шоферĕ паллană çын — Христофор пичче пулах кайрĕ. Кукка ăна укçа тыттарчĕ. Ĕмĕтсĕрскер, сахал тесе тавлашать кăна.

Вера Ксенофонтовна ачасене тав турĕ. Вĕсене пĕчĕкренех çапла тĕрĕслĕхшĕн тăрăшнăшăн кăмăлларĕ. Пухура тавлашу пуласси паллă. «Кам çĕнтерĕ-ши?»— шухăшларĕ секретарь.

Санюка ăсатса таврăннă чух Аххова аслă механик Хунаров чарса тăратрĕ.

Хăй хĕрĕнкĕрех. Тĕрĕс мар хăтланатăр, тет. Çавăнтах хăратма та пăхать Аххова:

— Асту сыхлан, эсĕ кунта çĕнĕ çын,— куçне хĕсрĕ, пирус чĕртенçи турĕ.— Машинăсене пĕр тĕле пухманшăн колхозăн ним те татăлса ӳкмен. Тырпулне пухса кĕртнĕ.

— Мĕн тырпул темелĕх пур,— чĕнмесĕр тӳсеймерĕ Аххов.— Таврари колозсем гектартан миçе центнер туса илеççĕ, пĕлетĕн-и? Намăс мар-и?

— Турă паманнине туртса илеймĕн!

Çăвар тутине ярса тăни çеç тесе, Аххов аллине сулчĕ те малалла утрĕ.

— Пуçна ан каçăрт, çӳлтен йăлмаклĕç!— кăшкăрса юлчĕ Хунаров.

Ахховăн та çавăрăнса мĕн каламалли тупăнчĕ:

— Эпĕ хăравçă мар. Тăшмансене эпир чикĕ хĕрринче сахал мар чĕрне айне хунă.

Правлени çурчĕ пысăк, çапах та лăк тулнă çынпа. Йĕп пăрахсан, çĕре ӳкеймĕ. Хушăран ача-пăча та курăнкалать.

Пуху уçма вăхăт. Вера Ксенофонтовна йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Сак çине вырнаçайманнисем стена çумне тайăнса тухнă.

— Ачасем, ăнланатăп, сирĕн те колхоз ĕçне хутшăнас килет. Сирĕнпе кайран калаçăпăр. Халĕ килĕрсене кайăр, пысăккисене ларма вырăн пушантăр,— хушрĕ вăл ачасене.

Лешсем тӳрех сиксе тăмарĕç, такам хута кĕрессе кĕтнĕн ун-кун пăхкалаççĕ. Вара аслисем хӳтерме тытăнчĕç:

— Кама каларĕç?

— Атьăр, атьăр, вĕçтерĕр!

— Пĕчĕккĕллех пурне те пĕлсен, час ватăлса ларăр.

Теприсем лĕхлетсе кулаççĕ. Йĕкĕлтенине тӳсеймесĕр тухса шурĕç ачасем.

Ял халăхĕ пĕр тĕле пухăннă çĕртен вăш-вашах кам пăрахса кайтăр? Ухмах вырăнне хураççĕ-и? Алкумĕнче тапăртаткаласа тăчĕç пĕр кана. Қантăкран та темиçе хут кайса пăхкаларĕç. Мĕн усси? Шалта халаплани пурпĕрех илтĕнмест. Қичем капла. Вара пĕрерĕн-пĕрерĕн саланса пĕтрĕç. Пĕлеймерĕç ашшĕ-амăшĕсем мĕн пирки кĕрленине, тăвăл çĕкленине.

Пухура чăнах та тăвăл алхасрĕ. Тавлашнă май тем те каласа тăкрĕç пĕр-пĕрне.

Шўреке Йăкăначĕн ашшĕ Улатимĕр, акă, аллисене çил арманĕн çуначĕсем пек хăлаçлантарать, сурчăкĕ сирпĕнет çăварĕнчен.

— Çураки пуçланас умĕн Хунарова ĕçрен кăларни пысăк йăнăш!— кăшкăрать вăл.— Қолхоза такăнтарма памалла мар, юлташсем!

— Эсĕ ху ĕçле-ха колхозра! Çўрен ялсем тăрăх кăмака туса!— сăмахпа чĕпĕтсе илет ăна пĕри. — Пахчуна туртса илмелле санне!

— Ан хăрат! Минимум текенни çителĕклĕ пирĕн.

— Арăму çеç ĕçлем пекки тăвать колхозра.

— Арăм-и, упăшка-и ĕçлет, колхозшăн çавах...

Çын пўлĕнсе тăчĕ. Татăлнă шухăш çиппине сыпасшăн асапланса, пўрнипе пуçне тĕллесе илчĕ.

— Э-э, акă мĕн каласшăнччĕ тата,— терĕ вăл.— Хунаров вырăнне темле Аххова лартасшăн тенине илтрĕм. Қам вăл? Никам пĕлмен этеме питех те кирлĕ ĕç шанса парасшăн. Юрамасть!

Варсун ашшĕ сиксе тăчĕ.

— Аххов пирки иккĕленни килĕшўсĕр,— тарăхса каларĕ вăл.— Ăна Тăван çĕршыв тĕрĕсленĕ. Пирĕн шанчăк çамрăксенче пулмалла.

Хайхи Хунаров патне те çитрĕ. Пĕтерчĕ ăна, критика çулăмĕпе лайăх ĕнтрĕ. Юлашкинчен ĕçрен кăларма сĕнчĕ вăл Хунарова.

Трапхин ашшĕ Қавĕрле, Христофор шофер тутисене чăпăрт çыртнă. Айăпсăрсем пек лараççĕ. Иван шофера аякран кăлт-кăлт тĕртеççĕ.

Вера Ксенофонтовна пурне те курать, сăнать.

— Тăр-тăр, Иван, калаç,— сăмах пачĕ ăна пуху пуçлăхĕ.

— Хунаров шăп аслă механик пулмалли çын,— тет вăл.— Ĕçне лайăх пĕлет. Хамăр ял, ютран килмен. Пире чиперех ĕçлеттерет.

— Суй та виçине пĕл!— илтĕнчĕ варринчи ретре.

Нумай калаçрĕç. Тĕрĕслĕх пурпĕрех çĕнтерчĕ.

Борис Аххов аслă механик пулма килĕшрĕ. Қун пирки сăмахюмах нумая тăсăлмарĕ те. Малтан Борис хăйĕнпе паллаштарчĕ. Вара ăна ыйтусем паркаларĕç. Чипер ĕçлесен, авлансан, колхоз вăйĕпе пўрт лартса парас, терĕç шўтлекелесе.

Пуху кăçалхи çул мĕн-мĕн акас пирки туса хатĕрленĕ плана пăхса тухса çирĕплетрĕ.

Вера Ксенофонтовна колхоз председателĕ пулнă Шаляев коммунист çулĕпе утма ĕмĕтленет. Колхоза çĕрулми лартма вăл сĕнчĕ.

— Пирĕн çĕрулми валли çĕрĕ сиплĕхлĕ,— ăнлантарчĕ вăл колхозниксене.

— Мĕн усси çав çĕрулминчен?! Вăй хуни харама каять!— патлаттарса хучĕ Қавĕрле.

— Аса илĕр-ха Шаляев юлташ ĕçленĕ çулсене,— терĕ Вера Ксенофонтовна.— Колхоз çĕрулмипе мала тухрĕ районта.

Халăх секретарь каланипе килĕшрĕ, планра миçе гектар çĕрулми лартма палăртнине йăлтах йышăнчĕ.

## XXI

Шкул вĕллери пыл хурчĕ пек сĕрлет. Малта — çуллахи каникул. Сывă пултăр пĕвери тин сунă сĕт евĕр лĕп шыв, вăрманти çырлалăх!

Улттăмĕш класра юлашки урок — математика. Учительсем паян кунĕпех савăнăç валеçрĕç. Хăшпĕр ачасен вăрттăн куççулĕ çăтма та тиврĕ. Мĕн калĕ-ши вĕренекенсене математика учителĕ? Вуларĕ ерипен. Кашниех астуса юлчĕ хăйĕн мĕнле паллă тухнине.

— Манăн «пиллĕк!» Урра!— хĕпĕртерĕ Кӳлнари.

— Санăн пуринпе те «пиллĕк»,— терĕ Нил.— Кӳлнари, маттур эсĕ, отличница!

— Ху та отличник!— сăмахран юлмарĕ Кӳлнари.

Трапхин ура çине тăчĕ те йĕрсе ярассăн мăкăртатрĕ:

— Курăймастăр мана. Аттене йăлтах чухса паратăп!

— Асларçуна элеклесе парсан та, усси пулмĕ. Хăвна чĕн пиçиххипе хĕртсе илсен, ăс пухăн,— пуçне каçăртрĕ Хветĕр.

Ачасем ахăлтатса кулса ячĕç.

— Çынтан кулма сатур эсир,— ӳлет Трапхин.— Пĕр хутчен те пулин пулăшрăр-и? Ăнтан кайрăр хăвăр ниме юрăхсăр заставупа.

— Юлхавланмалла марччĕ,— терĕ учитель.— Халĕ тин аçу та пулăшаймасть. Аçуна хĕллех: «Эпĕ начар вĕренетĕп», тесе систерсе тăмаллаччĕ. Мĕн пулĕччĕ вара? Халĕ ĕнтĕ çулла лайăх хатĕрлен, вăхăта сая ямасăр. Тăрăш.

Çак сăмахсем Йăкăната та тивеççĕ. Унăн та шăпи Трапхин тусĕнчен уйрăлса тăмасть.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Ĕçсем шкулта ытлашши чаплах теме çук. Питĕ лайăх вĕренекенсен шучĕ сахалтарах, ытларах — вăтаммисем.

Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен пулас застави халлĕхе ачасене вĕренӳре пулăшма ĕлкĕреймерĕ. Ӳлĕм пулăшĕ, унта çӳрекенсем лайăх кăна вĕренĕç. Кун пирки шкул директорĕ те çапла шухăшлать, ĕненет. Ачасем хушшинче ырă туслăх сарăлни куçкĕретĕнех палăрма тытăнчĕ.

— Шкулăн заставăпа çирĕп çыхăну тытмалла,— шухăшлăн каларĕ директор учительсен пухăвĕнче.

Директор Михаил Михайлович учителе мухтарĕ. Тĕрĕс, вăл Семен Пилешев çуртне куллен çӳрет, ялан ачасем хушшинче. Ку учителе питĕ кирлĕ, ачасене ытларах пĕлме, вĕсемпе çывăхланма май парать. Аçтан пуçланчĕ-ха Михаил Михайловичăн заставăпа çыхăну тытасси? Вăл шкулта географи вĕрентет-çке.

Михаил Михайлович музыкăна юратать. Килĕнче купăс та, гитара та, балалайка та пур унăн. Каннă чух çак шăкăр-макăрсемпе чуна йăпатать.

Чикĕ хĕрринчен Вера Ксенофонтовна ячĕпе заставăна çӳрекен ача-

сем валли каллех умлă-хыçлă посылка килчĕ: пĕр пысăк ещĕк кĕнеке тата купăс, пĕчĕк параппансем.

Çак хыпар Михаил Михайлович хăлхине кĕмесĕр юлман. Вăл пулас заставăна никам чĕнмесĕр хăех пычĕ те Борис Ахховпа калаçрĕ, ансамбль йĕркелеме сĕнчĕ. Паллах, çак ĕçе хăй тума пулчĕ.

Ырри çуралнине кам хирĕçлетĕр!

Михаил Михайлович часах ĕçе кӳлĕнчĕ, ансамбль йĕркелерĕ. Музыка тĕнчин ытарайми шăнкăравлă сассине илтме мехел пуррисене суйларĕ. Пысăк ушкăнта вĕсене тупма пулатех. Ку вăхăталла застава уставне пăхăнса пурăнма тупа тунисен йышĕ ӳснĕ, вĕсен картинче çĕр ача ытла ĕнтĕ.

## XXII

Урамсенче унта та кунта эрешлесе çырнă пĕлтерӳсем. Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисем пурне те хăйсен заставине уçнă ятпа иртерекен уява йыхăраççĕ. Уяв кăнтăрла иртсен тăвата сехетре пуçланать. Ушкăнра та, икĕ çын тĕл пулсан та, çакăн çинчен сăмах вакларĕç паян.

— Қайса курас,— текелерĕç нумайăшĕ.

Хыпар Çеçпĕллĕх юханшыв хĕрринчи колхоз пахчинче ĕçлекен хĕрарăмсем хушшинче те хăналанчĕ. Қалаçрĕç вара пĕр кана. Қашниех хăй шухăшне хӳтĕлерĕ.

— Қолхозра ашшĕ-амăш çумĕнче ĕçлес чух мĕншĕн илĕртеççĕ пулĕ ачасене,— кăмăлсăррăн каларĕ тутине пăркаласа Шӳреке Йакăначĕн амăшĕ.— Унта ĕçкунĕ памаççĕ. Вера Қсенофонтовна ăсран тайăлнă пулас. Упăшки çуртне тустарттарать. Тем тусан та ямастăп ывăлăма.

— Ывăлна хăвăн çумăнта ĕçленине те нихçан курман-ха,— тӳррĕн татрĕ юнашар ĕçлекен кӳпшек питлĕ хĕрарăм.

— Ача-пăчана мĕнпе те пулин кăсăклантармаллах. Хăватлă çунат çитĕнтĕр вĕсен,— халап турĕ пуçне шурă тутăр çыхнă инке. Вăл Семен Пилешев çуртĕнче вăйăлла застава уçнине ырлать. Вера Қсенофонтовнăна тав тума сĕнет. Ачасене чикĕ хĕррине илсе каяс пирки те илтнĕ. Қурса çӳрени вĕсен тавракурăмне сарать.

— Ман Укак Пилешев çуртне иленнĕренпе пачах улшăнчĕ. Килти ĕçе хушмасăрах тăвать. Сăнпуçĕ çуталчĕ сапçим,— йăл-йăл кулкаларĕ Укак амăшĕ.— Ăна юрлама вĕрентеççĕ. Сасси уçă, хама килĕшет пĕтĕм.

— Ман Урамккана та артист тăваççĕ пулĕ унта. Çаплах тăпăртатса ташлать,— мухтанарах пуплерĕ Çуçак арăмĕ Мариç.— Хам та ун сиккипе сикетĕп. Ашшĕн çартан тăхăнса килнĕ тумне пĕчĕклетсе патăм. Ашшĕ те çавах: симĕс тăрăллă çутă сăмсаллă карттус таçтан тупса килсе тăхăнтартрĕ. Хулпуççи çине симĕс пакунсем çыпăçтарчĕç иккĕшĕ. Тата ятарласа çутă атă туянтăмăр.

— Мариç кума, эсир ывăлăра ытлашши иртĕхтернĕ пек туйăнать — питлесе илчĕ леш кӳпшек питлиех.— Хăвăр пӳрт лартатăр. Пĕркун асăрхарăм-ха: кăмака тума кирпĕчне Урамкка йăтас чух ху çĕклеттĕн.

— Вĕсем ĕçлесси малалла-ха, кума,— тӳрре тухать Мариç инке.

Кумăшĕ каланине хăлхине чикесшĕнех мар. Унăн ывăлĕ çын умне тухма тивĕçлĕ. Кам амăшне савăнтармĕ ку?

— Çĕршыва çирĕп йĕкĕтсем çитĕнтерсе памалла,— терĕ Хветĕр амăшĕ.— Ман ывăл имшерккине хăвăрах пĕлетĕр. Çемен ачипе, Нилпа туслашнă хыççăн ӳт хушрĕ. Шăнăрĕсем çирĕпленчĕç. Пĕр витре шыв çĕклейместчĕ, халĕ икĕ витре ним мар йăтса килет. Чармастăп: кайтăр, çӳретĕр.

— Кам çăкăр çитерĕ ĕнтĕ ачăрсене,— шав тиркешет Йăкăнат амăшĕ.

— Кам-кам, санăн çитерейместех,— татрĕ ун сăмахне кӳпшек питлиех.

— Çын ачине ан хурла,— чăкăлташать Йăкăнат амăшĕ.— Ху çуратса ӳстер.

— Чимĕр-ха, унашкал ятлаçни килĕшмест. Тата ма ун пекех хуйхăрас?— хускатнă чĕресене лăплантарасшăн Урамкка амăшĕ.— Çĕрĕçне те вĕренĕç. Илтнĕччĕ-ха, вăрман çумĕнчи хире çĕрулми лартнă чух: «Ку уя пăхса ӳстерме застава ачисене параççĕ»,— тетчĕç.

— Ах, çырлах,— ку хыпар каллех кӳнĕçтерейместерĕ Йăкăнат амăшне. Вăл икĕ аллипе пĕççине шарт! çапрĕ.— Ача-пăчана шанакан карта хушшине хĕсĕнсе вилет. Мĕн мурĕ çĕрулми ӳстерме пĕлччĕр! Сая яраççĕ ĕнтĕ тупрана. Колхоз çĕрĕ килти пахча мар, хĕрхенмеççĕ.

Хĕрарăмсене Йăкăнат амăшĕ çапла путсĕрленсе урлă пусса пыни чунтанах тарăхтарчĕ. Пурпĕрех тӳсĕмлĕ ăнлантарма ӳркенмерĕç. Камшăн паллă мар ĕнтĕ, ачасемпе пĕрле яланах учительсем.

Çуçак арăмне, Мариçе, хăй çулĕнчен никам та пăраймĕ. Мăшăрĕ те çапла калать: эсĕ ху ачусен тусĕ пул. Ывăлне вăл картана хупса усрамастех. Пĕчĕккисен савăнмалла.

Урамккин чĕлхи те сар çу хыпнă пек çепĕç. Ĕнерех вăл ашшĕпе амăшне уява пыма чĕнсе хунă. Кĕтет.

— Каятпăр,— тет амăшĕ.

Халăх кăтартнинчен чылай малтан пухăнма тытăнчĕ. Пур бригадăран та курăнкалаççĕ çынсем. Заставăна çӳрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем çеç мар, ватти-вĕтти, ача-пăчасăррисем те, хăйсен ывăлĕ-хĕрĕсене тахçан ӳстерсе йăваран вĕçтернисем те пынă.

Малтан вĕсем Семен Пилешев çуртне кĕчĕç. Арçынсем, пуçри çĕлĕкĕсене хывса, хул хушшине хĕстерчĕç. Ашĕнче кашниех сывлăх сунчĕтĕр кил хуçине. Чăрр! пăхаççĕ хăйсем йĕри-тавра.

Ытларах Семен Пилешев пурнăçне сăнласа паракан витрина умĕнче чарăнса тăраççĕ. Хĕрарăмсен чĕрине «Колхоз паттăрĕсем» стенд хускатрĕ курăнать. Тĕмсĕлсе пăхаççĕ вăрçăра Тăван çĕршыв ирĕклĕхне хӳтĕлесе пуç хунă хăйсен тус-тантăшĕсене, упăшкисене, тăванĕсене. Çавăн пекех ĕçри паттăрсен сăнӳкерчĕкĕсем те илĕртеççĕ, ăмсантараççĕ.

— Ай-уй, Анна Хурновăна та лартнă!— тĕлĕнчĕ пĕри.

— Санюк та пур, авă!

— Тивĕçлĕ кунта вырăн йышăнма. Лайăх ĕçлеççĕ, малта пыраççĕ,— мухтарĕ вĕсене тепри.

— Мĕн чухлĕ кĕнеке!— ытараймасăр пăхать кĕнеке çӳлĕкне сухал-

лă ватă çын, куçлăхне сăмса тăрне меллĕнрех лартнă май.— Мăнукăма пусахласах вулаттарма тытăнас.

— Мĕн каласси пур, кĕнеке вулакан ача ăслă çитĕнет,— ун майлă пулчĕ çумĕнчи старик.

Урамра горн сасси янăрарĕ. Туххăмра пушанчĕ пӳрт.

Ялйыш, хăнасем пĕр тĕле пуçтарăнса тăчĕç.

Ачасем ĕнтĕ стройра. Вĕсен çийĕнче чикĕ хуралçисен тумĕ. Халлĕхе чăн-чăнниех мар, карттусĕ те, погонĕсем те симĕс сăрпа сăрланă хытă хутран ăсталанн çеç. Пулин. Ку нихăшин хавас кăмăлне те хуçмасть, ӳлĕм чăн-чăнниех пулĕ.

Строй умне Борис Аххов тухрĕ. Ăна ачасем куç илми пăхаççĕ. Ытармалла мар пограничник-çке вăл. Акă, ун сасси сывлăша çурса янăрарĕ:

— Çамрăк пограничник! Тăван çĕршыв чиккине хурала тухма хатĕр пул!

— Яланах хатĕр!— хăватлăн кĕрлерĕ стройри ачасен сăмаххи.

— Паян пирĕн ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен застави уçăлать,— терĕ Борис Аххов.— Çак ятпа застава ялавне çĕклеме Нил Пилешев тата Илья Куснаров пионерсене хушатăп.

Нилпа Илюк тăратса лартнă вăрăм шерте патне чупса пычĕç, кантрине туртрĕç. Горнист горнне каçăртрĕ, параппанçă аллинче патаксем вылянчĕç, пионерсем сылтăм аллине çĕклерĕç.

Мăнаçлăн хăпарать çутă тӳпенелле Хĕрлĕ ялав! Курăр пурте! Курăр чикĕ хуралçисем ăçта ӳснине! Кусем — пулас паттăрсем. Тăшман атти нихăçан таптаса хытараймĕ юратнă Тăван çĕрĕмĕре!

Ялта ӳсекен пограничниксем стройра тăраççĕ. Пысăккисем калакан саламлă сăмахсене, Тăван çĕршывшăн юрăхлă çын пулма пил панисене итлесе тăнăçем кашнин хăвăртрах ӳсес, застава уставне пăхăнса, хăйне ырăпа çеç асăнтарас килет.

Парти организацийĕн секретарĕ Вера Ксенофонтовна ялта ӳсекен чикĕ хуралçисене колхоз правленийĕ пысăк ĕç шанса пама йышăнни çинчен пĕлтерет. Вĕсен вăрман çумĕнчи уя лартнă çĕрулмине пăхса ӳстермелле. Колхоз тухăçлă çĕрулми туса илнипе мала тухас тĕллев лартнă. Çакна асра тытса ĕçе кӳлĕнме чĕнет секретарь юлташ.

— Ăнăçлăх сире, пĕчĕк туссем!— ырă сунчĕ вăл юлашкинчен.

Ачасем тăвăллăн алă çупса ячĕç. Эппин, хирĕç мар.

— Нил,— чĕнет Илюк хăйĕнчен темиçе ача урлă тăраканскерне,— вăрман çумĕнче палатка карса пурăнатпăр! Юрĕ-и?

— Ыранах разведкăна каятпăр!— хăпартланать Нил та.

Юлташĕсем вĕсен халапне илтрĕç те тата хытăрах алă çупрĕç.

Илюк, дружина совечĕн председателĕ пулнă май, пĕтĕм пионерсен ячĕпе явап тытрĕ.

— Ята ямăпăр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр!— вĕçлерĕ вăл сăмахне.

Акă, застава çумĕнче йĕркеленĕ ансамбль хăйĕн пултарулăхне кăтартма пуçласси çинчен пĕлтерчĕç.

Ансамбль Семен Пилешев çурчĕ умĕнчи çеремлĕ вырăна çур кăшăл евĕр пуçтарăнса тăчĕ. Симĕс погонсем, мăйри виçĕ кĕтеслĕ хĕрлĕ галстук пограничник пит-куçне хĕвел пек çутатаççĕ.

Ретрен Кӳлнари тухрӗ. Ăна чикӗ хуралҫисен тумӗ татах чиперлетсе пăрахнă.

Кӳлнари — конферансье.

— «Ҫамрăк пограничниксен юрри!»— пӗлтерчӗ вăл. Сасси уҫă хăйӗн.— Купăс калаканӗ — Федор Самуков!

Вăйăҫă хыҫалтан купăсне йăтса, кăкăрне каҫăртса тухрӗ. Тути кулать. Питҫăмартисем мăйăр вырнаҫмалăх пăт! путăк. Ҫырă, вӗтӗ кăтра ҫӳҫне кӗскен кастарнă та, пуҫне мăк витнӗн туйăнать. Икӗ куҫӗ йăлтăртатать кăна.

Ҫакна кура тăркач мӗнле ҫын тытăнса тăтăр ӗнтӗ саламламасăр?! Алă ҫупма тытăнчӗҫ.

— Эх, ача! Хӗветура! Ара, ку сан ывăлу — Хветӗр-иҫ!— илтӗнчӗ хӗрарăм сасси.— Тупата, артист пек хăтланать. Эй, ҫырлах.

— Манăн,— мăнаҫлăн тавăрать ăна хирӗҫ тепӗр сасă.

Хветӗре пукан лартса пачӗҫ.

Алă ҫупни майӗпен сӳнчӗ. Конферансье хăйӗн сăмахне малалла тăсрӗ:

— Параппанҫăсем: Субайылда Пилешева тата Софья Хурнова!

Икӗ лутра хӗрача чупса тухрӗҫ. Вӗсен сылтăм аллисенче шăнкăравлă пӗчӗк параппан. Чупнă май сулахай чăмăрӗпе параппана тиверткелерӗҫ. Тӳнк! тӳнк! тӳнклетет параппанӗ, чăнкăлт! чăнкăлт! чăнкăртатаҫҫӗ шăнкăравӗсем. Параппанҫăсем вырăна тăчӗҫ.

Кӳлнари ташлакансен ячӗсене асăнчӗ. Ансамбле Михаил Михайлович Михайлов учитель ертсе пырать.

Паллаштарса ҫитерчӗ. Куракансем шăпланчӗҫ. Таврара илемлӗ юрă янраса кайрӗ. Юрри те, ҫанталăкӗ пекех, ытла селӗм.

Унччен те пулмарӗ, таҫтан-муртан сикрӗҫ тухрӗҫ икӗ «пограничник». Яра пачӗҫ ташша.

— Ай-ай, Урамкка мӗн хăтланать!

— Клементти те юлмасть!— палласа илчӗҫ ташлакансене.

— Кума, ара ку сан Урамкку каснă-лартнă ҫавраҫил-ҫке!— тӗлӗнет пахчара Мариҫ инкепе юнашар тăрса ӗҫлекен кумăшӗ.

Ывăлне ытарайми пăхса тăраканскер, ҫăварне те уҫаймасть. Урамккана амăшӗ килте кун пек айкашнинех асăрхаман.

Урамкка чăнахах та ҫилҫунат ӗнтӗ. Алли-ури ҫăмăллăн хуҫкаланать. Самант лăпчăнать, тăрать, тăпăртатать. Ăтă кӗли тепле тӳсет. Шăмми ҫук пулӗ ку ачан. Хăй хаваслă. Хӗвелпе пиҫсе пăхăрланма ӗлкӗрнӗ пит-куҫӗ ачан сывлăхӗ вӗресе тăнине систерет.

Клементти те юлташӗнчен кая мар, хурлаймăн. Тен, ун кăшт ҫăмăллăх ҫитеймест пулинех. Ытлашши тăрăшни куҫа тивет пăртак. Пачах та кулса кăтартмасть.

Акă ташша Укках хутшăнчӗ. Икӗ ача хушшинче вӗҫнӗн ҫӳрет. Вӗттӗн-вӗттӗн пускалать, йăкăр-йăкăр шăвать. Аллисем кайăкхур ҫунатти евӗр авкаланаҫҫӗ.

— Ҫынсене савăнăҫ кӳме ҫуралнă ку шеремет ачисем,— калаҫать паҫăрхи вăрăм сухаллă старик.

— Чуна канлӗх пачӗҫ,— тет ҫумӗнчи тепӗр ватти.— Ырă йывăҫ усал ҫимӗҫ кӳни ҫук.

Ансамбль темиçе юрă-ташă çеç хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ-ха. Вăхăчĕ кĕске пулчĕ-çке. Пурпĕрех хапăл туса йышăнни паха. Мĕнлерех алă çупрĕç те.

Вăйă саланчĕ. Семен Пилешев çурчĕ тавра мĕн курса-илтни çинчен кашни килтех юмахларĕç.

Телеграф çак каç чикĕ хĕрринчи пĕр заставăри пограничник-тусcем патне çапла çырнă телеграмма ăсатрĕ. «Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен кĕçĕн застави уçăлчĕ. Уяв ăнăçлă иртрĕ. Хĕрӳллĕ салам сире! Учительсемпе ачасем».

## XXIII

Кĕçĕн застава. Вĕлтĕртетет çилпе унăн хĕрлĕ ялавĕ.

— Çамрăк пограничник, Тăван çĕршыв чиккине хурала тухма хатĕр пул!

— Яланах хатĕр!

Чĕнӳпе, тупа тунипе пуçланчĕ çĕнĕ кун.

Ачасемпе халĕ ытларах Венюкăн пулма тивет. Вăл начальника пулăшаканĕ-çке. Борис Аххова колхоз ĕçĕ çыхсах лартнă. Çапах та ун заставăна пыман кун иртмест.

— Разведчиксем! Мала тухăр!— команда пачĕ Венюк.

Ретрен темиçе ача тухрĕç.

Йыш сахалтарах. Мĕнех. Чăн-чăн разведчик пулас тесен, вĕренмелле-çке. Малашне йыш ӳсмелле. Борис Аххов застава çумĕнче разведчиксен шкулĕ уçасшăн. Кăна кĕтсе илеççех.

Хальхи разведчиксен хăйне май девиз пур: сăна, тĕпче, хăвăн шухăшна застава начальникне евитле.

— Паян питĕ кирлĕ ĕçсем туса irttермелле,— ăнлантарма тытăнчĕ Венюк.

Разведчиксене икĕ пая уйăрчĕ. Пĕрремĕш ушкăнăн командирĕ — Нил, теприн — Илюк.

Нил хăйĕн отрядне çĕрулми анине йышăнма илсе каять, Илюк — Шӳреке Йăкăначĕ патне. Ытти пограничниксене колхоз агрономĕ ялхуçалăх машинисен паркне пыма йыхăрать. Ертсе каяканĕ — Венюк хăй.

Çар çынни пакăлтатмасть. Хушнă — тунă. Çавă çеç.

Нил ертсе пыракан ушкăн малтан колхоз правленине çитрĕ. Унта кирлĕ çынсемпе сăмахланă хыççăн пурте паллă пулчĕ.

Уя тухсан, вĕсем Хĕрлĕ ту еннелле пăрăнчĕç. Çырма хĕррипе хывнă сукмак мăкланнă, таптакансем сахал пулмалла.

— Командир юлташ, юрлама юрать-и?— ыйтрĕ Кӳлнари.

— Эпир вăрттăн ĕçе тухман, юрлас,— сăмах хушрĕ хыткан Хветĕр.— Купăс илмеллеччĕ.

— Юрлама ирĕк паратăп!— чăн-чăн командир пек каларĕ Нил.

Кӳлнари юрă пуçласан, хирти кайăксем те шăпланчĕç, тем тесен те, хĕрачаран çинçе те çепĕç сасă кăларма вĕренесшĕн.

Мĕншĕн-ши çав юрă урасене çирĕп пустарать, чун хавалне çĕклет, утас çула кĕскетет? Мухтав хăватлă юрра!

Вăрман çумĕнчи çĕрулми хирĕ таçтанах сарăлса выртать.

Ачасем заставăна уйăрса панă лаптăка туххăмрах тупрĕç, ятарласа алпалли туса хăварнинчен пĕлчĕç.

— Виççĕр касă уйăрса панă пире,—терĕ Нил.— Шутламалла.

— Ав лере мĕнле çамрăк йывăççем ӳсеççĕ. Пĕлсех тăратăп, таврара — çырлалăх. Ķайса килĕпĕр-и?— чĕнет Панти, Нил мĕн каланине илтмĕш пулса.

Хветĕр тӳсмелле мар шăртланчĕ. Çийĕнчех хăтăрса тăкрĕ:

— Ах, авăран та. Ачасене илĕртен çырлапа. Ĕçле вара сан пек çынпа.

— Эсĕ мĕн, Хветĕр, ун пек эрленсе ан кай-ха,— кăмăлсăрланчĕ Панти.— Ытах çырла юратмасан, ан пыр.

Нил, икĕ ача тавлашнине пăхмасăр, ката пуçĕнчен уй варринелле касă шутласа утрĕ. Ыттисем те ун хыççăн карталанчĕç. Панти те ачасенчен юласса юлмарĕ, анчах çамрăк йывăççем еннелле тăтăшах пуçне пăркаларĕ.

— Виççĕр касă!— тап чарăнчĕ Нил.

— Алпалли тăвас-и?— ыйтрĕ Хветĕр.

— Чим-ха,— чарчĕ ăна Нил.— Хĕрсе ĕçлемелĕх çук. Сахал.

— Ани мĕн тăршшĕ!— персе ячĕ Панти сехĕрленнĕн.— Леш вĕçĕ — çырмана тăрăнать.

— Наянпа айван пĕртăван,— хурласа илчĕ Хветĕр.

— Эпĕ ĕçлеместĕп темерĕм-çке,— тӳрре тухать Панти.

Нил пуçĕнче ырă шухăш аталанать пулас. Куçĕ йăлтăртатать. Тӳсеймерĕ каламасăр:

— Тата аллă касă йышăнатпăр-и?

Пĕри те хирĕçлемерĕ, татах малалла утрĕç çĕрулми касси шутласа.

Чарăнчĕ те Нил, каялла çаврăнса пăхрĕ.

— Нимĕн чухлĕ те хутшăнмарĕ,— тăпăртатса тăрать Хветĕр Нил умĕнче.

— Çитĕ. Чиксе ларт патакне икĕ касă хушшине, мише пултăр.

Хветĕр итлет. Хăма çыпăçтарнă патакне кĕреçе аврипе çапсах кĕртет. Иртен-çӳрен вулать ĕнтĕ: «Ķу лаптăкри çĕрулмине ялта çитĕнекен чикĕ хуралçисем ӳстереççĕ».

Ķĕсйинчен блокнот кăларчĕ Нил, çĕрулми ани пирки çырса хучĕ.

— Пограничниксем, пăхăр-ха хăвăр тавра,— хушрĕ вăл.— Мĕн асăрхатăр?

— Тăри! Ав, ав вăл!— пӳрнипе çӳлелле тĕллерĕ пуçне каçăртнă Панти.— Ах, епле илемлĕ ун кĕвви.

— Ķама кирлĕ тăри? Вăл сансăрах юрлать,— питлесе илчĕ Хветĕр. Хăй, ĕçлĕ çын пек, пӳрнисене хуçса шутлама тытăнчĕ:— Çĕрулми шăтнă. Ķу — пĕрре. Çумкурăкĕ маларах тапса тухнă пулас, чылай вăрăмланнă. Ăна паян-ыран çумламалла, унсăрăн çĕрулми ĕмес çĕр сĕткенне типĕтет вăл. Ķу — иккĕмĕш...

— Тупăннă профессор,— мăкăртатрĕ Панти.

— Эпĕ те çакна сăнарăм,— пĕлтерчĕ Кӳлнари, Хветĕрпе килĕшсе.
Нил Хветĕр каланисене те блокнот çине çырса хучĕ.

— Тата?— куçне хĕссе ыйтрĕ Нил. Вăл кăшт кăмăлсăрланчĕ. Ачасем чи кирлине асăрхаманшăн кӳренчĕ.

— Тата мĕн-и? Акă мĕн: çырлалăх вырăна эпĕ паçăрах асăрхарăм,— каллех хăйĕннех перет Панти.— Çырлапа сĕт шутсăр тутлă. Чĕлхе çинче юр пĕрчи пек ирĕлет вара... Çакăн çинчен те çыр, Нил.

— Юрĕ,—тет Нил. Ун сасси çакна систерет: «Хăп-ха, чăнах. Йăлăхтартăн хăвăн айванлăхупа».

Нил кунта çитсен пачах урăххине курчĕ: çĕрулми анипе пуçа-пуçăн каллех çĕрулми ани тăсăлса каять. Вăл тепĕр бригадăн пулас. Анчах икĕ уй хушшинчи лаптăк пуш-пушах. Урапа йĕррисем пур. Пĕр тĕлте каткасем, хут михĕсем япăхса выртаççĕ. Вĕсем тавра мăян ашкăрать.

Нила хаçатра вулани, амăшĕ калани аса килчĕ: «Çĕре упрамалла, унпа тĕплĕн усă курмалла, акмасăр пусăм та хăварма юрамасть...» Кунта вара пусăм çеç-и? Çу-ук. Сахалтан та, сарлакăшĕ тăватă метр. Юлташĕсене кăтартрĕ çак лаптăка. Шухăшлама, сĕнӳ пама ыйтрĕ вăл.

Ачасем шавлама тытăнчĕç. Ăпăр-тапăр купи патне куçрĕç. Тыткаласа пăхрĕç каткисене.

— Тасатмалла çак вырăна,— ăс пачĕ Хветĕр.

Унпа пурте килĕшрĕç. Михĕсене çырмана кайса ывăтмалла. Каткисем те юрăхсăра тухнă, хавшанă. Кăшăлĕсем хăшпĕрисен татăлнă.

— Каткисене çырмари çăл кутне лартмалла, шăршăнтармалла,— тет Пурхиле.

— Ырă канаш!— мухтать ăна Нил.

— Çĕрне çемçетсе, чечек клумби тумалла,— нумай пĕлнĕ пек кăтартасшăн хăйне Панти.

Тикĕс, тӳрем вырăн. Пăхса ытараймасть Кӳлнари. Амăшĕ кӳршĕ хĕрарăмĕсемпе пуплени аса килчĕ: «Хăяр тенине тӳрем вырăн ăнтарать. Сивĕрен те хăрамасть». Вара сĕнӳ пачĕ:

— Вăрăм йăран тăвас та хăяр акас. Тырпул пухса кĕме хире тухнă халăха усă, тутлă апатпа сăйлăпăр.

Аслă шухăш. Кӳлнарипе килĕшет Нил. Панти иккĕленчĕ:

— Усăсăр калаçатăр, хăяр акма кая юлнă.

— Тĕрĕс мар,— хирĕçлет Кӳлнари.— Июнь çуррине çитиччен юрать.

— Кар тăрар та тытăнар!— çĕклентерет ачасене Нил.

— Çак самантрах-и?— кăмăлсăрланчĕ Панти.

— Пограничниксем варана хăвармаççĕ,— юлхав хĕлхемне сӳнтерчĕ Кӳлнари.— Паян çĕрне хатĕрлемелле, ыран хăярне акмалла. Унсăрăн кая юлатпăр.

— Чимĕр-ха, ан асар-писерленĕр. Куншăн пире пысăккисем ятламĕç-и?— иккĕленчĕ Пурхиле.

— Тав тăвĕç,— ĕнентерет Кӳлнари.

— Тытăнас!— кăшкăрчĕç темиçен.

Пурте пĕр тĕлте тапăртатсан — тĕркĕшни кăна. Пĕри кĕрмешĕ, тепри аллине усса тăрĕ. Ун пек чух ним те ăнмасть. Çитменнине тата кĕреçи те иккĕ çеç. Нил çакна чухларĕ те ачасене ĕç уйăрса пама шут-

ларĕ. Тăваттăшне çум çумлама ячĕ, виçĕ ача каткасене çăл патне кустараççĕ, михĕсене çырмана кайса ывăтаççĕ, пушансан, Кӳлнарипе Хветĕре çĕр чавма пулăшаççĕ.

Нихăшĕ те ĕççĕр юлмарĕ.

Нил малтан çĕр лаптăкне тасатакансемпе пулчĕ. Кайран, катка çĕклесе, çăл хĕррине анчĕç.

— Шыв çулĕ çине лартар,— тет Пурхиле.— Шăршăнччăр. Ӳлĕм хăяр сапма вĕсенче шыв тытăпăр, кунĕпе ăшăнса, шывĕ лĕпленет. Хăяр хĕвелпе ăшăннă шыва юрататъ.

Парăнса ĕçленĕ чух темшĕн хĕвел тӳпене хăпарса çитнине те туймастăн.

— Ай-ай, ман хырăм чăрлататъ,— пĕлтерчĕ Панти, çĕр чавакансем патне çитсен.

— Эппин, Панти, илсе кай пире хăвăн çырлалăхна,— хушрĕ Нил. Вара пурте илтмелле кăшкăрчĕ:— Ĕç пăрахăр! Апата пухăнăр!

Панти шутсăрах савăнчĕ. Унăн сĕнĕвĕ те паха.

Çамрăк йывăççем тавра çырла çеçки нăк, ура пусма вырăн çук. Анчах çырли хĕреличчен пайтах кĕтмелле-ха.

Сулхăна ларчĕç ачасем. Кам мĕнле çимĕç илсе килнĕ, кăларса хучĕç. Тăвар сапнă çăкăр чĕлли те ĕç хыççăн уçă сывлăшра уйрăмах тутлă.

Ĕнтĕ хырăм тутă, выляма вăй хĕтĕртет. Курăк тӳшек пек çемçе; йăвалан, мекĕлче хуç.

— Ман çав тери мереккеллĕ кĕнеке пур,— кăтартрĕ Нил кăвак хупăллă пĕчĕк те тачка кĕнекине.

— «Кортик»,— вулама ĕлкĕрчĕ кĕнеке ятне Панти.

— Вула сасăпа, эпир итлĕпĕр. Юрĕ-и?— хушрĕ Кӳлнари.

Пурте Нил тавра пухăнчĕç. Хăшĕсем месерле, теприсем ӳпне выртрĕç, виççĕмĕшĕсем майланса ларчĕç.

Нил кĕнекене уçрĕ.

Вуларĕ-вуларĕ вăл, çĕрмĕш страницăна та çитрĕ. Никам та чăрмантармасть. Кӳлнари çеç сиксе тăчĕ те хăйĕн мĕлки çине пăхрĕ.

— Ай-уй, хĕвел каç енне сулăннă,— терĕ вăл.

Кĕнекене çат! хупрĕ Нил.

— Чи кăсăк тĕле çитнĕччĕ,— кăмăлсăрланчĕ Панти.

— Ыран вулатпăр, халĕ ĕçе, туссем!— чĕнчĕ Нил.

Ĕçчен халăх карр! тăчĕ.

## XXIV

— Илюк отрячĕ тахçанах заставăна таврăннă пулĕ,— ăмсанчĕ Панти.

Ахалех ун пек шухăшлать вăл. Йăкăнатпа Трапхине тĕл пуличчен кашниех кунта хаваспах çум çумлĕччĕ е çĕр чавĕччĕ.

Отрядра Илюкăн мĕнпурĕ те виçĕ çын çеç: хăй, Украх тата Варсун. Ӳрĕк-сӳрĕккĕн тухрĕç вĕсем заставăна. Мĕншĕн тесен хушнă ĕç кăмăла тивĕçтереймест.

Çул тăршшĕпех сас кăлармарĕç. Пĕрре те çар çыннин йĕркине пăханнăшăн мар, чунра тăвăр.

Шўрекесен тимĕр витнĕ çурт тăрри хĕвел çутипе йăлтăртатать.

— Икĕ хутлă! Кам пурăнать, çемье йышлă-и вĕсен?— чăрлаттарса пăхать Уках.

— Мĕн йышли: ашшĕпе амăшĕ тата Йăкăнат,— ăнлантарать Варсун.

— Пирĕн ялта кунашкал çуртсем çук,— шав тĕлĕнет Уках.

Çывхарчĕç. Сасартăк аялти хутĕнчи кантăкра Трапхин вĕлт! иртнине асăрхарĕç.

— Трапхин кунта. Эппин, Йăкăнат та килтех,— тăсарах каларĕ Варсун.

Йăкăнат килте кун каçах пĕччен хуçаланать. Ашшĕ тухса кайнăранпа эрне те иртнĕ, тахăш ялта кăмака купаласа укçа çапать-ха. Амăшĕ колхоз пахчинче ĕçлет. Тусĕ çĕркаç кунтах çывăрчĕ, мачча тăрринче.

Ирхине, вырăн çинчен тăрсан, картиш варрине серепе майласа хучĕç. Кивелнĕрен серепи кăвакарчăнсене вăш-вашах çаклатаймасть. Çавăнпа та вĕсем çĕннине ăсталама шутларĕç. Шăпах ĕçе ларнăччĕ, сасартăк Трапхин кăшкăрса ячĕ:

— Йăкăнат, пытар!

— Мĕн пулчĕ?

— Заставăран килеççĕ!

Йăкăнат та чўречерен пăхса илчĕ. Тĕрĕсех. Эх пуçларĕ тĕпĕртетме! Тусан йăсăрланать. Япалисене пурака персе чикрĕ. Алла кивĕ кипке лекрĕ, унпа витрĕ вара çиелтен.

— Мĕнле асăрхарăн эсĕ вĕсене, Трапхин?— хăйăлтатать Шўреке.

— Ĕнсере ман виççĕмĕш чее куç шăтрĕ,— мухтанать юлташĕ.— Алай, мана çав куç вирлĕн чĕпĕтет, хăрушлăх çывхарнине систерсе.

Йăкăнат сиксе чĕтрет.

— Пĕтрĕмĕр, тытаççĕ тинех, намăс кăтартаççĕ,— куçĕсене мăчлаттарать вăл халь-халь йĕрсе ярасла.

— Шыв ĕç, çемçеккей,— ятлать ăна тусĕ.— Сан чăх чĕри, этемĕн мар.

— Çын сехметсĕр пулмасть,— мăкăртатать Йăкăнат амăшĕнчен илтнĕ сăмахпа. Вара вăл кăмака çумĕнчи вăрăм сак çинче ларакан тулли витре патне чупса пычĕ те хĕрринченех ланкăрт-ланкăрт çăтрĕ шыва.

Çак вăхăтра пограничниксен отрячĕ пўрте кĕчĕ.

— Мĕн çăмăлпа çўретĕр?— ыйтрĕ Йăкăнат, йĕпе тутине кĕпе çаннипе шăлкаласа.— Вĕçкĕнсем!

— Сире хамăрпа пĕрле парка ĕçлеме илсе каясшăн,— пĕлтерчĕ Илюк.

— Ерçместпĕр!— татса хучĕ Трапхин.— Эпир кĕнеке вулатпăр.

— Миçемĕш страницăри задачăсене шутлатăр? Кăтартăр-ха.

Хирĕç ним те чĕнеймеççĕ лешсем. Ал айĕнче кĕнеке те çук иçмасса.

— Кĕркуннеччен вĕренĕпĕр-ха,— тўрре тухма хăтланать Йăкăнат.— Халĕ эпир питех те кирлĕ ĕçпе аппаланатпăр.

— Пĕлме юрать-и? — кăсăкланчĕ Уках.

— Хĕрачасем — йынша хур чĕпписем, арçын ачасен ĕçне ăнланма ăс çитерейместĕ,— лĕкĕртетсе илчĕ Трапхин.

— Ан йĕплесе тăр,— куçран шăтарасла пăхрĕ Илюк.— Сирĕнтен ыйтаççĕ пулсан, эсир калама тивĕç.

— Эсир чикĕ хĕррине каятăр. Мĕнле парнепе? Эпир, акă, Трапхинпе пограничниксем валли почта илсе çӳрекен кăвакарчăнсем ӳстерме тытăнтăмăр. Атьăр кăтартам йăвине!— чĕнет Йăкăнат.

Пограничниксен отрячĕ килĕшрĕ.

Трапхин шăл шурри уçмарĕ. Вăл юлташĕ çапла ытарлăн тавăрасса кĕтмен.

Пӳртрен тухнă чух Варсун урайĕнче кайăк ури выртнине асăрхарĕ.

— Ку мĕн амакĕ?

— Суккăр-и-мĕн? Чĕп ури ара!— васкавлăн каларĕ Йăкăнат.

— Суян!— кăшкăрчĕ вăл.— Ку кăвакарчăн ури!

Трапхинĕн пит-куçĕ усалланчĕ, каснă-лартнă сĕкекен вăкăр.

Иккĕшĕ те пĕр калăпри çăпата. Йăкăнат та чăмăрĕсене хытарнă ав. Кăркка мăйĕ татах тăсăлчĕ ун. Ытла илемсĕр-çке çиллес этем.

Килнисене хĕссе пычĕç. Хуçасем-çке, ара. Кĕçех пĕр-пĕрне кăкăртан ярса тытаççĕ.

Тула тухсан, Уках картиш варринче пĕр кăвакарчăн вĕçсе хăпараймасăр çунаттисемпе çатăлтатнине асăрхарĕ. Чупса пычĕ: кăвакарчăн ури хĕлĕх пĕрчисемпе тăлланнă иккен.

— Серепене лекнĕ, мĕскĕн,— хыпăнса ӳкрĕ хĕрача.— Ав мĕнле тытаççĕ сире эсреметсем.

Кайăка хăтарма пĕшкĕннĕччĕ çеç, пӳртрен тĕркĕшсе тухнă арçын ачасем алкум картлашкинчен кĕпĕртетсе анчĕç.

— Кăвакарчăн патне ан пыр!— ӳхĕрчĕ Йăкăнат.

Аслă-пуçлă çын ăна итлемĕ. Уках кайăка алла илчĕ, чĕри ун тухса ӳкесле тăлтлатать.

— Ан сехĕрлен,— йăпатрĕ ăна хăтараканĕ, çунаттисене ачашшăн якатса. Урисене серепе хĕлĕхĕсенчен вĕçертрĕ, вĕçтерсе ячĕ.

Кулюкка пăлтăр тăрринчен кăнтарса тăракан вăрăм хăма çине ларчĕ, пуçне ун-кун пăркаларĕ, путех, этем хĕрачине хăйне çăлнăшăн тав тăвать.

— Уках, серепине ил!— терĕ ăна Илюк.

Вăл çапла турĕ те. Ун хыççăнах Варсунпа Илюк тухрĕç урама.

— Ку сирĕншĕн ахаль каçас çук!— хăратать Варсун лешсене.

Серепене тытса илесшĕн хăвалама шутламарĕç сăтăрçăсем. Хапхине сăлăп хучĕç кĕмсĕртеттерсе: тек хăйсем те тухмĕç, çынна та кĕртмĕç.

Разведчиксен отрячĕ сывлăш çавăрма карта çумĕнче выртакан пĕренесем çине ларчĕ. Илюк, кĕсйинчен блокнот кăларса, тин çеç пулса иртнĕ пăтăрмах пирки чăрлаттарса çырчĕ.

Серепе леçме Уках заставăна пĕчченех таврăнчĕ. Дежурнăйсăр пуçне кунта урăх никам та юлман. Венюк хăйĕн ушкăнне паçăрах илсе тухса кайнă.

## XXV

Машинăпа трактор паркĕнче пулас чикĕ хуралçисене, каланă пекех, агроном кĕтсе илчĕ. Саламларĕ.

Кунти вырăн пачах улшăннă. Йĕри-тавра çĕнĕ карта. Шалта витнĕ лупас та тунă. Ун айĕнче тĕрлĕрен ялхуçалăх машинисем лараççĕ. Айккинерех икĕ бензин колонки.

— Юлташсем, эпĕ сире пулăшма чĕнтĕм,— терĕ агроном.— Куратăр-и, карта икĕ айккипе çункав выртать. Хаклă тавар вăл. Пухар-ха çавсене пĕр купана, çул хĕррине йăтар.

Кăн-кан пăхкаларĕç ачасем кăвайт мĕншĕн хаклă тавар пулнине пĕлеймесĕр. Анчах аслисем каланине вĕсем ĕненмерĕç. Самант пĕрер ытам çĕклесе те тухрĕç çул хĕррине. Агроном ăçта хумаллине кăтартрĕ.

Ача-пăча сасси пĕве çийĕн ян та ян каять. Шавлаççĕ. Кам нумайтарах пухать? Ăмăртаççĕ.

Венюк ĕçленĕ май тусĕсене ăшă сăмахпа хăпартлантарать. Çавăнтах Клементти куç тĕлне пулчĕ. Лешĕ аран-аран хускалкалать.

— Эсĕ чирленĕ-и-мĕн?— вашкăртать Венюк.

— Çук-çке.

— Эппин, мĕншĕн ыттисем пек вăрт-варт мар?

— Эсĕ мана, Венюк, хура халăхпа ан танлаштар.

— Мĕн-мĕн?— тĕлĕнчĕ Венюк.— Мĕн каларăн эсĕ?

— Мĕн илтрĕн, çавна каларăм.

— Кaçар та-ха, эпĕ сана, тем, паллаймарăм. Кам пултăн эсĕ?

— Шел,— каçăрăлса тăчĕ Клементти.— Эсĕ концерт курман-тăр. Эпĕ — ташă ăсти. Тепĕр тĕслĕ каласан — артист.

Клементти авкаланса, чĕркуççи айĕн алă çупкаласа, ура хуçса, тăпăртатса илчĕ. Çакна курнисем ахăлтатса ячĕç.

— Ав, епле савăнаççĕ,— хăлаçланса кăтартрĕ Клементти кулакансене.— Эпĕ ĕçлекенсене хавхалантаратăп: ан ывăнччăр. Çĕр çинче кашнин хăйĕн вырăнĕ пур, тăванăм.

Çамрăк шăпăрлан çапла пысăк сăмахсемпе халапланинчен шалт тĕлĕнчĕ комсомолец. Пĕлмерĕ вăл: кун пек чух ачана те ырламалла, те хурламалла. Ташласса Клементти питĕ ăста ташлать-çке.

Конюх лаша кÿлсе килнĕ, çункав купи патĕнче тăрать. Агрономпа пуплекелесе илнĕ хыççăн вите еннелле утрĕ.

Çак вăхăтра Илюкпа Варсун çитрĕç. Вĕсене агроном сенĕк илсе кăвайт-çункава урапа çине тиеме хушрĕ.

Венюк та пычĕ. Клементтипе вĕçне-хĕрне тухмасăрах, хăвăртрах Йăкăнат пирки ыйтса пĕлесшĕн.

— Ыхх, явăлсем,— ятлаçрĕ вăл, кĕçĕн тусĕсен сăмахне итлесен.— Калаçма тивет.

Майĕпен урапа тулчĕ.

— Уя кайăпăр,— пĕлтерчĕ агроном. Хăй, тилхепене кăрт-карт турткаласа, лашана хăваларĕ.

Варсунпа Илюк лав хыççăн утрĕç. Венюкăн юлмалла.

Хирте, лапамрах вырăнта, çĕр çурăлса çырмаланать. Çавăнта тăктарчĕ çункава агроном.

— Эпир ăна, çырма çулне, çапла картлăпăр. Тек çуркаланаймĕ, çĕр, вунçичĕ çулхи хĕр пичĕ евĕр якалĕ. Ҫилес çул тикĕсленнĕ çĕр çине пăри акăпăр, пăтă çийĕпĕр.

— Ман пĕрре те ĕненес килмест çункав çырма çулне пӳлессине,— иккĕленет Варсун.— Мĕншĕн, эппин, хĕрлĕ тăм çырминчи çĕре çурма чараймастăр?

— Ҫая юлнă. Вăл çурăлнăранпа пин çул та иртнĕ пулĕ те,— тет агроном.— Ун чухне çынсем çутçанталăкăн усал енĕсемпе кĕрешме пĕлмен. Халĕ наука çыннисем çĕре мĕнле упрамаллине вĕрентсе пыраççĕ.

Ҫаялла таврăннă чух пурте урапа çине ларчĕç. Тилхепине Илюк тытрĕ.

Ҫул çинче агрономăн юлма тиврĕ, ăна колхозниксем чĕнчĕç.

— Илюк, сана лаша шанса паратăп, йĕркеллĕ пулăр,— асăрхаттарчĕ агроном.— Уя ытти ачасем те тухчăр, çырма-çатра çулне мĕнле пӳлмеллине курччăр.

Пушă лав таврăниччен парк карти çумĕнче пĕр мыскара пулса иртрĕ.

Ал шăнăрĕсем хытиччен, çанçурăм хăнăхиччен кирек мĕнле ĕç те ывăнтарать. Ҫанма пухăнса ларчĕç пурте. Ҫлементти, ку таранччен ĕç картине тăманскер, кĕсйинчен шăхлич кăларчĕ те ташă кĕвви каласа ташлама пуçларĕ. Эх, авкаланать! Венюк, ачасене куç хĕссе, пуçне сĕлтрĕ. Лешсем аслă тусне тӳрех ăнланчĕç: тăчĕç те ĕçе шăкăрах тытăнчĕç.

Ҫлементти тапах чарăнчĕ, куçĕ чарăлчĕ.

— Эй, ма пăрахса кайрăр?— тет хăй, тепле йĕрсе ямасăр тӳсет.— Эпĕ сире хаваслă кантарас тĕллев лартнăччĕ.

— Ай-ай, чее çын эсĕ, Ҫлементти. Талпас çапсах çатан авасшăн,— тĕксе илчĕ ăна Уках, заставăран серепе леçсе паçăрах килнĕскер.

— Савăнăç, тăванăм, йышпа çеç çӳрет. Хăвна юлташсенчен уйрăм ан тыт, вара чун асапне туймăн,— вĕрентрĕ «артиста» Венюк.

Ҫаллех ĕç хĕрсе каять. Хушăран тахăшĕ кулăшла сăмах персе ярать те, кулаççĕ пĕр кана. Юрри те çумрах. Хаваслă, чăнах, ушкăнпа.

Ҫлементти çеç, мĕскĕн, никам çумне çыпçăнаймасть, тăрать: ни унталла, ни кунталла. Ăшĕнче ачасемпе пĕр чĕлхе тупайманшăн хуйхăрать.

Венюк пулăшасшăн Ҫлементтине, вăрттăн кăчăк туртрĕ. Ку ĕнтĕ тытăн ĕçлеме тенине пĕлтерет. Йăл! кулчĕ ача. Унтан карта çумĕпе хăвăрт кăвайт пуçтарса утрĕ. Чиперех пĕшкĕнет. Ваштах ытамĕ те тулчĕ. Ҫул хĕррине тухнă çĕре пушă лав та çитрĕ. Ҫлементтине ытамри çункавне тӳрех урапи çине хуртарчĕç.

— Ме, тыт,— сенĕк пачĕ ăна Илюк.— Тие.

Ҫлементтин ăшра кутăнланас шухăш нимĕн чухлĕ те амаланмарĕ. Ҫумри икĕ ачапа ăмăртнăн вĕлт те вĕлт ыватрĕ çункава. Ана тиркесе нихăшĕ те урлă пăхманшăн хĕпĕртерĕ. Хăйне ырă туйрĕ, чунра та çăмăл-çăмăл. Алăсенче иксĕлми вăй вылять.

Лав тулсан, сенĕкне хулпуççи çине хурса, урапа хыççăн чупрĕ, уйхир суранне мĕнле сипленине те курчĕ вăл.

Çак кун уйра Клементти çеç мар, ытти ĕçченсем те пулчĕç. Халиччен вĕсенчен нихăшĕ те çĕр-аннемĕре юсаман.

Путăк-шăтăк таçта та пур. Вăрман сукмакĕ те, аслă çул та шырланкăллă. Ялт! сиксе каçатăн та малалла чупатăн пĕр шухăшсăр. Çырма-çатра, шырланкă — çĕр чирĕ, çăпанĕ иккен. Ĕçчен çын кăна çĕрĕн тусĕ. Апла пулсан, суранне сыватмалла. Акă мĕн ăнланчĕç ачасем.

Кăнтăр тĕлĕнче ĕç вĕçленчĕ. Агроном ачасене тав турĕ, вĕсене чăнчăн çĕр хуçи пулса ӳсме ырă сунчĕ.

Савăнăçлăн саланчĕç пулас пограничниксем. Каçкӳлĕм вĕсен каллех заставăна пухăнмалла.

Командирсем иртерех пуçтарăнчĕç. Вĕсене застава начальникĕ Борис Аххов йышăнчĕ. Малтанах вăл хушнă ĕçе мĕнле пурнăçланине, сĕнӳсене итлерĕ.

— Маттур,— мухтарĕ вăл командирсене.

Анчах Йакăнатпа Трапхин мыскари ун кăмăлне хуçрĕ.

— Заставăра ун пек сăтăрçăсем пулма тивĕçсĕр,— шухăшлăн каларĕ начальник.— Вĕсене çаплипех хăварма та юрамасть, кăвакарчăнсене — çут тĕнче илемне — пĕтерме чармаллах.

Çакăнпа пĕрлех Борис Аххов çитес вăхăтра ачасене мĕн кĕтнине те пĕлтерчĕ.

Часах пурте вăрман хĕррине карнă палаткăсене пурăнма куçмалла. Апатне те унтах пĕçермелле. Пĕрле икĕ учитель, Венюк пырать.

Çĕрулми пăхса ӳстернĕ вăхăтрах ансамбль ĕçлет, спорт вăййисем иртеççĕ тата ытти кружоксем йĕркеленеççĕ.

Çĕнĕ хыпар пурне те савăнтарчĕ. Уйрăмах палаткăри пурнăç тӳсейми илĕртет. Халиччен курман-çке кун пеккине.

Хыткан Хветĕр те паçăрах килнĕ, çӳрет вĕтеленсе. Ун начальникпа питĕ калаçмалла. Самант тупса, кăчăк туртса чĕнчĕ ăна.

— Борис Иванчă, мĕн тăвас-ши, ман анчăк хушнине ним те ăнланмасть. Эпĕ чикĕ хĕррине службăна хам вĕрентнĕ йытăпа каясшăн.

— Овчарка кирлĕ, тусăм.

— Ăçтан тупас-ха ăна?

— Ан кулян, Шупашкарта туянăпăр. Пирĕн заставăра та питомник пурччĕ. Кайсан, тен, сана пограничниксем пĕчĕк йытă парнелĕç.

## XXVI

Йакăнатпа Трапхин иккĕш çеç тăрса юлчĕç те ятлаçрĕç кăна. Кашниччех Трапхине ăçтан пăхăнса çитерĕн? Ахаль те вăл ялан кăмăла аяла туса пырать.

— Тек сан пата ура ярса пусмастăп,— терĕ Трапхин. — Йытта кӳлсе çӳреме пĕчĕк урапа хатĕр. Эпĕ катаччи чупнă чух çывăха ан пыр.

— Пит кирлĕ пулĕ.

Мĕншĕн туслăх чĕлхи хуçăлчĕ-ха вĕсен?

Илюкпа унăн икĕ юлташне хăваласа кăларнă хыççăн хапхана пи-

тĕрсенех, Йăкăнат хăй паçăр каланă сăмаха сасартăк ĕненчĕ те лартрĕ. «Эпир пограничниксем валли парне — почта илсе çӳрекен кăвакарчăнсем ĕрчетме тытăнăпăр...»— тесе, Илюкпа юлташĕсене ытахальтен, хăйсем пирки шухăшланă ырă мара сирес, застава ачисене вĕчĕхтерес тесе çеç каланăччĕ. Халĕ пăх та тăр: ĕненет Йăкăнат хăй мĕн каланине.

Çĕнĕрен майлама тытăннă серепене аркатса тăкрĕ вăл.

— Тек килти кăвакарчăнсене тытмастăп! Юрамасть вĕсене тивме!

— Мĕнле шăна çыртрĕ сана?— тарăхрĕ тусне Трапхин.— Эпĕ лаша çилхисене вăрттăн касса çӳрерĕм, эсĕ муталатăн.

— Çăварна хуп! Илтес килмест эсĕ лĕпĕртетнине,— татса кaларĕ Йăкăнат.— Сан йыттушăн тек кайăксене пĕтерттерместĕп. Намăс! Паянтан пуçласа почта илсе çӳрекеннисене ĕрчетме пуçлатăп.

Трапхин ахăлтатса ячĕ, варне тытса кулать.

— Ухмах,— тет вăл куççулĕ витĕр.— Почта кăвакарчăнĕсем кусем мар, пачах урăх йышши. Вĕсем юр пек шап-шурă.

— Ун пеккисем шăпах пур та карташĕнче.

— Мана ан шан,— тутине пăркаларĕ Трапхин.— Эпĕ сана ку ĕçре пулăшаканни мар.

Вара вăл, тулхăрнăскер, хĕлĕхне кĕсйине пуçтарса чикрĕ те тухса вăрканчĕ.

Йăкăнат нимĕн чухлĕ те кулянмарĕ. Чунĕ ун застава еннелле туртăнать.

— Мĕн тăваççĕ-ши?— кăсăкланчĕ вăл. Тепĕр кун ирхине Йăкăнат килĕнчен тухрĕ те Семен Пилешев çурчĕ еннелле утрĕ. Урам пуш-пушах. Ачасем пурте унта. Çывхарсан, вăл йывăç хыçне пытанчĕ: кунтан тавралăх лайăх курăнать. Сăнать хайхискер.

Акă, застава ачисем строя тăчĕç. Борис Аххов командăсем парать. Колонна уялла тухса кайрĕ. Савăнăçлă хăйсем. Юрă пуçларĕç. Сассисем уçă. Заставăна иккĕн юлчĕç. Дежурнăйсем ĕнтĕ.

— Мĕнле телейлĕ вĕсем,— ăмсанчĕ Йăкăнат застава ачисене.— Ушкăнпа хаваслă.

Çакăн хыççăн пуçĕнчи çунатлă шухăш татах вирлĕн аталанчĕ: «ӳстеретĕпех почта кăвакарчăнĕсене. Вара вĕсем патне парне илсе пырăп. Тен, мана та чикĕ хĕррине илсе кайĕç».

Кăвакарчăн тытмалли читлĕхе мĕнле хайламаллине тĕшмĕртет Йăкăнат. Пĕлтĕр куккăшсен ялĕнче пĕр ачапа паллашнăччĕ. Вăл шăпах кăвакарчăнсем ӳстеретчĕ. Аслă, тавçăруллă, ăнлануллă кайăксемччĕ ун. Ши-и шăхăрать те, кăвакарчăнсем читлĕхрен вĕçсе тухаççĕ. Сенкер тӳпере вĕсем шурă тутăр вĕлкĕшнĕ пек курăнатчĕç. Илемлĕ! Пăхса ытараймăн.

Шухăшлать Йăкăнат. Çав ача патне çитсе килме те ĕмĕтленет. Тен, вăл пĕр мăшăрне парнелĕ? Пограничниксем валли тесен, хытса тăмастех.

— Ма хĕрхентĕр?— хăйне хăй ĕнентерет Йăкăнат.— Кайран, хамăн темиçе пуçа çитсен, тавăрса парăп.

Читлĕх ăсталама япаласем шыраса таçта çӳрес çук: çĕнĕ пӳрт лартнă хыççăн хăма татăкĕ купипех.

Йӑкӑнат малтан тимӗр пӑтасем хатӗрлерӗ. Кӗски те, вӑрӑмми те тупӑнчӗ.

Купара кирлӗ пек пӗр виҫеллӗ хӑма татӑкӗсем суйланӑ вӑхӑтра калинкке уҫӑлнӑ сасӑ илтрӗ ача. Ҫаврӑнса пӑхрӗ те амӑшне, ун хыҫӗнче застава начальникне Борис Аххова курчӗ.

— Акӑ ҫак вӑл,— тӗллесе кӑтартрӗ ывӑлӗ ҫине.— Ку яхӑнта алӑра тытаймарӑм-ха ӑна.

Амӑшӗ ҫӗрте выртакан кӗтӳ хӑвакан хӑва хуллине пӗшкӗнсе илчӗ те, вӑрҫа-вӑрҫа, ывӑлне хӗнес шутпа талтлатса ҫывхарчӗ.

— Мӗн чухлӗ каланӑ сана сапӑр пул тесе!— кӑшкӑрашать хайхискер.— Эсӗ пур, кунта кайӑксене тӗп туса ларан иккен. Сӑхӑ пыр! Халӗ мана саншӑн штраф тӳлеттереҫҫӗ.

Тарса хӑтӑлаймарӗ Йӑкӑнат, хулӑ вӗҫӗ ҫурӑма лекрӗ-лекрех. Тен, ытларах та лекетчӗ пулӗ те, амӑшӗн аллине Борис Аххов ярса тытрӗ, ачана хӗнеме памарӗ.

— Юрамасть апла ачана тивме,— лӑплантарма тӑрӑшрӗ вӑл хӗрарӑма.

— Ыхх, ҫӳресчӗ сан ҫын ачи-пӑчипе!— мӑкӑртатма чарӑнаймасть ҫаплах амӑшӗ. Ывӑлӗ те хирӗҫ чӗнмесӗр тӳсеймерӗ:

— Ай-ах чее, заставӑна хӑв ямастӑн!

Амӑшӗ ӳлеме тытӑнчӗ.

— Йӑкӑнат, миҫе кӑвакарчӑн илентернӗ эсӗ?— ӑшшӑн ыйтрӗ Борис.

Ним шухӑшласа тӑмасӑр пӗлтерчӗ ача.

— Юрӗ,— тет застава начальникӗ.— Малашне вӗсен шучӗ чакмӗ. Кайӑксем тӗрӗс-тӗкел пурӑнасса шанатӑп. Ҫут тӗнче илемне тискерле пӗтерекенсене халӗ пирӗн хытӑ айӑпласҫӗ. Хаҫата ҫырсан, намӑса ӑҫта хурас? Ҫакна асра тыт.

— Пӗлмен,— тӳрре тухать амӑшӗ.— Пуриншӗн те уйӑхпа хӗвел пулаймӑпӑр, анчах тӑрӑшӑпӑр алӑра тытма. Тархасшӑн, каҫарӑр ӗнтӗ пире, айван ашаксене.

— Пӗррелӗхе тӳсӗпӗр. Малашнехи хӑвӑртан килет. Татах кӗрсе тухӑп-ха сирӗн пата.

Борис Аххов сывпуллашса тухса кайрӗ.

Йӑкӑнат ӑна хӑйӗн шухӑшӗ — почта кӑвакарчӑнӗ ӗрчетме ӗмӗтленни пирки питӗ каласшӑнччӗ, хӑяймарӗ.

Амӑшӗ вӑрахчен лӑркарӗ вара, такама та ятлать. Вера Ксенофонтовна ячӗ те тухрӗ. Вӑл, ун шучӗпе, ытлашши иртӗхнӗ имӗш, ачасен вӑйӑшӗн ашшӗ-амӑшне штрафласшӑн. Упӑшки те юлмарӗ пайсӑр. Вӑл ямӑт пурнӑҫа ҫеҫ хапсӑнать.

Йӑкӑнатшӑн каллех пурӑнӑҫ ирӗк. Амӑшӗ ир пуҫласа каҫчен ӗҫре. Ашшӗ таҫта. Кунсем хӑвӑрт иртеҫҫӗ. Читлӗхне ӑсталаса ҫитерчӗ вӑл, селӗм тухрӗ. Пӗр сӑмахпа каласан — пӗчӗк ҫеҫ кермен. Кайӑксем кӑмӑлласах йышӑнмалла.

Ӗҫ пӗтерсен, Йӑкӑнат куккӑшсен ялне кайса килчӗ-килчех. Леш ача, кӑвакарчӑнсен хуҫи, ӑна пӗр мӑшӑр тыттарса ячӗ. Савӑнчӗ Йӑкӑнат, мӗнле чун хӗпӗртемӗ ҫакнашкал чӗрӗ парнешӗн!

Киле таврӑнсан, шурӑ-шурӑ кулюккасене читлӗхри кашта ҫине

лартрĕ. Паян-ыранах кăлармa юрамасть вĕсене, çĕнĕ килне, хуçине хăнăхмалла.

Çак кун ашшĕ таврăнчĕ. Амăшĕ тытăнчĕ йăнкăртатма. Ăна укçа та çăварне хуптараймасть. Чи малтан, паллах, ывăлĕ алăран вĕçерĕнни, ун пирки штраф тӳлеттерме тапăнни çинчен каларĕ.

— Вера Пилешевăпа Аххов пурнăç памаççĕ,— йĕрет Йăкăнат амăшĕ.

— Ан ĕрлеш, вĕсен часах шалчи тулать. Йăкăната хампа пĕрле кăмака тума илсе каятăп,— чăмăрĕпе сĕтеле çапать ашшĕ.

— Пĕртен-пĕр ывăла кăмакаçă тăвасшăн-и? Инженера кăлармалла.

— Çук, ĕçе вĕрентме вăхăт,— килĕшмест упăшки.— Ун çулĕнче мана атте хĕне-хĕне ĕçлеттеретчĕ. Пайтах кирпĕч йăтнă. Кăмакаçă — укçаллă çын.

Йăкăнат çакна илтсен шутсăрах хурланчĕ. Тăван ашшĕ ăна кирпĕч йăтса асаплантарасшăн. Тарăхрĕ вăл. Чăнахах та хăйпе илсе кайсан, çĕнĕ кăвакарчăнсем ăçта кайса кĕрĕç?

Пăхса ытараймасть вĕсене хуçи. Лараççĕ читлĕхре юнашар, вылямалли тетте пек курăнса. Сасартăк Йăкăнатăн хăйĕн кайăкĕсене кама та пулин кăтартас килчĕ. Кама? Трапхинсĕр пуçне ун урăх юлташ та çук. Иртнĕ хутĕнче кӳреннĕччĕ-ха ăна. Мĕнех. Ĕмĕр тăршшĕпе кӳтсе пурăнаймăн. Кăмăла çавăрма та пĕлмелле. «Чĕнсе килем. Мăшăр шурă кăвакарчăнсене курса хĕпĕртетĕр». Çапла шухăшларĕ те Йăкăнат тусĕ патне чупрĕ. Çитрĕ часах. Шашулккине çĕклесе уçса кĕресшĕнччĕ, анчах хапха питĕрĕнчĕк-мĕн.

— Килте çук,— пăрахса кайма тытăнчĕ, сасартăк картишĕнче шăй-шай çихĕрешнине илтрĕ хайхискер.— Мĕн амакĕ?

Вăл çӳллĕ хӳме çумĕнче шăтăк тупса шалалла пăхрĕ. Мĕн курнинчен шалт тĕлĕнчĕ. Трапхин картиш варрине серепе лартнă. Кăвакарчăн тытаççĕ иккĕн тан. Ашшĕ пĕр харăс икĕ кăвакарчăн вĕçертрĕ серепе хĕлĕхĕнчен.

— Ме, Трапхин, пар сыснасене.

— Атте, пирĕн кăвакарчăнсем сахалланса юлчĕç.

— Юлташун картишĕнче нумай теттĕн-çке. Мирлеш унпа часрах, йăпăлтат.

Йăкăнат, Трапхинпе ашшĕ калаçăвне илтнĕскер, чăннипех тулхăрса кайрĕ. «Ман кăвакарчăнпа сыснисене самăртнă!— чунĕ кăшкăрать ун. Мана чике тăршшĕ лартнă. Халех Аххова чĕнсе килетĕп.

Йăкăнат тӳрех правление вĕçтерчĕ. Кирлĕ çын унта çук. Ансăртран тенĕн, урамра тĕл пулчĕ унпа. Сывлăх-мĕн сунса та тăмарĕ, тытăнчĕ шатăртаттарма пулемет пек. Тути чĕтрет хăйĕн.

— Ним те ăнланмастăп. Ан васка, йĕркеллĕ пупле,— лăплантарать ачана Борис.

— Эпĕ мар, вĕсем пĕтереççĕ кăвакарчăнсене!

— Камсем?— ниепле те тавçăраймасть Аххов.

— Трапхинпе ашшĕ.

— Мĕнле апла?

Йăкăнат пурпĕрех сывлăш çавăрса яраймарĕ-ха, хăй çаплах пӳлĕне-пӳлĕне калать.

Борис Аххов ачана мĕн пăлхантарнине тăна илчĕ.

— Ав епле... Çийĕнчех тытмалла вĕсене. Атя,— терĕ.

Çула май Вера Ксенофонтовнăна кĕрсе чĕнчĕ вăл.

— Унтан тем те кĕтме пулать,— шухăшлăн сăмах хушрĕ Вера Пилешева, Кавĕрлен таса мар ĕçĕсене аса илсе.— Ĕмĕр тăршшĕпех ирсĕр пурăнать. Укçашăн темле усал ĕç те тума пултарать вăл. Халĕ, начар ĕçленĕшĕн бригадиртан кăларнă хыççăн, пĕтĕм çутă тĕнчене çăтма хатĕр.

Малтан вĕсем Йăкăнат кăтартнă шăтăкран пăхрĕç. Курчĕç: Трапхин шăпах серепене пуçтарса тăрать.Васкасах хапхине шаккарĕç хайхискерсем. Çук, пырса сăлăпне йăпăр-япăр шутармарĕç.

— Уçăр, уçăр!— кăшкăрчĕ Борис.

— Кам унта?—аран мĕшĕлтетсе пычĕ хапха патне Кавĕрле.

— Мĕн кăнтăрлах питĕрĕнсе ларатăр?— кăмăлсăрланнине кăтартрĕ Вера Ксенофонтовна.

Ним тăхтаса тăмасăр вĕсем мĕнле сăлтавпа килнине пĕлтерчĕç.

— Çӳретĕр çав ача-пăча хыççăн сӳпĕлтетсе,— куçĕсене çиллессĕн вылятрĕ Кавĕрле.— Йăкăнат ман ывăлăмпа хирĕçнĕ те сирĕн пата чупнă, айван. Таса çынсене вараласшăн. Куншăн лектеретĕп.

Татах темтепĕр каласа хăратрĕ-ха вáл килнисене. Лешсем ун сăмахне хăлхине те чикмеççĕ, шав йĕри-тавра пăхса сăнаççĕ. Сыснисем, хуçи калаçнине итлесе-ши, тӳсмелле мар нăриклетеççĕ. Вĕсем кунтах, хăма çапса тунă картара.

— Курар-ха сыснисене,— терĕ Борис карта çумне пырса тăрса.— Ай-уй, кунта тĕк сапăннă.

— Кăвакарчăн тĕкĕсем сысна сăмсисем çине те ларнă,— хушса хучĕ Йăкăнат.

— Сан, Йăкăнат, шăлна çыртса тăрасчĕ. Аçуна каласа паратăп-ха, вăл сана чăпăрккапа ăшалĕ,— ятласа илчĕ Кавĕрле ачана.

Вера Ксенофонтовна чĕнмесĕр тӳсеймерĕ:

— Эх, Кавĕрле, ывăлна хĕрхенесчĕ сан. Шухăшла кăшт, мĕнле чун парнелен эсĕ ăна?

Ним тума аптранă кил хуçи йăпăлтатаса та пăхрĕ. Пӳрте сăра ĕçме чĕнчĕ. Пурпĕрех çураçтараймарĕ. Çутçанталăк илемне тĕп тăвакансене айăплаççĕ халь. Килнисем ĕçе халăх судне ăсатма акт çырчĕçех.

Анчах та çак каç Йăкăнатăн чăнах та ăшаланма тиврĕ. Элек илтнĕ ашшĕ, тарăхса кайнăскер, ывăлне хытах хĕнерĕ.

Ашшĕ пачах чухламарĕ ывăлĕн чунне таптанине. Ачи ăна шутсăр кӳренчĕ, çилленчĕ, курайми пулчĕ. «Ĕмĕр каçармастăп!» — сăмах пачĕ вăл хăйне.

## XXVII

Тĕттĕмленчĕ. Вырăн çине чăмрĕ Йăкăнат. Вĕри çатма çине хунă пек туять хăйне. Ӳпне те, месерле те çавăрăнкалать, айккăн та выртать. Пурпĕрех канлĕх çук. Сурансем ыратаççĕ. Хуйхă-суйхă ыйăх памасть.

Пуҫа мĕн-мĕн пырса кĕмест-ши? Хăшкăлчĕ ача. Ҫитменнине тата, темле ҫынсем килчĕҫ. Урам енчи калинкке уҫăлса хупăнни те илтĕнмерĕ. Эппин, хыҫалти карта урлă сикнĕ. Йăкăнат, утиял кĕтесне уҫса, курмалăх шăтăк турĕ. Ҫамсем кусем? Паллаймарĕ. Ют ҫынсем. Ашшĕ кăмăллăн пуплет.

— Алкум картлашки ҫине тухса ларар,— чĕнет пĕри.— Кунта кровать ҫинче выртаканни пур.

— Ман ывăл, ăна ҫырмана йатса кайса пăрах, туймасть. Ҫил хăван янтăк ҫеҫ-ха вăл,— ĕнентерет ашшĕ.— Юрĕ, тухар, пӳртре пăчă.

Пӳрт пушанса юлчĕ. Ҫакнашкал кăсăклă самантра кам курăс хуппи сĕтĕртĕр? Йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те Йăкăнат, алăк урати ҫине ларчĕ. Кунтан мĕн калаҫни йăлтах илтĕнет.

— Аххов машинăпа района пĕчченех кайрĕ-и? Лайăх пĕлтĕн-и? — тĕпчет пĕри.

— Хам куҫпа хам куртăм.

Кăна ашшĕ каларĕ.

— Машинине тытса илĕпĕр. Хăйĕнпе мĕн тăвăпăр? Килтех канашлар, атьсемĕрсем,— сăмах хушрĕ ашшĕ каллех.

— Ăна пуҫĕнчен ҫапса тăнран ярăпăр. Тĕттĕмре пире палласа юлаймĕ вăл.

Кăна килнисенчен тахăшĕ каларĕ.

— Куҫ курĕ-ха,— тет виҫҫĕмĕшĕ.— Ҫуралман тиха пилĕкне авмăпăр.

— Ҫула тухма васкар. Қая юлатпăр акă.

Ура ҫине тăчĕҫ. Йăкăнат вырăн ҫине йăпшăнчĕ.

Ашшĕ пӳрте кĕрсе темскер илчĕ, ывăлĕ чухлаймарĕ.

Тухса кайрĕҫ. Алкум вĕҫĕнче шăп.

Йăкăнат ашшĕ ермешнĕ ҫынсем усал ĕҫ тума шутланине ăнланчĕ. Вĕсем никама та мар, Борис Аххова тапăнасшăн.

Ашра темле вăй хускалчĕ ачан. Сасăпах кăшкăрчĕ:

— Ирĕк памалла мар! Вăл ман хута кĕчĕ, аннене вĕтме чарчĕ. Штрафне те тӳлеттермерĕ. Пулăшмалла! Ун патне каяс!

Вырăн ҫинчен тăрса йăпăр-япăр тумланчĕ те урама сирпĕнсе тухрĕ. Хашкана ериччен чупрĕ. Ăҫта вĕҫтерет, хăй те пĕлмест. Чĕрере — тăвăл! «Лăпкăнрах эс. Борис Аххов района кайнă терĕҫ-ҫке»,— шухăшлать хăй. «Эппин, кам патне каймалла? Қама калас усал ҫынсен аллине тытса чарма? Трапхин патне-и?» Юлташĕ аса килсен, ăна кулăшла пек туйăнчĕ. Ваштах куҫ умне Нилпа Илюк тухса тăчĕҫ.

— Акă камсене пĕлтермелле!— хĕпĕртерĕ вăл.

Нил та, Илюк та ачасемпе пĕрле вăрман хĕрринчи палаткăра пурăнаҫҫĕ. Ҫулне-тĕлне пĕлет. Иртнĕ эрнере кайса аякран вăрттăн пăхса тăнăччĕ. Ачасем хĕрсех ҫĕрулми купалатчĕҫ.

Йăкăнат унталла чупрĕ. Уйра пĕччен чун сӳлетет, тĕттĕмре тĕмеске те шăп упа пек туйăнать тата.

«Хăрама кирлĕ мар,— чунне пусарать Шӳреке.— Тăшман тылĕнче пулсан та шикленни килĕшмест. Эпĕ хамăр ял ачисем патне каятăп».

Акă, курăнчĕҫ те. Палаткăсен ҫутă тăррисем тĕттĕмре уйрăмах лайăх палăраҫҫĕ иккен, вĕсем юрпа витĕннĕн шап-шурă.

— Ҫам унта?— ыйтрĕҫ вăл ҫывхарсан.
Ҫунта та, чикĕ хĕрринчи пекех, хуралҫăсем пур.
Хăюланчĕ Йăкăнат.
— Мана Нил кирлĕ.
— Мĕн тума?
—Васкавлă та пăшăрхантаракан ĕҫ пур. Ҫун ҫинчен вăл ҫеҫ пĕлме тивĕҫ.
Апла пулсан, тавлашса тăма юрамасть. Пĕр хуралҫи Нила вăратса килчĕ. Нил Йăкăнат сăмахне тăнларĕ.
Хыпар, паллах, пăлхантарчĕ ăна. Амăшне кайса калама шутларĕ. Анчах тепĕр шухăш чарчĕ, ăна чăрмантарни усă параймĕ. Халех ачасемпе калаҫмалла. Ҫанашлăва Венюк, Илюк, Ҫӳлнари пухăнчĕҫ. Йăкăнат каласа панине вĕсем те итлерĕҫ. «Милици уйрăмне пĕлтермелле». Ҫапла каласса татăлчĕҫ. Палаткăллă заставăна Михаил Михайлович юлать.
Пиллĕкĕш те катка-пичке тăвакан завод поселокне чупрĕҫ. Унта почта ҫыхăнăвĕ пур, шăнкăравлама пулать.
Телефон аван ĕҫлет. Йăлтах ăнлантарса пачĕҫ ачасем.
— Маттур, чăч-чăн пограничниксем эсир,— мухтать ачасене пралук леш вĕҫĕнчи ҫын.— Пурте йĕркеллĕ пулать, кайса ҫывăрăр.
Почта уйрăмĕнчен тухнă ҫĕре тул янках ҫутăлчĕ.
Айлăм тăрăх, шăлапир тĕркине тăсса янăн, тĕтре шурă ҫул хывнă. Хăш юмахри улăп ун ҫийĕн ҫемҫе кĕлеллĕ аттипе пуси-пусми иртĕ-ши?
Шăкăл-шăкăл калаҫса, ачасем вăрмана кĕчĕҫ. Сукмак хĕрринчи ешĕл курăк сывлăмпа ҫăвăннă: сăтăрăнса пушмак пуҫне йĕпетет.
Умра ҫул юппи.
Йăкăнат, ав, ял еннелле пăрăнчĕ. Вăл хăйĕн читлĕхри кăвакарчăнĕсем патне васкать.
Пырсан-пырсан, Ҫӳлнари хашш! сывласа илчĕ те каларĕ:
— Атьсемĕрсем, мĕнле шутлатăр, Бориса тивмерĕҫ-ши? Питĕ пăшăрханатăп.
— Пăшăрханни кăлăхах. Халь ĕнтĕ вăл темле хăрушлăхран та ҫăлăнать,— тет Нил, шантарса.
Венюк шухăша кайса пычĕ.
— Нил,— чĕнчĕ вăл палаткăна кĕрес умĕн.— Сан варарахпа киле кайса килме тивет. Аннӳрен ăна-кăна шарламасăр вăлт: Борисăн районтан хăҫан таврăнмалла? Енчен те вăл вăхăтра ҫитмесен, пирĕн алла усса ларма юрамасть.

## XXVIII

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунне ирттернипе Вера Ксенофонтовна вăйĕ шăлтăрах тухса ӳкрĕ. Ҫăмăл мар. Пĕр уйăхра тунă ĕҫе пăхса тухса хакламалла. Йышĕ сахал мар вĕсен. Мала тухнисене палăртса, парнесем пачĕҫ. Ун пек чух савăнакансем те пур, кӳренекенсем те тупăнаҫҫĕ. Теприне ятлама та тивет.

Қилне вăл хĕвел ансан тин пырса кĕчĕ. Сĕтел хушшинче Нил ларчине курах кайрĕ.

— Эсĕ хиртен тарса килмерĕн пулĕ те?— иккĕленерех пăхкаларĕ вăл.

Хунямăшне кинĕ çапла тӳрккес пуплени килĕшмерĕ, унăн кăмăлĕ хуçăлчĕ.

— Ара,— мăкăртатрĕ вăл,— пăрушĕн амăшĕ патнех туртăнмалла. Чунĕ сивĕнсен, хĕве чиксе ăшăтаймăн.

Нил нимĕн чухлĕ те йывăра илмерĕ амăш сăмахне. Вăл сĕтел хушшинчен тухса амăшĕн мăйĕнчен пырса уртăнчĕ те питĕнчен чуптурĕ.

— Эпĕ хиртен тарса килмен. Мана Борис Аххов кирлĕччĕ. Шырарăм, тупаймарăм. Района кайнă тет-и? Хăçан килет-ши, эсĕ пĕлместĕн-и, анне?

— Қилессе вăл ĕнерех килмеллеччĕ те, темшĕн çитеймерĕ-ха. Хам та кĕтетĕп.

— Сывă пулăр!— хыпаланчĕ ача.— Асанне, çăмахпа уйран лартса панăшăн тавтапуç.

— Çимерĕн те-çке,— ӳпкелешет асламăшĕ.— Çĕр хута ăçта? Çывăр, кам сана хăвалать?

Разведчик çапла вăл, ытлашши пакăлтатмасть.

Вера Ксенофонтовна канлĕхне çухатрĕ. Çук, ывăлĕ самантрах куçран çухалнăшăн мар, урăх сăлтав чуна кăшлать. Иккĕмĕш çĕр ĕнтĕ чĕптĕм куç хупман.

Алкум вĕçне тухрĕ вăл. Тимлĕн тăнлать. Çук, машина сасси илтĕнмест. Хушăран кăна йывăç тăррисем кашласа илеççĕ.

Хăй патĕнче пурăнакан Борис Аххова кĕтет вăл.

«Сельхозтехникăран» колхоз аммиак шĕвекĕ тытма савăт туса пама ыйтнăччĕ. Савăчĕ хатĕр. Ăна илме виçĕмкун аслă механик хăй кайрĕ. Çав кунах каялла çавăрăнса çитмеллеччĕ çыннăн. Анчах халĕ те çук.

Правленинче телефон ĕçлемест. Вера Ксенофонтовна ĕнер каткапичке тăвакан завод поселокне çитсе района шăнкăравларĕ. Ăна «Сельхозтехникăран» колхоз механикĕ пынă кунах тухса кайни çинчен хыпарларĕç.

— Эх, ма хам каймарăм-ши,— ахлатать хĕрарăм.— Машинĕ ванса çул çинче ларать-ши, е мĕн те пулин пулчĕ-ши?

— Ия, пиркесĕр ним те пулмасть,— кулянать пăянамăшĕ те кинĕпе пĕрле.— Сăлтавĕ пурах. Вăрман çулĕ мĕн авалтанпах хăратать, такама та инкек кăларса тыттарать.

— Ыран, çынсем пухса, вăрман çулĕпе утса тухас пулĕ.

Қолхозниксем Борис Аххова, Вера Қсенофонтовнăна хисепленĕ пекех, чунтан килĕштерчĕç. Вăл колхозшăн, çынсен пурнăçĕшĕн тăрăшни куçкĕретĕнех курăнать. Уй-хирсенче калча нихăçанхинчен те кар шăтса тухрĕ. Пӳлме тухăçлă тырпулпа туласса пурте ĕненеççĕ. Мĕн-ма уй-хир сăнĕ, ытти çулхисемпе танлаштарсан, куçа илтĕртет? Қăна пурте ăнланаççĕ. Техника аван ĕçлерĕ, йăлтах аслă механик Борис Аххов тăрăш-

нăран. Вăл акана тухиччен пĕтĕм техникăна юсаттарчĕ. Машинăпа тунă ĕçĕн усси пысăкрах.

Çапах та çынсем хушшинче усал чунлисем те пур-ха, ăна Вера Ксенофонтовна туйса тăрать. Нумаях та пулмасть пухура Шӳреке Йăкăначĕн ашшĕне, Улатимĕре, колхоз ĕçне тухманшăн сӳтсе явма тиврĕ. Унччен аслă механик пулнă Савва Хунаров, Христофор шофер ыттисене сăмах чĕнтермерĕç, сике-сике тăраççĕ, кăшкăраççĕ.

— Пирĕн колхозра çеç çапла çынсен кашни утăмне сыхлаççĕ,— ĕрлешрĕ Савва.— Тĕп тумалла унашкал йĕркене!

Трапхин ашшĕ Кавĕрле, бригадир пулнăскер, çав çынсен юррине юрлать, пĕр урапа йĕрĕпе чупать.

— Пур-ха колхоз ĕçне тухма ерçейменнисем,— тет вăл.— Вĕсем вăрмана хăйсен килти ĕни-сыснисене çитерме çӳреççĕ. Патшалăха какай туса парсан, кĕсъене пысăк укçа-тенкĕ кĕрет. Пулă ăçта шыв тарăн, çавăнта ишет. Çын мĕнле ĕç тухăç парать, çавна тăвать. Чарма çук. Халĕ патшалăхĕ те колхозниксене ытлă-çитлĕ пурнăçпа пурăнтарасшăн.

Унăн калаçăвĕн çитменлĕхне çийĕнчех асăрхаттарчĕç. Хăй пĕлмест-и вăл? Юри çапла пуплет, халăха пăтраштарасшăн.

Борис вăхăтра таврăнманшăн пăшăрханса ӳкнĕскер, Вера Ксенофонтовна ял вĕçне тухрĕ.

— Ах, ăш хыпса çунать-çке,— пуплерĕ вăл хăйпе хăй.— Аварие лексе вилмерĕ-ши? Вара мана чикĕри застава çыннисем мĕн тейĕç?

Сулахайра, сарлака кĕрен ялавне çĕклесе, хĕвелтухăç вăранать.

Сасартăк Вера Ксенофонтовна хăлхине мотор сасси пырса кĕчĕ.

— Машина? Килет, килет!— кăшкăрса ячĕ те вăл хура вăрмана пырса тăрăнакан тусанлă аслă çул хĕррипе малалла ыткăнчĕ.

— Çавах-ши?— иккĕленчĕ хăй, татах тĕмсĕлсе пăхрĕ. Халĕ ĕнтĕ аякри те чиперех палăрать.

Акă ката кукринчен машина тухрĕ. Вера Ксенофонтовна палласа илчĕ.

— Хамăр колхозăн машини!

Талпăнса чупать. Çынпа машина тĕл пулчĕç те тапах чарăнчĕç.

— Борис!— кăшкăрса ячĕ хĕрарăм.

— Салам, Вера Ксенофонтовна,— кабинăран сиксе анчĕ Борис. Пичĕ хăйĕн кĕл пек шурнă.

Вера Ксенофонтовна ырă мара сисрĕ. Мĕн пулса иртме пултарнă-ха çул çинче?

— Сана кĕтсе чун тухатчĕ. Хирĕç тухрăм, ав,— терĕ Вера Ксенофонтовна, ырă мара тата тарăнрах туйса.

— Кунта чикĕ хĕрринчи мар, анчах ĕçсем унтинчен пĕрре те кая тăмаççĕ.

Борис çак икĕ кун хушшинче мĕн тӳссе ирттернине каласа пачĕ.

...Вăл «Сельхозтехникăна» кăнтăрла иртсен çитрĕ. Хут тутарсан, ăна аммиак савăтне илме часах ирĕк пачĕç. Машина çине тиеме те пулăшрĕç. Ĕç-пуç ăнса пычĕ. Ун пек чух хĕпĕртетĕн.

Ĕç тем чул кал-кал пырсан та, хĕвел пĕр-пĕр туратран çакланса тăмасть, шав анăçалла шăвать. Столовăйне апат кĕрсе çинĕ тĕлелле

çĕр çине каç чаршавĕ анчĕ те. Пограничник пулнă çынна ку нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармарĕ, вăл çаплипех çула тухрĕ. Вăрмана пырса кĕнĕ çĕрелле пач тĕттĕмленчĕ. Тӳпере çăлтăрсем курăнмаççĕ, вĕсене катрам хура пĕлĕтсем хăйсен хĕвне хупса пытарнă.

Ќăлтăртатаççĕ кустăрмасем, машина чуппине ни ерипен, ни хăвăрт теме çук. Умĕнчи фарăсен çути, каç тĕттĕмне икĕ еннелле сирсе, руль тытнă шофера çул кăтартать.

Вăрманта пĕр чун та çук-тăр. Никам та хирĕç пулса е хуса çитсе иртмест. Çапла шухăшласа Борис йăнăшнă. Тарăн вара çитес чух машина çулĕ картланчĕ. Çул çине тахăшĕ йывăç вулли сĕтĕрсе тухса пăрахнă. Борис машинăна чарчĕ те кабинăран тухрĕ. Çав вăхăтра ăна пуçран йывăр япалапа çапрĕç. Вăл тăнне çухатрĕ те çĕре тĕшĕрĕлсе анчĕ.

Тăна кĕрсен, Борис машинăна чарнă еннелле пăхрĕ. Анчах унта машини çук, аммиак савăтне тӳнтерсе хăварнă-мĕн.

Машинăна вăрланă. Эппин, района, милицие систермелле.

Аххов, çула куçран вĕçертмесĕр, йывăççем хушшипе пычĕ. Çăмăллăн чупма тĕмескесем, лакăмсем, çĕр çумĕпе выртан мăн тымарсем чăрмантараççĕ.

Района чиперех çитрĕ вăл. Милици уйрăмĕнче унăн инкек-синкекĕ çинчен пĕлеççĕ. Тĕлĕнчĕ йĕкĕт. Ку çеç-и? Вăрмана ăна хăтарма икĕ çын мотоциклпа кайнă. Хурахĕсене Шупашкар çулĕ çинче ярса тытнă. Грузовика ытахальтен хăваламан вĕсем. Кăшкарĕ çинче тĕрлĕрен машина пайĕсем пулнă. Паллах, йăкăртни. Вăрттăн сутма шутланă ăçтиçуксем, пысăк укçана хапсăннă.

— Халĕ çав вăрăсене тăваттăшне те хупса лартнă, суд пулать. Пĕлетĕн-и, Вера Ќсенофонтовна, вĕсенчен иккĕшĕ — хамăр ялсем,— терĕ Борис.

— Чăнах-и? Ќамсем?

— Пĕри — Улатимĕр, Йăкăнат ашшĕ, тепри — Ќавĕрле. Иккĕшĕ — нумаях пулмасть тĕрмерен тухнă çынсем.— Иртерех çитеттĕм те, грузовикне вăш-вашах памарĕç; çирĕм хут çине те алă пустарчĕç пулĕ.

— Маттур эсĕ, Борис,— ăшшăн каларĕ Вера Ќсенофонтовна.— Милици ăçтан сиснĕ-ха?

— Хам та шалт тĕлĕнтĕм,— мăч-мăч хупкаларĕ куçне Борис, — ыйтрăм-ха милицинче. «Халлĕхе ку вăрттăнлăх. Ан васкăр, часах пĕлĕр акă»,— терĕç кăна.

Секретарь колхоз машини çийĕнчех тупăннăшăн, Борис сывă юлнăшăн чикĕсĕр савăнать.

— Аммиак савăтне кайса илме виç-тăватă çын кирлĕ, ăна мăшăр алă машина çине хăпартаймасть,— пуплет Борис.

— Юрĕ,— килĕшет Вера Ќсенофонтовна.— Халĕ киле!

Иккĕшĕ те кабинăна кĕрсе ларчĕç те машина тапранчĕ. Нумаях та каяймарĕç, чарăнма тиврĕ: умри çул çинче ача-пăча кĕшĕлтетсе утать.

Çывхарнă май палласа та илчĕç. Ачасенчен уйрăмах çӳлли — Венюк, çумĕнчисем: Нил, Хветĕр, Урамкка, Панти тата ыттисем.

Ачасем те палласа илчĕç. Тек мăраланса пырĕç-и! Çуначĕсене сарчĕç, вĕçеççĕ.

Бориспа юнашар лараканĕ — амăшĕ. Нил шухăшне вырнаçтараймасть пуçа. Унăн хулпуççийĕ хускалкалать ĕненменнипе.

Амăшĕ çĕркаç Нил килтен ытла хăвăрт тухса шунине аса илчĕ те йăл кулчĕ.

Борис çĕре сиксе анчĕ. Сăн-пичĕ те урăх. Застава начальникĕ пулнă май, ачасене çар йĕркипе честь пачĕ. Ачасем те, строя тăрса хирĕç саламларĕç.

— Қалăр: мĕнле ĕçпе, ăçта çул тытнă?

— Уçăлса çӳреме тухрăмăр!— евитлет Венюк.

Пограничник пулнă çынна улталаймăн. Витĕр курать. Чим, пуçне чиксе тăраканни кам тата? Йăкăнат! Акă ĕнтĕ салтма хĕн тĕвĕ. Мĕнле майпа вăл ачасене ермешме хăйнă? Ашшĕ...

Борис аллине сулчĕ. Пăтраннă шухăшсене майласа картне çитерме мехел тупасшăн мар вăл халь, хал çук.

Васкасах команда пачĕ:

— Пурте машина çине!

Машинăпа катаччи чупас тесен, кашни чуна пама хатĕр.

Таврăнчĕç яла.

Борис Ахховпа пулса иртнĕ ĕç ачасене тата тимлĕрех пулма хистет.

Тӳнтер кăмăллă çынсем хастар чĕреллĕ, ăста механикран тасаласшăнччĕ. Вăй çитереймерĕç. Аххов çавăн йышши этемсене хăй çулĕ çинчен тимĕр шăпăрпах шăлать. Вăл колхозра çирĕп тымар янине кăтартса пачĕ.

Пĕр вырсарникун çĕнелнĕ клубра Бориспа Санюк туйĕ кĕрлерĕ. Қолхозра утма пултаракан çын туя пымасăр юлманах.

Ялта ӳсекен чикĕ хуралçисен ансамблĕ те хăйĕн вăййи-куллипе саламларĕ çĕнĕ мăшăра.

Қăмăл туличчен савăнчĕ туйра ялйыш. Тăрантас кашти аваниччен парне кӳчĕ; ырă пурăнăç, вăрăм кунçул сунса пил пачĕ.

## XXIX

Застава ачисем, вăрман хĕрринчен, йăлкăшакан кăвайта сӳнтерсе, палаткăсене йăтса таврăнчĕç. Çĕрулми кассисене çумран тасатса икĕ хутчен купаланă. Вăл питĕ селĕм ӳсет. Қолхозниксем ырлаççĕ. Хăяр ани — сап-сар чечекре. Чăмăртаннисем, йĕкел пысăкăш пулнисем нумай. Қӳлнарипе Укках, вĕсен хĕр-тантăшĕсем кунта кулленех çӳреме пулчĕç.

Палаткăсене майласа пуçтарнă кун Борис Аххова хăй службăра тăнă çĕртен телеграмма килчĕ. Ăна ялта ӳсекен маттур пограничниксене Тăван çĕршыв чиккинчи заставăна хăнана илсе килме чĕнеççĕ.

Çак самантран пуçланчĕ вара тĕркĕшӳ! Қам-кам каяссине сӳтсе явса çирĕплетрĕç: вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçленĕ, ĕçри, заставăри хастар ачасем каяççĕ.

— Манăн кайма тивмест,— кулянчĕ Кӳлнари.
— Мĕншĕн?
— Хăяра кам сыхлĕ?
Сăлтавĕ чăнахах та пур-мĕн. Нимĕн каласа та йăпатаймарĕç-ха хĕрачана.
— Шухăшлăр,— терĕ начальник.
Çын-çын урлă Кӳлнари хуйхи пирки Акраппи илтрĕ. Хĕпĕртерĕ хăй, тинех туслăха çĕнĕрен тĕвĕлеме май тупăнать. Вăл ку тарана çитсе те заставăна пыма хăяйман. Пĕччен, юлташĕсемсĕр пурăнăç — хăрнă чечек, ниçта кайса кĕме çук тунсăх. Пайтах чунне шĕкĕ кăшларĕ. Хăй айванлăхне пула мĕн тери ырă тусне çухатнă вăл.
Именсерехкĕн застава алăкне уçрĕ Акраппи. Вара ачасем умĕнче çапла сăмах тытрĕ:
— Пуриншĕн те каçару ыйтатăп. Тата Кӳлнарие ан хăварăр, хăярне хам пăхатăп.
Борис Аххов хăй ал пачĕ хĕрачана. Ашă сăмах каларĕ:
— Шанатпăр сана, Акраппи. Пурте йĕркеллĕ пулсан, килес çул эсĕ те кайăн.
Ара, Кӳлнари пĕрле пырайманни йышшăн пысăк çухатуччĕ-çке. Ансамбле ун пек никам та ертсе пыраймасть. Аста конферансье вăл: такăнмасть, шӳтлеме те пултарать.
Пуринчен ытла колхоз хыпăнса ӳкрĕ темелле. Ансамбле йăлтах пĕр пек чăвашла тум çĕлесе тăхăнтартрĕ. Чăваш юрри-ташшин чăваш тумĕсĕр илемĕ çук. Арçын ачасене тĕрленĕ çухаллă шурă кĕпе, шерепеллĕ пиçиххи, хура шăлавар ытла килĕшет. Хĕрачасем — шăп юмахри пикесем. Пуçĕсенче — тухъя, çийĕсенче — аркăллă кĕске кĕпе, хĕреслĕ симĕс саппун.
Хăш кун тухса каяссине палăртман-ха. Ансамбль кунне икĕ хутчен репетицие пухăнать. Михаил Михайлович ыйăннине туймасть, хăй те ача пекех çăмăллăн çӳрет.
Пушансанах Кӳлнарипе тантăшĕсем хире чупаççĕ. Ĕнтĕ Акраппи те юлмасть, хăнăхасшăн. Часах вăл кунта хуçа пулать-çке.
Кӳлнари вăрăм йăрана пăхать те, чунĕ савăнать. Хăв тунă ĕç нимрен те паха çав. Мĕншĕн çапла-ши вăл?
Çĕрне ачасемпе пĕрле чавса, пĕрле йăран турĕç. Акасса вара пĕччен акрĕ, ыттисене шанмарĕ вăл. Амăшĕ ăна ир çимĕç паракан Мурманский сорт вăрлăхне пачĕ, вĕрентрĕ, манасран хут çине çыртарчĕ. Хăяр вăрлăхне Кӳлнари тăваткал тĕмĕн пăрахрĕ.
Çиелтен тăпрана ывăçпа çеç витрĕ. Тĕшшине тарăн чиксе хурсан, шăтаймасăр хăшкăлать. Шывне сапма та пĕлмелле иккен, пĕрĕхмелле çеç, лӳшкентерни сиенлĕ.
Шăтса тухасса кĕтсе, ирсерен пурте йăран айккипе чупса тухатчĕç ачасем.
Эрне иртрĕ, йăран çаплах хураччĕ-ха. Вара çумкурăкĕ тапса тухрĕ. Çумларĕç. Çав каçах çумăр чашлаттарчĕ. Хăшĕсем хăяр пуласса ĕненме пăрахрĕç ĕнтĕ.
Пĕр ирхине, йăлана кĕнĕ тăрăх, ачасем йăран патне чупса пычĕç те тĕлĕнтермĕш курчĕç: çĕр айĕнчен темле патмар курăксем шăтнă; пу-

çĕсене çурмаран çурнă хăяр тĕшшисен хуппине тăхăннă. Таçта çĕклесе кайма пикеннĕ тейĕн.

Шавларĕç вара чĕлхе ыванiччен.

— Хăяр пулмасть, вăррине темле курăк çĕр ăшĕнчен кăларса ыватать!— тет Панти.

— Агронома кăтартмалла,— тăпăлтарма аллине тăсрĕ Урамкка.

Тепле чарма ĕлкĕрчĕ Кӳлнари.

— Хăяр шăтнă, çавна та пĕлместĕр,— ятлать арçын ачасене Уках.

— Курăпăр,— текелесе саланчĕç вара.

Шлепки хывăнса ӳкрĕ калчан, часах икĕ çулçă сарăлчĕ. Тымартан виççĕмĕш çулçă хутшăнчĕ.

— Йăтăр-ха шыв,— хушрĕ Кӳлнари арçын ачасене.— Шăварар.

Ăшă шывран пуян вĕсем. Çырмари каткасем туллиех, кун каçа шывĕ лĕпленет.

Сапма хĕрачасене çеç ирĕк парать Кӳлнари, арçын ачасем шухă, ниме те уямаççĕ, аврисене хуçма пултараççĕ. Кăпкалатас çĕрте те хĕрачасем çеç ĕçлерĕç. Арçын ачасем те ĕççĕр юлмарĕç, вĕсене патак хуçма вăрмана ячĕç.

Халĕ, ав, шăпах çав патаксем кирлĕ. Хĕрачасем йăран çине патаксем чиксе кашта хучĕç, тунисене патаксем çумне çыхрĕç.

— Санăн, Акраппи, пушă чечексене иртсе тăмалла пулать,— ăс парать Кӳлнари.

— Эпир килте пуса чечекĕсене çеç мар, çиппisене те тататпăр, кунта мĕнле?— ыйтрĕ Акраппи.

— Тасат.

## XXX

Тухса кайма хатĕрленсе çитрĕç. Ирхине шофер чугун çул станцине ăсатса ярать. Каласса татăлнă. Анчах та Нил заставăна ырă мар хыпарпа пычĕ те, чикĕ хĕррине тухса каяссине тата ик-виç куна хăварма тиврĕ.

Тахăшĕ района чĕкĕнтĕр уйне çум айне туни çинчен пĕлтернĕ. Хальхаль тĕрĕслекенсем килсе çитмелле имĕш. Нил амăшĕ пăшăрханать, чĕкĕнтĕр уйне хăй вăхăтĕнче астăвайманшăн кулянать.

Çăхавне Трапхин ашшĕ суя ятпа çырнă-мĕн, хăйне ĕçрен хăтарнăшăн тарăхса. Вăл Вера Ксенофонтовнăна таварасшăн, ăна ĕçрен кăларма антăхнă. Тĕрĕссипе илсен, йăлтах хăй айăплă пулнă. Бригадирта чух чĕкĕнтĕр уйне вăхăтра çумран тасаттарассине йĕркелемен. «Кăшман аван ӳсет» тесе хыпарласа тăнă правление.

Нил ятарласа чĕкĕнтĕр уйне çитсе килчĕ. Тĕрĕсех, пилĕк таран пиçен ашкăрса ларать. Бригадир ĕнер гербицид саптарнă, анчах усси пулман. Агроном чĕкĕнтĕр çитĕнмест тесе ал сулнă, тет. Миçе гектар çĕр сая каять!

— Атьăр пулăшу команди йĕркелер!— сĕнчĕ Нил.— Тен, чĕкĕнтĕре инкекрен çăлăпăр.

Агроном алă сулнă пулсан та, çамрăк пограничниксем куç хупса тăма пултараймĕç.

Заставăна çӳрекен пĕтĕм ача килĕшрĕ пулăшу командине хутшăнма.

Пĕве хĕррипе иртнĕ чух хăйăр çинче хĕвелпе хĕртĕнсе выртакан Трапхине курчĕç.

— Эй, хĕрлĕ пуç,— чĕнчĕ ăна Хветĕр,— атя пиçен тăпăлтарма.

— Аттене бригадиртан кăлартăр, хупса лартрăр. Тата ман ĕçлеме пымалла тет-и? Ытла чее эсир,— ĕрлет Трапхин.

— Айван, сӳпĕлтететĕн кирлĕ мара,— Трапхинпа тавлашма чарăнсах тăчĕ Хветĕр.— Вăл бригадир чух чĕкĕнтĕр уйне çумкурăк пустарнă. Халăхпа пĕрле мекеçлен пăртак.

— Аюк, ерçместĕп. Ман вăрмана ĕне çитерме каймалла.

— Асту, вăрман çийĕн кăвакарчăнсен кĕтĕвĕ вĕçсе çӳрет, сан пуçна сăхса шăтарасшăн...

Хветĕр сăмаххинчен пурте ахăлтатса кулчĕç. Хаваслă йыш малалла утрĕ.

Трапхин ачасен ушкăнне ăмсанса пăхса юлчĕ. Сасартăк ун чунĕ чĕпĕтсе ыратма пуçларĕ. Ăша çулăм хыпса илчĕ, çунать, тĕтĕм тухни çеç курăнмасть. Йĕри-тавра никам та çук. «Эсĕ пĕччен! Пĕччен!» кăшкăрать чун.

— Ых, çав аттене! Пĕтĕмпех ăна пула юлташсăр тăрса юлтăм,— йăпăр-япăр сиксе тăчĕ хайхискер. Çамрăк пограничниксен отрячĕ аякках та кайман. Чупсан, хуса та çитме пулать. Анчах Хветĕрпе çапла урлă-пирлĕ калаçни чарать тытса. Ку çеç те мар, ыттисем те ахăлтатсах кулчĕç-çке-ха унран.

Ним тума аптранă енне кĕпине алла илчĕ те сулланчĕ килнелле мĕскĕн.

Пионер-пограничниксем чĕкĕнтĕр уйĕ умне пырса тăрсан, шартах сикрĕç. Пиçен юман пек парка. Анчах куç хăрать те ал тăвать. Хăюллăн тытăнчĕç.

— Ай-ай, алла йĕп пек чикет!— кăшкăрса ячĕ Панти.

— Тымарĕнчен ярса тытса тăпăлтар,— ăс парать ăна юнашар тăрса ĕçлекен Кӳлнари.

Шăпăрт. Пакăлтатни ĕçлеме чăрмантарать.

Ачасен хыçĕнче курăк куписем тата çум ăшĕнче апатсăр, хĕвел çутисĕр аталанайман шуранка чĕкĕнтĕр тунисем ларса юлаççĕ. Чĕкĕнтĕр калчисем, тимĕр тылă витĕр тухнăн, ытла имшеркке.

Қăнтăр апачĕ илсе тухрĕç: çăмарта, уйран тата çу куçĕ хывнă тинкĕле. Қарталанса ларчĕç çиме.

— Эй, мĕнле апат пулчĕ ку? Питĕ тутлă!— кашăкне çулакаларĕ хыткан Хветĕр.

Нумайăшĕ çак çимĕçе пĕлмест. Çăнăхне халĕ килте ватă çын пуррисем кăна тăваççĕ. Чăрмавĕ пысăк. Ĕлĕк ăна пăрирен пĕçеретчĕç, халĕ ӳркенменнисем тулăранах хатĕрлеççĕ.

Ку хутĕнче чĕкĕнтĕр уйĕнче ĕçлекен ачасене çитерме Нил асламăшĕ хăй тинкĕле юрчĕ. Вăл карчăкĕ çаплалласкер, уçă кăмăллă. Кама та пулин ырă тăвассишĕн каçсах каять.

Малтанхи кун ачасен ёçĕ чупсах пымарĕ. Çуррине çитеймерĕç. Иккĕмĕш кун, ирхине, уя çитсен, сăнама, курма пĕлекен куçсем тĕлĕнчĕç. Талăк хушшинчех чĕкĕнтĕр калчи тăп-тăпланнă, çулçисем юсаннă. Эппин, усси пур. Ку ачасене савăнтарчĕ, тата та хастарлăрах пулма хĕтĕртрĕ.

Мĕлке сисĕнчĕксĕр вăрăмланать. Ывăннисем те пур ĕнтĕ йышра. Ав, Панти ярт тăсăлнă та тăрать, хушăран çурăмне хыçкалать.

— Панти, асту, уру тăрăх йытпырши явăнать акă!— йĕкĕлтет Уках.

— Шăлна ан йĕр-ха. Ав, пирĕн паталла чаплă тăхăннă çынсем килеççĕ: районтисем пулас.

— Ăçта, ăçта?— терĕç ыттисем, пуçĕсене яштах çĕклесе.

— Пĕлсех тăратăп, çум çумлама пăрахтараççĕ,— хавхаланать Панти.

— Эсĕ çавна кĕтетĕн-и?— кăмăлсăрланчĕ Кӳлнари.

— Чарсан та, пирĕн чĕкĕнтĕр уйне çумран тасатмалла,— çирĕппĕн каларĕ Илюк.

— Мĕн-ма аплах?— кăсăкланчĕ Урамкка.

— Пурпĕрех, мĕн чухлĕ те пулин выльăх апачĕ пулатех. Апла пулсан, колхоза пулăшу,— тет Илюк.

— Ķаçăрăлса тăрар мар, юлташсем,— сăмах хушрĕ Нил та.— Еçлер.

Пурте пĕшкĕнчĕç. Тымарĕпех кăклаççĕ çумкурăкăн патшине — пиçен-кикене.

Ачасем ĕçленĕ çĕре чăнах та тăваттăн çитсе тăчĕç. Вĕсен хушшинче парти организаци секретарĕ — Вера Ķсенофонтовна Пилешева та пур.

— Вăй патăр!

— Тавтапуç!

— Салам!

Сывлăх çунчĕç хайхискерсем пĕр-пĕрне.

Районтан килнисем умĕнче икĕ ӳкерчĕк: пĕри — пиçен уйĕ; тепри — тин çеç çĕкленекен усăллă ӳсентăран.

— Ытти колхозсем чĕкĕнтĕре кăпкалатса, тахçанах купаласа пĕтернĕ,— тет хура сăн-питлĕ çынĕ. Такама ятлать вăл, путех, бригадира пулас. Анчах ачасем тăнласах пĕтереймерĕç. Çав çынах ку ыйтăва парти пухăвĕнче сӳтсе явасси пирки пуплет. Унталла-кунталла кайкаласа пăхрĕç.

Ачасене мухтарĕç вĕсем:

— Чăн-чăн пионерсем!

— Тата чăн-чăн пограничниксем те,— хушса хучĕ Вера Ķсенофонтовна.— Пуçланă ĕçе вĕçне çитерĕр, туссем.

Ķилнĕ çынсем ачасен чун хавалне çĕклентерсе хăварчĕç.

Тепĕр кунне чĕкĕнтĕр хирĕ тасалса юлчĕ. Хуçисем, юрласа, ялалла утрĕç. Пĕр Венюк кăна, çаврăнса тăрса, чĕкĕнтĕре хăвăрт ӳсме çумăр, ăшă хĕвел сунчĕ.

— Хăнаран таврăнсан купалăпăр,— пăшăлтатрĕ вăл. Ыттисем илтмерĕç ăна.

Заставăра ачасем Хěрлě ялав айне тăрса тухсан, вěсене колхоз тав туса çырнă хута вуласа пачěç.

Ырă ята тивěç пулсан, ывăнни те таçта кайса кěрет.

## XXXI

Застава умне машина килсе чарăнчě. Ку ачасене пограничниксем патне хăнана ăсатаканни, чугун çул станцине çитерекенни.

Қашни килтех хатěрленеççě. Пилешевсен килěнче те çаплах.

Вера Ксенофонтовна ачисемпе пěрле каяйманшăн кулянать. Çак хěрӳ вăхăтра колхоза пăрахса хăварма юрамасть. Ачисем чикě хěррине кайма тивěçлě пулнишěн савăнать вăл. Уйран тырпул пухса кěртсен, упăшкин вилтăпри патне кайса килě-ха. Хăйěнпе пěрле Çемен амăшне те илě.

— Ывăлăм, шкулта мěнле вěренни, мěнле пурăнни тата ӳссен кам пулма ěмěтленнине аçуна йăлтах каласа хăвар.

Нил, сылтăм аллипе салютласа, ашшěне честь панăн, амăшě умěнче тупа турě:

— Ӳссен эпě, атте, сан пекех паттăр, шиксěр пограничник пулатăп!

— Хěрěм, эсě те аçуна хăвăн ěмěтӳсене каласа хăвар. Қайран йăлтах пурнăçламалла пултăр.

— Эпě тухтăра тухатăп-çке. Вара хреснанне пекех чикěре ěçлетěп. Чирлě е аманнă пограничниксене сыватăп. Шкулта лайăх вěренетěп-ха.

Чикке илсе каймалли япаласене, апат-çимěçсене кутамккана тăваттăшě те пěрле майласа хучěç. Асламăшě ывăлě ячěпе шăрттан пěçернě.

— Аçу вилтăпри çинче чикě хуралçисемпе пěрле асăнса çийěр,— хушать вăл.

Ашшěн вилтăприне пěр ывăç, тутăрпа чěркесе, киле илсе килме калаçса татăлчěç.

Вăхăт çитрě. Қилтен тухас умěн, ваттисен йăлипе, сак çине ларчěç.

— Юрě,— ура çине тăчě амăшě. Ун хыççăн ачисем те.— Çитсен пурне те салам калăр.

Тулли кутамккана Нил çурăм хыçне çакрě. Сěтел çинче, ав, çамрăк хурăн пур. Ун вулли çав тери çинçе, хулă пек çеç. Çулçисем те сахал-ха. Ăна Нил, ашшěн вилтăпри çине лартма, çуркуннех, пахчара пысăк хурăн çумěнчен шăтнăскерне, хăмаран пěчěк ещěк туса унта куçарса лартрě. «Чăваш хурăнě ӳстěр атте çумěнче»,— шухăшларě вăл. Ещěкне ватса çěре лартса хăварасшăн вăл.

Амăшěпе, асламăшěпе сывпуллашнă хыççăн Нил пěчěк хурăна алла илчě.

— Ачасем, аçу тупалак чечекне юрататчě. Унта, пасарта, çав чечеке туянма тăрăшăр.

— Юрě, пěлетпěр, анне, эсě калана пек пулě.

— Чипер кайса килěр. Çулăр ăнăçлă пултăр!

Тăваттăшě те килтен тухрěç.

Чикě хěррине каякан ачасем кăпăр-капăрах машина çине хăпарса вырнаçрěç.

Ачасен ашшĕ-амăшĕсем, ялта юлакан тус-тантăшсем, учительсем, колхоз пуçлăхĕсем пухăннă. Пурте телейлĕ çул сунаççĕ.

Машина çинчисен кашнин мăшăр çунат çитĕннĕ тейĕн, халь-халь вĕçме хатĕр. Ăçтан ан савăнччăр ĕнтĕ? Акă, çитес çĕре çитĕç те, вĕсене чăннипех калĕç:

— Çамрăк пограничник! Тăван çĕршыв чиккине хурала тухма хатĕр пул!

— Яланах хатĕр!

Вара, мăшăрăн тăрса, пуçа мăнаçлăн каçăртса, алăсене сулласа, харăссăн пуса-пуса, чикĕ тăрăх утĕç.

Тăшман тени çывхарма хăяймĕ.

1973 çул.



ДЛЯ СРЕДНЕГО ШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

*Валентина Андреевна Эльби*

БУДУЩИЕ ПОГРАНИЧНИКИ

повесть

на чувашском языке

ИБ 816

Редакторы Н. Ҫ. Ержакова и П. Е. Димитриев
Художник Е. Е. Михайлова
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Л. А. Иванова

Сдано в набор 18.03.80. Подписано к печати 29.08.80. НТ 33236. Формат $70 \times 90^{1}/_{16}$. Бумага офсетная № 2. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 7,0. Усл. печ. л. 8,19. Уч.-изд. л. 8,29. Тираж 10000 экз. Заказ № 1953. Изд. № 94. Цена 30 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

**В. Эльби.**

Э 53 Ҫӗршывӑн пулас хуралҫисем. Повесть.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1980. 112 с., 30 п.

Пограничник арӑмӗ Вера Ксенофонтовна упӑшки вилнӗ хыҫҫӑн чикӗ хӗрринчен ачисемпе тӑван ялне таврӑнать. Унӑн аслӑ ывӑлӗ Нил часах ялти шкул ачисемпе туслашать, вӗсене ертсе пыраканӗ пулса тӑрать. Вера Ксенофонтовнӑпа Борис Аххов пограничник пулӑшнипе ялта чикӗ хуралҫисен «заставине» туса хураҫҫӗ. Ку ачасен туслӑхне ҫирӗплетме, лайӑхрах вӗренме пулӑшать. Ҫакӑн пек повеҫӗн кӗске содержанийӗ.

84. 3 Чув

# ХАКЛА ВУЛАКАНСЕМ!

Юлашки вăхăтра Чăваш кĕнеке издательстви çакăн пек çĕнĕ кĕнекесем пичетлесе кăларчĕ:

**Иванов К. В.** Килчĕ ырă çуркунне. 184 стр. Хакĕ 65 пус.

Кĕнекене чăвашсен генилле поэчĕн Константин Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспи» поэмипе «Тăлăх арăм», «Тимĕр тылă» тата ытти произведенийĕсене кĕртнĕ.

**Афанасьев П. В.** Чун çути. Сăвăсем. 128 стр. Хакĕ 15 пус.

Кĕнекери сăвăсемпе «Çăкăр» поэмăра поэт Тăван çĕршыва, партие, халăха мухтать, çутă пуласлăхшăн çине тăрса кĕрешме чĕнет.

**Иванов-Таçук Т. И.** Курман-илтмен çынсем мар. 152 стр. Хакĕ 75 пус.

Кĕнекене кулăшла калавсемпе сăвăсем кĕнĕ.

**Мартынов Н. А.** Урпашра та вутчуль пур. Повеçсемпе калавсем. 224 стр. Хакĕ 90 пус.

Автор хăйĕн произведенийĕсенче паянхи ял ĕçченĕсен сăнарĕсене асра юлмалла кăтартса панă.

**Уяр Ф. Е.** Сăмах мехелĕ. 224 стр. Хакĕ 90 пус.

Кĕнекене писательсемпе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, пултарулăхĕ çинчен çырнă калавсемпе очерксем, статьясемпе тĕрленчĕксем, асаилӳсем кĕртнĕ.

Çак кĕнекесене республикăри пур кĕнеке магазинĕсенче те туянма пулать. Вĕсене почта урлă çак адреспа та çырăнса илме май пур: 428018, Чăваш АССРĕ, Шупашкар хули, Короленко урамĕ, 12 çурт, «Книга-почтой» магазин.

Хаклă вулакансем! Эпир сире асăннă кĕнекесене вуласа тухма сĕнетпĕр. Хăвăр шухăш-кăмăлăра çак адреспа çырса пĕлтерме ыйтатпăр: 428000, Чăваш АССРĕ, Шупашкар хули, Ленин проспекчĕ, 4 çурт, Чăваш кĕнеке издательстви.


30 пус